125
Ч-46238

Николай Ларионов

# Чăваш тĕнчи аслă

Национальная библиотека ЧР
4-046238

Обязат.экз.
К7612
Л25

**Николай Ларионов**

# Чăваш тĕнчи аслă

**Статьясен пуххи**

**Ульяновск**
**2013**

ББК (Чув)
Л 25

**Ларионов Н.**

Л 25 **“Чăваш тĕнчи аслă”.** Статьясен пуххи. – Ульяновск, 2013.–188 с.

Ку кĕнекене авторăн 1993-2013 çулсенче хаçат-журналта пичетленнĕ уйрăм статйисем кĕнĕ.

В книгу вошли избранные статьи, которые были опубликованы в периодической печати в 1993-2013 годах.

Проверено 15 ИЮН 2017

Ч-46738

Национальная библиотека
Чувашской Республики

© Н.Ларионов, 2013
© Составление В.А.Ефимова, 2013

# Ăста тĕрĕçĕ



Сăн ўкерчĕкре хитре кулакан чăваш хĕрарăмĕ - А. Саранцева. Унпа эпĕ Ишеевкăра паллашрăм. «Чăваш шăпчăкĕ» зона конкурсне вăл Унтăрти (Ульяновск районĕ) фольклор ушкăнĕпе пĕрле килнĕччĕ. Унсăр пуçне куракансене тĕлĕнмелле илемлĕ тĕрĕсемпе тыткăнларĕ. Мĕн кăна çук кунта: алшăлли, саппун, кĕпе, минтер пичĕ, турăш умĕ тата ытти те – пурĕ 29 япала. Çынсем тĕрĕсене пĕшкĕне-пĕшкĕне, тыта-тыта пăхаççĕ.

Анна ку ĕç патне ачаллах туртăннă, пĕрремĕш тутăрне 6-мĕш класрах тĕрленĕ, амăш çулĕпе кайнă. Каярах, Теччĕ педучилищинче вĕреннĕ çулсенче, тĕплĕнрех, çине тăрса ĕçлеме пуçлать.

– Мана тĕрлеме питĕ кăмăла каять. Ăçта та пулсан хитре тĕрĕ курсан тўрех ўкерсе илетĕп, кайран усă куратăп. Хăш-пĕрне хамах шухăшласа кăларатăп, – тет Анна Николаевна.

Ăста тĕрĕçĕ Унтăрта 11 çул пурăнать (Тăхăрьяла кĕрекен Кивĕ Мертлĕ ялĕнче çуралса ўснĕ). Шкулта 2-мĕш класс ачисене вĕрентет. Пĕлĕвне Ульяновск педуниверситетĕнче ўстерет.

**«Канаш», 15 №, 1998 ç., ака, 18.**

# Атте-анне чӗлхине вӗренме тӗллев лартрӑм

Ман чӑвашла калаҫакан, ҫав вӑхӑтрах чӑвашла вула пӗлместпӗр текен чӑвашсене, «Канаш» хаҫата ҫырӑнман ентешсене ырӑ тӗслӗх илсе кӑтартас килет.

Наталья Лазареван ашшӗ-амӑшӗ чӑваш, анчах хӗр Ульяновскра ӳссе ҫитӗннӗ. Ҫавӑнпа та тӑван чӗлхепе калаҫман. Шкулта вара питӗ хастар пулнӑ, тӗрлӗ конкурссене, викторинӑсене хутшӑнса пӗрре мар ҫӗнтернӗ. Англи ҫӗршывӗнче ирттернӗ викторинӑра та мала тухнӑ вӑл. Уншӑн ӑна икӗ эрнене ҫак ҫӗршыва курса ҫӳреме чӗннӗ. Анчах хӗр унта кайман.

Шкул пӗтерсен Наталья Ульяновск патшалӑх университетӗнчи лингвистикӑпа халӑхсен хушшинчи ҫыхӑнусен факультетне кӗрет. Йӗркеллӗ вӗренсе тухать. Студент чухне те чӑваш хӗрӗ хастарлӑхӗпе палӑрать. Вӗренӳре акӑлчан тата нимӗҫ чӗлхисене туптать. Хӑй тӗллӗн финн чӗлхине алла илет. Европӑра ирттерекен конкурссене хутшӑнать, темиҫе хутчен ҫӗнтерӳҫӗ пулса ют ҫӗршывсене кайса килет. Юлашкинчен вӑл Германире «Кӗльн хыпарӗсем» хаҫатра ҫур ҫул стажировка иртрӗ. Кӗльн хулинчен вӑл «Канаш» хаҫата нумай материал ярса пачӗ, вулакансем вӗсемпе паллашма пултарчӗҫ. Чӑвашла вӗренес, «Канаш» хаҫата ҫырӑнса илес шухӑш пур тетчӗ вӑл калаҫура.

Халӗ Н.Лазарева область правительствинче ӗҫлет. Пирӗн редакцие кӗркелесе тухать. Пӗррехинче ҫапла Наталья: «Темиҫе ют чӗлхе вӗрентӗм. Ма тӑван чӗлхене пӗлместӗп-ха тесе шутлатӑп. Ҫавӑнпа атте-анне чӗлхине вӗренмех тӗллев лартрӑм», - терӗ татӑклӑн. Вара хӑйӗн ӗҫӗсем пирки каласа пачӗ.

Наталья чӑваш чӗлхине Г.А.Дегтярёвӑн «Изучаем чувашский язык» кӗнекипе (Шупашкар,1995) усӑ курса алла илме тытӑннӑ. Хӑй вӗреннине хӗр Интернетра ҫырса пырать – чӑвашла пӗлмен ҫынсене усӑ пултӑр тесе. Кашни ҫын ҫак страницӑна кӗрсе Наталья вӗреннине сӑнаса пыма тата хӑй те унпа пӗрле чӑвашла вӗренме пултарать: Natalia_el.livejornal.com. Ӳркенмесен уҫса пӑхӑр ӑна.

Акӑ мӗн ҫырать чӑваш хӗрӗ унта: «Ӗҫ, тренировкӑсем, куҫарусем, килти юсав ӗҫӗсем, тантӑшсен ҫуралнӑ кунӗсем... Пушӑ вӑхӑт тупма питӗ йывӑр. Анчах эпӗ парӑнмастӑп. Ӗҫ кунӗсенче чӗлхе вӗренсе ларма майсем ҫукпа пӗрех. Пӗтӗм шанчӑк – канмалли кунсенче. Ун чухне эпӗ чӑвашла вӗренме ларатӑп. Хам ӗҫе аннене кӑтартатӑп. Вӑл

ман йӑнӑшсене тӳрлетет. Кашни эрнере «Канаш» хаҫат килессе кӗтетӗп. Тата Шупашкара кайса килес ӗмӗт пур. Чӑвашла-вырӑсла тата вырӑсла-чӑвашла словарьсем туянас килет».

Куртӑмӑр ӗнтӗ, Наталья чӑвашла пачах пӗлмен. Анчах унӑн ашшӗ-амӑшӗн чӗлхине вӗренес кӑмӑлӗ, туртӑмӗ пысӑк. Ҫавӑнпа та вӑл йывӑрлӑхсенчен хӑрамасть, малалла хӑюллӑн талпӑнать. «Канаш» хаҫата ҫырӑнса илет, вула пӗлместӗп тесе кутӑнланса тӑмасть.

Ҫывӑх вӑхӑтра Наталья редакцие кӗрсе пирӗнпе чӑвашла калаҫма пуҫласан нимӗн чухлӗ те тӗлӗнместпӗр!

**«Канаш», 2011 ҫ., 9 №.**

# Ашмарин — чăваш чĕлхи пĕлĕвне хываканни

Чăваш чĕлхи пĕлĕвне тĕпчес ĕçе вырăс çынни Н.И. Ашмарин пуçланă. Вăл 1870 çулта авăн уйăхĕн 22-мĕшĕнче Етĕрнере çуралнă. Ун кукамăшĕ чăваш пулнă.

Чулхулари гимназире вĕреннĕ чухне Николай Иванович хăй тĕллĕн чăваш, араб, перс, турккă чĕлхисене вĕреннĕ. Унтан вăл Мускаври Хĕвелтухăç чĕлхисен Лазарев институтне вĕренме кĕрет. Пĕрремĕш курсрах «Очерк народной поэзии у чуваш» статья çырать, ăна 1892 çулта «Этнографическое обозрение» журналта пичетлет. Юлашки курсра вăл чăваш чĕлхин фонетики тата морфологийĕ пирки материалсем пуçтарма тытăнать. Ун никĕсĕ çинче малтанхи чăваш грамматикин алçырăвне хатĕрлет.

1894 çулта Н.И. Ашмарин Хусана куçать, тутар чĕлхине вĕрентет. Çав вăхăтрах тутарла тата чăвашла тухакан изданисене тĕрĕслесе тăрать. Чăваш чĕлхине малалла тĕпчесе 1898 çулта «Материалы для исследования чувашского языка» ĕç пичетлесе кăларать. 1902 çулта ун тепĕр пысăк ĕçĕ кун çути курать — «Болгары и чуваши». Унта вăл чăвашсем пăлхарсенчен пулса кайнине ăнлантарса парать. (1937 çулта ку ĕçе «контрреволюци кĕнеки» теççĕ, авторне «буржуаллă националист» ят параççĕ.)

17 томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» вара — Н.И. Ашмаринăн чи пысăк ĕçĕ, унăн хакĕ çук. Унта 40 пин ытла сăмах кĕнĕ. Ăна хатĕрлеме автор 30 çул ытла тăрăшнă. Çак ĕçе Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренекенсем, ялти вĕрентӳçĕсем пуçтарнă халăх сăмахлăхĕ те нумай кĕнĕ. Вĕсене автора И.Я. Яковлев тата Ф.Н. Никифоров панă. «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» пĕрремĕш томĕ Хусанта 1910 çулта тухнă, иккĕмĕшĕ — 1912 çулта. Вырăс тата ют çĕршыв ăсчахĕсем ку кĕнекене пысăк хак панă.

Н.И. Ашмарин чăваш чĕлхи тытăмне те тĕпченĕ. «Опыт исследования чувашского синтаксиса» ĕçĕн пĕрремĕш пайĕ 1903 çулта Хусанта пичетленнĕ, иккĕмĕш пайĕ — 1923 çулта Чĕмпĕрте.

Николай Ивановичпа арăмĕн 6 ача пулнă. Укçа-тенкĕ енчен йывăрлăх курнипе вăл 1920 çулта Хусантан Чĕмпĕре куçать, кунти Чăваш вĕрентӳ институтĕнче ĕçлет, чăваш чĕлхине вĕрентет. 1923 çулта ку института пĕтереççĕ. Н.И. Ашмарин Чĕмпĕртен Баку хулине тухса каять, университетра вĕрентме пуçлать. 1925 çулта ăна тĕрĕк чĕлхисен докторĕн ятне параççĕ.

Бакура та вăл чăваш чĕлхине пăрахмасть, «Подражание в языках Среднего Поволжья» ĕçе вĕçлет. 1925 çулта Шупашкарта «Сборник чувашских пословиц» тухать.

1926 çулта профессор Хусана тавранăть. Хĕвелтухăç педагогика институтĕнче чăваш уйрăмне уçассишĕн нумай вăй хурать. Вăл Шупашкарта та пулкаланă, унти наука учрежденийĕсемпе çыхăну тытнă. 1927 çулта ăна Чăваш АССРĕн тĕпĕçтăвкомĕн членне суйлаççĕ, 1923 çултан вара – СССР Наука академин член-корреспонденчĕ.

Николай Иванович Ашмарин 1933 çулхи çурла уйăхĕн 26-мĕшĕнче Хусанта вилнĕ.

Тĕрĕк тĕнчинчи паллă ăсчах С.Е. Малов çапла çырнă: «Чăваш халăхĕ хăйне телейлĕ теме пултарать, мĕншĕн тесен ун Н.И. Ашмарин хăварнă паха словарь пур».

**«Канаш», 14 №, 2004 ç., ака, 1.**

# Роль СМИ в пропаганде идеи единства российского народа

**(Выступление главного редактора газеты «Канаш» Николая Ларионова на круглом столе на тему «День народного единства – символ единства страны» в правительстве Ульяновской области 2 ноября 2010 года.)**

В современном мире средства массовой информации (СМИ) играют огромную роль в пропаганде идеи единства российского народа. Нужно сказать, что вообще политика вне СМИ не осуществляется. Любая газета, в том числе и на национальном языке, является организатором, объединителем и пропагандистом.

Народ в период социальной нестабильности более подвержен внушению. Поэтому нам вместе с работой по поднятию национального самосознания, повышению культурного уровня народа нужно вести грамотную политику по пропаганде идеи единства и дружбы. Дружба народов, единство народов по указу и провозглашению не происходят, они строятся на прочной основе. Мосты для неё во многом возводят люди творческого труда, немаловажную роль здесь играют и журналисты.

В первую очередь нам нужно возродить духовные начала, ибо, как сказал академик Дмитрий Лихачёв, никакие экономические законы не смогут работать, если нравственность и культура народа на низком уровне. Наша многонациональность -- сила. Но она может из фактора силы перейти в фактор слабости, если не будут удовлетворены духовные потребности разных народов. Но ни одному народу развал России невыгоден, потому что , если выживет Россия - выживут и остальные народы. Ключевое значение для духовного развития многонационального российского народа имеет русская культура. Невозможно говорить о духовном развитии любого народа России в отрыве от возрождения, сохранения и развития русской культуры. Не зря ведь великий чувашский просветитель Иван Яковлев завещал своим соплеменникам: «Любите Россию, верьте в неё, и она будет вам матерью».

Мы также помним слова великого писателя Чингиза Айтматова. Он писал, что каждый народ хочет быть не только сытым, но и вечным. В этих условиях от государства требуются меры, обеспечивающие преемственность развития национальных культур,

взвешенная национальная политика, направленная на духовные запросы народов России. Назрел закон о национальной политике на государственном уровне. Представление о быстром стирании национальных различий несостоятельно.

Добрым примером, схемой построения национальной политики может послужить многонациональная Ульяновская область, где региональные власти уже более 20 лет усиленно и успешно занимаются этим вопросом. При дотации правительства области сегодня в нашем регионе выходят три газеты на национальных языках коренных народов области: мордовская – «Ялгат», татарская – «Эмет», чувашская – «Канаш». Таким набором, такой многоликостью может похвастаться далеко не каждый регион нашей страны. Чувашские газеты, кроме, Чувашской Республики, при помощи региональных властей выходят всего в пяти регионах России. Ульяновские чуваши в период перестройки вторыми в стране -- после Башкортостана – начали издавать областную газету на родном языке. И в этом году первыми в России выпустили 1000-ый номер газеты «Канаш», в нынешнем декабре газете исполнится 21 год.

Одной из основных задач средств массовой информации является сдерживание направления высвобождающейся национальной энергии в негативное русло. Отсюда необходимость подъёма национальной культуры, воспитание граждан страны в духе уважения других культур, в духе сотрудничества и созидания. Национальные газеты здесь должны быть на передовой, улавливать настроение своего народа, формировать позитивное мнение о других народах , учить перенимать у них положительные качества. Только так мы можем построить новую Россию, где единство всех народов будет признаком мощи и процветания нашего Отечества.

**«Канаш», 2010 ç., 45 №.**

# Вăйлă халăхсем - хăватлă Раççей

Атăлçи – нумай наци пурăнакан тăрăх. Ульяновск облаçĕ пирки те çакнах каламалла, унта 111 наци çынни пурăнать. Облаçра пурăнакансен виççĕмĕш пайĕ – вырăс мар халăхсем. Тутар, чăваш, мордва халăхĕсем кунта темиçе çĕр çул пурăнаççĕ. Телее, пирĕн хутлăхра нацисен хушшинче хирĕçӳ пулман-ха. Малашне те тĕрлĕ халăхсем килĕштерсе пурăнччăр тесе область пуçлăхĕсем пысăк тимлĕх уйăраççĕ.

Çак ыйтупа Сергей Морозов кĕпĕрнаттăр облаçра пурăнакан халăхсен автономи, общество, ентешлĕх пуçлăхĕсене, хаçат редакторĕсене, тĕн çыннисене пуçтарчĕ. Çакăнта вăл нацисен хушшинчи çыхăнăва лайăхлатмалли ятарлă программăпа паллаштарчĕ.

Пирĕн область 2006 çулхи кăрлач (январь) уйăхĕнче Раççейри регионсенчен малтисен шутĕнче 131-мĕш саккуна пурнăça кĕртме пуçлать. Çак лару-тăрура наци ыйтăвĕсемпе мĕнлерех ĕçлемелле? Ку пурне те пăшăрхантарать.

- Саккунсем улшăнсан та наци политикине тĕрĕс тытса пымалла. Тĕрлĕ нацисем вăйлă, кăмăллă пулни пирĕн патшалăх вăйлă пулнине пĕлтерет. Хирĕçӳ ăçтан тухать? Тĕллевсем пĕр пек пулманинчен. Çавăнпа та пирĕн кашни нацийĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерес пулать. Ĕçе куллен, тĕрлĕ енлĕ илсе пымалла. Çулталăкра пĕрре Акатуй е Сабантуй ирттернипе çеç çырлахмалла мар. Наци культурисене аталантаракан центр малашне методика центрĕ пулмалла. Вырсарни шкулĕсем, этнолагерьсем, этномузейсем хута каймалла. Кашни çул чи лайăх ансамбльсен юррисенчен хатĕрленĕ компакт-дисксем кăлармалла, – тесе палăртрĕ кĕпĕрнаттăр хăйĕн сăмахĕнче.

Кашни халăх çамрăксен парламентне делегатсем ямалла. Кĕнеке кăларас ĕç валли 1,5 миллион тенкĕ уйăрнă. Унта грант тытăмĕпе усă курĕç. Кĕпĕрнаттăр сайчĕ çинче наци ыйтăвĕсемпе çыхăннă çырусем пулманине палăртрĕç. Малашне область администраци çумĕнче Национальноçсен канашĕ ĕçлĕ. Унта тĕрлĕ халăх çыннисене суйлĕç. Облаçра наци ыйтăвĕсене çутатса тăракан пĕтĕмĕшле журнал та кирлĕ (Тутарстанра вăл пур – «АНКО» ятлă). Регионсем хушшинчи культура килĕшĕвĕсене çĕнетсе тачă çыхăнура ĕçлемелле.

Облаçри чăвашсен наципе культура автономийĕн пуçлăхĕ В. Сваев пуринчен малтан сăмах илчĕ.

– Автономисем районсенчи ялсемпе çыхăнса ĕçлессине пĕрремĕш вырăна хураççĕ. Çакă вырăнти наци юхăмне аталантарма пулăшать.

Çапах та çителĕксĕр пекрех-ха ку. Ман шутпа, унчченхи йăласене чĕртсе тăратмалла паян. Сăмахран, питĕ лайăх йăла пурччĕ: ялсем, районсем творчество отчечĕ паратчĕç. Çакна ма чĕртес мар? Шкултa тăван чĕлхене вĕрентессине те пăрахăçламалла мар, çĕнĕ классем уçмалла. Чăнлă районĕнчи чăваш хаçатне хупас ыйту сиксе тухни те пăшăрхантарать пире. Чăваш районĕнче чăваш хаçачĕ – пулмаллах. Тăван чĕлхепе радиокăларăмсем те йĕркелесе янăччĕ. Шел, ĕç малалла каймарĕ. «Еткер» тата «Чишме» телекăларăмсене те çухатас марччĕ. Çынсем вĕсене хăнăхнă, ыйтаççĕ. Наци политики валли укçа шеллемелле мар. Ырă пулăмсем, хутшăнусем пирĕн пурнăçа малалла яма пулăшаççĕ, – терĕ Владимир Ильич.

Вăл çаплах кĕпĕрнаттăра çывăх вăхăтра И.Я. Яковлев просветитель палăкне лартассине пĕлтерчĕ. С. Морозов: «Кун пек ырă ĕçсене эпир ырлатпăр. Палăксем хулана илем кӳреççĕ. Ку палăк валли область бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăратпăрах», - терĕ.

Тухса калаçакансенчен пĕри: «Историрен çакă паллă. Хуть те мĕнле вăрçă-харçă та икĕ сăлтавпа çеç сиксе тухнă: хĕрарăма пайламанни тата пĕр-пĕр халăх тепĕрне хĕсĕрлеме тытăнни. Хирĕçӳ ан тухтăр тесен кашни халăхăн культура ыйтăвĕсене тивĕçтермелле. Тавах Турра, пирĕн облаçра ку ĕç йĕркеллех пырать», - терĕ.

Кĕпĕрнаттăр 2006 çула Çамрăксен çулĕ тесе палăртнă, çавăнпа та малашнехи ĕçсене çамрăксене ытларах явăçтармалла, ăс-тăн енчен воспитани ĕçĕ тăтăшах илсе пымалла.

Хăйне хисеплемен халăха ыттисем хисеплемĕç. Хăвна хисеплеччĕр тесен вара тăван чĕлхене хисеплемелле, юратмалла. Никам та тăван чĕлхешĕн мăнаçланас туйăмпа çуралмасть, ăна пĕчĕкçĕллех ăша хывмалла, малалла аталантармалла. Кăркăссен паллă çыравçи Чингиз Айтматов: «Кашни халăх тутă пуласшăн çеç пурăнмасть, ĕмĕрсем хушши йăхне тăсасшăн»,- тесе çырнă.. Урăхла каласан – чĕлхине, культурине сыхласа хăварасшăн. Ку ĕçе пĕр самантра тума çук, патшалăх политики кирлĕ. Нумаях пулмасть паллă артист Кирилл Лавров телевизорпа çапла каларĕ: «Нимĕнле экономика ӳсĕмĕсем те халăх ăс-тăн енчен хавшанине тавăраймаççĕ». Çак сăмахсемпе эпир килĕшетпĕр.

Çĕр çинчи кашни халăх – уйрăм чечек. Çыхăра вĕсем мĕн чухлĕ нумай, çавăн чухлĕ çыххи илемлĕрех.

**«Канаш», 2005 ç., 46 №.**

# “Вирялсем” такмака мĕнле выляççĕ-ши?”

Юлашки вăхăтра чăваш эстради çинчен илтсенех чĕрене йĕппе чикнĕ пек туйăнать. Çавăнпа та Н. Смирнован “Каллех чăваш эстрада пирки” статйине (“Хыпар” хаçат, 2001 çул, 195№) вуласан хам шухăша пĕлтермесĕр тăма вăй çитереймерĕм.

Чăнах та, мĕн чухлĕ çўп-çап, пылчăк илсе кĕреççĕ чăваш чĕлхине, тăван культурăна çак виçĕ куна килнĕ “çăлтăрсем”. Сăмахĕсене мĕнле чĕлхепе çырни — паллă мар. Ятарлă тăлмач кирлĕ — чăвашларан чăвашла куçарма. Кĕвви шăй-шай, сасси хăй-хай. Упăте пек, питне-куçне пĕркелет, йăлтти-ялтти сиккелет, унăн-кунăн хăлаçланать ку “çăлтăр”. Çак самантрах пукан çинчен тăрса тухса каяс килет. Ун юрăнне вара эпир алă çупатпăр. Çакă артиста юрăнсăр мухтани пулать-çке. Кайран, паллах, вăл çакăншăн ăнкару шайĕпе пире ачапа танлаштарать.

Кунта эпĕ те, Н. Смирнова пекех, пĕтĕм артистсене пĕр калăпа лартасшăн мар. Янăравлă та илемлĕ, уçă та çепĕç сасăллисем пур пирĕн. Вĕсем — пирĕн мăнаçлăхăмăр: хăйсене те, итлекен-куракана та хисеплеççĕ. Çавăнпа ăсталăхĕ те çўллĕ шайра.

Пĕррехинче эпĕ “Хыпарта” чăваш эстради пирки сăмах хускатнăччĕ. Сăввисене диалект сăмахĕсемпе, вырăсла шухăшласа чăваш сăмахĕсемпе çыраççĕ. Вĕсене тĕрĕслекен те, йĕркене кĕртекен те çук. Акă чи юлашкинчен илтнĕ “шедевр”. Пĕр çамрăк радиопа çапла юрларĕ: “Сан çинчен тунсăхлатăп”. Çапла ăçти чăвашсем калаçаççĕ-ши, ăçтан тупнă ку сăмахсене? Чăвашлах каламалла пулсан — “сансăр тунсăхлатăп” темелле-ха. Кунта вара вырăсларан “скучаю по тебе” тенине çавăн пек тўррĕн куçарнă-и ĕнтĕ?.. Калама та пĕлес çук. Халĕ çакна пĕтĕм чăваш халăхĕ итлет. Ачасем, çамрăксем вара çак сăмахсене çыракан тата юрлакан çынсене тĕслĕх вырăнне хума пултараççĕ. Вĕсемшĕн çак сăмах çаврăнăшĕ норма пулса юлма пултарать. Çакă хăрушă. Çакăн пек “шедеврсене” вĕçĕ-хĕррисĕр тăсма пулать. Ку ăшлăхĕ (содержанийĕ) пулчĕ-ха.

Кăштах форми çинчен калаçăпăр. Каллех юлашки тĕслĕхсем. Шупашкарти пасарта аудиокассета сутакан киоск умĕнче тăратăп, футляр çийĕсене вулатăп. “Эстрада юррисем пуххи” (Чăваш ташши, 7-мĕш альбом), “Чун чĕререн” (Катя Петрова), “Сан çуралнă кун ятпа” (И. Шинжаев), “Мĕншĕн ши” (И. Шинжаев)... Пĕрремĕш тĕслĕхĕнче “юррисем” вырăнне “юррисен” кирлĕ, иккĕмĕшĕнче — дефис çук, виççĕмĕшĕнче — “Сан çуралнă куну ячĕпе” темелле (ку

та тĕрĕсех мар-ха, чăвашла çуралнă кун мар, менелник теççĕ), тăваттăмĕшĕнче — каллех дефис çук. Этюк Витти кассети çинче вара "Вирял, мал ень, тури, анатри чăваш такмакĕсене вылять" тенĕ. Чăн-чăн ребус, пуçватмăш! Вирьялпа (çапла çырмалла-ха ăна, çемçелĕх паллипе) тури чăвашсем пĕр мар-ши вара? Пĕр мар пулсан вирьялсем ăçта пурăнаççĕ, турисем ăçта пурăнаççĕ? "Ен" сăмах хыççăн çемçелĕх палли лартмалла мар. Çитменнине, такмакĕсене каламасть — "вылять". Вырăссем чăнах та "играет на гармошке" теççĕ. Анчах чăвашсем (чăннисем, кассета çине çыракансем мар) "купăс калать" теççĕ. Такмака та вылямаççĕ, калаççĕ. Пĕр предложенире миçе йăнăш! Куна çыраканĕ шкулта чăваш чĕлхипе "2" паллăсăр пуçне ним те илсе курман пулĕ. Çапах та темиçе пин тиражпа тухакан япала çине "хăйĕн чĕлхипе" (ку чăваш чĕлхинчен темиçе çухрăмра тăрать, юнашар та мар) çырма хăю çитерет.

Сăмахăма Н. Смирнова шухăшĕпех вĕçлесшĕн. Çак мăшкăла чарасчĕ. Кунта власть хăйĕн сăмахне çирĕппĕн каламалла. Чăваш Республикин культурăпа национальноçсен ĕçĕсен министерстви ку япалана хăй çине илмелле. Сăмах куписенчен юрă туса çынсен хăлхисене юхтарас марччĕ, сцена çинчен енне-енне çӳп-çап сапалас марччĕ. Кашни сăвă ăста çынсен алли витĕр тухсан, кассета çине çырнисене чĕлхене лайăх пĕлекен çын тĕрĕслесе кăларсан малашне пире чăваш эстради савăнтарĕ çеç. Çакăн пек пăшăрханса, тарăхса çырма та сăлтав юлмĕ.

**"Канаш", 2001 ç., 48 №, чӳк, 30.**

# Вышкăра – чăваш чĕлхи уявĕ

Вышкă ялĕнче авалтанпа мăкшăсем пурăннă. 1980-мĕш çулсем хыççăн вара кунта тĕрлĕ наци çыннисем килсе тĕпленме пуçланă, мĕншĕн тесен ĕçлеме тата пурăнма лайăх условисем пулнă. Чăвашсем те сахал мар кунта. Пĕр паллакан çын ун пирки шӳтлесе çапла каларĕ: «Утаканни, чупаканни, ĕçлекеннни – пурте чăваш». Унăн сăмахĕнче чăнлăх ытларах.

Чăваш ĕçлеме пултарнине пурте пĕлеççĕ-ха. Канас енĕпе вара? Вăл та япăх мар. Вырăнти пуçлăхсем, культура çыннисем ăна çителĕклĕ тимлĕх уйăраççĕ, тĕрлĕ мероприятисемирттереççĕ.

Раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче ялти Культура çуртĕнче И.Я. Яковлев çуралнăранпа 150 çул çитнине халалласа «Чăваш чĕлхи уявĕ» пулчĕ. Ăна хатĕрлесе ирттерекенсем пĕртăван Никоноровасем – Анна, Полина, Вера -- пулчĕç. Уява çывăхри ялсенче пурăнакан чăвашсене те чĕнме манман, Вырăс Беденьгаран, Тутар Беденьгаран, Салмановкăран, Унтăртан килнĕ хăнасем пурччĕ.

Вышкăсем патне хăнана çак кун «Канаш» хаçат çумĕнчи «Шевле» литпĕрлешĕвĕн членĕсем те çитрĕç: А. Ашкеров, Л. Данилов, Н. Ларионов. Вĕсем куракансем умĕнче сăвă вуларĕç, хăйсен творчество çулĕ çинчен каласа пачĕç, тăван чĕлхе пĕлтерĕшне палăртрĕç. Калаçăва çапла пĕтĕмлетме пулать: хăвна хисеплени, аннене, халăха, тăван çĕршыва юратни тăван чĕлхене хисепленинчен пуçланать.

Ун хыççăн сцена çине юрăçсем тухрĕç. Салмановкăри «Çăлкуç» чăваш ансамблĕн ертӳçи Н. Малышев тата çак коллектив юрăçи М.Карсакова куракансене нумай илемлĕ юрă-кĕвĕ парнелерĕç. Мария ăсталăхне чылайăшĕ лайăх пĕлет, вăл кăçалхи «Чăваш шăпчăкĕ» тĕп концертра хутшăнма та тивĕçлĕ пулнăччĕ. Пĕртăван Никоноровасем те унран кая мар, пĕлмен чăваш юрри те çук. Куракансем пурне те алă çупса тав турĕç.

Уява йĕркелекенсем тутлă чăваш сăрине тума та манман, унпа хăнасене пурне те сайларĕç. Чăваш кĕнекисен выставкине те уçнăччĕ. Çак кун унти кĕнекесен шучĕ тата ӳсрĕ, мĕншĕн тесен хăнасем килти библиотекăран илсе килнисене парнелерĕç. Унтăртан килнĕ учительница А. Саранцева çакăнта асаттесемпе асаннесен тумне кăтарма хунă: тăла чăлха, пир кĕпе тата ытти те.

Пухăннисем пирĕн редакци илсе пынă чăвашла юрăсен кассетисене, календарьсене туянма пултарчĕç.

Палăртса хăвармалла: уяв тивĕçлĕ шайра иртрĕ. Ăна йĕркелекенсем

тăрăшни куçкĕрет. Вĕсем спонсорсем тупма та пултарнă. Çавăнпа хăнасем кăмăлсăр юлмарĕç. Вĕсене кашнине асăнмалăх парне пачĕç. Укçа-тенкĕпе пулăшакансем вара çаксем пулчĕç: Унтăрти Ленин ячĕллĕ санатори (тĕп врачĕ Ш.С. Усманов) тата «Вышкинское» хуçалăх (председателĕ В.А. Хакимов). Паллах, вĕсене çынсен нушине ăнланнăшăн, культурăна пулăшма пултарнăшăн тав сăмахĕ каламалла.

Çакна уява йĕркелекенсем те тивĕçлĕ. Тăрăшсан ĕç тума пулать иккен. Çутă тĕллев те чун ăнтăлăвĕ çеç кирлĕ. Никоноровасем «ĕçлеме йывăр», «укçа çук» теме юратакансене ырă тĕслĕх кăтартса пачĕç, ял халăхне савăнтарчĕç.

Ульяновск районĕ.

**«Канаш», 52 №, 1998 ç.**

# Ёмĕт пулсан шанăç пур

Çын яланах ёмĕтпе пурăнать. Паян – ёнертен, ыран – паянтан, кăçал - иртнĕ çултан, килес çул – ку çултан авантарах пуласса шанатпăр эпир. Ёмĕтленни пурте тӳрре тухаймасан та вăл пире хавхалантарса тăрать, малалла талпăнма вăй парать.

«Канаш» хаçат редакци йышĕн тĕллевĕсем пысăк – хамăр хаçата облаçри кашни чăваш çемйине çитересси. Иртнĕ 2003 çул тĕрлĕ пулăмпа асра юлчĕ. Облаçри чăвашсен наципе культура автономин черетлĕ конференцийĕ пулчĕ, уявсем, мероприятисем кĕрлесе иртрĕç. Чĕмпĕр чăвашĕсен ушкăнĕ пĕрремĕш хут Мускаври Акатуя хутшăнчĕ. Облаçри Саккунсем кăларакан Пухăва тата Патшалăх Думине депутатсем суйларăмăр. Сире, хаклă вулакансем, пĕлтермелли хыпарсем тупăнсах тăчĕç. Çĕнĕ хыпарсеневаскасах çырса тăтăмăр, сирĕн пурнăçăра интереслĕрех, пуянрах тума тăрăшрăмăр. Сăнарăр пулсан çакна та курма пултартăр: иккĕмĕш çурçуллăхра ялсене нумай тухса çӳрерĕмĕр, страници-страниципех хресчен пурнăçне çутатса патăмăр. Чăнлă районĕнчи кашни чăваш ялне çитрĕмĕр, пуçлăхсемпе, ĕç çыннисемпе тĕл пултăмăр, вĕсен нушине пĕлме тăрăшрăмăр. Кăçал та çак ĕçе пăрахăçлама шутламастпăр, ытти районсенче те пулса курăпăр.

Хаçат тиражĕ кăçал кăштах ӳсрĕ-ха, анчах вăл пире тивĕçтермест. Облаçри 120 пине яхăн (кивĕ çырав тăрăх) чăваша пин ытларах экземпляр питĕ сахал. Танлаштарма: Тутарстанра 134 пин чăваш, «Сувар» хаçатăн тиражĕ – 6 пин ытла экземпляр; Пушкăртстанра 120 пин чăваш, «Урал сасси» 3 пин çурă тиражпа тухать. Эпир, чĕмпĕрсем, кӳршĕре пурăнакан ентешсенчен мĕн чухлĕ кайра тăнине куратăр-и? Çакăн сăлтавне пĕлес килет пирĕн. Вулакансем, эсир мĕн калама пултаратăр? Шухăшăрсене, сĕнĕвĕрсене пире пĕлтерсен питĕ лайăх пулĕччĕ.

Пĕр сăлтавне пĕлтерме пултаратăп. Нумаях пулмасть Шупашкара кайса килтĕм. «Ялав» журнал редакцинче çак темăпа сăмах хускатрăмăр. Унта нумай çул вăй хуракан çын çапла びаларĕ: «Чăваш Республикин Профессиллĕ писательсен союзĕнче 150 çынна яхăн тăрать. Çавсенчен аллăшĕ çеç пирĕн журнала çырăнса илет. Хайсем пурте хайлавсем çыраççĕ, пирĕн пата пичетлеме илсе килеççĕ. Çыравçă та илемлĕ литература журналне çырăнса илмесен ыттисем пирки мĕн каламалла ĕнтĕ?»

Шел, пирĕн тăрăхра та палăрать ку пулăм. Интеллигенци

çыннисем — вĕрентӳçĕсем, çыравçăсем, пуçлăхсем тата ыттисем — чи малтан çырăнса илмелле пек «Канаша», ыттисене тĕслĕх кăтартмалла.

Халăх культури шайне çынсем кĕнеке, хаçат-журнал вулани тăрăх виçеççĕ. Ку енчен пăхсан пирĕн малалла талпăнмалла та талпăнмалла-ха.

Халăх пур пулсан ун чĕлхи те, культури те, аталанăвĕ те пур. Хаçатăмăрăн тĕллевĕ те çакăнпах çыхăннă - хыпара халăха çитересси, çынсенчи ăнлавсене йĕркелесси, пĕр-пĕринпе хутшăнма пулăшасси, халăх ăнланулăхне ӳстересси. И.Я. Яковлев сăмахĕсене аса илер-ха: «Халăхăн ăс-тăнĕпе унăн пĕтĕм тĕнчекурăмне тăван чĕлхе чун парать. Тăван чĕлхесĕр чăн-чăн пĕлӳ çук. Чăвашсен çак тарана упраннă мулĕ вăл — чĕлхе, юрă, тĕрĕ».

Ак тата Ю. Сементер поэт мĕн çырать: «Пурăн, шăкăлчи чĕлхемĕр! Пурăн, шăнкăрти чĕлхемĕр! Утакан çын умĕнче утма çулне уçса пыр, ырă çыннăн чунĕнче ырă шухăш хушса пыр, пĕчĕккине пысăк ту, сусăррине сывă ту! Эй, чĕлхемĕр! Ылтăнпа виçейми таса тупра! Çакă çутă тĕнчере хăйне чăваш теекен, пултăранпа ыр пулан, сăрапала сăйланан халăх пĕрлĕхне упра!»

Çапларах вăл тăван чĕлхе пĕлтерĕшĕ. Ăна куç шăрçине упранă пек упрас пулать. Çак ĕçе паянах тытăнмалла — ыран кая юлма пултарать. Чи малтан çамрăксене явăçтармалла, унсăрăн ăрусен çыхăнăвĕ, çĕрнĕ çип евĕр, татăлас хăрушлăх пур.

Танлаштарса пăхар-ха. XIX ĕмĕрте сайра-сайра кĕнеке кăларнă чухне Чĕмпĕр чăваш шкулне, И.Я. Яковлев патне темиçе кĕнеке илессишĕн чăвашсем çĕр-çĕр çухрăмран пынă. Паян вара почта урлă хаçат çырăнса илесси те пирĕншĕн йывăрлăха çаврăнать.

Çакна манар мар: тавракурăма, пĕлĕве мĕн чухлĕ ӳстеретпĕр, культура, ăс-тăн енчен çавăн чухлĕ маларах каятпăр. Çавăн чухне çеç ытти халăхсем пире чăннипех хисеплĕç.

Юлашкинчен çакна калас килет. Эпир редакцие кĕрсе тухнă, шăнкăравланă, çыру çырнă кашни çынна паллатпăр, астăватпăр, хисеплетпĕр. Çĕнĕ çулта хамăр туссене, мĕнпур вулакансене чи лайăххине сунас килет: сывлăх пултăр, вăй-хăват ан иксĕлтĕр, çемьере юратупа тăнăçлăх хуçаланччăр, телей курки тăкăнса тăтăр. Чи пахи вара - ĕмĕтсем ан сӳнччĕр. Ĕмĕт — халăхăн çуначĕ, вăл пире шанăç парать. Шанчăкпа пурăнма чылай çăмăлтарах.

«Канаш» хаçат сире малашне те шанчăк пама тăрăшĕ.

Ч-46238

«Канаш», 1-2 №, 2004 ç.



Национальная библиотека
Чувашской Республики

# Ӗҫпе сӑмах ҫыхӑнса тӑччӑр

Паян эпир Чӗмпӗр Ен чӑвашӗсен Аслӑ Пухӑвне пуҫтарӑнтӑмӑр. Делегатсем мӗнле ӗҫленинчен эпир тата темиҫе ҫул хӑш ҫулпа пырасси килет.

Паллах, конференцире тавлашуллӑ самантсем те пулӗҫ, хӗрӳллӗ калаҫакансем те тупӑнӗҫ. Ҫапла кирлех те пулӗ, мӗншӗн тесен тавлашура чӑнлӑх ҫуралать теҫҫӗ. Анчах та ҫакна манса каймалла мар: калаҫу, тавлашу кунӗ – пуш уйӑхӗн 5-мӗшӗ – хӑвӑрт иртсе кайӗ. Ыран ҫитӗ – пуш уйӑхӗн 6-мӗшӗ. Вара каллех кулленхи ӗҫсем пуҫланӗҫ – вӗҫӗ-хӗрри ҫук. Кам пурнӑҫласа пырӗ-ши ҫавсене?

Эпӗ Чӗмпӗр чӑвашӗсен юхӑмӗнче аппаланма тытӑнни вунӑ ҫул ӗнтӗ. Тӗрлӗ вырӑнта ӗҫлесе пӑхрӑм, тӗрлӗ мероприятисем ирттернӗ ҫӗре хутшӑнма тӳрӗ килчӗ. Ҫавӑнпа та кӑштах пӗтӗмлетӳ тума хӑю ҫитеретӗп. Кулленхи ӗҫсене пурнӑҫланакансем, йывӑр лава туртакансем – пӗр ҫынсемех. Нумай калаҫмаҫҫӗ вӗсем – ӗҫне ытларах тӑваҫҫӗ.

Паллах, ҫын умне тухса хӗрӳллӗн калаҫасси, мӗскер-тӗр шантарасси – пысӑк ӑсталӑх. Кашни ҫын пултараймасть ун пек. Анчах та сӑмах каланипе кӑна ӗҫӗ пулмасть вӗт-ха. Ӗҫне пурнӑҫлас тесен чылай тӑрӑшмалла. Ҫыншӑн, обществӑшӑн вара кашнинех тӑрӑшасси килмест. Ҫавӑнпа та чылай чухне сӑмахпа ӗҫ пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса тӑраймаҫҫӗ. Сӑмахӗ пур – ӗҫӗ ҫук. Ҫавӑн пеккисем вара хӑш чухне - чи хытӑ калаҫакансем. Ахальтен каламаҫҫӗ вӗт ваттисем: «Сӑмахпа мар, ӗҫпе васка».

Акӑ мӗн патне илсе пырасшӑн эпӗ. Ҫынна ун ӗҫӗ тӑрӑх хаклама вӗренер. Кашни ҫын хыҫӗнче мӗнле-тӗр ӗҫ пултӑр. Ҫавӑнпа та автономин пулас президиумне, ӗҫтавкомне чӑннипех те халӑх пуласлӑхӗшӗн ҫунакан, ҫак идейӑшӑн тӑрӑшма пултаракан хастарсене суйласчӗ. Тепӗр хут калатӑп: кашни ҫын пысӑк усӑ параймасть кунта, мӗншӗн тесен алӑпа та пуҫпа кӑна мар, чунпа ӗҫлемелле пулать.

Пуш сӑмах ҫапакансем – килеҫҫӗ те каяҫҫӗ. Пултаруллӑ чӑваш халӑхӗн вара малалла пӑхса пурӑнмалла, аталанмалла. Чӗлхепе ҫеҫ мар, чунпа чӑваш пулар.

Час-часах пурнӑҫра ҫапла пулса тухать: халӑх ҫинче хӑйсене хӑйсем мухтама, илемлӗн кӑтартма пӗлекенсене тӳрех куратпӑр, мухтатпӑр. Нумай сӑмах каламасӑр, сӑпайлӑн, тӑрӑшса ӗҫлекенсене асӑрхасах каймастпӑр. Тӗрӗссипе, пӗтӗм ӗҫ ҫавсем ҫинче тытӑнса тӑрать. Манса каяр мар: нумай чух ирсӗр ӗҫе илемлӗ сӑмахсем каласа

тăваççĕ. Çавăнпа та пуш сăмахсене тӳрех ĕненер мар. Вăхăт кам мĕнле тĕллевпе мĕн тунисене хуллен кăтартса пырать. Хастарлăха суйлавсем, пухусем вăхăтĕнче çеç кăтартас марччĕ. Ун чухне чăннипех те аслă та мăнаçлă халăх пулăпăр. Пĕр-пĕринчен уйрăлса, пĕр-пĕрне усал туса телейлĕ пулас çук эпир. Пирте пĕрлĕх çукки ыттисемшĕн савăнăç çеç пулĕ.

Пултарулла çын темле йывăрлăхран та тухма пĕлет, ăсли унта лекмест. Вĕсен уйрăмлăхĕ çавăнта. Апла пулсан ăслă пулар, хамăрган çынна култарар мар, йывăрлăха кĕрсе ӳкер мар.

Чăвашсем авалтанпах çурт купалама, пысăк ĕçсем тума нимене пуçтарăннă, пĕр-пĕрне пулăшма васканă. Паянхи нимере те эпир çĕнĕ çурт çĕклесе хурар – КИЛĔШӲЛĔХ ÇУРЧĔ.

Вара пирĕн малашнехи ĕçсем те ăнса пырĕç.

**«Канаш», 10 №, 2003 ç.**

# «Канаш» редакцийĕ – Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен культура вучахĕ

## УОЧНКА III суйлавпа отчёт конференцийĕнче Николай Ларионов делегат тухса каланă сăмах

«Канаш» хаçат тухма тытăннăранпа 17 çул ытла иртрĕ. Пирĕн редакци çак вăхăтра чăннипех Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен культура центрĕ пулса тăчĕ. Кунсерен вуншар çын кĕрсе тухать, çулталăкне 1 пин ытла çыру илетпĕр.

Тӳрех çакна палăртмалла: регион пуçлăхĕсем пулăшнипе Раççейре пурĕ те виçĕ чăваш хаçачĕ кăна йĕркеллĕ тухать (Чăваш Республикине шутламасăр) – Тутарстанра, Пушкăртстанра тата Ульяновск облаçĕнче. Çавăнпа та хамăр область влаçĕсене пирĕн тав тумалла. Вĕсем укçа-тенкĕ ыйтăвĕ мĕнле йывăр пулсан та наци хаçачĕсене кăларма мелсем тупаççех.

Хаçатăн тĕллевĕ – наципе культура автономин тĕллевĕпе пĕр килет: сапаланса пурăнакан чăвашсене пĕр чăмăра пуçтарасси, вĕсенче наци туйăмне вăратасси, тăван чĕлхене, йăла-йĕркене сыхласа хăварасси. Урăхла каласан чăваша ЧĂВАШ пулма пулăшасси.

Ку ĕç çăмăл мар. 1956 çулта Чĕмпĕр чăваш шкулне хупса хунă, чăваш ялĕсенче ачасене тăван чĕлхепе вĕрентме пăрахнă хыççăн халăхăн пысăк пайĕ вырăсланнă, тăван тымарсене маннă. Халĕ вара ачасене тăван чĕлхене ют чĕлхе вĕрентнĕ пек вĕрентмелле. Ку япалана пĕр кунра та, пĕр çулта та тума çук. Ку ыйтупа çанă тавăрса, пĕр чарăнми ĕçлемелле, нумай вăй хумалла.

Редакции ĕçĕ – нумайрах чăваша хамăр культурăпа паллаштарасси, хаçат тиражне ӳстересси. Çакна каламалла: маларах асăннă сăлтава пула хаçат çырăнакансен шучĕ питĕ йывăрпа ӳсет. Хамăра хамăр хисеплени, тăван халăха юратни çитмест хальлĕхе.

Ман çакăнта редакцие пулăшакан çынсене асăнса хăварас килет. Икĕ çул каялла хаçат тухма тытăнни 15 çул çитнине уявларăмăр. Çак мероприятие ирттерме «Эртел» ушкăн арĕсем пулăшрĕç, укçа-тенкĕ уйăрчĕç. Ку уява хăнасем облаçран, Раççейĕн тĕрлĕ хулисенчен килнĕччĕ. Çаплах кулленхи пурнăçра пулăшу аллине тăсакансем те самаях. Чи малтан кунта Чăнлă район пуçлăхне Х.В.Рамазанова палăртмалла. Вăл уяв ирттерме те укçа-тенкĕ панăччĕ, пĕлтĕр редакцие компьютер парнелерĕ, календарьсем кăларма укçа уйăрчĕ. Хаçат

тиражĕ те Ханяфи Валиевич ку ыйтăва тимлĕх уйăрма пуçласан çак районта палăрмалла ӳсрĕ. Мĕнле ыйтупа пырсан та Ханяфи Валиевич пире пулăшма тăрăшать. Çаплах çак районта хаçат тиражне ӳстерме пулăшакансене — ял хуçалăх ертӳçисене палăртмалла: Наиль Зарифович Гайниев, Александр Герасимович Медков, Николай Васильевич Афанасьев, Илья Владимирович Ятманов, Николай Петрович Сайгушев, Сергей Анатольевич Клопков, Геннадий Макарович Мулянов тата ыттисем. Çаплах Мелекесс районĕнчи пĕртăван Беспаловсем те хаçата яланах пулăшма хатĕр. Юлашки вăхăтра фермерсен хуçалăхĕсен пуçлăхĕсемпе çыхăнусене лайăхлатрăмăр. Хаçата тĕрлĕ енĕпе пулăшакансене коллектив ятĕнчен тав тăватăп.

Иртнĕ конференцире эпĕ редакцин материаллă бази чухăнни çинчен каланăччĕ. Çак тапхăрта чылай япала туянма май тупрăмăр: виçĕ компьютерпа пуянлантăмăр (пĕрне «Ульяновскмебель» пĕрлĕх пуçлăхĕ Анатолий Георгиевич Еленкин парнелерĕ, уншăн пысăк тав), телефакс, икĕ принтер, сканер, ксерокс, икĕ компьютер сĕтелĕ, икĕ цифрăллă фотоаппарат, диктофон туянтăмăр. Телефон линийĕнчен уйăрнă электронлă почта пур. Çаксем ĕçе чылай çăмăллатаççĕ. Малашне вара редакцири сĕтел-пукана çĕнетмелле.

Хаçат редакцийĕ вырăнти чăваш çыравçисен кĕнекисене кăларас ĕçе илсе пырать. Тăватă çул хушшинче редакци пулăшнипе 30 кĕнеке ытлă кăларнă, çав шутра пĕлтĕр кăна — 13. Кăçал «Шевле» литпĕрлешĕве йĕркелесе янăранпа 10 çул çитет. Çитес вăхăтра çак ятпа уяв йĕркелемелле тата альманах кăлармалла пулать.

Ачасене, çамрăксене хаçат ĕçне явăçтарас тесе тĕрлĕ рубрикăсем, ятарлă страницăсем уçатпăр, çулсерен конкурссем йĕркелетпĕр. Сăмахран, халĕ ултă конкурс пырать. Унта кашни çын хутшăнма пултарать. Çĕнтерӳçĕсене парнесемпе чыслатпăр.

Область пуçлăхĕсем наци хаçачĕсене кăларма пулăшаççĕ терĕмĕр ĕнтĕ. Анчах хамăра хамăр та пулăшмалла. Чи лайăх пулăшу — кашни чăваш çемйи «Канаш» çырăнса илни. Тĕрлĕ сăлтавсем тупса ăна çырăнас теменни чăвашсене чыс кӳмест. «Канаш» хаçата çырăнса илмен чăвашсене çакăн пек тĕслĕх илсе кăтартас килет. Çĕнĕ Ульяновскра пурăнакан вырăс çынни Сергей Чуркин (арăмĕ чăваш) пирĕн хаçата хăй çырăнса илнипе çеç çырлахмасть, кашни çурçуллăхра тата 10 çынна тупса çырăнтарать. Ку çын — хаçатăн чăн-чăн тусĕ, чăваш халăх патриочĕ. Ун пеккисен шутне Николай Розова та кĕртме пулать. Вăл та хăй укçипех темиçе çынна çырăнтарать, хăйĕн материалĕсем тухнă хаçата тӳлесе хушма заказ парать, редакцие тĕрлĕ

енĕпе пулăшма тăрăшать.

Чăваш тĕнчи аслă. Чĕмпĕр Ен – ун пĕр пайĕ. Çакăнта чăвашлăх аталанса пыни пĕтĕм чăваш тĕнчине вăйлатать. Çак ĕçре вара "Канаш" хаçат чăвашсене пĕр-пĕринпе тата тĕрлĕ власть тытăмĕсемпе çыхăнтарса тăрать, федераци политикине тытса пырать. Наци хутшăнăвĕсен çĕнетӳ тапхăрĕнче ку ĕçĕн пĕлтерĕшĕ ытла та пысăк, çав вăхăтрах – яваплăхĕ те.

Чăваш халăхне çутта кăларакан И.Я.Яковлев тăван халăхран ан вăтанăр, эсир вĕсен хушшинчен тухнă, ĕçлессе те вĕсемшĕн ĕçлемелле тенĕ. "Канаш" хаçат ĕçченĕсем шăпах тăван халăх пуласлăхĕшĕн вăй хураççĕ. Вĕсем лайăх ăнланаççĕ: пурнăçри пулăмсене кашнинех укçапа виçме çук, наци хаçатне кăларса услам тăваймăн. Эпир пулас ăрусем валли ĕçлетпĕр, çак çĕр çинче илемлĕ чăваш чĕлхи ĕмĕр-ĕмĕр янратăр тесе тăрăшатпăр. Кашни чăваша çак ĕçе хутшăнма чĕнетпĕр.

**«Канаш», 2007 ç., 23 №.**

# «Канаш» - тăван чĕлхе управçи

## Хисеплĕ ентешсем, хаклă вулаканăмăрсем!

Чи малтанах сире çывхарса килекен Çĕнĕ çул ячĕпе ăшшăн саламлатăп, ырлăх-сывлăх, телей сунатăп. Хĕл мучи кашни çемьене савнăç та тулăх пурнăç илсе килтĕр.

Чĕмпĕр хули - чăвашсен сăваплă вырăнĕ. Кунта 1868 çулта халăхăмăрăн улăп ывăлĕ И.Я. Яковлев тĕнчипе паллă чăваш шкулне уçнă. Пирĕн çĕнĕ çырулăх та çакăнта никĕсленнĕ, пĕрремĕш букварь те çакăнтанах тухнă. Культурăмăр никĕсĕ Чĕмпĕрте хывăннă.

Шел, 1956 çулта И.Я. Яковлев шкулне облĕçтăвком йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн хупса хураççĕ. Пирĕн тăрăхра чăваш чĕлхи вăйсăрланма пуçлать. Ирĕксĕрех вырăсланма, тăван чĕлхерен именме тытăнтăмăр.

Демократи текен саманан çил варкăшĕ Чĕмпĕр Ен чăвашĕсемшĕн те ăшă хыпар илсе килчĕ. 1989 çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче «Канаш» хаçатăн 1-мĕш номерĕ çапăнса тухрĕ. Вăл сапаланма пуçланă ентешĕмĕрсене пĕр чăмăра пуçтарчĕ, халăх ăнланулăхне ӳстерме пулăшрĕ. Хаçатăн чи çивĕч теми палăрчĕ: нумай мăшкăл тӳснĕ чăваш чĕлхине шкулта вĕрентмелле, халăхра наци мăнаçлăхне çуратмалла, хамăрăн культурăна, йăла-йĕркене тавăрмалла.

Çак тапхăрта чылай аталантăмăр, сахал мар ĕç турăмăр. Тĕллевĕмĕрсем тата пысăк. Ун пирки И.Я. Яковлев çапла çырнă: «Инородецсем (Раççейри вырăс мар халăхсене çапла каланă.-Н.Л.) вырăс халăхĕн аслă çемйине çирĕппĕн кĕрсе вырнаçмалла, анчах та унта усрав ывăл пулса мар, пер тан праваллă ачасем пулма кĕмелле».

Раççейре (Чăваш Енсĕр пуçне) темиçе регионта çеç чăвашла хаçатсем тухса тăраççĕ. Хаçат - халăха аталанма, çӳллĕрех шая çĕкленме пулăшакан вăйлă хатĕр. Область администрацийĕ «Канаша» кăларма укçа-тенкĕ уйăрать, пире пулăшма тăрăшать. Анчах хамăра хамăр та пулăшма вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Сăмахламалли тапхăр иртрĕ, курăмлă ĕçсем кирлĕ. Пĕрремĕш утăм тума «Канаш» хаçат çырăнса илмелле. Унăн тиражĕ паян никама та тивĕçтерейместь — 1300 экземпляра яхăн (облаçра 111 пин чăваш пурăнать). Пĕр хаçат вăтамран 85 çынна лекет. Танлаштарма çак цифрăсене илсе кăтартатăп. Тутарстанра чăваш хаçатне 6 пин çемье çырăнса илет (унта 130 пине яхăн чăваш пурăнать). Пĕр хаçат 27 çынна лекет. Пушкăртстанра «Урал сасси» тиражĕ 3 пин те 600 экземпляр (унта 118 пин чăваш). Пĕр хаçат 33 çынна лекет. Куратăр ĕнтĕ, эпир

кӳрщӗ регионти тӑванӑмӑрсенчен хальлӗхе кайра-ха. Малашне ҫак уйрӑмлӑха пӗтересчӗ.

Хамӑрӑн чи ҫывӑх туссем умӗнче – «Канаш» хаҫата йӗркелесе яракансене, ҫырса, вуласа тӑракансене – ҫӗре ҫити пуҫ таятӑп. Эсир пирӗншӗн – чи хаклӑ ҫынсем. Сиртен килекен ҫырусем тата хаҫатӑн тиражӗ ӳсни – пирӗн чи пысӑк савӑнӑҫ. Сирӗншӗн эпир ҫӗрнекунне пӗлмесӗр ӗҫлеме хатӗр.

«Канаш» - тӑван чӗлхе управҫи, чӑваш чунӗн палӑрӑмӗ, туслӑх элчи. Нацин чикки ҫук. Ӑҫта пурӑнсан та – эпир чӑвашсем. Пирӗн савӑнӑҫ та, хуйхӑ та пӗр. «Канаш» тухса тӑни – пурин савӑнӑҫӗ. Мӗншӗн тесен вӑл чӑваша ЧӐВАШ пулма пулӑшать, ун наци туйӑмне ҫӗклет.

**«Канаш», 52 №, 2004 ç., раштав, 23.**

# "КАНАШ" хаçат — аталану çулĕ çинче

«Канаш» хаçат редакцийĕ 21 çул хушшинче Чĕмпĕр чăвашĕсен культура центрĕ пулса тăчĕ. Çулсерен пирĕн пата 500-600 çыру килет, редакцие вулакансенчен кам та пулин кĕрсе тухмасăр кун та иртмест. Пирĕн хаçат нумай çул ĕнтĕ 1200-1300 тиражпа тухса тăрать. Ăнланмалларах пултăр тесе çакна каламалла: хальхи вăхăтра тиража чакарманни те пысăк çитĕнӳ, мĕншĕн тесен юлашки çулсенче хаçат-журнал çырăнасси, вуласси çĕршывĕпех чакса пырать. Кăçал вара пирĕн тираж 1446 экземпляра çитрĕ. Ăна ӳстерме Чăнлă районĕн пуçлăхĕ Х.В.Рамазанов тата унăн çумĕ А.А.Узиков пулăшрĕç. Çак ĕçре В.В.Салюкин, Е.Ф.Сяпуков, П.А. Узиков, Л.В.Еленкин фермерсем, "Содружество" организаци пуçлăхĕ С.П.Петров, "Цильнамежрайгаз" филиалĕн пуçлăхĕ Н.Л.Ваштахов хастарлăх кăтартрĕç.

Пирĕн редакци паян «МедиаЦентр» патшалăх бюджет учрежденине кĕрет (унăн директорĕ Д.Г Иванов). Юлашки икĕ çулта пĕрлехи вăйпа хаçата халăх хушшинче сарас тата çырăнтарас ĕçре нумай вăй хунă, çĕнĕлĕхсем кĕртнĕ. Ырă улшăнусем чылай пулчĕç.

Нихçан пулманнине икĕ çул хушшинче тĕслĕ номер виçĕ хут кăлартăмăр: хаçат 20 çул тултарнă тĕле — 2 пин тиражпа, Димитровградра иртнĕ область Акатуйĕ валли — 3 пин тиражпа, Ульяновскра иртнĕ Пĕтĕм Раççей чăвашĕсен Акатуйĕ валли — 3 пин тиражпа. Ку номерсене эпир хаçата пропагандăлас тĕллевпе уявсенче халăх хушшинче тӳлевсĕрех салатнă.

«МедиаЦентр» кашни çырăнтару тапхăрĕ валли укçа-тенкĕ уйăрать. Унпа усă курса эпир лайăх ĕçлекен çыхăну уйрăмĕсен пуçлăхĕсене, почтальонкăсене хавхалантаратпăр. Пĕлтĕр «Канаш» хаçат çырăнтарассипе облаçри çыхăну уйрăмĕсен хушшинче ăмăрту ирттертĕмĕр. Çĕнтернĕ коллектива — Чăнлă районĕнчи Кивĕ Улхаш почтине — радиомагнитола парса чысларăмăр. Почтальонсем хушшинче те ăмăрту ирттертĕмĕр. Унта каллех Кивĕ Улхаш почтальонки Алёна Пономарёва мала тухрĕ, 1500 тенкĕ укçан преми илме тивĕçлĕ пулчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче те чăнлăсем — Татьяна Лискова (Каша ялĕ) тата Нина Абдрехменова (Пухтел ялĕ). Вĕсене 1000 тата 500 тенкĕ преми патăмăр.

Çаплах лотерея вылянтарасси йăлана кĕчĕ. «Подписчик декадине» тата хаçат çырăнакансен лотерейине хутшăнакансем хушшинче приз

вылянтаратпӑр. Пӗлтӗр холодильник-сумкӑна Лаишевка посёлокӗнчи Липатовсен ҫемйи выляса илчӗ. Кӑҫал та ҫӗнтерӳҫӗ Лаишевкӑран пулчӗ – Анисия Ивановна Андреева. Ӑна та приз патӑмӑр.

Пӗлтӗр тата кӑҫал хаҫат тусӗсене хавхалантарма, халӑх хушшинче сарма «Канаш» логотипне ҫырнӑ календарь-плакатсем, ручкӑсем, пӗчӗк ялавсем, кружкӑсем туса хатӗрлерӗмӗр. Ку та ҫӗнӗ япала, маларах ун пекки пулман.

Хаҫат страницисенче кашни ҫул 10 тӗрлӗ пултарулӑх конкурсӗ пырать: поэзи , проза, таврапӗлӳ, ӳкерӳ тата ытти те. Ҫулталӑк вӗҫӗнче ҫӗнтерӳҫӗсене парнесем, дипломсем парса чыслатпӑр. Малашне ку конкурссенче ҫамрӑксен хастарлӑхне ытларах курасчӗ.

Кӑҫал Раҫҫей Акатуйӗнче «Канаш» хаҫат редакцинчен Чӑваш Республикин Президентне М.В.Игнатьева стена ҫумне ҫакмалли логотиплӑ ягарлӑ сехет парнелерӗмӗр.

Журналистсемпе пӗрле ҫулсерен Ульяновск патшалӑх педуниверситечӗн чӑваш уйрӑмӗн студенчӗсемпе тӗл пулатпӑр, вулакансен конференцине ирттеретпӗр. Унта яланах ҫырӑнтару ӗҫӗ, хаҫат пуласлӑхӗ пирки калаҫу пырать. Ялсене тухса ҫӳренӗ чух эпир яланах шкулсене кӗрсе тухатпӑр.

А.Дмитриев журналист хаҫатра пӗчӗк ачасем валли «Шӑпӑрлан» страница ертсе пырать. Вӑл шкулсенче ачасемпе тӗл пулса калаҫать, тӗрлӗ темӑпа диспутсем ирттерет, «Канаш» хаҫат ҫинчен каласа парать. Кӑҫал Чӑнлӑ районӗнчи тата Ульяновскри шкулсенче пилӗк тӗлпулу иртнӗ.

Редакци ӗҫченӗсем облаҫри массӑллӑ коммуникаци хатӗрӗсен пресса фестивальне хутшӑнаҫҫӗ. 2009 ҫулта эпир унта редакци сӑнпитне, ӗҫне кӑтартас конкурсра пӗрремӗш вырӑн йышӑнтӑмӑр. Уншӑн пире массӑллӑ коммуникаци департаменчӗ Диплом парса чысларӗ. Ҫак фестивальсенче эпир хамӑр хаҫата ҫырӑнакансене парнесем паратпӑр, пӗлтӗр пирӗн вулакансене виҫе парне лекрӗ.

Чӑваш Республики тулашӗнче тухса тӑракан хаҫатсенчен эпир чи малтан 1000-мӗш номер кӑлартӑмӑр, вӑл 2009 ҫулта тухрӗ. Ҫак ҫулах декабрь уйӑхӗнче хаҫат 20 ҫул тултарчӗ. Ӑна область филармонинче уявларӑмӑр, тӗрлӗ шайри пуҫлӑхҫем, хӑнасем Шупашкартан, Хусантан, облаҫри районсенчен килнӗччӗ. Ку уявра редакцие область кӗпӗрнаттӑрӗн Тав ҫырӑвӗпе тата Чӑваш наци конгресӗн Хисеп грамотипе наградӑларӗҫ. Кӑҫал вара пире халӑх ҫыравне ирттернӗ чух хастарлӑх кӑтартнӑшӑн патшалӑх статистикин федераллӑ службин Хисеп дипломне пачӗҫ.

Халӗ пирӗн хаҫатӑн сайчӗ пур. Ӑна Шупашкарта пурӑнакан

Н.Плотников программист йĕркелесе ячĕ. Паян Çĕр чăмăрĕн хуть те хăш кĕтесĕнче те Чĕмпĕр чăвашĕсен пурнăçĕпе чăвашла вуласа паллашма пулать. Облаçри чăвашсен хушшинчи пысăк пулăмсем пирки эпир Чăваш халăх сайтне материалсем ярса тăратпăр. Унта вĕсене яланах пичетлеççĕ.

Редакцие тĕрлĕ ĕçре пулăшу аллине тăсакансене те асăнса хăварас килет, вĕсем сахал мар. Çырăнтару ĕçĕнче пире кашни çул пулăшакансене – Чăнлă район пуçлăхне Х.В.Рамазанова, «Волга» ял хуçалăх кооперативĕн пуçлăхне Р.Н.Насуртдинова, Ульяновск хула Думин депутатне Н.Г.Абрамова тав тăватпăр. Штатра тăман корреспондент Н.Д.Розов та пирĕн хаçата халăх хушшинче сарас тесе чылай вăй хурать, укçи-тенкине сахал мар тăкаклать. Л.И.Данилов пирки те çакнах каламалла. Кун пек çынсем нумайрах пулсан пирĕн ĕç чылай малалла кайĕ.

## "ШЕВЛЕ" ЛИТПĔРЛЕШӲ

1997 çултанпа «Канаш» редакцийĕ çумĕнче вырăнти чăваш çыравçисен «Шевле» литпĕрлешĕвĕ ĕçлет. Ларусене 10-15 çын çӳрет. Унта çĕнĕ кĕнекесемпе, хайлавсемпе паллашатпăр, вĕсене тишкеретпĕр, тĕллевсене палăртатпăр.

«Канаш» хаçат редакцийĕ Чĕмпĕр чăваш çыравçисемшĕн кĕнеке издательствин ĕçне те туса пырать. Авторсем пирĕн пата алçырăвĕсене илсе килеççĕ, эпир вĕсене кĕнеке кăларма тĕрлĕ енĕпе пулăшатпăр. Çак çулсенче эпир пулăшнипе тата хăйсем тĕллĕн вырăнти çыравçăсем пурĕ 80 ытла кĕнеке кăларма пултарчĕç. Литпĕрлешĕве çӳресе е «Канаш» страницисенче хăйсен хайлавĕсене пичетлесе авторсем пултарулăхне туптаççĕ. Çапла майпа 10 çын ытла Писательсен союзĕн ретне тăма пултарчĕ.

Раççей тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕсем Анатолий Юман тата Валентина Тарават çулсерен темиçешер кĕнеке кăларса чăваш литературине пуянлатаççĕ. Ытти авторсем те кĕнеке кăларкаласах тăраççĕ. Вĕсем хушшине çĕнĕ авторсем — Н.Еремеев, М.Уткина тата ыттисем — хутшăнни ырă япала.

Юлашки вăхăтра Чĕмпĕр чăваш литературинче çĕнĕ сулăм уçăлчĕ: литературоведени енĕпе çырнă пĕрремĕш кĕнекесем кун çути курчĕç. Çĕнĕ историре пĕрремĕш хут вырăнти чăваш çыравçисен пултарулăхне тишкерсе «Чун хушнипе пурăнсан» кĕнеке пичетленчĕ (авторĕ Н.Ларионов). В.Ефимова та ку енĕпе пысăк ĕç турĕ, А.Юман

пултарулӑхне тӗпчесе уйрӑм кӗнеке кӑларчӗ. А.Юман вара А.Чебанов пултарулӑхӗ пирки кӗнеке ҫырса кун кӑтартрӗ. Ку ӗҫе пирӗн малалла тӑсмалла, кашни ҫыравҫӑн пултарулӑхне, хӑйнеевӗрлӗхне тӗпчемелле.

2008 ҫулта Чӑваш халӑх писательне Юхма Мишшине тата Чӗкеҫ Люҫҫине Ульяновска чӗнсе илсе "Шевле" литпӗрлешӳ членӗсемпе тӗлпулу ирттертӗмӗр. «Шевле» литпӗрлешӳ членӗсем кӑҫал Чӑваш Республикин Ульяновск облаҫӗнчи культура кунӗсене ирттернӗ чух хастарлӑх кӑтартрӗҫ, Чӑваш Республикинчен килнӗ ҫыравҫӑсемпе ирттернӗ тӗлпулӑва хутшӑнчӗҫ. Вӗсене уншӑн тав тӑвас килет. Чӑваш Ен ҫыравҫисемпе тӗл пулас кӑмӑл пирӗн малашне те пур-ха.

Унпа пӗрлех хурлӑхлӑ япаласем те пулчӗҫ. 2011 ҫулта Чӗмпӗр ҫыравҫисем хушшинче кӑна мар, пӗтӗм чӑваш литературинче паллӑ ҫынсем Пётр Ишутов тата Анатолий Чебанов пиртен ӗмӗрлӗхех уйрӑлса кайрӗҫ. Ҫамрӑк ҫыравҫӑсем ҫукпа пӗреххине шута илсен ку калама ҫук пысӑк ҫухату. Ульяновскри педуниверситетӑн филологи факультетӗнчи чӑваш уйрӑмӗнче вӗренекенсем ҫыру ӗҫне пикенсех тытӑнасса, «Шевле» литпӗрлешӗве тӑтӑшах ҫӳрессе тахҫанах кӗтетпӗр те... Ҫаплах эпир чӑваш шкулӗсенче (уйрӑмах ку Чӑнлӑ районӗнче пурӑнакансене пырса тивет) вӗренекенсем те редакцие тӗрлӗ хайлавсем ярса панине , литература ӗҫӗпе интересленнине курасшӑн. Чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекенсем ҫак ӗҫре вӗсене пулӑшу парсан, литература ҫулӗ ҫине тӑратсан питӗ лайӑх пулӗччӗ.

Пӗтӗмлетсе каласан пирӗн чи пысӑк тӗллевсем - «Канаш» хаҫатӑн тиражне ӳстересси тата чӑвашла ҫыракан ҫамрӑк авторсен хайлавӗсене, кӗнекисене курасси. Ку ӗҫсене пӗр ҫулта тума ҫук, вӗсене пурнӑҫлама чӑвашла лайӑх калаҫакан, вулакан, ҫыракан, тӑван халӑха хисеплекен ӑру ҫитӗнтермелле. Ку ӗҫӗн пуҫламӑшӗ вара – ҫемьере тата шкулта.

«Канаш» хаҫатӑн ӗҫӗ – ентешӗмӗрсене тӑван культурӑпа паллаштарасси, вӗсене пӗр чӑмӑра пӗрлештересси, тӑван халӑхӑн ячӗ-сумне ӳстересси, чӑваша чӑваш пулма пулӑшасси. Эпир ку ӗҫе кунсерен илсе пыратпӑр. Кашни чӑваш ҫак тӗллевпе пурӑнсан, кашни кун тӑван халӑхшӑн усӑллӑ ӗҫсем тусан пирӗн ҫитӗнӳсем чылай пысӑкрах пулмалла.

Пирӗн чи пысӑк пуянлӑх эсир, хисеплӗ вулакансем, «Канаш» хаҫата ҫырӑнса илекенсем. Эпир кунсерен сирӗншӗн тӑрӑшатпӑр.

Ҫӗнӗ ҫулта пирӗн рет йышлантӑр!

**«Канаш» 2012 ҫ., 1 №.**

# Мăнтарăн чăваш чĕлхи

Вулакана тӳрех ăнлантармалла: кунта эпĕ чăваш чĕлхине чухăн та мĕскĕн тесе каласшăн мар. "Мăнтарăн" сăмахпа усă курса пачах урăххине палăртасшăн: тăван чĕлхене мĕнле нуша кăтартмаççĕ, чăвашла çыратпăр тесе мĕнле кăна асаплантармаççĕ, мĕнле кăна хуçмаççĕ. Чăваш чĕлхи вара чăтать. Вăл сывă-ха! Хăçанччен-ши?

Пирĕн чĕлхе çĕр çинчи чи авалхисенчен пĕри. Хăшĕсем вăл 5 пин çулта теççĕ. Тĕрĕс-и ку, тĕрĕс мар-и — пурпĕрех юлашки вăхăтра тĕрлĕ çĕршыв ученăйĕсем чăваш чĕлхипе кăсăкланасси ӳссе пырать. Авалхи çырусен тупсăмне те чăваш чĕлхи урлă çеç ăнлантарма май пур самантсем нумайланаççĕ.

Çиелтен пăхсан тăван чĕлхешĕн пăшăрханмалли çук пек туйăнать. Эпир 2 миллионлă халăх, Раççейре çын шучĕпе 4-мĕш вырăнта тăратпăр (вырăссем, тутарсем, украинецсем хыççăн), тĕнчере — 225-мĕш вырăнта (пурĕ 4 пин халăх теççĕ тĕпчевçĕсем). Чăваш чĕлхи Чăваш Республикинче патшалăх чĕлхи шутланать (вырăс чĕлхипе пĕр тан). Ялта та, хулара та ачасене тăван чĕлхене вĕрентеççĕ: е урок меслечĕпе, е — факультатив, е — кружок. Çулсерен савăнăçлă хыпарсем çыратпăр: çак районта чăваш класĕ уçăлнă, çак облаçра çавăн чухлĕ шкулта чăвашла вĕрентеççĕ. Тĕрлĕ фестивальсем, уявсем ирттереççĕ. Ку лайăх тейĕпĕр. Тĕрĕссипе вара, тивĕçлĕ вырăнта-ши чăваш чĕлхи, чаплах-ши ун пуласлăхĕ, халĕ çителĕклĕ шайра-ши? Тăван чĕлхене мĕнле юрататăп пулин те — тӳрех çапла тесе калаймастăп. Пурнăç çапларах хистет. Пысăк масштабпа илсен, çитменлĕхсем, шăйрăксем питĕ нумай-ха. Тăван чĕлхен тымарне кăкланă хыççăн çĕнĕ хунавсем ӳстерме питĕ хĕн.

Ман шутпа, пирĕн чĕлхе вилсе пыракан чĕлхе паллисене кăтартать. Тĕлĕнме ан васкăр. Чĕлхе мĕншĕн пĕтет? Пĕр-пĕр халăх пĕтĕмĕшле пурнăçа кĕрсе каяс тесе урăх чĕлхепе калаçма тытăнать. Пирĕн тĕслĕхре ку — вырăс чĕлхи. Çапла мар-и-ха? Ялта çуралса ӳснĕ икĕ чăваш та хулара тĕл пулсан вырăсла калаçма пикенеççĕ вĕт. Чăвашла калаçнă чух та çуррине вырăсла калатпăр. Ку вара урăх чĕлхе çине куçма тăрăшнине пĕлтермест-ши? Хамăр чĕлхене çаплах кураймастпăр-ши? Çак çулпах кайсан ăçта пырса тухăпăр? Вилсе пыракан чĕлхесем çинчен калани пур: юлашки тапхăрсенче ку чĕлхепе пĕр-пĕр çулхисен ушкăнĕ çеç калаçать, уйрăмах аслă ăрурисем. Ку чĕлхепе кĕçĕн çулхисем килте калаçма пултараççĕ, шкулта вĕрентмесен вара ăна пуçĕпех çухатма пулать. Кунта кĕçĕн классенче факультативсем е кружоксем ирттерни пĕтĕмĕшле ĕçе хăтарса

хӑвараймасть. Пӗтӗмлетӳ: шкулта ачасене чылай программӑпа вӗрентмелле, 1-мӗш класран тытӑнса 11-мӗш таран.

Империсем тунӑ вӑхӑтра вак халӑхсен чӗлхисене пӗтерме тӑрӑшнӑ. Халӗ те ҫавах. Эпир чӑвашла калаҫни Мускаври пысӑк пуҫлӑхсене питех кирлӗ те мар. Халӑх ҫук — хуйхӑ ҫук. Ҫавӑнпа та хамӑрӑнах шухӑшлас пулать малашлӑх пирки. Пӗр-пӗр чӗлхе патшалӑх чӗлхи пулсан ҫеҫ сыхланса юлма пултарать — ку аксиома. Апла пулсан вӑл хут ҫинче ҫеҫ патшалӑх чӗлхи ан пултӑр. Саккунсем ӗҫлеччӗр. Хальлӗхе вара вӗсем ҫителӗклӗ ӗҫлеҫҫӗ тесе калама ҫук. Документсем чӑвашла ҫук, делопроизводствӑра чӑваш чӗлхипе усӑ курмастпӑр. Эп пӗлнӗ тӑрӑх, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн ларӑвӗсем йӑлтах вырӑсла иртеҫҫӗ. Пӗррехинче Шупашкарта "Етӗрне" ентешлӗх каҫӗнче пулма тӳр килчӗ. Йӗркелени, irttерни питӗ килӗшрӗ, анчах торжествӑлла пайӗнче пӗри те чӑваш сӑмахӗ каламарӗ. Калӑн, вырӑссем пуҫтарӑннӑ. Нумаях пулмасть мана Ульяновск облаҫӗнчи чӑвашсен автономи пуҫлӑхӗ П. Я. Уфимкин ҫапла каларӗ: "Иртнӗ эрнере Чӑнлӑ районӗнчи пӗр чӑваш ялӗнче шкулта пултӑм. Линейка irttерчӗҫ. Чӑвашла калаҫакан никам та пулмарӗ, юлашкинчен эпӗ ҫеҫ тӑван чӗлхепе калаҫрӑм". Ҫакна илтсен нумаях пулмасть Ульяновскра иртнӗ "Чӑваш ачи, сассуна пар" фестивале килнӗ ачасем сцена ҫинчен аннӑ хыҫҫӑн хӑйсем хушшинче вырӑсла калаҫнинчен тӗлӗнме те кирлӗ мар. Тӑван чӗлхене сума суни сисӗнмест вӗсем ҫине пӑхса тӑрсан.

Орфографи пирки. Уҫӑмлӑ правило пирӗн нихҫан та пулман — юлашки ҫулсенче уйрӑмах пӑтрашса кайрӗ вӑл. Пӗр-пӗр сӑмаха мӗнле тӗрӗс ҫырмаллине никам та пӗлмест. Пӗр чӗлхеҫӗсем пӗр тӗрлӗ, теприсем урӑхла ҫырма сӗнеҫҫӗ. Икӗ енӗ те хӑй тӗрӗс тесе шутлать. Хаҫатҫӑсен, вӗрентӳҫӗсен, шкул ачисен мӗн тумалла ку лару-тӑрура? Юлашки 30 ҫул хушшинче пирӗн тулли орфорграфи словарӗ тухман. Тиркес енӗпе эпир ӑста-ха, анчах ӗҫ тума вӑхӑт ҫитсен чарӑнса тӑратпӑр. Сӑмах майлашӑвӗсене уйрӑм ҫырас тӗлӗшпе вара абсурд сахал мар пулса тухать. Сӑмахран, "пуҫхӗрлӗ" (вниз головой) сӑмаха та хӑшӗ-пӗри уйрӑм ҫырма хушать. Манӑн ӑс куна ӑнланма ҫитеймест. Мӗне пӗлтерет-ши вӑл уйӑрнӑ хыҫҫӑн? Ман шутпа, правилӑна енчен енне сӗтӗркелесе, хуҫса, авкаласа пӗтерме кирлӗ мар.

Ку лару-тӑрура чӗлхеҫӗсем, ученӑйсем хӑйсен татӑклӑ сӑмахне калама тивӗҫлӗ. Вӗҫӗмсӗр тавлашма кирлӗ мар, орфографире калаҫса татӑлма пулать вӗт. Правилӑна картне лартмалла та ҫынсене пӗр пек ҫырма вӗрентмелле. Чӗлхе ҫынсене ирӗксӗрлесе ан тӑтӑр, пулӑшса пытӑр.

Чӗлхе тасалӑхӗ пирки. Чи вараланнисем кунта — варваризмсем. Урӑхла каласан, пуплеве кирлӗ мар ҫӗртенех кӗрте-кӗрте яракан ют

чĕлхе сăмахĕсем е сăмах майлашăвĕсем. Калаçу витĕмĕпе вара хăшĕпĕри çыру чĕлхине те кĕрсе каять. Хăш чухне телевиденипе калаçакансене те хăлхана мамăк чикмесĕр итлеме май çук. Шантаратпăр выранне — "обещат тăватпăр", çунтаратпăр выранне — "сжигат тăватпăр". Ĕçе эпир кая юлмастпăр — "опоздат тăватпăр", панулми мар — "яблоки çиетпĕр". Вĕçĕ-хĕррисĕр тăсса кайма пулать ку тĕслĕхсене. Çак пулăм — варваризм — юлашки вăхăтра ял çыннисен хушшинче те сарăлса пырать. Чи пăшăрхантараканни çакă: тăван чĕлхе тасалăхĕшĕн интеллигенци те тăрăшми пулчĕ. Аслă шкулта ĕçлекенсем, хаçатçăсем, учительсем чăвашла-вырăсла хутăш калаçма вĕренсе çитрĕç. Ыттисем вĕсенчен тĕслĕх илеççĕ. Тăван чĕлхен общество пурнăçĕнчи пĕлтерĕшне ӳстерес тесен пирĕн асăннă чиртен хăтăлма тăрăшмалла. Кунта ак мĕнле пĕтĕмлетӳ тума пулать. Çĕнни çуралма кивви вилни кирлĕ. "Шантаратпăр", "апат çиетпĕр" сăмахсем вилмен вĕт-ха. Мĕншĕн вĕсене калаçуран кăларса пăрахмалла? "Панулми" сăмах та словарьте хăй вырăнĕнчех.

Вырăсла шухăшласа чăваш сăмахĕсемпе çырни те анлăн сарăлса пырать. Уйрăмах хулара пурăнакан чăвашсем хушшинче. Сăмахран, "волнуюсь" сăмаха "хумханатăп" тесе куçаратпăр. Чăваш ăнланăвĕнче — тинĕс хумханать, ыраш хумханать. Чунри туйăма палăртма "пăлханатăп", "пăшăрханатăп", "кулянатăп" сăмахсем пур-çке. Мĕншĕн вĕсемпе усă курмастпăр? Мĕншĕн тесен шухăшлас, шырас килмест. Янтипе усă куратпăр — пĕлтерĕшне лайăх чухламасăрах. "Вăл калать — эп те калатăп" принципа тĕпе хуратпăр. Тепĕр тĕслĕхе те асăнса хăварас килет. "Красота пленит глаза" предложение эпир ним шутламасăр "илем куçа тыткăна илет" тесе куçаратпăр. Вырăнлă-и ку, чăвашла-и? Ман шутпа, çук. П. Хусанкай кун пек чухне "куçа илĕртет", "куç тулли" сăмах майлашăвĕсемпе усă курма сĕнет. Çыпăçуллăрах, илемлĕрех мар-и çавăн пек? Мĕн каласан та, "тыткăн" сăмах савăк туйăма палăртмашкăн вырăнлах мар. Пирĕн шухăшлав йĕрки вырăссенни пек мар-çке. Мĕншĕн вĕсем шухăшланă пек чăвашла сăмахсемпе çырмалла? Кунта мĕн теме пулать? Пĕри ПĔЛМЕСĔР йăнăш çырать, тепри ШУХĂШЛАМАСĂР çырса илет. Тата темиçе тĕслĕх. Юлашки вăхăтра хĕрсем "КАЧЧА ТУХМА" тытăнчĕç. Ĕлĕк вара "КАЧЧА КАЙНĂ". Кунта каллех тӳррĕн, сăмах пĕлтерĕшне пăсса куçарнă. Вырăсла — "выходит", апла пулсан чăвашла "тухать". Тĕрĕс-и ку? Яла кайса тĕрĕслĕр. Ялта чи таса чăваш чĕлхи упранса юлнă, уйрăмах çулланнă хĕрарăмсен хушшинче. Халĕ опыт тăвăр. Çак хĕрарăмсемпе туй темипе калаçма пикенĕр. Шантарсах калама пулать: нихăшĕ те качча тухать темĕ. Чăвашсем "качча кайнă", "качча килнĕ", "качча пынă" теççĕ.

"Что с тобою происходит?" текен предложение те эпир "санпа

мĕн пулса иртет?" тесе куçарма тытăнтăмăр. Мĕнле çăмăл! Кашни сăмахне тӳррĕн чăвашла куçар та — пулчĕ те. Анчах чăваш çапла калать-и? Аса илер-ха: "сана мĕн пулчĕ" темест-и вăл? "Сан çине шанатăп" тетпĕр тата "на тебя надеюсь" предложение куçарса. Чăваш ун пек каламасть, "сана шанатăп" тет. Каллех тарăн шухăшламасăр çырса илни ку. Çакăн пек тĕслĕхсемпе тарăн çырмана тултарма пулать. Буквализмран хăтăлмалли пирки П. Хусанкай, Илпек Микулайĕ мĕн чухлĕ çырнă!

Чĕлхе шухăшлавпа çыхăннă, çавăнпа та куçарнă чухне пуплеве тӳрлетсе пырать. Тĕслĕхрен, вырăсла "мичман Павлов" пулсан чăвашла "Павлов мичман" пулать. Хăш-пĕр чухне эпир вырăсла вариантпах усă куратпăр.

Кăштах эстрада пирки. Юрă тексчĕсене диалект (вырăнти калаçу) сăмахĕсемпе çырма тытăнчĕç. Çаплипех сцена çинчен юрлаççĕ. Ку юрă пĕр-икĕ ял е район çыннисем валли мар вĕт-ха. Ана пĕтĕм чăваш тĕнчи итлет. Литература чĕлхи диалектсене шута илет, анчах нихăшĕнпе те пĕр килмест. Çавăнпа та литература чĕлхипе çырмалла.

Аудиокассетăсем çине çырнисенчен вара кулăш кăшăлĕ çыхма пулать. Анчах ку кулăш чĕрене ыраттарать.

Акă тĕслĕхсем, эпĕ вĕсене ятарласа шыраса ларман. Кассетăсене кăларса хутăм та — вулатăп: "Атвăр, хĕрсем, выляма", "Кала, мĕншĕн кттерен", "Тухсам савни, тухсамчче", "Сансăр тет кичем", "Асаилю", "Урхамахсем тарас тăпăртатса", "Çиль утти" тата ыттисем те. В.Кузнецова кассети çине вара "лауреачĕ" сăмах вырăнне "лаурячĕ" тенĕ. Мĕншĕн çакăн пек кулма ирĕк памалла тăван чĕлхерен, мĕншĕн çакна тĕрĕслекен çук? Мĕншĕн ыйтмаççĕ мĕнле çырмаллине кассета кăларакансем? Шупашкарти лавккасенче, урамсенче те чăвашла тĕрĕс мар çырни мĕн чухлĕ! Саккунсем кăларнипе çеç çырлахмалла мар, ăна пурнăça мĕнле кĕртнине те тĕрĕслесе тăмалла. Унсăрăн чĕлхе анархийĕ пулать.

"Иностранные слова не вмещает голова", - тесе юрларĕ пĕррехинче "Играй, гармонь" телекăларăмра пĕр арçын. Чăнах та, ют чĕлхесенчи сăмахсем пирĕн еннелле ту çинчен пылчăк купи аннă евĕр килеççĕ. "Пейджер", "дилер", "киллер", "секвестр"... Кунта та ылтăн варрине тупма пулать. Çак сăмаха хамăр чĕлхери сăмахпа палăртма çук пулсан çеç усă курмалла. Сăмах ăçталла сĕтĕрет, çавăнталла сулăнмалла мар. Чăваш чĕлхи пуян вĕт-ха. Словаре тытса уçар-ха, ухтарар кашни сентрине. Хамăра кирлине тупма пулатех. Ӳркенмелле çеç мар. Чĕлхе лаççине куллен пуянлатмалла, тăван чĕлхен пĕтĕм хăвачĕпе усă курмалла. Ют чĕлхесенчи сăмахсемпе нумай усă курни — экстенсивлă аталану. Чĕлхе пахалăхне ӳстермесĕр калăпăшне (сăмахсен шутне) хăпартса пыни ку. Пуласлăх валли мул хывмасăр

хатĕррипе усă курни ырри патне илсе çитермĕ. Паян вырăнлă, меллĕ курăнать пуль-ха ку çул, пурнăç çине ăс-тăнпа пăхнă пек туйăнать пуль. Анчах малашлăхĕ тĕксĕм унăн. Ют лексикăпа сахалтарах усă курмалла, вырăнлă консерватизм та кирлĕ хăш чухне.

Чĕлхене тивĕçлĕ шая çĕклекен çул — пуризм. Вăл интенсивлă çул. Чăнах та, унпа кайма йывăртарах — шухăшламалла, хамăр чĕлхери аффикссемпе усă курса çĕнĕ сăмахсем тумалла, вĕсене лексикăна кĕртес тесе вăй хумалла. Ăна хирĕçлекенсем сахал мар. Анчах аталану енчен илсен — ку тăван чĕлхене хамăрăн сăмахсемпе пуянлатать. Вăхăт иртнĕçемĕн лексикăна хамăр сăмахсем кĕрсе çирĕпленеççĕ. Çак çул — пулас ăрусем валли мул хывни.

Халĕ шутлар: хăшĕнпе каймалла пирĕн? Паян чăваш чĕлхинчи сăмахсен 20 проценчĕ — ют чĕлхерен йышăннисем. Çавсене ӳстерсе пырса тăван чĕлхене сăнсăрлатар-и е чăваш ятне-сумне çĕклер-и? Манса каяр мар: чĕлхе пĕтсен халăх пĕтет. Çыннисем пур — халăхĕ çук.

Чĕлхе ыйтăвĕсене малалла темĕн чухлĕ тăсса кайма пулать. Хальлĕхе çитĕ-ха. Çак статья кама та пулин хамăр чĕлхе пуласлăхĕ çинчен шухăшлаттарчĕ пулсан — эпĕ тĕллеве пурнăçларăм. Вулакансем çак темăна малалла тăсасса шанатăп. Калаçмалли питĕ нумай.

Çак статья пуçламăшĕнче эпĕ чăваш чĕлхин пуласлăхĕ пирки кăштах иккĕленнишĕн мана вăрçма хатĕррисене çапла хуравлатăп. Характерпа эпĕ — оптимист. Пессимист нихçан та пулман, ун пек çынсене килĕштерсех те каймастăп. Çапах та пурнăç çине реализмла (чăнлăха туйса, шута илсе) пăхма тăрăшатăп. Ялан кĕрен е ялан хура куçлăхпа пăхни сиенлĕ. Чăнлăх вара çапла: хамăр шутламасан — пирĕн çинчен никам та шутламасть. Чăваш чĕлхине ЧĂВАШСЕМ çĕклемелле. Унсăрăн ăна латин чĕлхин шăпи кĕтме пултарать.

Латин чĕлхин шăпине пурте пĕлеççĕ. Унпа мĕн пысăкăш Рим империйĕ калаçнă! Халĕ ăçта вăл? Вилнĕ. Медицинăра çеç усă кураççĕ унпа.

Чăваш чĕлхине çак шăпа ан кĕттĕрччĕ...

**«Канаш», 7 №, 2001 ç., нарăс, 16.**

***Ку статья 2001 çулта Атăлçи Федераллă округĕнче этнокультурăпа конфесси ыйтăвĕсене килĕшӳллĕн аталантарнине çутатса паракан чи лайăх публикацисен конкурсĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă. Конкурс Чулхулара иртнĕ.***

# Наци пуласлăхĕ — вĕренӳре

Тăван халăхăмăра çутта кăларакан И.Я. Яковлев Чĕмпĕр чăваш шкулне уçни кăçал 130 çул çитрĕ. Ку вĕренӳ çурчĕ пирĕн халăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни каламасăрах паллă. Кĕскен каласан, кунта чăваш халăх культури тĕвĕленсе аталаннă, пĕрремĕш утăмсем тунă.

Юбилее халалласа шкул комплексĕнче чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнче анлă семинар иртрĕ. Унта Чăваш Республикинчен килнĕ пысăк делегаци (26 çын) хутшăнчĕ. Вĕсен хушшинче паллă ăсчахсемпе тĕпчевçĕсем, профессорсем, журналистсем.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕн пĕр корпусĕнче хăнасене культура училищинче вĕренекен чăваш хĕрĕсем çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç, тутлă сăрапа сăйларĕç.

Уява Ульяновск облаçĕнчи Саккунсем кăларакан Пуху пуçлăхĕн çумĕ Т.В. Сергеева уçрĕ, кĕскен шкул историйĕпе паллаштарчĕ, лару тĕллевĕ çинчен каларĕ.

Ун хыççăн пухăннисене Саккунсем кăларакан Пуху пуçлăхĕ С.Н. Рябухин саламларĕ, облаç администраци пуçлăхĕн Ю.Ф. Горячевăн çырăвне вуласа пачĕ.

Просветителе тав туса унăн мемориал кабинетне чĕрĕ чечексем хучĕç. Ку ĕçе Чăваш патшалăх университечĕ çумĕнчи И.Я. Яковлев институчĕн директорне Н.Г. Краснов профессора, Ульяновскри педагогика ĕçĕн ветеранĕсене В.В. Афанасьева тата В.М. Репина, педуниверситетри чăваш уйрăмĕнче вĕренекен А. Юркинана хушрĕç.

Халăх умне Шупашкар делегацийĕн пуçлăхĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ, Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ Л.П. Кураков тухать. Лев Пантелеймонович Чăваш Республикин Президенчĕ тата Патшалăх Канашĕ ячĕсемпе саламлă сăмах каларĕ. Малалла вăл И.Я. Яковлев Халалĕнчи тĕп шухăша залра ларакансем патне çитерчĕ: халăхăн пуласлăхĕ — вĕрентӳре. Тĕрĕссипе, просветителĕн пĕтĕм пурнăçĕ çак ĕçпе çыхăннă. Халĕ эпир ăна малалла тăсмалла. Тăван халăха тата кӳршĕ халăхсене хисеплемелле, юратмалла, тачă çыхăнса ĕçлемелле. Кашни чăваш тăван чĕлхене лайăх пĕлмелле, хальччен пухнă опыт çине таянса çӳлелле çĕкленмелле.

Докладчик малалла сăмахне çапла тăсрĕ:

— Иван Яковлевич питĕ ăслă та пултаруллă çын пулнă. Шалти вăй-хăватне ырă ĕçсем тума çеç янă. Çынсене юратнă, тăшмана та тус-юлташа çавăрма пĕлнĕ. Халăх нушине чĕри витĕр кăларнă, кашни

çитменлĕхшĕн пăшăрханнă, пурнăçа лайăхлатассишĕн ырми-канми тăрăшнă. Унăн Халалĕнчи шухăшсене халĕ эпир пурнăçа кĕртме тăрăшатпăр. Сăмахран, ачасем пĕчĕккĕллех ĕçе хăнăхса ÿсчĕр тесе нумай шкула çĕр лаптăкĕ уйăрса патăмăр. Çак çĕр çинче ĕçлесе халĕ вĕсем хăйсем валли укçа-тенкĕ туса илеççĕ, шкула апат-çимĕçпе тивĕçтереççĕ, шкул зданийĕсене юсаççĕ. Хăшĕсем трактор туянма та пултарчĕç çак укçапа. Пирĕн университет та çак сулăмпах ĕçлет. Ялсенчи шкулсенче аслă шкула кĕмешкĕн хатĕрлекен центрсем уçрăмăр, ял ачисене çăмăллăхсем паратпĕр. Хамăр республикăра темиçе филиал уçрăмăр. Шутласа пăхăр-ха, Патăрьелĕнче çеç 700 студент вĕренет. Вĕсем çакăнта е çывăхри ялсенче пурăнаççĕ. Акă мĕн енĕпе лайăх ку! Халĕ Ульяновска та çитрĕмĕр. вĕрентÿпе консультаци пунктне уçрăмăр.

Çакна та палăртма кăмăллă: Чăваш патшалăх университечĕн сумĕ Раççейре ÿссе кайрĕ. Халĕ вăл вунă чи лайăх аслă шкул шутне кĕрет. Ахальтен мар ĕнтĕ Лев Пантелеймонович çывăх вăхăтра Швеция семинара тухса каять. Унта кайма вара пурĕ те виçĕ ректора çеç суйласа илнĕ. Ку та малтанхи шухăша çирĕплетет.

Юлашкинчен Л.П. Кураков çапла каларĕ:

– Чăваш халăхне пĕлÿ парас ĕçре чылай мала кайрăмăр, анчах тумалли тата та нумайрах. Хам енчен çакна калама пултаратăп: ку ĕçре пысăк çитĕнÿсем патне çитес тесе вăя шеллемесĕр ĕçлĕп, вăйхал çитнĕ таран тăрăшăп!

Тăхтав вăхăтĕнче семинара хутшăнакансем И.Я. Яковлевпа аллааллăн ĕçленĕ И.Н. Ульяновăн палăкĕ умне чĕрĕ чечексем кайса хучĕç.

Ларăвăн иккĕмĕш пайне просветителĕн пурнăçне тĕпчекен чи паллă ăсчах Н.Г. Краснов уçрĕ. Унăн доклачĕн теми «И.Я. Яковлев тата революцичченхи Раççейри икĕ чĕлхеллĕ пуçламăш шкулăн дидактики». Николай Герасимович пухăннисемшĕн нумай çĕнĕ япала каларĕ, уйрăмах ку учительсемшĕн усăллă пулĕ.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнчен 1951 çулта вĕренсе тухнă В.В. Афанасьев çак стенасем çумĕнче пĕлÿ пухнă вăхăта аса илчĕ. 1956 çулта облаç ĕçтавкомĕн йышăнăвĕпе чăвашсен пĕлÿпе культура центрне хупса хуни çинчен пăшăрханса калаçрĕ.

А.А. Пономарева И.Я. Яковлев музейĕ çамрăксене воспитани панă ĕçри пĕлтерĕшĕ пирки калаçрĕ. Музей экспоначĕсене куçса çÿрекен выставка туса ялсене илсе тухнине те илтме кăмăллă пулчĕ. Çак выставкăна курас текенсем кирек хăш вăхăтра та музей заведующине заявка пама пултараççĕ.

Чăваш Енрен килнĕ И.В. Мукина аслă преподаватель сăмахĕ

Чӗмпӗр чӑваш шкулӗн пӗрремӗш учителӗсем пирки пулчӗ. Пӗрремӗш официаллӑ учитель тесе эпир Калашникова калама пултаратпӑр. Ун хыҫӗнче Соколов, Панаев, Суров, Богоявлинский, Архангельский, Филимонов хушамачӗсем тӑраҫҫӗ.

Чӑваш патшалӑх университечӗ ҫумӗнчи филологи институчӗн ректорӗ В.И. Сергеев профессор И.Я. Яковлев шкулӗнче хӗрсемпе хӗрарӑмсене вӗрентни ҫинче чарӑнса тӑчӗ. Ҫак ӗҫре просветителӗн мӑшӑрӗн Е.А. Бобровникован тӳпи пысӑк пулнине палӑртрӗ. Вӑл ертсе пынипе хӗрсем алӑ ӗҫне хӑнӑхса пынӑ, хӑйсем ӑсталанӑ япалисемпе Чулхулари ярмӑрккара 1-мӗш вырӑн йышӑннӑ, дипломсем илнӗ.

Докладсем вӗҫленнӗ хыҫҫӑн университетри журналистика факультечӗн деканӗ А.П.Данилов Ульяновскри вӗрентӳпе консультаци пунктне кӑҫал пӗрремӗш курса вӗренме илнӗ ҫамрӑксен списокне вуласа пачӗ. Конкурспа иртнисен шучӗ 24 ҫын (51 абитуриентран). Тата 7 ҫынна ӑсчахсен канашӗ залрах вӗренме илчӗ. Кунта ҫакӑн пек принципсене мала хучӗҫ: нумай ачаллӑ ҫемьерен пулни, инҫетри районсенче пурӑнни, тӑлӑх ӳсни. Л.П. Кураков абитуриентсене списока кӗртиччен кашнинпе калаҫу ирттерчӗ. Ытла пӑлханнипе тата савӑннипе куҫҫульне шӑлса илекенсем те пулчӗҫ. Кашни студента ректор кӗнекесен пуххи парнелерӗ. Ҫакна та палӑртмалла: вӗсене пӗр ҫул вӗрентесси университета 700 пин тенке ларать.

Чӗмпӗр чӑваш шкулӗн комплексӗ патшалӑх историпе мемориал заповедникнӗ кӗрет. Ӑна тивӗҫлӗ шайра тытса тӑрасси, чӑвашьенсемпе ҫыхӑнса ӗҫлесси унӑн директорӗнчен А.Н. Зубовран нумай килет. Унӑн ӗҫне хакласа Чӑваш Ен хӑнисем Александр Николаевича «Чӑваш Республикин культура тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ» ят пачӗҫ. Чӑваш Патшалӑх Канашӗн президиумӗ наци культурине чӗртсе малалла аталантарас, халӑх йӑли-йӗркине сарас тӗллӗшпе нумай ҫул хушши ӗҫленӗшӗн ҫак ҫынсене Хисеп грамотисемпе наградӑларӗ: «Канаш» хаҫатӑн тӗп редакторне В.Ф. Ромашкина, хаҫат сотрудникӗсене А.Г. Дмитриева, Н.А. Казакова, Кивӗ Улхашри вӑтам шкул учительне Н.К. Кадебина тата А.М. Богатов журналиста.

Савӑнӑҫлӑ хыпарсем кунпа ҫеҫ пӗтмерӗҫ-ха. Л.П. Кураков вӗрентӳпе консультаци пунктне нумай кӗнеке тата 25 пин доллар тӑракан компьютер парнелерӗ. Ҫитес вӑхӑтра Шупашкартан килсе ҫӳрекен преподавательсем валли икӗ хваттер юсаса пама шантарчӗ.

Семинар пысӑк уява ҫаврӑнчӗ. Ӑна йӗркелекенсем алӑ ӑстисене чӗнме те манман. Мӗн кӑна илсе килмен вӗсем! Пӑхсан тӗлӗнетӗн:

нивушлĕ çакна çын алли тунă? Кунта уйрăмах Н. Тимряков, Л.Нюркина, М. Вальщиков, Г. Елисеева ĕçĕсене палăртмалла.

Шупашкарти экономикăпа менеджмент институчĕн ректорĕ Н.Т.Савруков вара учительсем тата семинара хутшăнакансем валли уйрăм парнесем хатĕрлесе хунă. Алăкран кĕрекенсене хăй аллипе парнесем тыттарчĕ.

Ульяновскри нацип е культура автономи пуçлăхĕ П.Я. Уфимкин семинара йĕркелекенсене тата хутшăнакансене тав турĕ, малашне те пĕрле çыхăнса ĕçлесе чăваш культурине аталантармалли пирки каларĕ. Юлашкинчен Л.П. Кураков Мускавра пурăнакан И.Я. Яковлевăн тата И.Н. Ульяновăн мăнукĕсем патне Чĕмпĕр чăваш шкулĕ чĕрĕлнĕ пирки савăнтармашкăн телеграмма яма ирĕк пама ыйтрĕ. Залра ку сăмахсем хыççăн тăвăллăн алă çупни илтĕнсе кайрĕ. Пысăк хăнана тав туса Ульяновск чăвашĕсен нацип е культура автономи президиумĕн членĕ Н.И. Тимряков хăй аллипе йывăçран касса ăсталанă ваза парнелерĕ.

Уява «Эревет» чăваш халăх ансамблĕн (ертӳçи Н.Ф. Косырев) концерчĕ илемлетрĕ.

**«Канаш», 48 №, 1998 ç.**

# Наципе культура автономисене пĕтме памалла мар!

С.И. Морозов кĕпĕрнаттăр облаçри наципе культура автономисен, пĕрлĕхсен пуçлăхĕсемпе, наци хаçачĕсен редакторĕсемпе тĕл пулчĕ. Тĕп тĕллев – регионта пурăнакан тĕрлĕ халăхсен культурине аталантарма пулăшасси.

Сергей Иванович кашни пĕрлĕхĕн пуçлăхĕсенчен лару-тăру мĕнлине ыйтса пĕлчĕ, сĕнӳсем пама ыйтрĕ.

Малашнехи мероприятисене пăхса тухрĕç. Авăн (сентябрь) уйăхĕн 30-мĕшĕнче Ульяновскра Çамрăксен фестивалĕ иртет. Юпа (октябрь) уйăхĕн 5-мĕшĕнче Тереньгара чăваш культура фестивалĕ пулмалла. Раштав (декабрь) вĕçĕнче Атăлçи федераллă округри Çамрăксен çулне халалласа фестиваль иртĕ.

Çивĕч ыйтусем çинче те чарăнса тăчĕç. Çĕнĕ саккун тăрăх наципе культура автономисене укçа-тенкĕ уйăрма пăрахнă.

- Мĕн вара, халиччен аталанса, лайăх ĕçлесе пынă автономисене пĕтермелле-и? Ун пек тума памăпăр. Вĕсене сыхласа хăварма тĕрлĕ çулсем шырамалла. Акă пирĕн Наци культурисен центрĕ пур. Унта штатра 58 çын тăрать! Усси вара сахал. Çуррине чакармалла унта. Автономире ĕçлекенсене, пĕрлĕхсене ертсе пыракансене, культурăна аталантарма пултаракан чăн-чăн специалистсене çак учреждени урлă ĕç укçи тӳлеме пулать, - терĕ Сергей Иванович.

Наци культурисен центрĕн çуртне тĕрлĕ халăхсен усламçисенчен укçа пухса юсама хăтланнине те кĕпĕрнаттăр татăклăн сивлерĕ.

– Бюджетран вăхăтра укçа ыйтсан, унпа вырăнлă усă курсан ку çурта тахçанах юсама май пулатчĕ. Центр пуçлăхĕн сӳрĕклĕхĕшĕн усламçăсем айăплă мар. Усламçăсем патшалăх çурчĕсене юсамалла мар, вĕсем капла та çителĕксĕр пурнăçпа пурăнакансене, ачасене нумай пулăшаççĕ, - терĕ вăл.

Авăн (сентябрь) уйăхĕн 12-мĕшĕнче облаçра «Патриот çурат» кампани пуçланчĕ. Кăçал – Вулав çулĕ. Кĕпĕрнаттăр тата ăна пулăшаканĕ Т.В. Сергеева çаксемпе çыхăннă мероприятисене хастар хутшăнма ыйтрĕç.

Тепĕр çул вара Ульяновск хули 360 çул тултарать, Ульяновск облаçĕ – 65 çул. Раççей шайĕнче – Çемье çулĕ тата Наци ĕçĕсен килĕшӳлĕхĕн çулĕ.

Ульяновскра Национальноçсен музейĕ йĕркелесси пирки те калаçу пычĕ. Кĕпĕрнаттăр çакна ырларĕ.

Çитес вăхăтра Ульяновска Чăваш Ен Президенчĕ Н.В. Федоров килмелле. С.И. Морозов çак пулăма чыслăн хатĕрленмелли пирки каларĕ.

**«Канаш», 37 №, авăн 13-мĕшĕ, 2007 ç.**

# Байдюшев – халăх патриочĕ

Пенза облаçĕнчи чăвашсем çинчен сăмах хускатас пулсан пĕр çын çинчен ниепле те каламасăр хăварма май çук. Вăл М.М.Байдюшев.

Михаил Михайлович Итĕм-Кура ялĕнче пурăнать. 37 çул шкулта учительте ĕçленĕ, пĕлтĕр çеç тивĕçлĕ канăва тухнă. Ăна шўтлесе ку тăрăхри чăвашсен президенчĕ теççĕ. Ку сăмахсем чăнлăхран инçе тăмаççĕ, мĕншĕн тесен М.М.Байдюшев чăваш культурине аталантарас ĕçе пĕтĕм вăйне парать.

Вăл 1934 çулта Итĕм-Кура ялĕнче çуралнă. Çакăнтах 1950 çулта 7 çуллă шкул пĕтернĕ. 1953 çулта Çăрттанлăри вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Çав çулах Сызраньти пединститута вĕренме кĕнĕ. Виçĕ курс хыççăн ку вĕренў заведенине хупаççĕ, Самар хулине куçараççĕ. Çакăнта вăл вырăс чĕлхипе литература факультетне пĕтерсе тухать.Каярах Горький хулинче Добролюбов ячĕллĕ ют чĕлхесене вĕренмелли институтра заочно пĕлў илет. 30 çул ытла нимĕç чĕлхи вĕрентнĕ. Сăвăсем çырать, ытти авторсен сăввисене куçарать. Унăн сăввисем хаçатсенче те пичетленнĕ.

Михаил Байдюшев Пенза облаçĕнчи чăвашсен культура обществин председателĕ. Культура ыйтăвĕсемпе темиçе хут та Шупашкарта пулнă: пысăк чиновниксен кабинечĕсем тăрăх çўренĕ, съездсемпе конференцисене хутшăннă, чăвашла кĕнекесем илсе килнĕ.

-Хамăр общество Уставне хатĕрленĕ чухне Шупашкарти ЧОКЦăн тата Ульяновскри чăвашсен И.Я.Яковлев ячĕллĕ обществăн Уставĕсемпе усă куртăм, - каласа парать М.М.Байдюшев. - Пирĕн тĕллев – хамăр патăмăрта тăван халăх культурине сыхласа хăварасси, ăна аталантарасси. Шкулсенче ачасене тăван халăх чĕлхине, йăли-йĕркине, юрри-кĕввине вĕрентме тытăнтăмăр. Чăвашла кĕнекесем пирĕн тăрăхра 1955 çултах сутма пăрахрĕç, вĕсем питĕ çитмеççĕ. Тĕрлĕ çĕре кайса нумай кĕнеке туянтăмăр. Халăх хамăр культурăпа кăсăкланма тытăнчĕ.

Халĕ обществăн пĕр гектар çĕр пур. Унта çĕр улми акса ўстереççĕ. Илнĕ тупăшпа кĕнекесем е ытти кирлĕ япаласем туянаççĕ. Ку лаптăк çинче общество председателĕ хăй те ĕçлет, унăн лаша та пур. Паллах, обществăшăн тăрăшакан çынсем çук мар, вĕсем те ку ĕçрен айккинче тăмаççĕ, пулăшаççĕ. Çапла пĕрле пархатарлă ĕç тăваççĕ.

Михаил Михайлович ку тăрăхра чăвашла хаçат кăларма та пикенсе пăхнă. Райсовет депутачĕ пулнă май çак ĕçе пĕчченех хускатнă.

1991 çулхи кӑрлачӑн 1-мӗшӗнче «Илим çутисем» текен страница районти «Сельские вести» хаçатӑн хушма кӑларӑмӗ пулса тухнӑ. Ӑна пуçараканӗ материалӗсене те хӑех çырнӑ. Çапла майпа виçӗ номер тухнӑ, анчах тӗрлӗ сӑлтавсене пула ( чи пысӑкки – Пензӑри пуçлӑхсем хӑраса ӳкни, çак ыйтупа ятарласа Çӑрттанлӑ районне килсе кайни) ку ӗç чарӑннӑ. Редактор çаплах ӗçлеме чарӑнман, Шупашкарпа çыхӑну тытнӑ. Чӑваш Енре «Илим çутисем» тепӗр хут (вырӑсла) тухать. Çакӑн хыççӑн ырӑ ӗç путланса ларать. Михаил Михайловича, паллах, бюрократи машинипе пӗччен кӗрешме йывӑр. Халӗ пӗрлешесчӗ те «çутӑсене» сӳнме парас марччӗ. Паллах, ку ӗç валли хастар çамрӑксем кирлӗ.

Кӑçал уйӑх ытларах каялла Итӗм-Курара путсӗр ӗç пулса иртнӗ. Чӑваш культура обществин библиотеки кивӗ шкул зданийӗнче вырнаçнӑ пулнӑ. Мӗнле-тӗр йӗксӗксем (урӑх сӑмах тупма та йывӑр) ӑна пӗтӗмпех вӑрласа кайнӑ. 700 кӗнеке! Михаил Михайлович аллинче вӗсен спискӗ кӑна юлнӑ.

-Ӗмӗрӗм тӑршшӗпе чӑваш халӑхӗшӗн пуçтарнӑ кӗнекесем пӗр саманталах çук пулчӗç,- ассӑн сывлать вӗсен хуçи. –Алӑ-урасӑр юлтӑм. Чӑвашсемшӗн çунакан çынсем тумарӗç ӗнтӗ ку ӗçе. Юри турӗç, сиен тӑвассишӗн. Анчах кама сиен пулать-ха? Хамӑрах, чӑвашсенех. Хамӑр ларакан туратах касатпӑр. Çакна шутламарӗç пуль вӑрӑсем.

Çапла, ырӑ ӗç тӑвакансенепулӑшакансенчен чӑрмантаракансем нумайрах. Çак хура чунлӑ çынсем – хӑйсен ӑшӗнчи кӗвӗçӳ туйӑмӗн чурисем. Кӗвӗçӳ çынна ӑсран тайӑлтарать.

Михаил Михайлович вара малалла ӗçлет, çынсене ырӑ тума тӑрӑшать, мӗншӗн тесен вӑл урӑхла пурӑнма пӗлмест, урӑхла тӗллев те çук.

Пенза облаçӗ,
Çӑрттанлӑ районӗ,
Итӗм-Кура ялӗ.

**«Канаш», 1996 ç., 37№, авӑн уйӑхӗн 7-мӗшӗ.**

ПӖЛСЕ ТӐМА:

Çӑрттанлӑ районӗ – Пенза облаçӗнче чӑвашсем тӗпленсе пурӑнакан пӗртен-пӗр вырӑн. 1996 çулта районта 5 пин те 100 чӑваш пурӑннӑ. Кунта 10 чӑваш ялӗ: Итӗм-Кура (Илим-

Гора), Питмăрсаль (Бикмурзино), Илюххаль (Илюшкино), Çăрттанлă (Неверкино), Çĕньял (Каменный Овраг), Энрел (Старая Андреевка), Чĕрчу (Сосновый Овраг), Элишкел (Алёшкино).

ХУШСА ÇЫРНИ. *Эпир Николай Казаков фотокорреспондентпа 1996 çулхи август уйăхĕнче Валерьян Фёдорович Ромашкин редактор янипе Çăрттанлă районĕнче виçĕ кун ятарлă командировкăра пултăмăр, М.М.Байдюшев патĕнче хваттерте пурăнтăмăр (халĕ ырă çыннăмăр ку тĕнчере çук ĕнтĕ — тăпри çăмăл пултăр).*

*Пире ку тăрăхри кашни яла çитсе курма район администраци пуçлăхĕн çумĕ Вячеслав Николаевич Курташов тата «Илимский» ял хуçалăх пуçлăхĕ Борис Сергеевич Волынщиков (иккĕшĕ те чăваш) нумай пулăшрĕç. Ялсене çитме пире кашни кун ятарлă автобус уйăрса паратчĕç. Вĕсене пысăк тав!*

*Командировка хыççăн «Канаш» хаçатра «Илим çутисем» кăларăмăн икĕ страницаллă 5-мĕш номерĕ кун çути курчĕ. Хаçатăн 150 экземплярне Çăрттанлă районне ярса патăмăр. Ăна халăх хушшинче салатнă.*

# Редакци валли кётес кирлё

## (УОЧНКА 2-мёш конференцинче тухса калана самах)

Массалла информации хатёрёсен тёп тёллевё - тёнчери юлашки хыпарсене, пурнаçри çёнёлёхсене халах патне çитересси. Ульяновскри «Канаш» хаçатан тепёр тёллев пур. Хай вахатёнче вырасланма, парçа евёр сапаланма пуçлана чавашсене пёр чамара пуçтарасси, таван халах йали-йёркипе, историйёпе, культурипе паллаштарасси. «Канаш» журналисчёсем паян çак ёçе тивёçлё туса пырассишён тарашаççё.

Хаçат эрнере пёрре тухать. Çулсерен пирён пата 1000 ытла çыру килет. Хаçата Мускавра, Читара, Шупашкарта, Ёпхӳре, Нурлатра, Хусанта, Сызраньте тата ытти хуласенче илсе вуласа тараççё. Редакцире вырасла ятарла 2 номер каларна – «Истина». «Агал юрри» журналпа «Шевле çути» альманаха та редакци вайёпех кун çути катартна. Çаплах 30 кёнекене яхан хатёрлесе пичетленё, çав шутран 15-ёшне – юлашки пилёк çулта. Чёмпёр чавашёсен издательство центрё те теме пулать пирён редакцие.

Паян эпё ытларах çивёч ыйтусем çинче чаранса тарасшан. Пёррремёшё – редакцин уйрам пӳлём çукки. Халё эпир «Советская» хана çуртёнче арендана илсе виçё пӳлём йышанатпар. Халиччен тавата пӳлёмччё, анчах виçё эрне каялла пёрне таварса пама тӳрё килчё. Салтавё – комуналла тӳлев пёр харас виçё хут ытла ӳссе кайнинче! Çитес вахатра комуналла тӳлев тата ӳсё. Хамаран кётес пулсан кун пек йывэрлах сиксе тухас çукчё. Паян пӳлём ыйтавё пирёншён – чи пысакки.

Оргтехника енчен те япах. Икё кивё компьютер пирён. Пёр компьютерёпе нимёнле операци те тума çук, наборлама çеç пулать. Мёнпур ёçе тепринпе тавайпар. Область администрацин унчченхи пуçлахёсем пире «Канаш» 10 çул тултарна ятпа оргтехника туянма 50 пин тенкё шантарчёç. Самахёпе хавхалантамар та – ёçё пулмарё. Паян та, Пушкин халапёнчи пек, çурак сават умёнче ларатпар.

Каçалхи сметара автомобиль такакёсем валли пёр пус укçа та çук. Ялсене тухса çӳремесен унти пурнаçа мёнле майпа çырса катартапар-ха? Вулакан вара пиртен лайах статьясем кётет.

Фотоаппаратсем те кивё йышшисем. Юсав мастерскойёнче пиртен

тĕлĕнеççĕ: нивушлĕ хальхи вăхăтра редакци çакăн пек фотоаппаратсемпе усă курать-ши? Мĕн тăвăн? Паянхи саманана тивĕçтерекеннисене туянма укçа-тенкĕ çук!

Çакна манса каймалла мар: лайăх хаçат кăларма лайăх условисем кирлĕ. Вулакана вара пирĕн условисем кăсăклантарсах каймаççĕ. Ăна хаçат пахалăхĕ пултăр. Çавăнпа та явапла çынсенчен малашне пулăшу пулсан аван пулĕччĕ. Сăмахпа çеç мар — ĕçпе.

Хамăр енчен май пур таран тăрăшатпăр эпир. Эпĕ тĕп редактор тивĕçĕсене пилĕк уйăх çеç туса пыратăп-ха. Чи малтан хаçатра анкета пичетлерĕмĕр, халăх шухăшне пĕлесшĕн пултăмăр. «Канаш» - халăх хаçачĕ-çке, апла пулсан халăх ыйтнине тивĕçтермелле.

Пирĕн пуласлăх çамрăксенче, çавăнпа та вĕсен ыйтăвĕсем пирки ытларах çырма пуçларăмăр. «Çамрăксен страници», «Ача-пăча страници» тăтăшах пичетленсе пырĕç. Чăваш халăх историйĕпе кăсăкланакансем валли Г. Тафаев профессор çырнă материала пичетлеме тытăнтăмăр. Историпе çырнисем малашне те пулĕç. Çыравçăсем валли йĕркеленĕ «Шевле çути» конкурсăн пĕтĕмлетĕвĕсене ирттертĕмĕр. Унта виçĕ пай: «Проза», «Поэзи», «Публицистика тата критика». Çĕнтерӳçĕсене укçан преми парăпăр, ку ĕçре И.Я. Яковлев фончĕ пулăшма пулчĕ. Юлашки вăхăтра ялсене чылай тухса çӳрерĕç журналистсем. Автономи йĕркеленипе инçетри Кăлаткăпуç, Барăш районĕсенчи ялсенче пулса куртăмăр. Çак ырă ĕçе малалла тăсасчĕ, мĕншĕн тесен усси питĕ пысăк. Пире унта яланах кĕтеççĕ.

Подписка ӳстерес тесе лотерея та ирттерме шутларăмăр. Çĕртме (июнь) уйăхĕн вĕçĕнче иртĕ лотерея. Унта «Канаш» хаçата пĕрремĕш çурçуллăха çырăннисем те хутшăнма пултараççĕ. Квитанцисене пирĕн пата ярса парăр. Спонсорсенчен те сĕнӳсем кĕтетпĕр: мĕнпе пулăшма пултараççĕ пире? Пулăшма кăмăл тунă çынсен ячĕсене эпир хаçат страницисенче пĕлтерсех тăратпăр.

Редакци çумĕнче 6-мĕш çул ырăнти чăваш çыравçисен «Шевле» литпĕрлешĕвĕ ĕçлет. Икĕ уйăха пĕрре пуçтарăнса хамăр ыйтусемпе калаçатпăр, пĕр-пĕрин хайлавĕсене тишкеретпĕр. Маларах каланăччĕ ĕнтĕ, «Шевле çути» альманах та пичетлесе кăлартăмăр, 80 çул иртнĕ хыççăн «Атăл юрри» журнала та чĕртсе тăратрăмăр. Халĕ вĕсен черетлĕ номерĕсем те хатĕр. Укçа уйăрса парсан çывăх вăхăтра кăларса яма пултаратпăр. Çаплах халăх сăмахлăхне пухатпăр. Ватăсем сахалланса пынине кура ыттăн çӳпçемĕр те иксĕлми пултарать. Çавăнпа та ку ĕçе куллен туса пымалла.

Малашне чăваш халăх историйĕпе, тăван ял историйĕпе çыхăннă

викторинăсем ирттеретпĕр. Художниксен конкурсĕ вара çитес вăхăтрах пуçланĕ. Çĕнтерӳçĕсене укçа кĕтĕ: 1-мĕш преми – пиншер тенкĕ, виçĕ 2-мĕш преми – пилĕкçĕршер тенкĕ, пилĕк 3-мĕш преми – виççĕршер тенкĕ. Укçине Шупашкарти историпе культура «Атăлçи Пăлхар» центрĕ уйăрать.

«Тинкеретпĕр малалла, кайрине те халь куратпăр», - тенĕ паллă поэтăмăр П. Хусанкай. Çак ĕмĕрсен çыхăнăвĕ малалла та сыпăнса пытăр. Сапаланса каяр мар. Çапла пултăр тесен тăван чĕлхене пĕлмелле, хисеплемелле, юратмалла, пĕр-пĕрне ăнланмалла, пулăшмалла. Тĕнче умне «чăваш» ятпах тухасчĕ. Ун чух эпир сумлă та телейлĕ халăх пулăпăр.

«Канаш» хаçатăн кулленхи ĕçĕсем те çак тĕллевпех çыхăннă. Пĕр чечек хитре. Темиçе чечеке çумлăн хурса çыхсан илемлĕ те илĕртӳллĕ çыхă пулать. Ман чăваш халăхне çапла курас килет.

**«Канаш», 13 №, 2003 ç., пуш, 27.**

# Сергей Игнашевич – чăваш йăхĕнчен

ЦСКА (Мускав) футбол команди нумаях пулмасть пирĕн çĕршыв историйĕнче пĕрремĕш хут УЕФА кубокне (Европăри командăсен хушшинче) çĕнсе илчĕ. Командăна çĕнтерӳ патне С. Игнашевич капитан ертсе пынă. Вăл çурма чăваш иккен.

Сергейăн амăшĕ Раиса Германовна Мускава Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тумликасси ялĕнчен 1976 çулта каять, Олимпиада стройкисене çĕкленĕ çĕре хутшăнать. Раççейĕн тĕп хулинче чăваш хĕрĕ белоруспа – Николай Игнашевичпа паллашать (вăл унта монтажникра ĕçленĕ). Часах çамрăксем пĕрлешеççĕ. 1979 çулта Сергей çуралать.

Сергей амăшĕн тăван ялне темиçе хут та килсе кайнă, юлашкинчен – икĕ çул каялла. Çурла уйăхĕнче кăштах пушансан Сергей унта кукамăшĕ патне тепре килме ĕмĕтленет.

ЦСКА капитанĕ авланнă, икĕ ача – 6 çулти Роман тата 4 çулти Дима. Арăмĕ 4-мĕш курсра вĕренет, пулас психолог. Асламăшĕ мăнукĕсем патне кашни кун тенĕ пекех килет.

УЕФА кубокне илнĕ хыççăн икĕ эрнерен ЦСКА Раççей кубокне те никама та памарĕ, «Химки» командăна 1:0 шутпа çĕнтерчĕ. Кунта та Раççей тава тивĕçлĕ спорт маçтăрĕн С. Игнашевичăн тӳпи пысăк. Сергей Раççей сборнăй командинче те чи вăйлă вылякансенчен пĕри.

**«Канаш», 23 №, 2005 ç.**

# Редакцие словарь парнелерĕç

Редакцире телефон шăнкăртатса кайрĕ. Хĕрарăм сасси: «Канаш» хаçат редакцийĕ-и ку? Ман килте чăвашла-вырăсла тата вырăсла-чăвашла словарьсем выртаççĕ. Эпĕ вĕсемпе халĕ усă курмастап ĕнтĕ. Тен, сире ĕçре кирлĕ пулĕ. Килсе илĕр»,- терĕ.

Хĕрарăм калакă адреспа кайрăмăр. Ку А.П.Хородова пулса кайрĕ.

Çапла вара Ульяновскра пурăнакан Антонина Петровна Хородова «Канаш» хаçата 20 тултарнă ятпа чаплă парне пачĕ!

Тавах Сире, сывлăхлă пулăр, ĕмĕрĕр вăрăм пултăр!

**«Канаш», 2010 ç., 10 №.**

# Сухапуç — акатуй илемĕ

Мелекесс районĕнче Акатуй кашни çул ялтан яла куçса çӳрет. Кăçал вăл Эврел ялĕнче иртрĕ. Ульяновскран Атăл леш енче пурăнакан ентешсене саламлама УОЧНКА председателĕ В.И.Сваев, облаçри вĕрентӳ департаменчĕн тĕп специалисчĕ Ф.Т.Улендеева, Ульяновскри Кĕрешӳ федерацийĕн президенчĕ С.М.Краснов, «Палнай» ушкăн (ертӳçи В.А.Сымова) килсе çитрĕç.

Килнисене район пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăха туса пыракан И.Н.Глушко, çак района нумай çул ертсе пынă В.И.Чигаков, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Р.А.Тагиров, вырăнти фермерсем — пĕртăван Беспаловсем тата ыттисем саламларĕç.

Уяв пуçланнă самантра сцена патне хресченĕн тĕп ĕç хатĕрне — сухапуçне — йăтса пычĕç. Ку илемлĕ самантсенчен пĕри пулчĕ.

Çаплах куракансене Чăваш Сахчаран килнĕ «Асамат кĕперĕ» (ертӳçи Н.Н.Хураськин), Димитровградри «Савăнăç» (И.Н.Иванюкова), Упамсарти «Асамат» (Г.И.Ерукова), Çĕнĕ Малăклари «Пилеш» (Н.Н.Бикметова) тата вырăнти «Телей» (П.Улюкин) ушкăнĕсен артисчĕсем савăнтарчĕç. Д.Кузьмин усламçă хăйĕн «Краткая чувашская региональная энциклопедия» ятлă çĕнĕ кĕнекине халăх хушшинче сарчĕ. Ал ăстисем курава тĕрлĕ япаласем илсе килнĕ.

Кире пуканĕ йăтса Ю.Садков прапорщик мала тухрĕ. Ветерансем хушшинче В.Хвете палăрчĕ. Иккĕмĕш вырăнта В.Чигаков, виççĕмĕшĕ — А.Артамонов. Юпа çине чи малтан Д.Искаков улăхса кайрĕ, парне — автан.Кунта С.Ходаничпа А.Юреев та пултарулăхне кăтартрĕç. Шахматла выляса Анна Гаврилова пурне те кая хăварчĕ. М.Михайлов А.Арапов, Е.Шульга та аван выляни палăрчĕ. Ирĕклĕ кĕрешсе Р.Хайретдинов, Н.Янков, И.Игнатенко мала тухрĕç. Тепĕр виçере Н.Гурец тата И.Хайретдинов вăйлă пулчĕç. Футбол ăмăртăвне çичĕ команда хутшăнчĕ. Волейболла та хĕрсех выляреç. Паллах, тĕрлĕ вăйăсем, конкурссем, шӳтсем нумай пулчĕç.

Уява йĕркелекенсем çĕр ĕçченĕсене, нумай ачаллă çемьесене, тивĕçлĕ çынсене сцена çине хăпартса, парне парса чыс турĕç.

Районти УОЧНКА уйрăмĕ (пуçлăхĕ В.В.Киргизова), йĕркелӳ комитечĕ, вырăнти усламçăсем, Эврелĕнчи чăваш юхăмĕн хастарĕсем, ял çыннисем, 3706-мĕш номерлĕ çар чаçĕн командованийĕ, унта хĕсметре тăракан салтаксем çак Акатуя ирттерме нумай вăй хунине палăртмалла. Пĕрле килĕштерсе тунăран уяв питĕ анлă та илемлĕ пулчĕ.

**«Канаш», 26 №, 2009 ç.**

# Тăван сăмах – пуянлăх

«Чăвашсем, чăмăртанăр!» - тенĕ хăй вăхăтĕнче паллă поэтăмăр Петĕр Хусанкай. Сăлтавĕ каламасăрах паллă: пĕрлĕхре – вăй! Вăйпа темĕнле пысăк ĕç тума та пулать. Çакăн çинчен ĕмĕтленнĕ поэт.

«Канаш» хаçатăн хаçатăн ĕмĕчĕ те çавах. Эпир облаçри чăвашсен пурнăçне мĕнле те пулин çăмăллатасшăн, сире мĕнпе те пулин пулăшасшăн, пурнăçа интереслĕрех тăвасшăн. Сирĕн вара пирĕн хаçата çырăнса илмелли кăна юлать.

Кунта çитсен пирĕн, чăвашсен, мухтанмаллиех çук. Хисеплесех каймастпăр-ха хамăра, ыттисемпе пĕр тан лартасшăн мар тăван халăхăмăра. «Пире кун пек те юрать», - теме пăхкалатпăр эпир. ЮРАМАСТЬ!!! Хăçанччен хамăра мĕскĕн çынсем вырăнне хурăпăр? Ку лару-тăруран тахçанах тухма вăхăт çитнĕ. Айăпĕ хамăрта - васкамастпăр. Çакна манар мар: мĕскĕне хĕрхенеççĕ, анчах хисеплемеççĕ.

Хисеп çĕнсе илес тесен çутă енне ăнтăлас пулать. Çутта тухма вара нумай вуламалла, ыттисемпе тăтăшах хутшăнмалла.

Ку йĕркесене чун ыратнипе çыратăп – кама та пулин хурлас тесе мар. «Канаш» хаçата çырăнса илекенсем сахал пулни пăшăрхантарать. Облаçра 120 пин чăваш пурăнать, 25 пин чăваш çемйи. «Канаш» тиражĕ – 1200 экземпляр. 100 çынна пĕр хаçат... Çакăнпа çырлахмалла-и вара?

Танлаштарма: облаçра 160 пин тутар, вĕсен «Ĕмĕт» хаçачĕн тиражĕ – ултă пин ытла. 25 çынна пĕр хаçат тухать. Пĕтĕмлетӳ тума йывăр мар: тутар хăйне чăвашпа танлаштарсан тăватă хут ытларах хисеплет.

Çакăнтан пуçланаççĕ те ĕнтĕ пирĕн йывăрлăхсем. Хамăра йĕркеллĕ, ыттисенчен пĕртте кая мар наци тесе шутласах çитерейместпĕр. Ку йăнăш çул, ун пуласлăхĕ çук.

Çамрăксем чăвашла вуламасан куç умĕнчех ăрусен çыхăнăвĕ татăлать. Чĕлхене пĕлменни – этнокультурăна пĕлменни.

Шухăшлăр-ха, çак планета çинче пирĕн халăх пекки урăх çук! Чăвашсем – эпир çеç. Тĕнчере тăватă пин ытла наци. Эпир пĕтнĕшĕн никам та куççуль тăкас çук. Кашнин хăйĕн ĕçĕсем, йывăрлăхĕсем. Анчах кашни нацин пĕрремĕш тĕллевĕ – хăйне çак тĕнчере сыхласа хăварасси. Пирĕн те çаплах пулмалла.

Тăван чĕлхепе ирĕклĕн калаçма, вулама, çырма пултарни – хăех телей. Анне чĕлхинчен хакли нимĕн те çук.

Шанчăка пурпĕрех çухатас килмест. Чăваш ăс-тăнĕ çӳлелле çĕкленме çителĕклĕ тесе шутлатăп. Халăх пĕрлĕхлĕ вăйпа пулăшсан,

«Канаша» кăмăлпа çырăнса илсе вуласан хаçат сумĕ чылай ÿсĕ. Хаçат — пирĕн пит, чыс. «Канаш» - халăх хаçачĕ, этеплĕхе çĕклекенни. Урамра — кивĕ — йăласен çамрăклăхĕ, наци хутшăнăвĕсен çĕнетÿ тапхăрĕ. Çĕнĕ самана пире аталанма май парать. Çакăнпа усă курма пĕлесчĕ. Чăмăртанмасăр, пĕр-пĕринпе хутшăнмасăр аталану çулĕ çине тăма çук.

«Канаш» хаçат шăпах пире чăмăртанма, пĕр-пĕрин савăнăçĕпе савăнма, хуйха пайласа чуна пусарма, йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшать. Мĕншĕн тесен вăл чăвашсем валли тухакан хаçат. Г. Волков академик çапла çырать: «Мĕн тери хăватлă иккен тăван чĕлхен вăйăмĕ, витĕмĕ этем ăс-тăнĕнче, чун-чĕринче! Чун енчĕкĕнче ылтăнăн-кĕмĕлĕн шăнкăртататакан пуянлăх — тăван сăмах, тăван чĕлхе».

Çак пуянлăха упраса хăварасчĕ. Чăмăртанмасăр ку тĕллеве пурнăçлама хĕн пулать. Çавăнпа та пирĕн пĕр çул çеç — «Канаш» хаçат таврa пĕрлешмелле.

**«Канаш», 43 №, 2003 ç.**

# Тăван чĕлхене вĕрентесси мĕнле шайра

Иртнĕ эрнере облаçри чăвашсен наципе культура автономи президиумĕн анлă ларăвĕ пулчĕ. Унта шкулта чăваш чĕлхине вĕрентес ĕç-пуç мĕнле шайра тăнине пăхса тухрĕç. Ларăва ятарласа килнĕ хăнасем те хутшăнчĕç: Çинкĕл роно пуçлăхĕ В.А. Борисов, унăн çумĕ Л.А. Самчелкина, Чăнлă роно пуçлăхĕ И.Н. Маля, методкабинет заведующийĕ В.В. Косушкин тата ыттисем.

Чи малтан вĕрентӳ управленийĕнчи тĕп специалист Ф.Т. Улендеева икĕ районти шкулсене тухса çӳренине пĕтĕмлетӳ турĕ.

Çинкĕл тăрăхне специалистсен ушкăнĕ пулăшу парас тĕллевпе кайнăччĕ. Паллах, вăл хăйĕн ĕçне пурнăçларĕ, анчах унта вĕренмелли те пурччĕ. Кунта тăван чĕлхе мĕнле йывăр лару-тăрăва лекнĕ пулсан та сӳнсех путланман-ха. Хăш-пĕр ырă пулăма вара вĕсенчен вĕренмелли пур. Районта пурĕ 4 пин те 300 ачана яхăн вĕренет, вĕсенчен 17 проценчĕ чăваш. Хальлĕхе тăван чĕлхене факультатив мелĕпе 135 ача çеç вĕренет-ха. Çавăнпа ĕçлемелли нумай: ытти шкулсенчи опытпа паллашмалла, семинарсем ирттермелле, учительсен квалификацине тăтăшах ӳстермелле, абитуриентсене чăваш филологийĕпе культура факультетне вĕренме ямалла.

Тухса калаçакансем те ку шухăшпа килĕшрĕç, ыйтусене пĕрле çыхăнса ĕçлесен çеç татса пама пулнине палăртрĕç.

Чăнлă районĕнче, паллах, ĕç-пуç лайăхрах. 20 пин чăваш пурăнакан районта 32 шкул, вĕсенчен 62 проценчĕ чăваш ялĕсенче. Ку тăрăхри ачасем облаçри олимиадăсенче те призлă вырăнсем йышăнаççĕ, Шупашкарти олимпиадăсенче те хăйсене тивĕçлĕ кăтартаççĕ. Ульяновск педуниверситечĕн филологи факультетĕнчи чăваш уйрăмĕнче ку районтан çирĕм улттăн вĕренеççĕ. Апла пуласлăх пур.

Çапах та çитменлĕхсем те çук мар-ха. Тĕслĕхрен, Аслă Нагаткинри вăтам шкулта вĕренекенсенчен 62 проценчĕ чăваш, кунта пĕчĕкçĕ кружок кăна. Чăнлă поселокĕнче ку цифра 38-а çитет, тăван чĕлхепе вĕрентесси çинчен вара асăнакан та çук. Орловкăра пур япалана пĕтернĕ, чăваш чĕлхи предметне вĕрентме чарнă.

Ку районти шкулсем «Канаш» хаçатпа япăх çыхăну тытнине вара ятарласа палăртмалла. Чăнах та, ĕçĕ-пуçĕ тухăçлă, тĕрлĕ мероприятисем ирттереççĕ, анчах та çырса пĕлтерме ӳркенеççĕ. Хаçатра пичетленни икĕ енĕпе те усăллă: пĕрре хăйсен ĕçне кăтартаççĕ, тепре çак опытпа ыттисем паллашма пултараççĕ.

Роно пуçлăхĕсем çакăнта каланă çитменлĕхсене кашни шкула çитерме шантарчĕç.

**«Канаш», 18 №, 1999 ç., ака, 30.**

# Хӑмла вӑрри йӗпе ҫӗрте шӑтать

Чӑваш Сайманра иккӗмӗш хут ял Акатуйӗ иртрӗ. Пӗрремӗш хут кун пекки виҫӗ ҫул каялла пулнӑччӗ. Уява хатӗрлекенӗ, ертсе пыраканӗ – УОЧНКА районти филиалӗн ертӳҫи, ялти Культура ҫуртӗнчи илемлӗх ертӳҫи – Антонина Ивановна Юдина.

Николаевка районӗнче — Чӑваш Сайманра, Эсеккелӗнче, Поспеловкӑра — 600 ытла чӑваш пурӑнать. Маларах Кӑчкӑрлӑ (Кочкарлей) ялӗнче те ҫурри чӑваш пулнӑ, халӗ вӗсем вырӑсланнӑ.

Уява хӑнасем район центрӗнчен, кӳршӗ ялсенчен килнӗ. Пухӑннисене Поспеловка ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ У.У.Магдеев саламларӗ. Ульяновскран УОЧНКА ертӳҫи В.И.Сваев тата «Илем» ушкӑн (ертӳҫи А.Н.Чурбанов) килсе ҫитрӗҫ. Владимир Ильич вырӑнти чӑваш хастарӗсене Тав ҫырӑвӗсем пачӗ, кӗнекесем, календарьсем парнелерӗ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл ҫакӑнта пурӑнакан ентешсене хастартарах пулмалли, наци ӑс-тӑнне ӳстермелли ҫинчен каларӗ. Хамӑр йыш ан чактӑр тесен ҫитсе килекен халӑх ҫыравӗнче кашни чӑваш хӑйӗн нацине тӗрӗс кӑтартмаллине асӑрхаттарчӗ. Культура, вӗрентӳ ыйтӑвӗсене татса панӑ ҫӗрте вырӑнти влаҫсене вӑйлӑрах явӑҫтарма сӗнчӗ.

Акатуй паллине вырӑнти хастар П.П.Кураткин лартрӗ. «Аки-сухи» янӑрать...

Концерт программине вырӑнти фольклор ушкӑнӗ уҫрӗ. А.И. Юдина ертсе пыракан ушкӑн кӑҫал 35 ҫул тултарнӑ. Ҫак вӑхӑтра артистсем таҫта та ҫитсе курнӑ, нумай ҫынна илемлӗ юрӑсемпе савӑнтарнӑ. Хальхинче те вӗсене халӑх вӑрахчен алӑ ҫупса тав турӗ. Уйрӑмах авалхи юрӑсене итлеме кӑмӑллӑ. Сӑмахран, «Хӑмла вӑрри йӗпе ҫӗрте шӑтать» юрӑра тарӑн шухӑш пытарӑннӑ. Ҫаплах концерта шкул ачисем те хутшӑнчӗҫ,

«Илем» юрланӑ вӑхӑтра пухӑннисем карталанса ушкӑнаваррине хӑварчӗҫ, ташша тухрӗҫ. Ку тӑрӑхри ентешсем чӑваш юрри-ташшине хытӑ тунсӑхлани сисӗнет.

Концерт вӗҫленсен ӑмӑртусем, вӑйӑсем, шӳтсем пуҫланчӗҫ.

Уяв иккӗллӗ туйӑм хӑварчӗ. Пӗр енчен — пухӑнса авалхи йӑла-йӗркене аса илни, савӑнни питӗ аван. Тепӗр енчен — кунти ентешсем тӑван чӗлхерен ютшӑнаҫҫӗ, вырӑсланса пыраҫҫӗ. Юрӑри пек каласан – хӑмла вӑрри йӗпе ҫӗрте шӑтать. Апла пулсан ӑна шӑварса тӑмалла. Пирӗн тӗслӗхре чӑваш тӗнчинчен аякра пурӑнакан ентешсене тӑван халӑх чӗлхи, юрри-ташши сӗткенӗпе шӑвармалла. Урӑхла каласан

вĕсемпе час-час тĕл пулмалла, унта концертсемпе тухса çӳремелле, ачасене чăвашла вĕрентме пулăшмалла. Унта пурăнакансем хăйсене утрав çинчи пек ан туйччăр. Паллах, хăйсем те паянхи пек пуçарулăх кăтартмалла, малашне ку ĕçе çамрăксене явăçтармалла. Атте-анне чĕлхине вара çемьерех вĕрентме тытăнмалла, шкулта аталантармалла.

Нумай çул тăван халăх культуринчен уйрăлса пурăннă хыççăн халĕ иккĕмĕш хут Акатуй ирттерме пултарни сайманcем хамăр чĕлхене сыхласа хăварас çул çине тăнине пĕлтерет пек туйăнать. Çак ĕçре чарăнса тăрас марччĕ!

Николаевка районĕ.

**«Канаш», 2010 ç., 28 №.**

# Хăй чĕлхине тиркекен нацийĕн — пуласлăхĕ çук

Хаклă вулаканăмăрсем! Чи малтан сире пурне те Çĕнĕ çул çитнĕ ятпа ăшшăн саламлатпăр. Вăл сире савăнăç та телей кӳтĕр, ĕçĕрсем ăнса пыччăр.

Пирĕн хаçата кăçал та çырăнса илекенсене чĕререн тав тăватпăр. Яланах пирĕнпе пĕрле пулăр, савнăçа та, хуйха та пĕрле пайлар.

Чăваш тĕнчи пĕчĕк мар. «Канаш» хаçата çырăнса илекенсем — чăн-чăн чăвашсем. Çакна пĕр иккеленмесĕрех калама пулать. Хальлĕхе, чăнах та, 1400 çынна яхăн вĕсем. Малашне нумайланса пырасса шанатпăр. Мĕн каласан та чăваш чĕри час уçăлмасть. Пуç йĕри-тавра çавăрттарса шухăшламасăр тумасть вăл ĕçе. Ыттисем хальлĕхе шухăшлаççĕ тейĕпĕр-ха.

Чăвашсем шухăшлаççĕ-ха. Вырăссем вара пирĕн хаçата çырăнса илеççĕ. Ульяновскра пурăнакан Г.Н. Афанасьева — вырăс хĕрарăмĕ, чăвашла нихçан та вĕренмен. Чăваш чĕлхине калаçу урлă çеç чухлать пулин те Галина Николаевна «Канаша» кашни çул илсе тăрать, словарьпе вуласа пырать, Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен çивĕч ыйтăвĕсене татса панă çĕрте хастар хутшăнать. Хăй халăхне юрататать вăл, пире те хисеплет. Çакă пире, чăвашсене, çитсе каймасть-ха.

Тĕнчере начар наци çук, начар çынсем çеç пур. Акă мĕн кулянтарать. Тĕнчери хăш-пĕр наци 1 миллион çынран та сахалтарах, çапах хăйсен патшалăхĕ пур вĕсен, тĕнчене янраттарса пурăнаççĕ, мăнаçланаççĕ. Патшалăхĕ пирĕн те пур-ха, çапах та эпир вăтанса-имĕнсе, хамăр нацие пытарса пурăнма хăнăхнă. Хăйне хисеплемен çынна, нацие никам та хисеплемĕ. Хăвна хисеплени вара нацилĕхне пытарманнинчен, тăван чĕлхепе ирĕклĕн калаçма, вулама пултарнинчен, ачасене амăш чĕлхине вĕрентнинчен пуçланать. Çак тарана çити упранă паха мулăмăра — чăваш чĕлхине — малалла аталантарасчĕ.

Чăвашсен паллă поэчĕ Митта Ваçлейĕ акă мĕн каланă ун пирки: «Чăвашлăха тиркекен кăмăлпа ӳстерес пулмасть ачасене. Нумай-и, сахал-и — чăвашăн пур, çав пур пеккине хисеплес пулать. Тăван чĕлхепе калаçнă чух, Турра кĕл тума ларнă пек, эпĕ канса каятăп».

Ваттисем ахальтен мар: «Кайăк хитре — тĕкĕпе, этем ырă — чĕлхипе», - тенĕ. Чи ырă чĕлхе вара — тăван чĕлхе. Кунта пире çутта кăларакан И.Я. Яковлев сăмахĕсене те аса илме пулать. «Халăхăн ăс-тăнĕпе унăн пĕтĕм тĕнчекурăмне тăван чĕлхе чун парать.

Таван чĕлхесĕр чăн-чăн пĕлӳ çук», - тенĕ вăл.

Чăваш халăхĕн пуласлăхĕ пирки чи малтан хамăр интеллегенци – урăхла каласан вĕреннĕ çынсем – шухăшламалла. Чăваш хаçат-журналне, кĕнекине (ĕне çисе яма ĕлкĕриччен), сăмахне халăх хушшинче сарасчĕ, çамрăк ăрăва таван чĕлхе хакне ăнлантарасчĕ. Тĕнче çине тарăнрах та анлăрах пăхар. Укçа мĕскĕнлетет, чуна чухăнлатать. Перекетлĕхĕн те виçи пур. Кашни япалана укçапа виçме çук. Ăс пулсан укçи те, ытти мулĕ те пулĕ-ха вăл.

«Канаш» хаçат малашне облаçри чăвашсен тĕнчекурăмне анлатма, хамăр умра тăракан çивĕч ыйтусем çине тарăнрах пăхма, чăваш сăмахне сарма, чи кирлĕ хыпарсене çынсем патне вăхăтра çитерме тăрăшĕ.

Кашни килте килĕшӳ те юрату пултăр, пирĕнпе юлăр, çыхăну тытăр.

**«Канаш», 1 №, 2003 ç., кăрлач, 3.**

# Цель чувашской газеты – сохранение родного языка!

В Ульяновске с деловым визитом побывал председатель Государтсвенного Совета Чувашской Республики М.А.Михайловский. Мы не упустили шанса взять у него интервью.

**- Михаил Алексеевич, в прошлом году организация ЮНЕСКО включила чувашской язык наряду с сотней других языков в число вымирающих. Что предпринимается в республике для того, чтобы вычеркнуть наш язык из этого опасного списка?**

- Если рассматривать этот вопрос с точки зрения мирового процесса глобализации – это вполне закономерно. Для мирового сообщества язык, который считают родным и говорят на нем порядка полутора миллионов граждан России – не актуален. Но о том, что чувашский язык исчезнет – говорить рано.

Чувашия является особенным субъектом среди национальных республик Приволжского федерального округа – на его территории проживает более 67 процентов населения титульной национальности – чувашей. В республике за последние годы сделан значительный шаг в развитии чувашского языка и культуры родного края. Для этого создана соответствующая нормативная база. В Чувашии действует закон «О языках в Чувашской Республике» - чувашский язык является государственным, ведется делопроизводство на этом языке. С начала 90-х годов внедрено повсеместное обучение национальному языку в системе общего образования, утверждены государственные образовательные стандарты по чувашскому языку и литературе, культуре родного края. Школы обеспечены соответствующими учебными программами и учебниками, начато обеспечение школ электронными учебными изданиями по предмету «Чувашский язык» для 1-8 классов.

Конечно, в городах основным языком для общения является русский, большинство средств массовой информации выходит на русском языке. В то же время в сельской местности говорят на чувашском (в чувашских населенных пунктах), на телеканалах «Россия» и «Культура» идут специальные передачи на чувашском языке. Кабинет Министров Чувашской Республики (11.12.2008 г.) принял решение о создании «Национального радио Чувашии» – в республике идет радиовещание на чувашском языке. Хочу отметить интересный факт – в южных районах Чувашии (Комсомольский,

Батыревский, Яльчикский и Шемуршинский) подавляющая часть татарского населения свободно владеет чувашским языком, а чуваши общаются с ними на татарском языке. Это сплачивает дружбу двух национальностей.

**- В каком объеме изучаются чувашский язык и литература по школьной программе в Чувашской Республике?**

В чувашских национальных школах: в начальных классах 23 часа в неделю, 5-9 классы – 21 час, 10-11 классы 6 часов. В русскоязычных школах:1-9 классы – 26 часов в неделю, в 10-11 классах – 2 часа в неделю на чувашскую литературу.

**- Почему нельзя выбрать чувашский язык в ЕГЭ? Почему доктора, кандидаты наук и профессора не готовят материалы к ЕГЭ? Почему в учебниках для школьников стало много теории и мало упражнений? Кто за этим следит?**

Государственная (итоговая) аттестация выпускников общеобразовательных учреждений Российской Федерации проводится в соответствии с нормативными документами Министерства образования и науки России. Её проведение по всем общеобразовательным предметам, входящим в перечень, сдаваемых в форме ЕГЭ, является гарантией обеспечения выпускникам возможности обучаться в любом образовательном учреждении профессионального образования на всей территории Российской Федерации.

С 2008 года Министерство образования Чувашии в целях совершенствования организационной формы итоговой аттестации выпускников 9-х классов проводит выпускные экзамены по чувашскому языку в чувашских национальных школах по новой форме. Образовательным учреждениям рекомендовано проводить в рамках промежуточной аттестации выпускников 11 классов контрольную работу по чувашскому языку в качестве необходимого условия допуска к итоговой аттестации и определения отметки, выставляемой в аттестатах по данному предмету.

Ведется конкретная работа по обновлению содержания национально-регионального компонента, созданию новых учебно-методических комплектов и внедрению современных технологий обучения. Учебники чувашского языка и литературы проходят обязательную экспертизу вузовских представителей, методистов Чувашского республиканского института образования и учителей. В случае получения положительной оценки учебной литературе присваивается гриф Минобразования Чувашии «Рекомендовано

(допущено) для использования в общеобразовательных учреждениях».

**- Скоро будет проводиться Всероссийская перепись населения. Согласно последней переписи, в Ульяновской области чувашей стало на 6000 меньше, и такая тенденция наблюдается не только в нашем регионе. Люди, в основном молодые, отказываются от родного языка. Как остановить этот процесс?**

- Говорить о том, что чуваши, при проведении переписи населения, сознательно отказываются от своей национальности, я бы не стал. В период с 1989 по 2002 годы (между двумя переписями) численность чувашей в Российской Федерации уменьшилась всего на 136 тысяч граждан, что в принципе соответствует основным демографическим показателям России за этот период времени.

Для того, чтобы исправить ситуацию, на мой взгляд, надо поддерживать национально-культурные автономии на своей территории и в других субъектах Российской Федерации, развивать национальное народное творчество. Кроме того, безусловно, нужно стимулировать демографию.

**- В последнее время вокруг нашей газеты разгорелись споры по языку. Некоторые предлагают "побольше писать на русском языке", другие вообще – "50х50". Каково Ваше мнение?**

- Чувашская газета должна писать на чувашском языке! Иначе она потеряет своё лицо. Тогда она будет уже не чувашской газетой. Отдельные статьи на русском языке печатать можно, против этого я не возражаю. Если есть потребность, можно попробовать издать для чувашей, не владеющих родным языком, газету на русском языке. Если у неё тираж будет около 500 экземпляров, то такая газета имеет право на существование. Нам не надо забывать, что главная задача газеты «Канаш» — сохранение и развитие чувашского языка в Ульяновской области. Газета должна прививать любовь к родному языку среди молодёжи. А чувашская газета в вашем регионе – одна. Её нужно сберечь в нынешнем виде.

**- Спасибо за интересную беседу.**

**Беседовал Николай ЛАРИОНОВ.**

СПРАВКА. В 1989 году (перепись) в России было 1.773.645 чувашей.

В 2002 году (перепись) – 1.637.094 чувашей – уменьшение на 136.551.

При этом чуваши занимают четвертое место среди национальностей граждан России, что составляет 5,9 % среди граждан иной национальности (не русских) или 1,1% от общего количества граждан России.

В 2002 году (перепись) из 1.313.754 жителей Чувашии 889.268 составляют чуваши – 67,6 % населения.

В 2002 году (перепись) из 1.637.100 участников переписи в Российской Федерации, заявивших национальность «чуваш», подтвердили владение чувашским языком 1.253.098 - 76 %.

**«Канаш», 2010 ç., 17 №.**

# Чăваш чĕлхи амаçури ачи ан пултăр

Мĕн ĕмĕртен тĕрлĕ халăхсем кӳршĕллĕ пурăннă. Вĕсен чĕлхисем, паллах, пĕр-пĕрне витĕм кӳрсе тăраççĕ. Анчах пĕр-пĕр самантран пуçласа пĕри теприне çĕнтерме тытăнать, сарăлас вăйĕ ӳсет. Чылай чухне пысăкрах, йышлă халăх чĕлхи пĕчĕкреххине хĕсĕрлет. Лешĕн пĕлтерĕшĕ вара самаях чакать. Çавăнпа та хăйне çухатас мар тесе çак халăхăн тăрăшас пулать. Унсăрăн ку чĕлхе истори авăрне чăмать, пуçĕпех çухалать.

Акă мĕн çырать чăваш чĕлхин паллă тĕпчевçи Михаил Федотов профессор ун пирки: “Чĕлхе çемçе кăна япала, анчах та чул касать, тимĕр шăтарать, ăс парать, çав вăхăтрах ăсран кăларса ухмаха хăварать, йăнăш çулпа чуптарать. Пĕр чăваш кăна тĕл пулмасть ку çул çинче. Аслă чĕлхе орбитинче çаврăнакан вак чĕлхесем вырăс чĕлхине пуç таяççĕ, унăн йĕрĕпе пыраççĕ”.

Шăпана пула чăвашсем вырăссем хушшинче, тĕрĕсрех каласан — ункинче, пурăнаççĕ. Чи ваттисенчен хăш-пĕрне шутламасан кашни чăваш çынни вырăсла пĕлет. Ку лайăх ĕнтĕ. Ун урлă вырăс тата ытти халăхсен культурипе паллашатпăр, тавракурăма саратпăр. Анчах çак япалан тӳнтер енĕ те пур. М. Федотов калашле, “унăн йĕрĕпе пырса” хамăр йĕре, сăн-сăпата çухатма та пулать.

Хальхи вăхăтра чăваш чĕлхин чи пысăк инкекĕ вăл — çĕмрен хăвăртлăхĕпе вырăс чĕлхи еннелле çывхарса пыни. Юлашки 70-80 çул хушшинче кăна епле пысăк утăм турăмăр! Вырăс чĕлхи пире пысăк витĕм кӳрсе, хĕсĕрлесе, пусмăрласа тăрать. Чи тĕлĕнмелли кунта çакă: хамăр ăна сиссе-туйсах та каймастпăр. Çурма чăвашла, çурма вырăсла калаçатпăр та, çыратпăр та. Çакăн пирки асăрхаттарсан вара: “А вырăссем çапла калаççĕ вĕт, вĕсен чĕлхи çакăн пек”, — тесе тӳрре тухма тăрăшатпăр. Тĕлĕнсе кайăн... Мĕншĕн çак пачах та урăхла чĕлхесене танлаштармалла? Вĕсене ниепле те танлаштарма юрамасть, ку пысăк йăнăш пулать. Пирĕн чĕлхесем тĕрлĕ кăк чĕлхесенчен пулса кайнă, халĕ те тĕрлĕ ушкăна кĕреççĕ. Кашни чĕлхен тытăмĕ уйрăм, хăйнеевĕрлĕ. Вырăс чĕлхи синтетика майĕпе йĕркеленет (сăмахран, вĕсем пĕр-пĕр чĕр чун ашне “гусятина” е “баранина” теççĕ). Пирĕн чĕлхе вара аналитикăллă (çак ăнлавсенех эпир “хур ашĕ” е “така ашĕ” тетпĕр). Пирĕн чĕлхере чи малта сăмах кӳлепи мар, сăмахсен йĕрки, хыççăмахсемпе анлăн усă курни.

Çавăнпа та вырăс чĕлхинче хӳтлĕх тупма тăрăшни тĕрĕсех мар. Кунта çапла каламалла: ăнланмасăр вырăс чĕлхи хыççăн каятпăр,

асăрхаттарсан вара çакăнтах хӳтлĕх шыратпăр. Йывăрлăх е инкек-синкек сиксе тухсан хӳтлĕх шырама юта каятпăр-и вара? Е аттеанне, е çывăх тăвансем патнелле туртăнатпăр вĕт.

Çапла вара вырăс чĕлхинчен тӳреммĕн куçарса калаçни е çырни кулăшла (тепĕр енчен, чĕрене ыраттаракан япала епле кулăшла пултăрха ĕнтĕ?), ăнланмалла мар пулса тухать, сĕткенлĕ чĕлхемĕре типĕтет, чăлах тăвать. Малалла çак çулпах, çак хăвăртлăхпах кайсан пирĕн чĕлхе вырăс чĕлхин дубликачĕ, е амаçури ывăлĕ, пулса юлĕ, вырăсла шухăшласа чăвашла сăмахсемпе çырма тытăнăпăр. Пирĕн тăван чĕлхе вара чăваш чĕлхи ячĕллĕ чĕлхе çеç пулĕ. Амаçури ачине, паллă ĕнтĕ, ытла юратсах каймаççĕ. Вăл ытлашши турат пекех. Йывăç лайăх ӳстĕр, пахча çимĕç патăр тесен вара ытлашши туратсене касса пăрахаççĕ. Акă ăçта пырса тухма пултаратпăр эпир! Чăваш чĕлхи амаçури ывăлĕ е ытлашши турат ан пултăр тесен ун пĕлтерĕшне ӳстермелле, ăна хисеплемелле, унпа анлăн усă курмалла. Вырăссен умĕнче чăваш чĕлхи шайне ӳстерес тĕллев тăмасть. Вĕсене ку ĕç кирлех мар. Ку пире, чăвашсене, кирлĕ.

Халĕ çак ыйтăва хускатса А. Милли Чĕмпĕрте тухнă “Атăл юрри” журналта (1-мĕш номер, 1920 çул) çапларах çырать: “Çырулăхпа халăх чĕлхи пĕр тан, пĕр-пĕрне ыталаса пыччăр. Чĕлхе тасалăхĕшĕн тăрăшмалла. Çырнă сăмахсем пĕр-пĕринпе килĕшсе пĕр ярăмри шăрçа пек пыччăр. Малашне те халичченхи пек хăвăртлăхпа пырсан чăваш çырулăхĕ майĕпен сисмелле мар пĕтсе пынине пĕлтерĕ. Çĕнĕ сăмахсем хутшăнни палăрмасть, ун вырăнне ют чĕлхен сăмахĕсем кунсерен тула пуçларĕç. Вăл чăваш чĕлхин тымарне хăртса пыни, унăн пур хăватне те çук тени пулать. Тулашĕ — куçа улталаканни. Ăшне пăхсан унта чăваш çырулăхĕн тымарне çисе хăртакан хуртсем йăшăлтатни курăнать. Чăвашла таса çырманни, çĕнĕ сăмахсемпе пуйтарма тăрăшманни — чăваш пурнăçне кăтартса парас тĕлĕшпе араслантарманни. Хатĕр культурăна йышăннипе культурăллă пулас çук. Çакă тĕнчери халăхсен историне, çутçанталăк йĕркине хирĕç пырать. Çапла калани чăвашсем ним тума та пултараймаççĕ, вĕсем пĕтмелли халăх тени пулать. Çак шухăшпа ним тума пултарайман, çын янтипе пурăнма юратакан, упăтеленекен чăваш анчах килĕшме пултарать. Ĕçлесшĕн çунакан, хастар та харсăр чăваш ниепле те çав кахалсен шухăшĕпе килĕшме пултараймасть. Чăвашăн культурăллă малашлăхĕ çавăн пек пултаруллă шухăшласа ĕçлекен чăвашсен аллинче...»

Çапла, ку паян сиксе тухнă ыйту мар. Чĕлхепе выляс туртăм маларах та пулнă. Ун пирки 18-мĕш ĕмĕрте пурăннă Франци çыравçи,

философĕ Вольтер çапла çырать: “Вак-тĕвек чапшăн çунни мĕнпур чĕлхере сăмахпа вылясси патне илсе пырать, ку вăл — суя çивĕчлĕхĕн чи начар енĕ”.

Нимĕç çыравçи тата шухăшлавçи Гёте вара: “Шел, эпир çакна манса каятпăр: час-часах тăван чĕлхепе те ют чĕлхепе çырнă пек çыратпăр”, — тет.

Çак шухăша малалла тăсса тĕслĕхсем пăхса тухар. Мĕнле шухăшлатпăр-ха эпир, мĕнле çыратпăр?

Юлашки вăхăтра литературăра “качча тухнă” тени сарăлса пырать. Поэтсем сăвă-поэма, çыравçăсем калав-повесть, драматургсем пьеса çырнă чухне унпа час-час усă кураççĕ. Сăвви-калавĕ хаçат-журналта пичетленет, пьесине артистсем сцена çинче лартса параççĕ. Каять вара пĕр-пĕр йăнăш сăмах е сăмах çаврăнăшĕ тĕнче тăрăх! Сăрт çинчен кусса анакан юр купи евĕрех. Чăн пĕлтерĕшĕ пирки никам та шутласа пăхмасть: пĕри калать — тепĕрне юрать. Ĕлĕк чăвашсем “качча тухнă” тесе каланă-ши? Çук. Ĕненместĕр пулсан халăх сăмахлăхĕнче шыраса пăхăр. Юмахсем, халапсем, легендăсем, ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем, такмаксем, халăх юррисем — чăваш халăхĕн ылтăн çӳпçи. Çакăнта эсир “качча тухнă” тенине тупаймăр. Апла пулсан пирĕн несĕлсем ун пек калаçман. Çакăн пек калама (каллех вырăс чĕлхи хыççăн кайса) 20 ĕмĕрте çеç пуçланă. 1930-мĕш çулсенче (литературăра ăна соцреализм тапхăрĕ теççĕ) пирĕн çыравçăсем вырăсла хайлавсене чылай куçарма пуçланă. Çав вăхăтра кĕртсе янă та ĕнтĕ ăна литература чĕлхине.

Акă Хумма Çеменĕ М. Горькин “Амăшĕ” романне куçарать (1932 çул). “Старшая сестра — несчастная... Вышла замуж за человека, много старше её... — пырать текст тăрăх. Чăваш çыравçи ăна çапларах куçарать: “Аслă аппа — телейсĕрскер... Хăйĕнчен нумай çул аслă çынна качча тухрĕ”.

Мĕн калама пулать кунта? Хумма Çеменĕ хăй сисмесĕрех ют çулпа кайнă, вырăсла шухăшлама тытăннă, чăваш чĕлхин стильне, хăйнеевĕрлĕхне шута илмен. Вырăспа чăваш чĕлхисене танлаштарма тытăннă. Ун пек тума юраманни пирки çырнăччĕ ĕнтĕ маларах. Паллах, ятлă çыравçă хыççăн ыттисем çапла çырма, калаçма тытăннă. Кунта, Вольтер калашле, “вак-тĕвек чапшăн çунни” курăнать. Куçаруçă ĕçĕн тĕп палли — вуланă чухне пĕр чĕлхерен тепĕрне куçарни паллă ан пултăр, ăна никам та ан систĕр. Ун чухне çеç куçаруçа ăста теме пулать.

Чăваш ялĕсенче “качча тухнă” тесе калаçмаççĕ пулин те ку сăмах

çаврăнăшĕ литература тексчĕсене вараласа çӳрет. Вăл хула чăвашĕсен чĕлхине кĕрсе вырнаçрĕ. Çапла, халь чăваш чĕлхине икĕ пая пайлама пулать: хула чĕлхи тата ял чĕлхи. Кунта кăсăк япала пулса тухать. Ял чăвашĕ, таса чĕлхепе калаçса ӳснĕскер, хулана килсе тĕпленет те хăйĕн чĕлхине пăсса ярать. Çак пăсăк чĕлхепе хаçат-журналта çырса, кĕнеке кăларса ял чĕлхине (таса чăваш чĕлхине) пăсма пулăшать. Мĕн каласан та, ял чăвашĕсем "качча тухнă" темеççĕ. Чăваш ĕлĕкрен "качча кайнă", "качча пынă", "качча килнĕ" тет. Çавăнпа та чăвашлах çырмалла литература чĕлхинче. Эпĕ çыравçăсене çапла каласшăн: ним шухăшламасăр çырса хамăр мăн асаттесен чĕлхине тустарма ан пулăшăр. Сирĕн сăмахăрăн вăй-хăвачĕ пысăк. Чăн чăвашла çырăр, чăн чăвашла шухăшлăр. Сĕткенлĕ чĕлхемĕре, ун пылак техĕмне сыхласа хăварасси — çыравçăсен, хаçатçăсен пĕрремĕш ĕçĕ.

Тĕрĕс мар куçарнипе çыхăнтарса тепĕр сăмах илер-ха — "çине". Ку хыççăмах вырăнлă усă курма пĕлменнипе пирĕн чĕлхемĕрте çумкурăках тухрĕ ĕнтĕ. Мĕнле кăна кукăртса-авкаласа калаçмастпăр халĕ: "пенси çине тухнă", "ыйту çине хуравла", "ун çине авланнă", "сăмах çине кĕвĕ хывнă", "ман çине çилленнĕ", "пирĕн çине тапăннă", "купăс çинче вылять", "алă çине сехет çых", "хĕр çине куç хывнă", "йĕлтĕр çинче ярăн", кимĕ çинче ярăн", "сан çине шанатăп", "стена çине çак", "шыв çинче ирĕлтер", "калав çинчен сӳтсе яв", "хаçат çине çыр".

Чăннипех те чăлах чĕлхе! Акă ăçта илсе тухать вырăсларан тӳреммĕн, пуç йĕри-тавра шухăшласа пăхмасăр куçарни. Çак сăмах çаврăнăшĕсемпе калаçура, çӳллĕ трибуна çинче, радио-телевидени кăларăмĕсенче, çырура, уйрăмах хаçат-журналта, ним вăтанмасăр усă куратпăр. Йăнăша асăрхаттарсан вара каллех вырăс чĕлхи патнех хӳтлĕх шырамаваскатпăр: "вырăсла çапла вĕт... "На" предлог "çине" куçать". Çук çав, ун пек куçмасть. Маларах каларăмăр вĕт: пирĕн чĕлхен тытăмĕ урăхла.

"Çине" хыççăмаха вырăнсăр сĕтĕрсе-çĕтсе пĕтернĕ пирки юптарса Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан А. Ыхра поэт питĕ вирлĕ сăвă çырнă:

Купăс çинче вылятăп ачаран,
Юрăç çине, тен, çавăнпах авлантăм.
Ун амăшĕ редактор пулнăран
Эп ун çине ытла та хытă шантăм.

Ырмастăп-ха: ман пурнăç малалла.
Сăрнай çинче те выльăп пĕр романлăх.

Те вырăсла çырап, те чăвашла —
Мĕн чул ăнланмăн, çавăн чухлĕ лайăх.

Çакăн пек тӳрккес калаçни хамăр чĕлхене хакламаннинчен, унăн саккунĕсене, правилисене пĕлменнинчен тата кăштах вырăс пек курăнма, мăнкăмăлланма, суя чап илме тăрăшнинчен килет пулĕ...

Нумаях пулмасть "Канаш" хаçат редакцинче паллă чăваш çыравçи Ева Лисина пулса кайрĕ. Вăл хальхи вăхăтра тĕн кĕнекисене чăвашла куçарас ĕçе кӳлĕннĕ. Яваплăхĕ питĕ пысăк кунта. Çавăнпа та нумай пĕлмелле. Ĕç вăхăтĕнче вăй хурсах шухăшлама тӳрĕ килет. Хăй ĕçĕ пирки Ева Николаевна аса кĕрсе юлмалла каларĕ: "Предложение вуласа тухатăп та ун пĕлтерĕшне ăнланма тăрăшатăп. Унтан кĕнекене хупатăп та хама ыйту паратăп: çак шухăша ман асанне мĕнле каланă пулĕччĕ-ши?"

Акă ăçта пĕр чĕлхерен тепĕрне тĕрĕс те тикĕс куçарнин сăлтавĕ! Акă вăл ĕçе тăвам тесе туни, чăваш чунне пытăр тени. Кашни çыравçă, хаçатçă, куçаруçă çакăн пек шухăшласан, çакăн пек яваплăх туйсан пирĕн чĕлхемĕр, çурхи шыв хĕвел питĕнче ялтăраса, шăнкăртатса юхнă евĕр, таса та çĕпĕççĕн илтĕнĕ.

Маларах асăннă тĕслĕхсене чăвашсем çапларах çавăрттарса калаççĕ: пенсие тухнă, ыйтăва хуравла, ăна качча илнĕ, сăмахĕпе кĕвĕ хывнă, мана çилленнĕ, пире тапăннă, купăс калать, алла сехет çых, хĕре куç хывнă, йĕлтĕрпе ярăн, кимĕпе ярăн, сана шанатăп, стена çумне çак, шывра ирĕлтер, калава сӳтсе яв, хаçата çыр.

Чăваш чĕлхинче кĕске уçă сасăсемпе пĕтекен (ă, ĕ) сăмахсене çырнă чухне те пăтрашу çителĕклĕ. Пĕр сăмаха çеç илсе кăтартатăп: каччă. Хĕрпе каччă пĕрлешнĕ чух, туй çинчен сăмах пынă чух "качча кайнă" теççĕ ("тухнă" тесе тĕрĕс мар çырнă пирки калаçрăмăр ĕнтĕ). Пĕрне-пĕри юратнă чухне, туйăмсене палăртнă чухне вара "каччăна юратать" тесе çыраççĕ. Пĕр сăмаха пĕр падежра (пару падежĕ) тĕрлĕрен çырма юрать-и вара?

Е кунта анекдотри пек пулса тухать-и? "Хĕрарăм" сăмаха упăшкипе пĕрле пурăнсан пĕрле çырмалла, уйрăлнă пулсан — уйрăм, упăшки пыркаласа çӳресен — дефиспа...

Кĕске уçă сасăсемпе пĕтекен сăмахсене правило кĕске çырма ыйтать: качча кайнă, вăрçа кĕнĕ, уçланка кĕрсе кайнă (каччăна, вăрçăна, уçланкăна мар).

Çак правилăна пăсма нумайăшĕ именсе тăмаççĕ. Тĕслĕхрен, Шупашкарта тухнă "Телеюрă-16" видеокассетăна курнă чух сăнама пулать çакна. Фойере артистсемпе калаçакан хĕр, пуçĕ тăррине хура

куçлăх лартса янăскер (керменре хура куçлăх мĕншĕн кирлине ăнлансах каяймарăм), темиçе хут “телеюрăна килнĕ” терĕ (тĕрĕссипе, “телеюрра” темелле). Апла кулленхи калаçу чĕлхинчи йăнăшсем литература чĕлхине кĕрсе норма пулса вырнаçаççĕ пулĕ ĕнтĕ. Ăнлантаракан, вĕрентекен, хирĕçлекен çук — тем тума та юрать. Вĕренсе çитеймен çынсене çул уçă. Малашне халăха чăвашла калаçма çаксем вĕрентеççĕ пулĕ...

Шупашкарти театрсенче те спектакль вăхăтĕнче чĕлхе нормине хирĕçлекен, хăлхана ыраттаракан предложенисем илтĕнеççĕ. Акă хам илтнĕ тĕслĕхсем: “эп унта каймасть”, “сан патне пырать”, “качча тухать”. Те автор йăнăшĕ ку, те артистсем çапла хуçкалаççĕ — ăна калаймастăп.

Малалла тĕрлĕ хаçат-журналта час-час тĕл пулакан йăнăшсене пăхса тухăпăр.

Хальхи саманара нумай предприяти, организаци, хуçалăх акционерсен аллине куçрĕ. Эпир вĕсене “акционерлă общество” теме пуçларăмăр. Çак çулпах кайсан Шупашкарти Студентсен хулине “Студентлă хула” теме тытăнмалла. Вырăсла “Студенческий городок” çавăн пек тума улталаса, илĕртсе тăрать-çке! Анчах кашнинче —лă аффикспа усă курма май килмест. Тĕрĕссипе, “акционерсен обществи” темелле. Унăн ячĕ пулсан вара ăна çак икĕ сăмахваррине лартмалла. Сăмахран, “акционерсен “Туслăх” обществи”.

Тĕрлĕ çĕрте “пăшалтан пенĕ” тесе çырнине вулама пулать халь. Каллех вырăссем хыççăн хăвалаттараççĕ — “выстрелил из ружья”. Ман пĕлес килет: ялти чăвашсенчен хăшĕ “пăшалтан” перет-ши? Чăваш “пăшал пенĕ” е “пăшалпа пенĕ” тет. Темиçе теçетке каялла тухнă словарьсенче “пăшалтан” тесе çырман. Юлашки кăларăмсенче вара вырăс чĕлхин витĕмĕ палăрать, “пăшал (тан) пер” тесе хăварнă. Словарь тăвакансем хулара пурăнаççĕ вĕт, çак сăлтава пула вара хула чăвашĕсен чĕлхи литература чĕлхине кĕрсе пуç пулса тăрать. Пирĕн асаттесем “пăшалтан” пемен, халăх сăмахлăхĕнче ун пекки çук. Пĕр сăлтавсăрах хамăр чĕлхене мĕн тума пăсас, авкалас?

Ыйтуллă предложенисем пирки. Пирĕн чĕлхере ыйтăва пĕлтерес тесен ыйту сăмахĕсемпе (ăçта, кам, мĕншĕн...) тата ыйту татăкĕсемпе (-и, -ши, -шим, -им тата ыттисем те) усă кураççĕ. Çаксем пĕрремĕш вырăнта. Чăнах та, хăш чухне çирĕплетӳ татăкĕсемпе те усă куркалаççĕ. Сăмахран, “пирĕн пӳрт илемлĕ вĕт?”, “тĕрĕс вĕт?”. Кунта çирĕплетӳ ыйтăва çĕнтерет, çавăнпа та кусене ыйтуллă предложенисем теме те йывăртарах. Чăннипех ыйтас тесен “пирĕн пӳрт илемлĕ-и?”, “тĕрĕс-и?” темелле. Юрĕ, ун çинче ытла чарăнса тăмасан та юрать.

Вырăс чĕлхинче пĕрремĕш вырăнта — сасă сĕмĕ (интонаци). Унпа вĕсем питĕ вылятса калаçаççĕ, хăйсен туйăмне палăртаççĕ. Çакăн хыççăн кайса эпир те çапларах çырма пуçларăмăр: "усси пур е çук"? Чăвашла çырас пулсан "усси пур-и е çук-и?" темелле. Ыйту татăкне тĕрлĕ çĕре лартни те тĕрĕс мар. Пирĕн чĕлхери ыйту татăкĕ яланах сказуемăй хыççăн тăмалла, урăхла çырни правилăна пăсни пулать.

Кĕскелсе пулнă хутлă сăмахсене те ăнланмасăр çырни пур. "Çăраççи уççи", "кăçалхи çул", "улмуççи йывăççи"... — çаксем пуртс тĕрĕс мар. Ун пеккисене тавтологи, е плеоназм, теççĕ. Кунта иккĕмĕш сăмахĕсем ытлашши, мĕншĕн тесен вĕсене пĕрре каланă ĕнтĕ: "çăра уççи", "ку çул", "улма йывăççи". Çак сăмах çаврăнăшĕсем калаçу витĕмĕпе кĕскелнĕ те пĕрлешсе кайнă. Чĕлхере яланах кĕскелес туртăм пур, ăна перекетлĕх саккунĕ теççĕ. Тĕслĕхрен, "анлăланать", "йышлăланать" глаголсене "йышланать", "анланать" теме май пур. Хăш чухне çыракансем çакна пĕлмеççĕ пулмалла: сăмахсене юри тăсса яраççĕ. Акă "хура" сăмаха илер. Çак сăмаха пусса, палăртса каланă чухне палăрту аффиксĕпе (-и) усă кураççĕ. Вăл сăмах вĕçĕнчи уçă сасă вырăнне кĕрсе ларать те "хури" сăмах пулса тăрать. Акăлчан чĕлхинчи the артикль ĕçне тăвать вăл, пĕр-пĕр япала çинчен калаçу пынине пĕлтерет. Урăх кунта нимĕн те ытлашшине калаймастăн. Хăшĕсем вара тупаççĕ, сăмаха малалла тăсса -й интерфонема хушаççĕ те 3 сăпат аффиксĕ (-ĕ) лартаççĕ — хурийĕ. Ăнланмалларах пулчĕ тетĕр-и? Пачах урăхла — килĕшӳсĕр, килпетсĕр пулса тухрĕ.

Çын ăçтанне каланă чухне ял е хула ятне пысăк саспаллирен пуçласа çырни те йăнăш. Сăмахран, эпĕ Çĕнĕ Йĕлмелĕнче çуралнă. Мана вара "Çĕнĕ Йĕлмелсем" е "Йĕлмелсем" темелле-и? Кунта калаçу ял çинчен мар, çын çинчен пырать. Апла пулсан "çĕнйĕлмелсем" е "йĕлмелсем" темелле. Пичетре вара мĕнле кăна çырмаççĕ: Чĕмпĕрсем, Патăрьелсем, Елчĕксем... Ку тĕрĕс мар.

Чылай чухне сăмахăн чăн пĕлтерĕшне ăнланмасăр усă кураççĕ. Вара кулăшларах илтĕнет предложени, шухăшĕ улшăнать. "Ӳкерӳçĕ" сăмаха "ӳнерçĕпе" арпаштараççĕ. Пĕрремĕшĕ художника пĕлтерет, иккĕмĕшĕ вара — "искусствовед" сăмаха. "Мăнкăмăлланатăп" тата "мăнаçланатăп" сăмахсене те вырăнĕсемпе ылмаштараççĕ. Пĕрремĕшĕ çын кăмăл-туйăмĕн аванах мар енне кăтартать, иккĕмĕшĕпе вара ырă туйăма палăртнă чухне ытларах усă кураççĕ. Професси — специальность. Пĕрремĕшĕ пĕтĕмĕшле япалана ăнлантарать, тепри çак талккăша кĕрекен ятарлă ĕç тунине пĕлтерет. Сăмахран, вĕрентӳçĕ (учитель) — професси, математик (шкулта математика вĕрентекен) — специальность.

Тата тепӗр нумай тӗл пулакан тӗслӗх. Эпир вырӑсла “работает врачом” тенине ним шутламасӑр (вырӑссем еверлӗ) “врач пулса ӗҫлет” тетпӗр.

Кун пирки пӗр автор: “Пулса ӗҫлет” тени ҫын ҫак ӗҫе тӑвать, анчах та хӑй вырӑнӗнчех мар, кӑмӑлӗ тулсах кайман пек пулса тухать”, — тесе ҫырнӑччӗ. Кунпа килӗшмелле. Ял ҫынни чӑнах та “пулса ӗҫлет” тесе калаҫмасть. “Врачра ӗҫлет”, “конюхра ӗҫлет”, “учительте ӗҫлет” тет.

Мӑшӑрлӑ сӑмахсене — сем аффикс хушса нумайлӑ хисепре лартни те вырӑнлах мар. Вӗсем капла та пӗтӗмлетӳ пӗлтерӗшлӗ, пӗрлештерекен япала ячӗсем. Капла та нумайлӑха пӗлтереҫҫӗ. Сӑмахран, “сӗтел-пукан” тесен калаҫу мӗн йӗри-тавра пыни паллӑ. “Сӗтел-пукансем” тени нимӗн те улӑштармасть, палӑртсарах каламасть. Ял-йыш, хаҫат-журнал, ача-пӑча, кӳршӗ-аршӑ — кунта нумайлӑ хисеп аффиксне хушмасан та мӗн пирки сӑмах пынине пӗлетпӗр.

Варваризмсем вара — чӑваш чӗлхин чи усал тӑшманӗсем! Чӑвашла кӗскен те уҫҫӑн калас вырӑнне вырӑсла-чӑвашла хутӑш туса мӗнле кӑна каламастпӑр: повышат ту, предупреждат ту, расписаться ту, обедат ту, печатат ту, отправлят ту... Вӗҫӗ-хӗрри ҫук. Чӑвашла вара ку япаласене ансат калама пулать: ӳстер, асӑрхаттар, алӑ пус, апатлан, пичетле, яр.

Пӗтӗмлетсе калас пулсан тӑван чӗлхемерӗн пахалӑхӗ чакса пырать. Апла мар теме илтмен, курман ҫын ҫеҫ пултарӗ. Чӑваш чӗлхине пӑсаканӗсем вара хамӑрах — чӑвашсем. Вырӑс чӗлхи хыҫҫӑн йӗрлесе кайса хамӑр йӗре ҫухататпӑр, хамӑр ларакан турата майӗпен касса пыратпӑр. Темиҫе ҫӗр ҫултан мӗн пулӗ?

Хамӑрӑн чӗлхе сумне, тасалӑхне тавӑрас тесен мӗн тумалла-ха?

Словарьте сӑмах нумай пирӗн, унӑн пӗчӗк пайӗпе ҫеҫ усӑ куратпӑр-ха. Нумайӑшӗ тивӗҫсӗр манӑҫа тухнӑ. Ҫавсене ҫырулӑха кӗртмелле. Ҫӗнни — манӑҫа тухнӑ кивви. Ырӑ тӗслӗхсем пур пирӗн. Сӑмахран, 20-30 ҫул каялла “ӳнер” сӑмаха кам пӗлнӗ? Пӗри, ҫӑмӑл алӑлли, ҫырулӑха кӗртнӗ те янӑ. Унпа халӗ анлӑн усӑ кураҫҫӗ. Шупашкарта троллейбус чарӑнӑвӗ те пур — “Ӳнер музейӗ”. Кунта пӗр йывӑрлӑх сиксе тухма пултарать. Аслӑ ӑрури ҫынсем ҫӗнӗ сӑмахсене кӑмӑлласах йышӑнасшӑн мар. Анчах ҫамрӑк ҫынна пӗрех: “ӳнер” сӑмах 50 ҫул каялла чӑваш лексикинче пулнӑ-и, пулман-и? Вӗсен чӗлхине ҫирӗп кӗрсе юлать вӑл, малалла — ытти ӑрусенне.

Морфологи мелӗпе те мӗн чухлӗ ҫӗнӗ сӑмах тума пулать. Мӗн чухлӗ аффикс чӑваш чӗлхинче! Кунта каллех хирӗҫлекенсем тупӑнӗҫ, ҫапах та шырамалла, тупмалла, лексикӑна пуянлатмалла. Тӗслӗхрен,

"парус" сӑмаха "ҫилкӗҫ" тенинче мӗн начарри пур? Чӗлхе саккунӗсене пӑсни ҫук кунта. Апла пулсан пирӗн лексикӑна кӗме тивӗҫлӗ вӑл.

Орфографи правилисене те, Конституцие улӑштарнӑ евӗр, вӑйпах улӑштарса тӑни лайӑх енне илсе пымасть. Ку пулӑм халӑхра арпашу-пӑтрашу ҫуратать, тӑван чӗлхерен ҫамрӑксене пистерет. Пирс супинккe вӑрҫисем кирлӗ мар. Чӗлхе халӑха пӗрлештерсе тӑмалла, сапаласа ямалла мар.

Тепӗр япала та пур, вӑл кашнинех пырса лекет. Вольтер: "Ют чӗлхене темиҫе ҫул хушшинче вӗренме пулать, тӑван чӗлхене вара ӗмӗр тӑршшӗпех вӗренмелле", — тенӗ. Урӑхла каласан, кашни ҫын (уйрӑмах ҫыракансене пырса тивет ку) чӗлхе правилисене алла илмелле, ӑсталӑхне туптамалла, самана таппине туйса тӑмалла.

Ҫаксене пурнӑҫа кӗртсе пымасан чӑваш чӗлхине ҫывӑх вӑхӑтра Хӗрлӗ кӗнекене кӗртме пулать. Вара: "Сывӑ пултӑр вырӑс чӗлхи — чӑваш чӗлхине пуянлатаканни!" — темелли ҫеҫ юлать. Шӳт мар ку, Ҫурҫӗрте пурӑнакан халӑхсен чӗлхисем пӗтсе пыни ҫакна уҫҫӑн кӑтартса парать. Пӗр манси поэчӗ (вырӑсла ҫыраканскер) чӑваш ҫыравҫине ҫапла каланӑ: "Эсир телейлӗ, тӑван чӗлхӗрпе сӑвӑ ҫырма пултаратӑр".

Ҫапла, хальлӗхе пултаратпӑр-ха...

Юлашкинчен ҫакна калас. Кунта ӗҫ-пуҫ ҫапла пулса тухнишӗн вырӑс чӗлхи те, чӑваш чӗлхи те айӑплӑ мар. Чи айӑплисем — эпир, ҫынсем. Хамӑр ирӗк памасан пирӗн чӗлхемӗре никам та тустараймасть, туртса илеймест. Хамӑр айванлӑха пула хӑртатпӑр ӑна. Кашни халӑх хӑйӗн тӑван чӗлхине хисеплемелле, куҫ шӑрҫине сыхланӑ пек сыхламалла. Унсӑрӑн чӗлхе ҫухалма пултарать, ун хыҫҫӑн — халӑхӗ те...

Хамӑра ҫутта кӑлараканӑмӑр И. Я. Яковлев сӑмахӗсене аса илер-ха. "Эсир хӑвӑр халӑхӑрӑн чӗлхине тирӗс тӑмасан халӑх кӑмӑлне пӗтӗмпех хӑвӑр аллӑрта тытса тӑрӑр", — тенӗ вӑл.

Апла пулсан ют чӗлхесем хыҫҫӑн кайса чӑваш халӑхне тирӗс тӑрар мар, халӑхӑмӑра пӗтерес ҫул ҫинчен пӑрӑнар.

Чӑваш ӗмӗр-ӗмӗрӗпех чӑваш пултӑр.

**"Канаш", 19 №, 2000 ҫ., ҫу, 7.**

# Чăваш ятне çӳлелле çĕклер

Ку йĕркесене çырма мана А. Богатовăн «О национальной гордости чувашей» статйи хускатрĕ.

Статьяра шухăшсем питĕ тĕрĕс ман шутпа. Чăнах та, ытти халăхсем хушшинче чăваш çынни ĕçчен те хастар, сăпайлă пулнипе, хăй патне килнĕ хăнана тивĕçлĕ кĕтсе илнипе палăрса тăрать. Татах та пур чăвашăн лайăх енĕсем. Анчах эпĕ паян хăш-пĕр чăваш хушшинче сарăлнă «чир» çинчен калаçасшăн. Ку вăл – хăй чăваш пулнине ытти çынсем умĕнче пытарма тăрăшни.

Хулара пурăнакан чăвашсем (пурте мар, уйрăмах çамрăксем хушшинче нумай ку тĕслĕх) хăйсем чăваш наци çынни пулнине пытараççĕ, тăван чĕлхерен вăтанаççĕ. Мĕн тĕртет вĕсене амăшĕ вĕрентнĕ чĕлхерен вăтанма? Ăçта шырамалла ку япалан пуçламăшне? Хăçан тытăнса кайнă ку йăла? Хăйсен çуратса ӳстернĕ амăш чĕлхи çывăх мар-ши вĕсене?

Аннепе Тăван çĕршыва суйласа илме çук. Апла пулсан МĔНШĔН тата КАМРАН вăтанмалла хамăр чăваш пулнишĕн? Çакăн çинчен тĕплĕнрех шутласа пăхар-ха. Тепĕр хут та тепĕр хут шутлар. Кунран-кун чăвашпа çумлăн ĕçлесе пурăнакан вырăс е тутар çынни çак наци çынни пулнине пытарнине курнă-и эсир? Эпĕ курман, тĕслĕхрен. Хăйсен нацийĕпе мăнаçланнине курнă вара. Эпир хамăр чăваш пулнине пытарма тăрăшатпăр. Калăн, теменле киревсĕр ĕç туса айăпа кĕнĕ. Хамăртанах хăратпăр, хамăртан хамăр таратпăр. Ăçта? Хăвăн нацине ытти нацисемпе пĕр рете лартса хăвна ху хисеплемесен кам хисеплĕ сана айккинчен? Хăравçăсем нихăçан та хисепре пулман. Ман шутпа, кашниех ÇЫН пулмалла, мĕнле чĕлхепе калаçни нимĕне те пĕлтермест. Çын мĕнле чĕлхепе шухăшлать (калаçакан чĕлхе мар), çавă унăн тăван чĕлхи пулса тăрать. Чăвашсем хушшинче çуралса ӳссе чăваш чĕлхипе калаçакан çын хулана килсен вырăсла шухăшлама тытăнать-ши вара? Ман шутпа, ку çынсем – чи шанчăклисем мар, тулли туйăмлă та мар, телейсĕрскерсем кăна.

Ку темăпа хаçат страницисенче пĕр-пĕр писатель, поэт е тĕпчевçĕ пичетленсен питĕ усăллă пулĕччĕ. Вулакансем те хăйсен шухăшĕсене çырса пĕлтерсен аван, ку тема питĕ анлă. «Канаш» хаçат тиражĕ пĕчĕкçĕ пулни те питĕ пăшăрхантарать мана. Облаçри 116 пин чăваша икĕ пин экземпляр? Ку икĕ пин çине область тулашĕнче çырăнса илекен чăвашсем те кĕреççĕ, вĕсем çинчен те манса каймалла мар. Апла пулсан облаçри чăвашсем валли тата та сахал юлать. Мĕншĕн

çынсем облаçри пěртен-пěр чăвашла тухса тăракан хаçата çырăнма васкамаççě? Сăлтавě пěрремěш ыйтупах çыхăнса тăрать пуль тетěп. Ку вăл чăваш хăйěн культури çине сиввěн, сӳреккěн пăхнине пěлтерет, ăна хăй пек чăваш çыннин пурнăçě интереслентерменнине кăтартать. Халě, çěршыври йывăр лару-тăру вăхăтěнче, чăвашсене чăмăртанма пулăшакан, ěç çыннин хуйхи-суйхине сӳтсе явакан чăвашла хаçата мěншěн çырăнса илес мар? Хамăршăн хамăр тăрăшмалла ěнтě. Акăлчансем каларăшле: «Ěмěр тăршшěпех тěттěме вăрçса пурăниччен кашниех пěрер çурта çутсан лайăхрах».

Чăваш çыравçисен секцине тата чăваш театрне уçас шухăш та питě вăхăтлă тата вырăнлă. Вěсем чăваш çыннишěн чăн-чăн культура вучахěсем пулса тăнă пулěччěç.

Манăн тепěр сěнӳ пур. 2-3 уйăхра пěрре хаçатăн штатра тăман корреспондечěсене пěрле пуçтарма май çук-и? Çакăн пек тусан эпир пěр-пěринпе, хаçат сотрудникěсемпе калаçмалли ыйтусем тупăнаççех тесе шутлатăп. Уçă çыру кунěсенче çынсем çивěч ыйтусем лартса хаçат содержанине пуянлатма пулăшěç. Редакци енчен ку вулакансем патне пысăк утăм туни пулě. Тен, хаçат тиражě те ӳсме пултарě ун хыççăн.

Малашне «Канаш» хаçата эрнере 2 е 3 хут кăларассине те ыйту лартмалла. Пěр эрне хаçатшăн пысăк вăхăт тата, çитменнине, пурнăçра пулса иртекен событисем хыççăн ěлкěрсе пыма та йывăр. Çак сăлтавах пула ěнтě облаçри çамрăксен хаçачě те («Слово молодежи») ятне улăштарса эрнере пилěк хут тухма тытăнчě. Пирěн те, чăвашсен, кун пирки тăрăшмалла, чăваш ятне çӳлте тытмалла, ăна ӳкме памалла мар.

**«Канаш», 16 №, 1993 ç.**

# Чĕмпĕр чăвашĕсене савăнтарнă вунă кун

Çу уйăхĕн 20-29-мĕшĕсенче Ульяновск тăрăхĕнчи чăвашсем патĕнче Шупашкартан килнĕ К.В. Иванов ячĕллĕ Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕллĕ Чăваш Патшалăх академи драма театрĕ хăнара пулчĕ. Хальхинче вăл пирĕн валли ултă спектакль лартса пачĕ: «Хĕрсене çапла вăрлаççĕ» (Б. Аппаев), «Тĕпсĕр сăпкари ача сасси» (Н. Угарин), «Çын куççулĕ çĕре ӳкмест» (Л. Толстой), «Праски инке хĕр парать» (А. Чебанов), «Хĕр çураçма кайсан» (Н. Сидоров), «Кай, кай Ивана» (Н. Айзман). Вунă кун кĕрлерĕ Ульяновскри драма театрĕ чăваш калаçăвĕпе, савăнăçпа, кулăпа. Хальхи пăтранчăк, ăнланмалла мар саманара ку чăвашсемшĕн чăн-чăн уяв пулчĕ.

Ĕç хыççăн театра юратакансем хула центрне хăйсем юратнă артисчĕсемпе тĕл пулма васкарĕç. Мĕншĕн тесен кун пек уяв час-часах пулмасть. Юлашки хут коллектив пирĕн патра виçĕ çул каялла пулнăччĕ.

Спектакльсем пысăк ăнăçлăхпа иртрĕç. Пирвайхи спектакльсенче çеç залра нумаях мар пушă вырăнсем курăнкаларĕç, ыттисенче халăх лăках тулнăччĕ. Вара мĕнле çакăн пек япалана курмасăр юлăн-ха? Сцена çинче Н. Яковлева, В. Кузьмина, Н. Охотников, Л. Федорова, В. Трифонова, Н. Булаткин, Г. Большаков, П. Иванов пек чаплă артистсем вылянине епле пăлханмасăр пăхăн-ха?

Театр администраторĕ Н. Исаева билетсем сарас тата спектакльсене ялсенче кăтартас пирки область тăрăх нумай çӳрерĕ. Ăна ку çӳреври «Канаш» хаçат сотрудникĕсем пулăшса пычĕç. Вĕсем каласа панă тăрăх, совхозсемпе колхозсен пуçлăхĕсем ĕçлекенсем хушшинче билет сутассине, транспорт уйăрса парассине çийĕнчех татса пама тăрăшнă. Тереньга районĕнчи «Скугареевский» совхозра та вĕсене лайăх кĕтсе илнĕ. Кунта чăвашсем нумай пурăнаççĕ, çавăнпа профком председателĕ А.И. Хохлова Ульяновска кайма ятарлă транспорт уйăрса панă. Ясашлă Ташлара та транспорт çук тесе тăман. Леспромхозăн профком председателĕ Л.Д. Афанасьвеа та кунта ĕçлекен чăвашсен кăмăлне тупма пĕлнĕ. Çак икĕ совхозран чăвашсем виçĕ çул каялла та ятарласа уйăрнă автобуспа килнĕччĕ. Мĕн калăн ку пуçлăхсене? Ырă сăмахсăр пуçне нимĕн те калаймăн. Ĕçлеттерме те, кантарма та пĕлеççĕ вĕсем халăха. Тата тепĕр çынна ырăпа асăнмалла кунта: вăл «Красноборский» совхоз директорĕ Ю.П. Чернов, районти совхозсемпе предприятисен директорĕсенчен пĕртен-пĕр чăваш. Вăл

тăрăшнипе кунтан та Ульяновска чăвашсемпе тулнă автобус çитрĕ.

Анчах пур çĕрте те çакăн пек хăвăрт татса параймарĕç канупа çыхăннă ыйтăва. Салтак Ташлинче «Ташлинский» совхоз директорĕ Н.А. Макаров: «Театра çӳреме вăхăт çук пирĕн, производствăна чарма юрамасть, транспорт та çук», - тенĕ. Ку совхозра 60 процента яхăн чăваш пурăнать, вĕсен шухăшне шута илмелле мар-и вара? Тăрăшсан, пĕлсе ĕçлесен «производствăна чармасăрах» канма пулать. Совхозран театра юратакансем маршрутлă автобуспах килнĕччĕ вара.

Юлашкинчен акă мĕнле шухăш пырса кĕчĕ. Чăвашсем спектакльсене хапăл туса çӳрени питĕ савăнтарать. Апла пулсан чунпа хытсах ларман-ха, чăвашлăх тени юлнă-ха пирте. Çак вунă кун хушшинче хаваслă та савăнăçлă сăнсем курса çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пулать: вăраха ямасăрах Ульяновскра чăваш театрĕ уçмалла. Çак ыйтăва вырăнти влаçсен умне пĕр тăхтамасăрах тăратмалла. 120 пин чăваш пурăнакан облаçра наци театрĕ пулмаллах. Вăл пулсан эпир искусство тĕнчипе те час-часах тĕл пулнă пулăттăмăр, пулас ăрăва сипетлĕх енчен те ăс пама çăмăлтарах пулĕччĕ, çамрăксем тăван чĕлхе патне туртăнĕччĕç, хамăра хамăр çӳлерех шая çĕкленĕ пулăттăмăр.

Хальлĕхе вара Шупашкар артисчĕсене шанмалли кăна юлать.

**«Канаш», 28 №, 1994 ç.**

# Чĕререн тухма пĕлмен çулсем

Шкулта вĕреннĕ çулсем... Камăн чĕри пăлханмасть-ши вĕсене аса илнĕ чух? Çак вăхăтра эпир савăнатпăр та, кăштах хурланатпăр та. Çыннăн пурнăçĕнче çак тапхăр нихăçан манми вăхăт пулса тăрать. Çĕр чăмăрĕн хăш кĕтессинче пулсан та, ăçта ĕçлесен те хамăр çырма, вулама, шутлама, туслашма, пурнăçри начарпа авана уйăрса илме вĕрентнĕ тăван шкулăн учителĕсене нихăçан та манас çук. Кунта эпир пĕлӳ тĕнчине кĕрсе пĕрремĕш утăмсем тунă, çавăнпа тăван шкул кашнишĕн хаклă та çывăх. Шкулта вĕреннĕ çулсене аса илсен манăн куç умне чи малтанах йывăçран тунă шкул çурчĕ тата пĕрремĕш учительница Елена Романовна Антипова килсе тухаççĕ.

1968 çулхи авăн уйăхĕ. Пĕрремĕш класа пĕрремĕш кун килнине лайăх астăватăп. Пире, тин çеç çичĕ çул тултарнă, пĕр-пĕринчен именекен ачасене, шкул умĕнче пĕрремĕш курнăçура алăсене шкула çӳремелли шурă кĕпе тата шăлавар тыттарчĕç. Çак вăхăтра манран телейлĕ çын та пулман пулĕ. Акă пире пĕрремĕш урока илсе кĕреççĕ. Пĕрремĕш учительница Елена Романовна пире журнал тăрăх тĕрĕслесе партăсем хушшине вырнаçтарса лартрĕ...

Çапла пуçланса кайрĕ маншăн вĕренӳ тĕнчине кĕмелли çул Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи сакăр çул вĕренмелли шкулта. Елена Романовна тивĕçлĕ канăва каяс умĕнхи çулсенче пулин те чĕрĕ, тăрăшса вĕрентекен хĕрарăмччĕ. Ăнланманнине курсан темиçе хутчен те каласа парса ăнлантаратчĕ, пире пĕлӳ парас тесе чĕрине ыраттаратчĕ. Халĕ вăл тивĕçлĕ канура, Ульяновск хулинче пурăнать.

Тăваттăмĕш класран тытăнса кашни предметпа уйрăм учитель вĕрентме тытăнчĕ. Ытти учительсем хушшинче виçĕ учителе эпĕ уйрăмах палăртса хăварасшăн (ыттисене те кӳрентересшĕн мар эпĕ). Вĕсем: Мария Ивановна Лысова, Лидия Николаевна Антонова, Геннадий Петрович Казаков. Ку учительсем чăннипех пире нумай пĕлӳ парассишĕн, çын тăвассишĕн нумай вăй хунă.

Мария Ивановна Лысова тăваттăмĕш класран тытăнса мĕн вĕренсе пĕтериччен пирĕн класс руководителĕ пулса пычĕ. Чăваш чĕлхи тата литератури предмечĕсене илсе пынă май вăл пире класс тулашĕнчи ĕçсене нумай та активлă явăçтаратчĕ. Пуçласа ĕçлекен çамрăк учительницăн опычĕ сахалтарах пулсан та хăйĕн чун-чĕрине ачасене паратчĕ. Çав вăхăтрах Шупашкар хулинче аслă пĕлӳ илетчĕ. Пирĕнпе уроксем хыççăн ĕçлеме те вăхăтне шеллеместчĕ. Юрă урокĕсене те вăлах илсе пыратчĕ. Лайăх астăватăп-ха, класра ăнсăртран шăв-шав, харкашу сиксе тухсан Мария Ивановна: «Ан харкашăр, пĕр-

пĕрне ан кӳрентерĕр. Акă шкултан вĕренсе тухса тĕрлĕ енне сапаланса пĕтсен пĕр-пĕрне темле курас килсен те кураймăр», - тетчĕ. Ун чухне ку сăмахсене хăлхана чиксех те кайман. Класра кашни кунах пĕрле пулнипе уйрăлассăн та туйăнман. Кăшт каярах кăна ку сăмахсем тĕп-тĕрĕс пулнине туйса илтĕмĕр, пĕр класра вĕреннĕ çын çывăх пулнине пĕлтĕмĕр.

Лидия Николаевна Антонова вырăс чĕлхи тата литература предмечĕсене илсе пыратчĕ. Педагогика ĕçĕнче пуян опыт пухнă, ырă та тӳрĕ кăмăллă, кирек хăш вăхăтра та çирĕп ыйтакан учительница вăл. Хăй вăрăм кун-çул утса тухнăскер пире пурнăçра кирлĕ пулакан нумай пĕлӳ, канаш панă. Ачасем ăна питĕ юрататчĕç. Халĕ вăл та тивĕçлĕ канура, ялта пурăнать.

Геннадий Петрович Казаков математика, физика, черчени, астрономи предмечĕсене вĕрентетчĕ. Питĕ анлă пĕлӳллĕ, çирĕп ыйтма пĕлекен учительччĕ вăл. Унăн предмечĕсем йывăр пулнăран, эпир ывăннине курсан, çавăнтах шӳтлесе илсе култаратчĕ тата кантаратчĕ. Унпа мĕн çинчен калаçма та интереслĕччĕ. Вăл пире хăйĕнчен нумай пĕлекен тăвасшăн тăрăшатчĕ.

Çаплах пире тĕрлĕ çулсенче Илья Семенович Мресов (ун чухнехи шкул директорĕ, паян опытлă педагог), Михаил Никифорович Егоров, Иван Александрович Архипов (вĕсем халĕ виççĕшĕ те пирĕнпе çук, вăхăтсăр çĕре кĕчĕç), Валентина Ивановна Камлюк, Мария Ивановна Казакова, Елизавета Александровна Самойлова, Галина Вячеславовна Быкова вĕрентнĕ. Вĕсене те паян ырăпа асăнса хăварас килет, тав сăмахĕ калас килет.

Ун чухне вĕренӳ пирĕн тĕп ĕç пулнă, ăнланса, вăй çитнĕ таран тăрăшса вĕреннĕ. Çуллахи каникулсенче, кĕркунне тыр-пул пухса кĕртнĕ вăхăтра тăван колхоза пулăшнă. Çапла иртсе пычĕç шкул çулĕсем.

Ун чухне ялти шкул сакăр çуллă пулнăран вăтам пĕлӳ илме Кивĕ Çĕпреленчи вăтам шкула кайма тӳрĕ килчĕ Икĕ çултан унтан та вĕренсе тухрăмăр, алла çитĕннисен аттестатне илтĕмĕр. Çапла вĕçленчĕç шкулта вĕреннĕ çулсем.

Унтанпа нумай çул иртсе кайрĕ. Халĕ эпир, чăнах та, çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче пурăнатпăр, тĕрлĕ ĕçре ĕçлетпĕр. Анчах хамăра вĕрентсе çын туса кăларнă шкул çав-çавах пирĕншĕн хаклă та çывăх. Унпа эпир май пур таран çыхăну тытатпăр.

Паян хамăра вĕрентнĕ мĕнпур учительсене, Çĕнĕ Йĕлмеленчи вăтам шкул коллективне çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа тата çывхарса килекен учительсен уявĕпе «Канаш» хаçат урлă саламлас килет.

Ырлăх-сывлăх, ăнăçусем сире, юратнă учительсем!

**«Канаш», 1993 ç., 35 №.**

# Чĕрĕ пуплевсĕр чĕлхе пĕтет

Нумаях пулмасть Кунтикаври вăтам шкулта чăваш чĕлхи учителĕсен облаç семинарĕ иртрĕ. Унта Чăнлă тата Ульяновск районĕсенчи вĕрентӳçĕсем, çак районсенчи вĕренӳ пайĕн методика кабинечĕн пуçлăхĕсем, учительсен пĕлĕвне ӳстерекен институтри управлени кафедрин доценчĕ, естествознани академин профессорĕ В.В. Елисеев хутшăнчĕç. Самантпа усă курса кӳршĕллĕ Пăва районĕнчи Элшел ялĕнчен те килнĕччĕ унта.

Чи малтан Кунтикаври шкулпа, унти лару-тăрупа Н.И. Казаков директор паллаштарчĕ. Тӳрех палăртмалла, семинара кунта ăнсăртран йĕркелемен. Кăçал ку шкула уçни 86 çул çитрĕ ĕнтĕ, 1990 çултанпа кунта вăтам пĕлӳ параççĕ. Пур енчен те ку шкул ыттисемшĕн тĕслĕх. Кĕскен каласан, ку шкул чăннипех те ялти социаллă тата культура центрĕ пулса тăнă.

Çакă та паха. Шкул директорĕ семинара пухăннă çынсем умĕнче çак шкулта 30 çул ĕçлесе тивĕçлĕ канăва кайнă Ф.А. Щеголькована 70 çул тултарнă ятпа саламласа чечек çыххи тата парне пачĕ. Залра вара çамрăк вĕрентӳçĕсем нумай. Вĕсем вĕрентӳçе ĕçĕ чыслă, пархатарлă пулнине кураççĕ. Акă вăл ăрусен çыхăнăвĕ.

Ун хыççăн семинара хутшăнакансем учительсен пĕлĕвне ӳстерекен институтри наци ыйтăвĕсен кафедрин методисчĕ В.А. Архипова сăмах илчĕ, çакăн пек тĕлпулусем кашниншĕн паха иkенне палăртрĕ.

Программăра – усă уроксем. Вĕрентӳçĕсем темиçе ушкăна пайланса уроксем курма кайрĕç. Ун хыççăн вĕсене сӳтсе яврĕç, пĕтĕмлĕтӳ турĕç. Пухăннисен умĕнче Чăваш Республикинчи вĕрентӳ институчĕн чăваш чĕлхи кафедрин пуçлăхĕ Ю.М. Виноградов тухса калаçрĕ.

- Чи пысăк ыйту – кĕнекесем, пособисем, методика кăтартăвĕсем, - терĕ Юрий Михайлович. – Чăнах та, сахал мар кăларатпăр-ха, çапах та çителĕксĕр. Нумай кĕнеке черетре тусанланса выртать. Черечĕ çитсен пăхатăн та – вăл кивелнĕ. Вĕренӳ кĕнекисене кашни 4 çулта улăштарса, çĕнетсе тăмалла. Пирĕн вара хăш чух 7 çул та иртсе каять. Пирĕн тĕп тĕллев ачасене калаçма, пĕр-пĕринпе хутшăнма вĕрентесси. Пуплев çыхăнуллă пулмалла. Çакна пуçламăш класрах çине тăрса вĕрентмелле. Эпир вара у тата ӳ сасăсене уйăрайман ачасене диктант çыртаратпăр. Çакна калаçупа çыхăнтармасан вĕсем хăйсен йăнăшĕсене туйма пăрахаççĕ, чăвашла шухăшламасăр çыраççĕ. Вырăсла шухăшласа чăваш сăмахĕсемпе çырни – чăваш чĕлхи мар-ха. Чĕрĕ пуплевсĕр чĕлхе пĕтет. Чĕлхе

сыхланса юласси пуплеврен килет. Çапла тума хулари ачасене те ялти ачасем пек çăмăл калаçма вĕрентмелле.

Ытти ыйтусем çинче те чарăнса тăчĕ Шупашкартан килнĕ хăна. Шкул тытăмĕнче мĕн те пулин чакармалла, хĕсмелле пулсан ку чи малтан чăваш чĕлхине пырса тивет. Пуçлăхсене вăл мĕншĕн-тĕр чи малтан чăрмантарать. Тĕлĕнмелле япала! Сăлтавне вара темĕнлине те тупма пулать. Пуçлăхсен шучĕпе, ачасем акăлчан е нимĕç чĕлхине эрнере 3 хут вĕренмелле, чăваш чĕлхине вара 2 сехет те çитет. Хăшпĕр директоршăн вăл пачах пулмасан та аван. Кун пек пурнăç лăпкăрах, чăрмавсем сахалрах.

Чĕлхе — политикăн пысăк пайĕ. Мĕн, Раççей Президенчĕ В.Путин Германи парламентĕнче мухтанас шутпа нимĕçле калаçрĕ-и? Пачах çук. Нумай чĕлхе пĕлекен çын хисепре, хăйсен чĕлхине пĕлсен вара çак халăх сана пушшех те хисеплет. Вара çыхăнусем анланаççĕ, пĕр-пĕрне ытларах шанма пуçлатăн. Çапла вара халăх пурнăçĕ лайăхланма пултарать. Бальзак ахальтен каламан ĕнтĕ: «Мирлĕ пурăнас тесен ют чĕлхесем вĕренĕр». Вольтер вара: «Ют чĕлхене хăвăрт вĕренме пулать, тăван чĕлхене ĕмĕр тăршшĕпе вĕренмелле», - тенĕ.

Мĕн тесен те ют чĕлхене хисеплемелле, хăвăн чĕлхӳне вара — юратмалла.

**Канаш», 41 №, 2001 ç.**

# Чи пысăк ёмĕт — чăваш шкулне уçасси

П.М. Сидоров ячĕ Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен историне кĕрсе юлчĕ. Вăл чăваш чиркĕвне уçаканнисенчен пĕри пулчĕ. Юпа уйăхĕн 15-мĕшĕнче Петр Михайлович 50 çул тултарать.

Аяларах унран илнĕ интервью пичетлетпĕр.

- **Петр Михайлович, Эсир тĕн пурнăçĕпе хăçан пурăнма пуçланă?**

- Эпĕ Пăва районĕнчи Пӳркел ялĕнче çуралнă. 12 çула çитсен Кашинка ялĕнче чиркӳре шыва кĕнĕ. Виçĕ çул хĕсметре пултăм. Шофера вĕренсе тухрăм, виçĕ çул çак ĕçре вăй хутăм. Тăхăр çул Теччĕ хулинче пурăнтăм. Мана çак пурнăçра тĕрĕсмарлăх нумай пулни канăç памастчĕ. Эпĕ вĕсемпе кĕрешме пуçларăм, тĕрĕслĕх шырама тытăнтăм. Анчах нимĕн ыррине те тупаймарăм, ĕнсе çине йывăрлăхсем çеç купаларăм. Юлашкинчен ăнлантăм: коммунизм вăл — суя çеç, çынсене улталани. Мĕнпур ăс-тăна, вăй-хала тĕн пурнăçĕ çине ятăм, Турă çинчен нумай шутлама пуçларăм. 1978 çулта Фролово ялĕнчи чиркӳре пĕрремĕш хут пулса куртăм. Хам суйласа илнĕ çул тĕрĕсси çирĕпленчĕ. Чиркĕве тăтăшах çӳреме тытăнтăм. «Эпĕ çĕршыв пуçлăхĕ пулсан пур çĕрте те мăнастирсем тунă пулăттăм», - тесе шухăшлаттăм. Çынсем умĕнче тĕн пурнăçĕпе пурăннине пытармарăм. Турă саккунĕсене пĕрле ĕçлекенсем хушшинче сарма пикентĕм. Тӳрех кирлĕ мар çын пулса тăтăм. Пуçлăхсем хăйсем патне чĕнтерсе хăратма тытăнчĕç, ĕçрен тухса кайма хушрĕç. Пурпĕрех шухăша улăштармарăм. Вĕсем вара мана пĕр вырсарникун ĕçе тухманшăн ĕçрен кăларса ячĕç. Турра ăша илнĕшĕн арăм та хирĕçме пуçларĕ, юлашкинчен ăна икĕ ачапа хăварса уйрăлма тиврĕ. Ку пурнăçра пĕччен тăрса юлтăм. Анчах Турра пăрахмарăм.

**- Урамра урăх самана пулнă вĕт-ха. Тĕрĕсмарлăхпа кĕрешме мĕнле майсем тупрăр?**

- Ĕçри профком пулăшмарĕ. Хăшĕсем чăнлăх шырама Хусана кайса пăхма сĕнчĕç. Эпĕ вара тӳрех Мускава тухса кайрăм. ВЦСПСа кĕтĕм, ăнлантартăм. Нимĕн те ĕç тухмарĕ, усăсăр пулчĕ. Урама тухрăм та — ăнран кайса тăратăп. Малалла мĕн тумалла? Темле майпа пĕр арçынпа калаçса кайрăм, хамăн нушана ăнлантартăм. Вăл мана: «Кун пек çулпа тĕрĕслĕх тупаймастăн, США посольствине кай. Тен, мĕнле те пулин пулăшĕç», - терĕ. Чайковский урамĕнчи 19-мĕш çурт умне çитрĕм. Çӳлте Америка

ялавĕ вĕлкĕшет. Чĕре хыттăн тапма пуçларĕ. Вăйлă пăлханатăп. «Акă вăл демократи кĕтесĕ», - тетĕп. Икĕ хут утса иртрĕм. Виççĕмĕшĕнче иртнĕ чух посольство хапхи уçăлчĕ те -- унта автомашина кĕме тытăнчĕ. Эпĕ ăна алăпа сулса чарăнма ыйтрăм. Чарăнчĕ. Ун патне çитрĕм. Шофера хам нушана каласа парасшăнччĕ çеç — алăран милиционерсем ярса илчĕç. Таçта илсе кĕрсе кайрĕç, паспорта илчĕç, допрос тума пуçларĕç. Ним пытармасăр веçех каласа патăм. 40 минут нушалантарнă хыççăн кăларса ячĕç.

Каллех Теччĕ хулине таврăнтăм Ĕçри пуçлăхсене суда патăм – кăлăхах пулчĕ. Ман çинчен тĕрлĕ сас-хура çӳреме пуçларĕ, сутăнчăк ярлыкне çакса ячĕç. Чăтма йывăрланса çитрĕ.

**- Çавăнпа эмиграцие кайма шутларăр-и?**

- Çапла. Вăхăтлăха Канадăна кайса пурăнма шут тытрăм. Мускава çитрĕм, ОВИР уйрăмне кĕтĕм. Мана регистрацилерĕç, документсене пуçтарса илчĕç те кĕтме хушрĕç. Пĕр сехетрен документсене каялла пачĕç. «Нимĕнле Канадăна та каяймастăн, килне таврăн», - терĕç. Каллех шухăшлани пурнăçланмарĕ.

**- Петр Михайлович, Эсир пĕр тапхăр мăнастирте те пурăннă вĕт-ха.**

- Ку 1982 çулта пулчĕ. Прибалтикăра коммунизм идейисем сахалтарах сарăлнă тенипе Латвие тухса кайрăм. Ригăра чукун çул вокзалĕ çумĕнчех православи чиркĕвĕ ларать. Унта пырса кĕтĕм. Хам çинчен каласа патăм. Кĕлĕ хыççăн мана Елгава хулине кайма сĕнчĕç. Унта хĕрарăмсен мăнастирĕ вырнаçнă иккен, анчах йывăр вăхăтра арçынсене те пурăнтараççĕ. Пуйăсран ансан пĕр çухрăм вăрманпа çуран утрăм. Куполсене курсан чун савăнсах кайрĕ. Мана кунта ăшшăн кĕтсе илчĕç, ĕçтерчĕç, çитерчĕç. Кĕлĕ пĕтсен причасти тутарчĕç. Кунта 16 кун пурăнтăм. Çак вăхăтра дежурствăра та пулма тӳрĕ килчĕ. Чукун çул çинче ĕç тупрăм. Юлма та кăмăл пурччĕ. Ватă манашкăпа калаçнă хыççăн вара каялла килме шутларăм. Вăл мана: «Ырă çыннăм, санăн çемйӳ пур, тен, пĕр-пĕрне каçарсан пĕрлех пулăр. Ачусем те тăлăх ӳсмĕç. Çемйӳпе çывăхрах пурăнсан лайăхрах пулмĕ-ши?» - терĕ. Çак çулах вара Ульяновск хулине килтĕм, автозавода ĕçе вырнаçрăм.

**- Петр Михайлович, чăваш чиркĕвне уçас ĕçе мĕнле пуçăнтăр?**

- Чиркĕве çӳреме эпĕ пĕрре те пăрахман. И.Я. Яковлев шкулне те чĕртсе ярас шухăш çуралчĕ. 1988 çулта çак ыйтупа СССР Верховнăй Советне çыру ятăм. Унти çынсем ку çырăва вырăнти влаçа тавăрса панă. Нимĕн усси те пулмарĕ. 1989 çулхи раштавăн 24-мĕшĕнче православи обществине йĕркелесе ятăмăр. Ку ĕçре

М.Крлыковпа А.Пешне пысăк тăрăшулăх кăтартрĕç. Чăваш шкулĕнчи чиркĕве уçас пирки СССР Президентне М. Горбачева çыру çыртăм, вырăнти влаç чăрмантарнине пĕлтертĕм. Ку текст каярах Францире тухса тăракан «Русская мысль» журналта та пичетленчĕ. Радиопа шавах «Голос Америки» итлеттĕмччĕ. Тĕн пирки те сăмах пыратчĕ унта. Чăваш чиркĕвне уçма чăрмантарни çинчен Вашингтона çырса пĕлтертĕм. Ман çырăва радио редакцинчен Нью-Йорка ярса панă. Виçĕ эрнерен Илларион епископран хурав илтĕм. Унта вăл хăйĕн телефонне те çырнăччĕ. Шутласа тăмасăрах çыхăну уйрăмне кайрăм, 60 тенкĕ тӳлесе 10 минутлăх калаçу заказ патăм. Телефонпа Илларион епископа пĕтĕм лару-тăрăва каласа патăм, пулăшу ыйтрăм. Вăл Швецирен чăвашла евангели кĕнекисене ярса пама сăмах пачĕ. Каярах вĕсене Шупашкара ячĕç. Эпир евангелие унта кайса илтĕмĕр. Нью-Йоркпа телефонпа тепре çыхăнасшăнччĕ – памарĕç. Çырусем те кайми пулчĕç. Шăмăрша кайса яма тӳрĕ килетчĕ. Çапах та тăрăшни сая каймарĕ. Турă пулăшнипе чăваш чиркĕвне уçрăмăр. 1992 çулхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнче пĕрремĕш кĕлĕ иртрĕ. Эпĕ мĕнле савăннине сăмахпа каласа пама çук.

**- Эсир обществăлла ĕçсене хастар хутшăнатăр. Малалла мĕнле ĕмĕтпе пурăнатăр?**

- Манăн кăмăл Чĕмпĕр чăваш шкулĕ уçăлсан çеç тулать. Чи пысăк ĕмĕт çакă. 5 пин çул хушши усă куракан чăваш чĕлхине пĕтерес марччĕ. Куншăн пире никам та каçармасть. Пăлхар-чăваш чĕлхине аталантарас тесен çамрăк ăру валли наци шкулне уçмалла. Ку тĕллеве пурнăçламасăр лăпланмастăп. Нумаях пулмасть çак ыйтупа Францири Европа Канашне çыру çыртăм. Хурав пулмарĕ-ха.

Ульяновскри чăвашсен наципе культура автономийĕн пĕрремĕш тивĕçĕ – И.Я. Яковлев шкулне уçасси пулмалла.

Пурне те ырлăх пехиллетĕп. Турра ан пăрахăр.

**- Калаçушăн тав, Петр Михайлович. Сире юбилей ячĕпе саламлатпăр, çирĕп сывлăх, телей сунатпăр. Чăваш халăхĕшĕн ĕçлеме вăй-халăр ан чактăр.**

**«Канаш», 41 №, 1997 ç.**

# Шăнкăрти чĕлхене упрар

## Хаклă тăванăмăрсем!

Сире пурне те Çĕнĕ çул çитнĕ ятпа саламлатăп. Хаçата çулсерен вуласа тăракансене тата çĕнерен хушăннă ентешĕмĕрсене пирĕнпе пĕрле пулнăшăн пысăк тав.

Тĕрли пулчĕ иртнĕ çулта, çапах та ырри – нумайрах. Пирĕншĕн чи палли – «Канаш» хаçат 15 çул тултарнă ятпа ирттернĕ уяв. Унта чи çывăх туссем пуçтарăнчĕç, чăваш хаçачĕ пурришĕн савăнчĕç, ăна малашне лайăхрах тума сĕнӳсем пачĕç.

Хамăр енчен тăрашăтпăр эпир (çитменлĕхсем те пур пуль, çук теейместпĕр), çав вăхăтрах тираж ӳсменни кулянтарать. Наци хаçачĕсем валли область администрацийĕ укçа уйăрать, пирĕн чĕлхене, культурăна аталанма пулăшать. Эпир вара хамăр сӳрĕклĕхе пула çак ĕçе ура çине тăратаймастпăр. Сахал вăл пин ытларах экземпляр 111 пин ытла чăвашшăн. Тутар туссем пиртен çӳллерех шайра тăраççĕ (170 пин çынна 6 пин экземпляр). Çавсенчен тĕслĕх илсен аван пулĕччĕ.

Чăваш хаçачĕ чăвашсемшĕн тухать. Апла пулсан ăна эпирех пулăшмалла. Чи пысăк пулăшу вара – кашни чăваш çемйи ăна çырăнса илни. Çакăн патне пыма анлă тавракурăм, пысăк ăнланулăх, малашлăх çинчен шутла пĕлни кирлĕ. Кăркăссен паллă çыравçин Чингиз Айтматовăн сăмахĕсем аса килеççĕ: «Кашни халăх тутă пуласшăн кăна пурăнмасть, ĕмĕрсем хушши йăхне тăсасшăн». Çакă пулмалла пирĕн тĕллев. Ун патне эпир пурте пĕр чăмăра пуçтарăнсан, пĕр шухăшлă пулсан çеç çитетпĕр. Хулăсене пĕрле çыхсан çеç шăпăр пулать. Шăпăра хуçма çук, пĕрер хулла вара çăмăлах хуçма пулать.

«Канашăн» тĕллевĕ – халăха пĕрле пуçтарасси. Пĕрремĕш кунранах вăл çак ĕçе илсе пырать.

Тăвансем, пирĕн çамрăксене явăçтармалла çак ĕçе, унсăрăн ăрусен çиппи татăлать. В. Сухомлинский педагог кун пирки çапла каланă: «Тăван чĕлхе кашни ачан чунĕнче чечекленмелле». Ман шутпа, пирĕн кашни вулакан тепĕр чăваша ӳкĕтлесе «Канаш» хаçат çырăнтарсан тираж икĕ хут ӳсет. Ку темле йывăр ĕç те мар вĕт. Атьăр тытăнса пăхар. Иккĕленсе тăракансене хамăр туссем тăвар. «Çырăнмалла таха...» - текенсем чăнах та çырăнччăр, чăваш тĕнчине кĕччĕр.

Тĕлĕнмелле мар-и: вырăс хĕрарăмĕ – Галина Афанасьева пирĕн ҫаҫата ҫырăнса тăрать, словарьпе усă курса вулать. Акă камран тĕслĕх илмелли!

Юлашкинчен Юрий Сементерĕн сăмахĕсене илсе кăтартам: «Пурăн, шăкăлчи чĕлхемĕр! Пурăн, шăнкăрти чĕлхемĕр! Утакан ҫын умĕнче утма ҫулне уҫса пыр, ырă ҫыннăн чунĕнче ырă шухăш хушса пыр, пĕчĕккине пысăк ту, сусăррине сывă ту! Эй, чĕлхемĕр! Ылтăнпа виҫейми таса тупра! Ҫакă ҫутă тĕнчере хăйне чăваш теекен, пултăранпа ыр пулан, сăрапала сăйланан халăх пĕрлĕхне упра!»

Апла пулсан эпир ҫак чĕлхене упрар. Вăл пире сапаланса кайма памĕ.

Телейлĕ пулăр, туссем!

**«Канаш», 1 №, 2006 ҫ.**

# «Шевлере» Улăпа чысларĕç

«Шевле» литпĕрлешĕве çӳрекенсем 17-мĕш библиотекăра иртнĕ ларăвне И.Я. Яковлева халалларĕç.

Чи малтан Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ преподаватель Г.Н. Афанасьева сăмах илчĕ.

– И.Я. Яковлев чăваш халăх пурнăçĕнче – чылай истори, ăрусене çыхăнтараканĕ. Унăн шкулĕнче тĕрлĕ наци çыннисем вĕренетчĕç: вырăс, тутар, мăкшă, чăваш. Ку шкул чăваш халăхĕн ăс-тăн центрĕ, мăнаçлăхĕ. Иван Яковлевичăн пурнăçĕ пире халăха тата çĕршыва юратма вĕрентет, унăн пуласлăхĕшĕн шухăшлаттарать. Унăн Халалне пурнăçа кĕртес тесен пирĕн нумай вăй хумалла-ха. Ман шутпа, Ульяновскра чăваш Улăпне хисеплени те çителĕксĕр. Халиччен унăн палăкне е бюстне лартман. Ку шухăша халăхран укçа пуçтарса та пурнăçа кĕртме пулать. И.Я. Яковлев урамĕ çук. Чăнах та, пĕр тăкăрлăка ун ятне панă, анчах унта тайăлнă темиçе çурт кăна. Вăл ăçта вырнаçнине те сахал çын пĕлет, – терĕ Галина Николаевна.

Чĕмпĕр тăрăхĕнчи паллă çыравçă А.Ф. Юман Патриархăмăрăн кун-çулĕпе паллаштарчĕ. Терт-нуша курса ӳснĕ тăлăх ача мĕнлерех Улăпа тухнине каласа пачĕ.

– Вăл тĕлĕнтермĕш çын: хăй вĕреннипе çеç çырлахман, халăха та çутта кăларнă, – вĕçлерĕ сăмахне Анатолий Федорович.

Аслă Нагаткинта пурăнакан паллă драматург А.С. Чебанов Иван Яковлевич пурнăçĕнчи тĕрлĕ тапхăра сăнласа пилĕк пьеса çырнă. Паллах, çăмăл мар çакăн пек чаплă çын çинчен çырма, анчах автор геройăн биографине документсем тăрăх пĕрчĕн-пĕрчĕн тĕпченӗ. Çывăх вăхăтра Ульяновскри драма театрĕнче пĕр пьесине сцена çине кăларма шантарнă.

Çамрăксем те пурччĕ ларура. Аслă Нагаткинтан А.В. Ледюкова 7-мĕш класса каякан хĕрне – Надьăна илсе килнĕ. Ульяновск педуниверситечĕн чăваш уйрăмĕнче вĕренекен В. Архипова (1-мĕш курс) пирвайхи сăввисене кăтартрĕ. Аслисем ăна хăюлăхшăн мухтаса илчĕç, хайлавĕсенчи кăлтăксене кăтартрĕç, малашне çине тăрса ĕçлеме сĕнчĕç.

**«Канаш», 16 №, 1998 ç.**

# Ыранхи ёçе ёнер тытăнмалла!

Чăваш пухăвĕсенче е уйрăм калаçусенче ентешсенчен пĕрре мар çакăн пек каланине илтнĕ: «Пирĕн халăхăн наци идейи çук!». Мĕнле ан пултăр ĕнтĕ вăл? Кашни халăхăн тĕп тĕллевĕ — çак тĕнчере сыхланса юласси! Акă вăл наци идейи! Çак тĕллев патне мĕнле çулпа пыни вара — урăх ыйту.

Тĕнчери кашни халăх хăйне ĕмĕрлĕхе упраса хăварасшăн. Халăха упраканни вара — тăван чĕлхе! Чĕлхе пулмасан халăх çинчен калаçма сăлтавĕ та çук.

Çĕр чăмăрĕ çинчи халăхсен çурри — пилĕк чĕлхепе калаçать. Ăсчахсем каланă тăрăх вара, тĕнчере пурĕ 4-5 пин чĕлхе. Хальхи вăхăтра вĕсенчен ытларахăшĕ пĕтсе пырать. Кашни икĕ эрнере пĕр чĕлхе вилет! Ку çулталăка 100 ытла мар-и? Çӳçентерекен хыпар. Чĕлхесенчен 40 процентĕн пĕтес хăрушлăх пур. Танлаштарма: çакăн пек ӳсен-тăран шучĕ 8 процент, чĕр чунсен — 18.

Глобализаципе миграци — чĕлхесене пĕтерекен пулăмсем. Ялти йывăр пурнăç çынсене хулана куçса кайма хистет. Унта вара тăван чĕлхе çухалать. Чĕлхепе пĕрле халăхăн культури, тĕнче çине хăйнеевĕрлĕ пăхни, пин-пин çул пухса пынă пĕлĕвĕ «пăсланса» каять.

Чăвашсем те хула халăхĕ пулса тăчĕç. Ентешĕмĕрсен 52 проценчĕ ( юлашки çырав хыççăн ку татах та ӳсме пултарать) хулара тĕпленнĕ. Апла пулсан тăван чĕлхене упраса хăварас ыйту çивĕчленсе пырать.

Наци пуррине пĕлтерекен тĕп паллăсем çаксем: тум, тĕн, апат-çимĕç, чĕлхе. Чăвашсем хăйсен наци тумне тăхăнса çӳреççĕ-и? Ялти ватă хĕрарăмсем кăна... Вăтам çулхисем «майралла» тăхăнаççĕ. Çамрăксем мĕнле тăхăннине калама та хĕн. Хамăр авалхи тĕне — çут çанталăк тĕнне — сыхласа хăварнă-и эпир? Çук, 200-250 çул каялла христианствăна куçнă. Чăвашсен апатне час-час пĕçерсе çиетпĕр-и? Пулкалать, уявсенче çулталăкра темиçе хут тутанатпăр. Анчах çакăнпа çырлахатпăр. Шăрттан тума та манса пыратпăр темелле, кукар яшки те сĕтел çинчен çухалчĕ. Юн тултармăшĕ, çăмах туса аппаланмастпăр. Ӳркенетпĕр-и е ытти апат-çимĕç лавккара нумай выртнипе пулать-и ку?

Хальлĕхе пирĕн чĕлхе ытти паллăсенчен ытларах упранса юлнă-ха. Вăл эпир чăваш пулнине пĕлтерекен пĕртен-пĕр паллă. Анчах вăл та хăрушлăхра: ЮНЕСКО пирĕн чĕлхене 136 чĕлхепе пĕрле пĕтсе пыраканнисен шутне кĕртнĕ. Геннадий Волков академик çапла калатчĕ: «Негрăн чĕлхи пĕтсен — хура ӳчĕ юлать, тутарăн — ячĕ

юлать. Чăвашăн мĕн юлать?». Çитменнине, пирĕн ятсем те, хушаматсем те – йăлтах вырăссенни пек.

Чĕлхене сыхласа хăварасси, аталантарасси – пĕр кун е çулталăк хушшинче тумалли ĕç мар. Ăна ача çуралсанах пуçламалла. Унпа çемьере тăван чĕлхепе калаçмалла, хамăр халăх кун-çулĕ çинчен, чăвашсен паттăр ывăл-хĕрĕ пирки каласа памалла. Ача — ашшĕ-амăшĕпе, тăван чĕлхипе, хăйĕн халăхĕпе мăнаçланма пултартăр, унра наци туйăмĕ çуралтăр. Анчах ун пек тума ашшĕ-амăшĕн наци ăс-тăнĕ те çӳллĕ шайра пулмалла. Çак шухăшсене Чăваш Республикин Президенчĕ М.В.Игнатьев та нумаях пулмасть Ульяновска килсен пусса訳ларĕ. «Халăхăн ăс-хакăл пуянлăхне ӳстерсе пымалла, пирĕн вăй çакăнта»,-терĕ.

Малалла – шкул. Чăваш культурине, историне кружоксенче, факультативсенче вĕрентни япăх мар, анчах çав тери çителĕксĕр. Хăш-пĕр тĕлте ку ĕçе ячĕшĕн кăна илсе пыраççĕ . Тепĕр шкулта комисси килес умĕн «уçаççĕ» ун пеккисене. Ыранах манса каяççĕ. Факультативсем, кружоксем витĕр тухакан ачасем чăваш чĕлхине малалла тăсакансем ниепле те пулаймаççĕ! Пĕртен-пĕр çул – чăваш ачисене 1-класран пуçласа шкултан тухса кайиччен чăваш чĕлхипе литературине предмет шайĕнче вĕрентни. Урăхла çул çук! Ытти çулсем халăха пĕтес патне илсе çитереççĕ.

Халĕ пирĕн ĕç-пуç мĕнлерех? Хулара пурăнакан чăвашсем хăйсен ачисене, мăнукĕсене тăван чĕлхене вĕрентеççĕ-и? Чăваш наци юхăмĕнче тăрăшакансен ачисем, мăнукĕсем чăвашла калаçаççĕ-и? Çакна кашни — хăй умĕнче хуравлатăр... Ырă тĕслĕхсем пулсан редакцие пĕлтерĕр. Эпир ун пирки статья çырса кăларатпăрах.

Чăваш чĕлхипе литературине 11-мĕш класчен вĕрентекен шкулсен шучĕ те облаçĕпе вуннăран иртмест. Чăваш ялĕсем вара миçе? Теçетки-теçеткипе! Мелекесс, Барăш, Çинкĕл, Çĕнĕ Малăкла районĕсенче уйрăмах нумай вĕсем. Чартаклă, Тереньга, Николаевка районĕсене те манмалла мар. Çавсем пиртен ĕмĕрлĕхе уйрăлса ан кайччăр, вырăса ан тухчăр тесе мĕнле ĕçсем тăватпăр эпир?

Эпир, журналистсем, ялсем тăрăх çӳренĕ чухне яланах шкулта чăваш чĕлхине мĕнле вĕрентнине пĕлме тăрăшатпăр, директорсемпе, завучсемпе калаçатпăр. Пирĕн чĕлхе вĕрентӳ программинче тивĕçлĕ вырăнта пулманнине палăртса калаçсан вĕсем тӳрех хӳтлĕх шырама пуçлаççĕ: «Пирĕн шкулта – интернационал». Пĕр-пĕр чĕлхене хĕсĕрлеççĕ, ăна вĕрентме, аталантарма чăрмантараççĕ пулсан – кун пек «интернационал» мĕн тума кирлĕ? Суя сăмах çеç вăл. Чăн-чăн интернационал вăл – кашни чĕлхене вĕрентесси пĕр шайра, пурте

пĕр тан пулни. Кунта акă мĕн калама пулать: йĕмен ачана чĕчĕ памаççĕ. Айăпĕ хамăрта та пур. Хамăр шухăшсене, тĕллевсене пысăк пуçлăхсем патне, власть çыннисем патне пĕр шикленмесĕр çитермелле, хамăра мĕн кирлине ыйтма вăтанмалла мар. Сăпайлăх – лайăх япала, анчах халăха упраса хăварас ĕçре вăл пире чăрмантараканни çеç.

Кунта ман чăваш интеллегенцийĕн хăюллă сассине илтес килет. Шел, çак шута кĕрекеннисем халĕ пурте халăхпа пĕрле мар-ха. Кун пек пулсан эпир аталану çулĕпе хăвăрт тата инçе каяймăпăр. Тĕрлĕ шайри пуçлăхсем, обществăлла организацисем, роно заведующийĕсем, шкул директорĕсем, тăван чĕлхе вĕрентÿçисем, журналистсем, çыравçăсем, ытти пултарулăх çыннисем çак ĕçре пысăк пуçарулăх кăтартмалла, çамрăк ăру валли çул уçса памалла, яш-кĕрĕме наци юхăмне явăçтармалла.

Пĕр-пĕр самантра пирĕн ума «Гамлетри» ыйту сиксе тухма пултарать: «Пулмалла-и е пулмалла мар-и?». Урăхла каласан чăваш халăхĕ наци пулса сыхланса юлĕ-ши? Çак хăрушă вăхăт çитсен пире ыттисем хĕрхенĕç, анчах нимпе те пулăшаймĕç. Хисеплемĕç те Эпир хамăра хамăр хисеплемесен пире кам хисеплĕ?

Чăваш çемйинче ачапа вырăсла калаçсан, шкулта тăван чĕлхене амаçури ачи вырăнне хурсан, вĕрентсен пăсмасть, вĕрентмесен те нимĕнех пулмасть тесен хăçан та пулин çак ыйту сиксе тухатех! Анчах ун чухне кая юлăпăр. Ыранхи ĕçе ĕнер тытăнмалла. Чи малтан – çемьерен! Унтан – шкулта аталантармалла! Пĕрремĕш класран пуçласах!

Социализм саманинче пирĕн облаçра наци шкулĕсене хупни, «вак халăхсен» чĕлхисене хĕсĕрлени паллă ĕнтĕ. Çапах та Мускавран килсе хупса çÿремен ку шкулсене, вырăнти влаçсем тунă. Мускавран çÿç касма хушсан пуç каснă пекех ĕнтĕ ку. Тутарстанпа Пушкăртстана ку пулăм хăй вăхăтĕнче тивсех кайман. Çавăнпа та халĕ кунта пурăнакан чăвашсен 87,9 тата 82,7 проценчĕ ашшĕ-амăшĕн чĕлхине тăван чĕлхе тесе йышăнать. Ульяновск облаçĕнче ку цифра – 78,2, Самар облаçĕнче – 72,5. Тăван чĕлхене шкулта вĕрентмен регионсенче вара ку кăтарту 40-50 процентран иртмест. Çак цифрăсем малашне пĕчĕкленсе мар, ÿссе пыччăр тесен пирĕн пурте кар тăрса питĕ вăйлă ĕçлемелле. Тĕрлĕ меслетсем шырамалла. Уйрăмах çĕнĕ технологисемпе нумайрах усă курмалла: чăвашла фильмсем, мультфильмсем нумайрах кăлармалла. Кĕсье телефонĕпе хыпарсене чăвашла çырма май тупмалла. Çакă çамрăксене тăван чĕлхепе интереслентерме пулăшать. Паллах, чăвашсен наци радиовне, телевиденине Раççейри тата ытти вырăнта пурăнакан кашни чăваш илтмелле, курмалла. Ун пек ырă

тĕслĕх пур: тутарсем Хусантан спутник урлă хăйсен наци телевиденине – ТНВ – пĕтĕм тĕнчене кăтартаççĕ. Пирĕн те çак çулпах утмалла. Ку укçа-тенкĕ енчен хаклă, анчах чăваш халăхĕнчен хаклах мар пулĕ...

Кашни чăваш хăйне мĕнле юратать – тăван чĕлхене çапла юратмалла! Çавăн чухне çеç ун чунĕнче наци туйăмĕ вăранĕ, халăх валли ырă ĕçсем тăвас шухăш çуралĕ. Çак ĕçе малалла йĕркеллех илсе пырас тесен вара çамрăксене тапратмалла, вĕсемпе ытларах ĕçлемелле, вĕсене яваплă ĕçсем хушмалла, ытларах шанмалла, çав вăхăтрах ытларах ыйтмалла.

**«Канаш», 2012 ç., 10 №.**

# Эпир пурте пĕр тĕмрен — чăваш çеçкинчен

***Шупашкарта октябрĕн 26-27-мĕшĕсенче Чăваш наци конгресне йĕркелесе янăранпа 20 çул çитнине халалласа тăванлăхпа пĕрлĕх уявĕ иртрĕ. Унта УОЧНКА (председателĕ В.И.Сваев) йĕркеленипе пирĕн облаçран та 20 ытла делегат кайрĕ.***

**ÇАВРА СĔТЕЛ**

Малтанхи кун Наци библиотекине Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенчи тата чикĕ леш енчи чăваш наци культура пĕрлешĕвĕсен ертӳçисем пуçтарăнчĕç. Вĕсем республикăн патшалăх влаçĕн, культура учрежденийĕсен органĕсен ертӳçисемпе тĕл пулчĕç. Çавра сĕтел теми - диаспорăри культура обществисем Чăваш Ен патшалăх влаç тытăмĕпе культура, вĕренӳ тата спорт тĕлĕшĕпе çыхăну тытса ĕçлесси, умри çивĕч ыйтусем тата вĕсене татса парасси.

Ăна ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕ Вадим Ефимов ертсе пычĕ. Мероприятие çавăн пекех ЧР Патшалăх Канашĕн социаллă политикăпа наци ыйтăвĕсен комитечĕн председателĕ Петр Краснов, ЧР вĕренӳ министрĕн çумĕ Светлана Петрова, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Геннадий Архипов хутшăнчĕç.

Вадим Ефимов регионсенче, çавăн пекех чикĕ леш енче те, чăваш наци юхăмĕ вăй илсе пынине палăртрĕ. Сăмахран, юлашки пилĕк çулта чăваш культура пĕрлĕхĕсен шучĕ 71-тен 90 çитнĕ. «Çак пулăм, - терĕ министр, - йăхташсем хăйсен культурипе, йăли-йĕркипе кăсăкланнипе, вĕсене упраса хăварассипе çыхăннă».

Ульяновск облаçĕнчи чăваш наци культура автономийĕн председателĕ Владимир Сваев вĕренӳ ĕçĕнче чăваш учебникĕсем, методика хатĕрĕсемпе пособисем çитменнине асăнчĕ. Çакăн пирки ЧР вĕренӳ министрĕн çумĕ Светлана Петрова çапла пĕлтерчĕ: «Ун пирки çулленех çырса пĕлтеретпĕр пулсан та 2007 çултан пуçласа чĕмпĕрсем чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсене пулăшма кăларнă пĕр кĕнеке те туянман». Урăхла каласан Ульяновск облаçĕнчи вĕренӳ министерстви Шупашкара саккас паман.

Питĕр чăвашĕсем кăçал чылай пысăк ĕç тунă. Вĕсенчен пĕри хулари Пискарево асăну комплексĕнче Ленинграда нимĕç

фашисчĕсенчен хӳтĕлесе пуç хунă 5 пин ытла ентеш ячĕпе (вĕсенчен 300-шĕ çак масарта выртать) Асăну плити уçнă.

Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Геннадий Архипов общество майĕпе ĕçлекен организацин тем тĕрлĕ ыйтăва та татса пама тивни пирки пĕлтерчĕ. Хальхи вăхăтра Наци телевиденийĕнче вырăсла кăларăмсем ытларах пулни, чăваш специалисчĕсем çителĕксĕр ĕçлени, ЧНКна тытса тăма патшалăх пулăшманни, Акатуя патшалăх шайĕпе ирттерменни, влаç тытăмĕнче тăван чĕлхепе калаçманни тата ытти те канăçсăрлантарать ăна.

## АНЛĂ ЛАРУ

Иккĕмĕш кунне Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче анлă лару пулчĕ. Унта ЧР Патшалăх Канашĕн пуçлăхĕ Ю.А. Попов хутшăнчĕ. Малтан ЧНК президенчĕ Г.Н.Архипов «Эпир пурте пĕр тĕмрен — чăваш çеçкинчен» ятпа доклад туса пачĕ. Вăл виçĕ çул каялла чăваш наци радиовне йĕркелесе яни пысăк утăм пулнине пĕлтерчĕ, наци телевиденийĕ тăван чĕлхепе нумайрах калаçмалли çинче пусăм турĕ. Шупашкарта чăваш çурчĕ çукки — ăнланмалла мар пулăм. Тухса калаçакансем наци юхăмне аталантарнă çĕрте ЧНК пĕлтерĕшĕ пысăк пулнине палăртрĕç, çав вăхăтрах çивĕч ыйтусем тăратрĕç. Чи малтан чăваш чĕлхине çăлса хăвармалли программа кирлине палăртрĕç. Мĕншĕн тесен чăвашсен йышĕ юлашки сакăр çул хушшинче 200 пин чакнă, юлашки 25 çул хушшинче вара 410 пин çын чакнă. Çаплах чăваш историне тавăрмалла пирĕн. Власть тата общественность пĕр шухăшлă пулманнипе эпир ăна çухата пуçларăмăр. Хамăр хушăра та тĕлли-паллисĕр çынсем тупăнма пуçларĕç, вĕсем пулăмсене унталла-кунталла турткаласа иртнĕ кун-çула «мантарма» пулăшаççĕ.

Çав вăхăтрах Етĕрнери лицей хупăннă, пуçламăш классенче вĕрентме учительсем çитмеççĕ. Хамăр икĕчĕлхелĕх çинчен калаçатпăр та — чăваш чĕлхине тĕпеле хупса хуратпăр. Шкулти юрă урокĕсенче чăвашла юрăсем вĕрентмеççĕ тесен те юрать. Кашни шкулта фольклор ушкăнĕ кирлĕ, халăх юррисене юратасси çакăнтан пуçланать. Ун пек тума пире Мускав чармасть, пуçарулăхĕ хамăрта пулмалла. Паллах, Чăваш Республикинче киностуди кирлĕ, çамрăксене воспитани паракан, наци ăнланулăхне ӳстерекен фильмсем ытларах ӳкермелле. Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче этнопедагогика институчĕ уçассишĕн те самай кĕрешӳ пырать, хальлĕхе ку ĕçе вĕçне çитереймен-ха. Этнопедагогика наукине пуçарса яраканĕ

хамăр çынах вĕт – Г.Н.Волков. Ытти халăхсем ун вĕрентĕвĕпе питĕ анлă усă кураççĕ. Хамăрăн вара мĕншĕн усă курас мар?

Атнер Хусанкай шухăшĕпе, чăваша тĕнче шайĕнчи шухăшлав, ытти халăхсемпе çыхăнусем кирлĕ. Хальхи лару-тăру урăхла, ытти халăхсемпе таччăн çыхăнса ĕçлеме хистет. Поэзи шайĕпе тĕнчене тухмалла, чăваш ăс-хакăлне, тĕнчекурăмне кăтартмалла. Чи кирли, хавхалану ан сĕвĕрĕлтĕр.

Чĕмпĕр Ен делегацийĕн ертӳçи В.И.Сваев Ульяновск область кĕпĕрнаттăрĕн саламне вуласа пачĕ,влаçпа килĕштерсе ĕçлесен çеç пысăк утăмсем тума пулнине палăртрĕ. Облаçра чăваш хаçачĕ те, телекăларăмĕ те пуррине каларĕ. Регионсем пĕрлехи проектсемпе ĕçлемелле, пĕр-пĕрин опычĕпе усă курмалла терĕ вăл. ЧНК 20 çул тултарнă ятпа ун президентне Чĕмпĕр Ен делегацийĕнчен пысăк сехет парнелерĕ.

«ЮНЕСКО чăвашсене пĕтсе пыракан халăхсен шутне кĕртни хут çинчех юлтăр. Эпир пĕтместпĕр-ха, малалла аталанатпăр, хамăр пуласлăхшăн тăрăшатпăр!" - терĕ Владимир Ильич юлашкинчен.

Пухăва тĕрлĕ регионсенчен, çĕршывсенчен пуçтарăннă чăваш хастарĕсен шухăшне ЧНК вице-президенчĕ В.А.Иванов профессор сăмахĕсем пĕтĕмлетрĕç: «Чăваш тĕнчи çывхарнă чух анаслă ыйăх вырăнлă-ши?»

**«Канаш», 2012 ç., 45 №.**

# «Эревет» – 10 çулта

«Эревет» тесен эпир, Чĕмпĕр Ен чăвашĕсем, тӳрех чăвашсен юрăпа ташă ансамбльне аса илетпĕр. Вунă çул каялла «Руслан» культура кĕрменĕнче йĕркеленнĕскер облаçра кăна мар, унăн тулашĕнче те ырă ятне сарма ĕлкĕрчĕ.

Паян «Эреветĕн» уяв, вăл вунă çулта. Çав ятпа пĕрремĕш пĕтĕмлетӳ тума пулать. Анчах малтан ушкăн мĕнле çурални çинчен пĕлес килет. Сăмах унăн ертӳçине Н.Ф. Косырева паратпăр.

- 1980 çултанпа эпĕ Мирный поселокĕнчи (Чартаклă районĕ) «Ульяновская» чăх-чĕп фабрикинче художество пултарулăх ушкăнне ертсе пыраттăм. 1984 çулта пире «халăх хорĕ» ят пачĕç.

1986 çулта «Руслан» Культура кĕрменĕнче тутар хорĕ пурччĕ. Манăн та чăваш художество пултарулăх ушкăнне йĕркелес кăмăл çуралчĕ. В.А. Коваленко директор патне пырса шухăша пĕлтертĕм. Виктор Андреевич хаваспах пулăшма пулчĕ. Çĕнĕ хулара, авиазавод проходнойĕнче пĕлтерӳсем çырса çапрăмăр. Чи малтан Фаина Самойловапа хамăн мăшăр Фрида (вăл тутар пулин те чăвашла лайăх пĕлет) килчĕç. Вĕсем валли костюмсем çĕлеттертĕмĕр. Çынсем урлă Раиса Никитина лайăх юрлама пултарнине пĕлтĕм, ун патне килне кайса репетицие килме ӳкĕтлерĕм. Пĕрремĕш репетицие вĕсемсĕр пуçне Мила Наганова, Виктор Нагорнов, Валентина Илямакова, Анатолий Горшков, Михаил Таушкин, Николай Пермяков – пурĕ 40 çынна яхăн - килчĕç. Çапла эрнере икĕ кун чăвашсем пуçтарăнса юрлама-ташлама тытăнчĕç. Пĕр çул иртсен Мария Уткина килчĕ. Вăл çакăнтах – «Русланта» - вырăс хорĕнче юрлатчĕ. Эпир ăна чăваш ушкăнне куçма ӳкĕтлерĕмĕр. Шупашкара костюмсем çĕлеттерме кайса килтĕм. Сцена çине чăваш тумĕпе тухрăмăр. Çак вăхăталлах Чăваш Енрен Сергей Каликов хореограф килчĕ. Вăл ушкăн сăн-питне чылай лайăхлатрĕ, номерсене илемлетрĕ. Çапла пĕрремĕш утăмсем турăмăр, - каласа парать Николай Федорович.

1990 çулта ушкăн юрăпа ташă халăх ансамблĕ ятне тивĕçлĕ пулать. Кашни икĕ çултан ăна çирĕплетсе пырать. Чăвашсем хушшинче облаçра та çак хисеплĕ ята илнисем икĕ ушкăн кăна.

Чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче «Эревет» хăй вырнаçнă «Руслан» Культура керменĕнче 10 çулхи юбилей ячĕпе пысăк концерт кăтартрĕ. Халăх лăк тулли. Сцена çине Культура керменĕн директорĕ В.А. Коваленко тухрĕ. Вăл ушкăна саламланă май ун ĕçне нумай çул хушши хастар хутшăннăшăн ертӳçĕпе артистсене парнесем пачĕ.

Çакна та палăртмалла. Юбилей концертне хăш-пĕр артист ачисем те хутшăнчĕç. Сăмахран, Виталийпа Фаина Самойловсен хĕрĕ Ирина, Нестр Иванов хĕрĕ Евгения, Мария Селендюкова хĕрĕ Наталья. Ансамбль солистки Раиса Шумилова вара икĕ хĕрне те илсе килнĕ. Мария Уткина хĕрĕ Оксана ку ушкăна ултă çул çӳрет ĕнтĕ. Çавăн чухлех концерта ертсе паракансем те – Галина Толстовапа Галина Тарасова – юрлаççĕ.

Юбилей ячĕпе «Эревете» Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен обществăлла канашĕн председателĕ В.В. Афанасьев, нацисен культурине çĕнетсе аталантаракан центрти художество пултарулăх пайĕн пуçлăхĕ Л.Н. Илларионова, Ульяновскри тутарсен культура центрĕн директорĕ Г.З. Герасимова, С.П. Толстов композитор саламларĕç, парнесем, чечексем пачĕç. «Канаш» хаçат редакцийĕпе И.Я. Яковлев ячĕллĕ общество та айкккинче юлмарĕç. Вĕсем артистсене кĕнекесен пуххи парнелерĕç.

Икĕ сехет ытла пынă концерт сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Яланхи пекех, халăх кашни номере тăвăллăн алă çупса йышăнчĕ. Программа вĕçленсен те артистсем сцена çинчен тӳрех анаймарĕç: залра ларакан çынсенчен заявкăсем килме тытăнчĕç. Паллах, «Эревет» ыйтнă юрăсене юрласа памасăр пултараймарĕ, мĕншĕн тесен артистсемшĕн куракансен кăмăл-туйăмĕ чи хакли.

Юлашкинчен сцена çине В.В. Афанасьев тухрĕ.

- Ульяновск чăвашĕсем валли юрăпа ташă ансамблĕ йĕркелесе Н.Ф. Косырев питĕ пархатарлă ĕç турĕ. Ăна вăл паян кунччене тĕрĕс-тĕкел ертсе пырать. Пирĕн унăн çăмăл мар ĕçне тивĕçлипе хакламалла. Çавăнпа та çывăх вăхăтра область администрацийĕ умне Николай Федоровича «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ» ята парас ыйтăва тăратмалла. Ку хисеплĕ ята вăл чăннипех тивĕçлĕ, - терĕ Вениамин Васильевич.

Пухăннисем унăн сăмахĕсем хыççăн тăвăллăн алă çупса ячĕç.

«Эревет», чăнах та, халăх хисепне çĕнсе илнĕ. Вăл пирĕншĕн халăх юрри-ташши çӳпçи, чĕлхе этеплĕхĕ пулса тăрать. Çавăнпа ăна халăх (чăвашсем кăна мар) юратать.

Ушкăн 10 çулта. Ку шкула çӳреме тытăннă ача çулĕ кăна Унăн чи пысăк çитĕнĕвĕсем малта.

**«Канаш», 49 №, 1996 ç.**

# Юрă – чун уççи

Çĕнĕ хулара пурăнакан Самойловсен çемйине Чĕмпĕр Енре пĕлмен çын та çук пулĕ. Виталий Николаевичпа Фаина Васильевна -- «Эревет» юрăпа ташă халăх ансамблĕн артисчĕсем. Вĕсем ушкăна йĕркелесе яракансем хушшинче те пулнă.

- 1986 çула Фрида юлташăмпа пĕрле кĕтсе илтĕмĕр. Вăл унта мăшăрĕпе пынăччĕ. Вăл халĕ нумайăшĕ пĕлекен Н. Косырев пулса кайрĕ. Николай Федорович пире баян каласа юрлаттарчĕ, ташлаттарчĕ. Юлашкинчен: «Хĕрсем, атьăр Ульяновскра чăваш ансамблĕ туса хуратпăр», - терĕ. Калаçса татăлнă япала тӳрех пулаймарĕ. Пĕрремĕш репетицие çурла уйăхĕнче пуçтарăнтăмăр. Пирĕн Ирина çулталăкра çеçчĕ-ха. Ăна коляскăна хурса илсе кайрăмăр. Пирĕнсĕр пуçне кунта М. Таушкин, Р. Никитина, Максимовсем, В. Нагорнов, В. Илямакова, Ф. Косырева, Р. Муллина, М. Наганова, А. Ишуков тата ыттисем пынăччĕ.

«Руслан» керменти пĕрремĕш концерта лайăх астăватăп. Ăна ертсе пыма Шупашкартан Семенов хушаматлă конферансьене чĕнсе илнĕччĕ. Пурте пăлханатпăр, мĕн пулса тухасса пĕлместпĕр. Куракансем ăшшăн кĕтсе илчĕç, телевиденирен те ӳкерме килнĕччĕ. Концерт чиперех иртсе кайрĕ. Ун хыççăн ялсене тухса çӳреме пуçларăмăр. Хуллен ăсталăха ӳстерсе пытăмăр. Сисмерĕмĕр те – 11 çул иртсе кайрĕ, - каласа парать Фаина Васильевна.

Самойловсем иккĕшĕ те медицина çыннисем. Паллашма та вĕсем Пăвари медицина училищинче вĕреннĕ чухне паллашнă. Фаина унта çак районти Хирти Кушкă ялĕнчен пынă пулнă, Виталий – Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йелмелĕнчен. Вĕренсе пĕтерсен иккĕшĕ те Кивĕ Çĕпрелĕнчи пульницара ĕçленĕ. Виталий салтак тивĕçне пурнăçласа таврăнсан çамрăк чĕресем пĕрлешнĕ.

Телейлĕ мăшăр Ульяновск хулине куçса килет. Çемье пуçлăхĕ танк училищине службăна каять.

1978 çулта Самойловсене пилĕк çула Венгрие командировкăна яраççĕ. Служба Калоча хулинче иртет.

- Гарнизонта уявсем, кану каçĕсем иртетчĕç. Пире пĕрмай чăвашла юрлаттаратчĕç унта. Ун чухне чăваш эстрада юррисем нумаях марччĕ. «Çумăр çăвать» юрра кашнинче юрлама тӳрĕ килетчĕ. Тăван çĕршывшăн тунсăхлаттăмăр. Уйрăмах телевизорпа хĕлле çинчен кăтартсан, - тет Фаина Васильевна.

Ун сăмахне Виталий Николаевич тăсать.

- Венгр чӗлхинче чӑвашла сӑмахсем те чылаях. Ют чӗлхене хулана тухса кӗмелӗх вӗренсе ҫитрӗмӗр. Калаҫнине аванах ӑнланаттӑмӑр. Венгрсем пире хисеплетчӗҫ, хамӑр ҫине сиввӗн пӑхнине туйман, - тет вӑл.

1983 ҫулта ҫемье тӑван ҫӗршыва таврӑнать. Виталий Николаевич маларах аптека пуҫлӑхӗ пулать, 1991 ҫултанпа санэпидеми отрядӗнче эпидемиолога пулӑшакан пулма уйӑрса лартаҫҫӗ. Кӑҫал вӑл ҫакӑнтанах тивӗҫлӗ канӑва кайрӗ. Фаина Васильевна медицина ӗҫӗнче 28 ҫул вӑй хурать. Халӗ шалти ӗҫсен управленийӗнче медсестрара ӗҫлет. Сергей ывӑлӗ ашшӗн ҫулӗпе кайнӑ: ҫар ҫынни пулать. Вӑл Мускав облаҫӗнче ҫар училищинче вӗренет, ҫулталӑк ҫурӑран офицер пакунӗсене ҫакса ярать. Ирина хӗрӗ ҫиччӗмӗш класа ҫӳрет.

- Хамӑр чӑваш пулнине эпир ниҫта та, нихҫан та пытарман, уншӑн мӑнаҫланнӑ ҫеҫ. «Канаша» та кашни ҫулах илсе тӑратпӑр. Хӑш чухне пиртен: «Эрсветре» юрланӑшӑн укҫа нумай тӳлеҫҫӗ-и?» – тесе ыйтаҫҫӗ. Мӗн тӑван ӗнтӗ вӗсене, мӗнпур япалана укҫапа виҫеҫҫӗ. Пире вара ансамльте пӗр-пӗринпе курса калаҫни, чӑваш юррисене юрлани, чуна кантарни хаклӑ, - вӗҫлет калаҫӑва кил хуҫи хӗрарӑмӗ.

Юлашкинчен ҫакна палӑртса хӑвармалла. Чӗмпӗр Енре чӑваш наци культура автономине туса хурас пирки иртекен конференцие Самойловсене делегата суйланӑ.

**«Канаш», 39 №, 1997 ҫ., авӑн, 27.**

# Ют чӗлхене вӗренес тесен тӑван чӗлхене манмалла-и?

Хулара пурӑнакан хӑш-пӗр чӑваш хушшинче ҫакӑн пек суя шухӑш ҫӳрет: «Чӑвашла калаҫсан е вуласан вырӑсла калаҫнӑ чухне чӑваш сӑмахӗсем тухса кайма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫын ҫинче намӑс курма пулать». Ачисене те вырӑсла, акӑлчанла, нимӗҫле тата ыттине вӗрентме хыпса ҫунаҫҫӗ. Анчах... чӑвашла мар. Тӑван чӗлхе ҫамрӑк организма «хавшатать, пуҫне тустарать» имӗш. Ют чӗлхе вара усӑллӑ...

Кунта логика пур-и? Кашни хӑй шутлатӑр.

Эпӗ вара ҫапла шутлатӑп. Чи малтан ача амӑшӗн чӗлхине пӗлмелле, ун урлӑ ашшӗ-амӑшне, тӑван халӑхне, культурине хисеплеме вӗренмелле. Кайран мӗнле чӗлхесем вӗренесси — ачан кӑмӑлӗ, пултарулӑхӗ. Ҫине тӑрсан темиҫе чӗлхе те вӗренме пулать.

Пӗр тӗслӗх илсе кӑтартатӑп.

Липки ялӗнче (Ульяновск районӗ) пурӑнакан тутар хӗрарӑмӗ Г.Г.Москеева пирӗн хаҫата ҫырӑнса илет, юратса вулать. Малтан вара чӑвашла пӗр сӑмах та пӗлмен. Тутарстан Республикинчи Азнакай районӗнче ҫуралса ӳснӗ (вӑл тӑрӑхра чӑвашсем пачах пурӑнмаҫҫӗ). Хусанта аслӑ пӗлӳ илнӗ хыҫҫӑн Галия Галимзяновна чӑваша качча каять. Халӗ «Приволжское» хуҫалӑхра тӗп зоотехникра ӗҫлет.

- Иван мӑшӑрӑм пулӑшнипе виҫӗ уйӑх хушшинче чӑвашла йӑлтах вӗренсе ҫитрӗм. Халӗ ҫӑмӑллӑнах калаҫатӑп та, вулатӑп та. Пӗр хушӑмсӑр калатӑп: «Канаш» интереслӗ, лайӑх хаҫат. Мӗн кӑна пӗлместӗп ӑна вуласа! Уйрӑмах мана поэмӑсем кӑмӑла каяҫҫӗ. Вӗсене Иван та куҫарса параймасть. Сайра усӑ куракан сӑмахсене ҫавӑнтах ансат сӑмахсемпе ӑнлантарса парсан маншӑн питӗ лайӑх пулӗччӗ, - тет Галия Галимзяновна.

Мӗн, вӑл вырӑсла пӗлнипе, халӗ чӑвашла вӗреннипе тутар чӗлхине, тӑван халӑхне хисеплеме пӑрахнӑ, вӗсенчен ютшӑннӑ тетӗр-и? Нимӗн чухлӗ те. Тӑван халӑхран уйрӑлма тем пек вӑй хуракансен ҫак хӗрарӑмран ырӑ тӗслӗх илме пулать.

- Хӑш чухне мӑшӑрӑм «Канашри» материалсен содержанине эпӗ каласа панипех ҫырлахать. Тепӗр хут хӑй вуласа чӑрманасшӑн та мар, эпӗ чӑвашла лайӑх пӗлнипе усӑ курать, - шӳтлет Галия Галимзяновна.

**«Канаш», 45 №, 1997 ç.**

# Яковлев ячĕллĕ урам пулĕ-и?

И.Я. Яковлева Чĕмпĕрте ĕçлесе чапа тухнă чи паллă çынсен шутне кĕртеççĕ. Хăшĕ-пĕри вара тӳрех калать: «Чи палли – Яковлев». Ку шухăшпа тавлашма йывăр, мĕншĕн тесен пирĕн культура Патриархĕ чăннипе те улăпла ĕçсем тунă. Шутласа пăхар-ха, тата кам 54 çул çын куç умĕнче пулса, тĕрлĕ чиновник-бюрократсемпе хăрамасăр кĕрешсе халăха малалла сĕтĕрнĕ, унăн пуласлăхĕшĕн сывлăхĕпе пурнăçне панă?

Эпир вара ун ятне Чĕмпĕр çĕрĕ çинче çĕклес тесе мĕн тунă-ха? Чăннипе каласан, нумаях мар. Иван Яковлевич пĕччен уçнă шкула тепĕр хут уçас пирки хальхинче калаçмăпăр. Тĕрĕс те, ку ыйтăва татса пама çăмăлах мар. Унран чылай çăмăлраххисене те туман-ха эпир.

Ульяновскри урам ячĕсене кама кăна асăнса паман: граждан вăрçи геройĕсен, Аслă вăрçă геройĕсен, тĕрлĕ çĕршыв çыннисен ячĕпе. Аса илер-ха: Карл Маркс, Фридрих Энгельс, Богдан Хмельницкий, Карл Либкнехт, Роза Люксембург... Вьетнам çынни ячĕ те пур – Хо Ши Мин. Ку списока кашни хăй малалла тăсма пултарать. Тӳрех калатăп: эпĕ вĕсене хирĕç мар.

Çак списока халиччен И.Я. Яковлев ячĕ тивĕçлипе кĕрсе юлайманнишĕн çеç пăшăрханатăп. Нивушлĕ пирĕн Учитель çакна тивĕçлĕ мар? Кунта çакна каласа хăвармалла. Унăн ячĕ пачах çук мар. Харпăр çуртсенчен тăракан пĕр пĕчĕкçĕ тăкăрлăка (вăл урам мар!) Яковлев ятне панă-ха. Анчах ку çителĕклĕ-и? Ку чăваш халăхне мăшкăллани пек кăна туйăнать. Çак тăкăрлăк ăçта вырнаçнине те пурте пĕлмеççĕ – куна иккĕленмесĕрех калама пулать.

Эпĕ мĕн патне илсе пырасшăн? Пирĕн çак çитменлĕхе пĕтермелле. Çывăх вăхăтра наципе культура автономийĕн тата И.Я. Яковлев ячĕллĕ обществăн ларăвĕсенче çак ыйтăва хускатса йышăну кăлармалла, ăна Ульяновск мэрине çитермелле. Пĕр-пĕр урама И.Я. Яковлев ятне парсан пулас ăрусемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç тунă пулăттăмăр.

**«Канаш», 8 №, 1999 ç., нарăс, 19.**

# Янра, хуткупăс!

Вăл кун суйлавччĕ, анчах бюллетеньсене урнăна янă хыççăн никам та килне васкамарĕ, пурте «Янра, хуткупăс» уява юлчĕç. Уява пуçараканĕ – Н.П.Мулеев, вăтам шкулти музыкăпа ĕç учителĕ. Вăл чăваш культурине чĕртсе аталантарассишĕн нумай тăрăшать, темиçе çул ĕнтĕ ял çыннисенчен йĕркеленĕ «Йĕлме» фольклор ансамбльне ертсе пырать. Ку ансамбль пĕлтĕр апрель уйăхĕнче пултарулăхне Хусанта кăтартнă. Ульяновскри Акатуйсене те хутшăннă. Николай Петрович хальхи уява та тĕплĕн хатĕрленнĕ: кашни купăсçăпа тĕл пулнă, музыка инструменчĕсене пухнă.

Ака купăсçăсем сцена çине ларса тухнă. Вĕсен шутĕнче – И.Казаков платник, И.Марков, В.Карсаков водительсем, А.Кашкаров столяр, Д.Карсаков платник, Ф.Патрин кладовщик, А.Карсаков механизатор тата ыттисем. Кашни хăй мĕнле майпа купăс калама тытăннинпе паллаштарать, юратнă кĕввине каласа кăтартать. В.Антиповпа А.Кашкаров вара аллине балалайка тытнă, унпа каласа тĕлĕнтерчĕç.

Д.Сергеев хăй пĕрремĕш хут купăс тытни çинчен çапла каласа парать:

-Ялти пĕр вăйăçăн купăсĕпе нартлаттарса пăхрăм. Çак самантра манăн купăс калама вĕренес туйăм çуралчĕ. Тӳрех киле чупрăм, аннене: «Купăс илсе пар-ха, - тесе йăлăнма тытăнтăм. Анне мана: «Эх,ачам, урунти çăпату çĕтĕлсе тухрĕ вĕт, малашне мĕнле çӳрĕн? Мĕнпур укçа та – пĕр мăшăр атă илме çитет-и, çитмест-и? – тет. Эпĕ çав-çавах хамăнне петĕм: «Илсе пар та илсе пар». Анне чăтаймарĕ, юлашки укçипе купăс илсе пачĕ. Эпĕ ниçта тухми купăспа вĕренме тытăнтăм, юлашкинчен аванах калама вĕрентĕм. Кайран купăса сутса ятăм, ун укçипе атă туянтăм. Çапла пĕр укçапах икĕ ĕç турăм: купăс калама та вĕрентĕм, atăллă та пултăм.

Юлашки сăмахсене илтсен çынсем хавассăн кулса ячĕç.

Уява «Йĕлме» ушкăн та хутшăнчĕ, чăваш юррисене шăрантарчĕ. Куракансем Наталья Макарова,Нина Карсакова, Галина Мулеева, Нина Патрина, Людмила Кашкарова, Нина Маркова, Людмила Пэтшеева, Тамара Егорова, Людмила Захарова, Валентина Самойлова, Валентина Пастухова пултарулăхне пысăк хак пачĕç. Шкул ачисенчен Татьяна Лянкина, Наталья Никифорова, Валентина Архипова, Ирина Кудрявцева юрлани-ташлани кăмăла кайрĕ.

Нумайччен кĕрлерĕ вăтам шкул çурчĕ чăваш кĕвви-юррипе,

такмакĕпе, ташшипе. Залти çынсем те ахаль лармарĕç, чăтма çук илемлĕ кĕвĕсем каланă чухне ура хуçса ташларĕç.

Юлашкинчен Н.П.Мулеев уява çапла сăмахсемпе пĕтĕмлетрĕ:

-Ял халăхĕ уява хастар хутшăннăшăн питĕ савăнатăп, тав тăватăп. Укçа-тенкĕпе пулăшнăшăн «Ильмово» ял хуçалăх предприятийĕн председателĕ Н. Мискин, ял совет самоуправленийĕн пуçлăхĕ Г.Карсаков пирки ырă сăмахсем калас килет. Паян ял халăхĕ мĕнле савăннине курса пуçра тепĕр шухăш çуралчĕ: çывăх вăхăтра Çĕнĕ Йĕлмелĕнче Чăваш чĕлхи кунне ирттерĕпĕр.

Килелле утнă май вара мана тепĕр шухăш канăç памарĕ: мĕншĕн «Янра,хуткупăс» уява çамрăксем сахал хутшăнчĕç? Мĕне пĕлтерет ку? Çамрăксем тăван культурăна маннине-и?

Тутарстан,
Çĕпрел районĕ,
Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ.

**«Сăвар» хаçат (Хусан), 1995 ç., май, 19.**

# 60 çул — иккĕмĕш сывлăш уçăлни



Чăнлă район администрацинчи социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ А.А.Узиков майăн 16-мĕшĕнче 60 çул тултарчĕ. Вăл Чăнлă районĕн Хисеплĕ çынни, РФ тата Ульяновск облаçĕн «Ĕç ветеранĕ» ятне тивĕçнĕ. Ăна РФ ял хуçалăх министерствин Хисеп хучĕпе наградăланă.

Паллă кун умĕн эпир унпа курса калаçрăмăр.

**-Анатолий Александрович, хăвăр çинчен, çемйĕр çинчен кăштах каласа парăр-ха.**

-Эпĕ Чăнлă районĕнчи Орловка ялĕнче çуралнă. Атте — Александр Павлович - 1918 çулхи, Аслă вăрçă участникĕ. Хамăр районти хуçалăхсенче 20 çул ытла председательте ĕçленĕ. Шел, 61 çултах çĕре кĕчĕ. Анне - Ольга Петровна - 1928 çулхи, тăван ялта шăллăм çемйипе пĕрле пурăнать.

Эпĕ ялти пуçламăш шкулта вĕреннĕ хыççăн Кĕçĕн Нагаткинта 8 класс пĕтертĕм. Вăтам шкула Аслă Нагаткина кайрăм. Анчах 9 класс хыççăн Рязановăри совхоз-техникума кайса кĕтĕм. 1972 çулта агроном профессине илсе тухрăм. Салтака кайса килнĕ хыççăн ялти «Рассвет» колхозра ĕçлеме пуçларăм. Малтан - агроном, кайран — управляющий, председатель çумĕ. 1979 çулта председателе лартрĕç. 1983 çулта Ульяновскри ял хуçалăх институтĕнчен заочно вĕренсе тухрăм. 1986-1988 çулсенче районти тĕп агроном пултăм. 1988-1994 çулсенче районти «Сельхозхимия» пĕрлешĕве ертсе пытăм. 1994-2005 çулсенче «Память Ильича» (каярахпа вăл «Большенагаткинский» ятлă пулчĕ) хуçалăх пуçлăхĕ пултăм. 2005 çултанпа социаллă аталану енĕпе район пуçлăхĕн сумĕ.

Мăшăрăмпа — Галина Григорьевнапа — 38 çул пурăнатпăр. Виçĕ

ача çуратса çитĕнтертĕмĕр. Павел – фермер хуçалăхĕн пуçлăхĕ, район Совечĕн депутачĕ. Вячеслав – милици майорĕ. Анна – область пульницинче уйрăм заведующийĕ. Тăватă мăнук çитĕнет.

**- Социаллă аталану пайĕ умĕнче паян мĕнле тĕллевсем тăраççĕ?**

- Кунта вĕрентӳ, культура, социаллă хӳтлĕх кĕреççĕ. Федераллă тата регион программисене пурнăçа кĕртетпĕр. Сăмахран, юлашки икĕ çулта 262 ветерана çурт туянмалли сертификат патăмăр. Çулсерен çамрăк специалистсен 5-6 çемйине хваттерпе тивĕçтеретпĕр. Районта спорт лайăх аталаннă. Пирĕн спортсменсем Раççей шайĕнчи ăмăртусенче те призёрсем пулаççĕ. Пултарулăх коллективĕсем нумай, вĕсенчен çиччĕшĕ халăх ятне илнĕ. Юлашки вăхăтра кăна Аслă Нагаткинта чăвашсен икĕ ушкăнĕ йĕркеленчĕ: «Шанăç» (ертӳçи В.Тарават) тата «Уйсас» (А.Синдюкова). Чăвашкассинче хальхи саманана тивĕçтерекен оборудованиллĕ «Вучах» кинозал ĕçлет. Унта халăх кăмăлпа çӳрет, уйрăмах ачасем нумай килеççĕ. Кунта çаплах нумай çул ĕнтĕ юрă-ташă ушкăнĕ ĕçлет, кăçал вăл каллех халăх ятне çирĕплетрĕ. Культура çурчĕн директорĕ Р.Кириллов хăй ĕçне пĕлсе, юратса пурнăçлать. Юлашки çулсенче районти кашни ялта çулсерен Ял кунĕ ирттерме пуçларăмăр, чăвашсем пурăнакан çĕрте – Акатуйсем.

Пирĕн тĕп ĕç – район çыннисем валли пурăнма тата канма лайăх условисем туса параси, çынсем çакăнтах юлччăр тесе тăрăшасси. Юлашки çырав тăрăх, пирĕн районта çынсен шучĕ 3,5 процент çеç чакнă. Ку облаçри чи лайăх кăтарту, мĕншĕн тесен ытти районсенче 10-16 процент чакнă.

**-Ĕçре кам тата мĕн çине таянатăр?**

-Чи малтан район пуçлăхне Х.В.Рамазанова палăртса хăвармалла. Пирĕн районта вăл 34 çул пурăнать ĕнтĕ, 20 çул района ертсе пырать. Вăл кунти çынсене лайăх пĕлет, хăй йĕри-тавра ĕçлеме пултаракан команда пуçтарнă. Тăрăшакан çынна яланах пулăшма хатĕр, йывăрлăхра пĕччен хăвармасть. Ун çумĕнче В.П. Анисимов, К.И. Сайгушев, В.Н.Сандркин, В.Н. Пидиксеев пек специалистсем 20-30 çул пĕр тĕллевлĕ, пĕр шухăшлă пулса вăй хураççĕ. Эпир пĕр-пĕрне лайăх пĕлетпĕр, ун пек çынсемпе ĕçлеме те кăмăллă.

Килте шанчăклă тыл – мăшăрăм, çавăнпа та ĕçре пĕтĕм вăя парса тăрăшма май пур манăн.

**-Анатолий Александрович, сире декабрь уйăхĕнче УОЧНКА председателĕн çумне суйларĕç. Ку хушма ĕç вĕт-ха.**

-Ентешсем умĕнчи пĕтĕм яваплăха лайăх туятăп, мĕншĕн тесен пирĕн районта 60 процента яхăн чăваш. Пултарулăх коллективĕсене

яланах пулăшма тăрăшатпăр. Тум çĕлемелле-и, транспорт уйăрмалла-и – алла тăсма хатĕр. Районта 10 шкулта чăваш чĕлхине предмет шайĕнче вĕрентеççĕ. «Канаш» хаçата та пирĕн районта нумайăн çырăнса илеççĕ. Кăçал ку кăтарту тата ӳсрĕ. Çак ыйтупа малашне те тимлĕн ĕçлĕпĕр.

**- Анатолий Александрович, 60 çул мĕн вăл?**

- 60 çул маншăн, спортсменсем калашле, - иккĕмĕш сывлăш уçăлни. Нумай ĕçленĕ, ĕçлемелли вара тата нумай. Район халăхĕшĕн, район çитĕнĕвĕсемшĕн малашне те тăрăшас кăмăл пур-ха. Мăнуксене те ура çине тăратмалла.

**- Пушă вăхăтра мĕнпе аппаланма юрататăр?**

- Эпир хамăр çуртпа пурăнатпăр. Пахчара, садра чакаланма юрататăп. Çакăнта чунпа канатăп. Тепĕр киленӳ – купăс каласси. Çак япалана ачалла хам тĕллĕн вĕрентĕм те пăрахаймастăп. Пушă вăхат тупсанах алла купăс тытатăп.

**- Анатолий Александрович, калаçушăн тавах. Сире менелник ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, телей сунатпăр. «Канаш» хаçат тиражне ӳстерессишĕн тăрăшнăшăн тав тăватпăр. Малашне те чăваш культурине аталантарас ĕçре пĕрле килĕштерсе ĕçлессе шанатпăр.**

Аслă Нагаткин ялĕ.

**«Канаш», 2012 ç., 20 №.**

# Александр Вражкин: *«Эпĕ чунпа тăван тăрăхран ниçта та кайман»*



Ноябрĕн 19-мĕшĕнче Шупашкарти «Чĕмпĕр Ен» ентешлĕхĕн пуçлăхĕн, «СВ-Пресс» издательство директорĕн, «Канаш» хаçат тусĕн А.Н. Вражкинăн юбилей – 50 çул тултарать. Ентешĕмĕр Ульяновска та час-часах килсе каять, кунти чăвашсен культура пурнăçне хастар хутшăнать. Эпир юбилярпа курса калаçрăмăр.

**-Александр Николаевич, хăвăр çинчен кĕскен каласа парăр-ха. Шупашкара мĕнле лекрĕр?**

-Эпĕ Чăнлă районĕнчи Ирçел ялĕнче çуралса ӳснĕ. Ку тăрăхра чăваш ялĕсем карта кăмпи пек лараççĕ: Çĕнĕ Улхаш, Кивĕ Улхаш, Чăвашкасси, Анат Тимĕрçен, Вăта Тимĕрçен, Пухтел. Чăваш халăхне çутта кăларакане И.Я.Яковлев 1879 çулта Хусанти вырăс мар халăхсен учитель семинарийĕн директорĕ Н.И.Ильминский патне янă çырура çапла çырать: «...Улхашран эпĕ тахçан А.В.Рекеев учительте ĕçленĕ Тимĕрçен ялне кайрăм. Тимĕрçен – питĕ пысăк, чăн-чăн чăваш ялĕ (2500 арçын ытла), юнашар вырнаçнă виçĕ ялтан тăрать. Кунти халăх пуян, сывлăхлă та хитре. Çынлăхне, чунлăхне çухатман». Сăмах май, ку тăрăхри шкулсем И.Я.Яковлев ырмиканми тăрăшнипе уçăлнă.

Ача чухнех эпĕ кĕнеке-журнал вулама питĕ юрататтăмччĕ. Шкулти тата ялти библиотекăсенчен туха пĕлмен тесен те юрать. Атте малтан комбайнёрта ĕçлетчĕ, пенсие кайсан колхоз правленине кочегара куçрĕ. Эпĕ вулама юратнине пĕлсен ман валли кантуртан кивĕ журналсем çыххипех илсе килетчĕ. Шупашкарта тата Ульяновскра тухакан хаçатсене çырăнса илеттĕмĕр. «Пионер сасси» хаçат, «Хатĕр пул» журнал илсе тăраттăмăр. 4-мĕш класра «Пионер сассине» хамăр çырма айккипе йывăççем лартса тухни çинчен пĕр заметка ярса патăм. Пичетлерĕç. Питĕ савăннăччĕ. Мана шкулти стена хаçачĕн

редакторĕ пулма шанчĕç. Малалла та çыртăм. «Пионер сасси» хаçат редакцийĕ ирттернĕ çамрăк корреспондентсен конкурсĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннăччĕ. Чĕмпĕр тăрăхĕнчи Ленин вырăнĕсем çинчен çырнă пысăк статья икĕ номерте пичетленнĕччĕ. Шупашкара вĕренме пымашкăн та çак редакцирен йыхравласа ячĕç.

1980 çулта Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне кайса кĕтĕм, студент пулса тăтăм. Мана çамрăк журналистсен кружокĕн старостине суйларĕç, вĕренӳ ушкăнĕн комсоргĕ туса хучĕç. Спортпа туслашрăм, йĕлтĕрпе чупассипе тата кире пуканĕ йăтассипе 1-мĕш разряд нормине тултартăм. Пĕрремĕш курс хыççăн Чăнлă район хаçачĕн редакцинче практика иртнĕччĕ. Унта мана Анатолий Юман журналист тата çыравçă (ун ашшĕ — пирĕн ялсем) пысăк пулăшу пачĕ.

Алла диплом илсен «Коммунизм ялавĕ» (халĕ – «Хыпар») хаçатра пилĕк çул вăй хутăм. Чăваш радиовĕ валли те кăларăмсем пĕрре мар хатĕрленĕ.

**-Эсир «Канаш» хаçатăн чи малтанхи авторĕсенчен пĕри. Çав вăхăта аса илĕр-ха.**

-Эпĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçатра ĕçленĕ вăхăтра Чĕмпĕр тăрăхĕнче «Канаш» хаçат тухма пуçларĕ. Чăвашла çыра пĕлекен журналистсем çуккипе И.Я.Яковлев ячĕллĕ çутĕç обществин председателĕ И.С.Кирюшкин мана Ульяновска куçма йыхравларĕ, редактор пулма сĕнчĕ. Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер те шантарнăччĕ. Эпĕ ун чухне юлташсемпе пĕрле Шупашкар хулин хаçатне йĕркелес ĕçе пуçăннăччĕ те – пĕрне вĕçлемесĕр тепĕр ĕç çине сиксе ӳкес темерĕм. Çапах та «Канаш» валли Шупашкартан материалсем ярса тăраттăмччĕ, вĕсене хаваспах пичетлетчĕç. Хам çуралнă тăрăхра тăван сăмах вăй илсе пыни питĕ хавхалантаратчĕ. Халĕ «Канаш» вăй илнĕ хаçат ĕнтĕ, унта опытлă журналистсем ĕçлеççĕ. Пурăна-киле хаçат тĕрлĕ тĕспе тухасса, татах та аталанса каясса шанатăп.

**- Сире Чĕмпĕр Енпе халĕ мĕн çыхăнтарать?**

- Чĕмпĕр тăрăхĕ – ман тăван ен. Аппа-пичче, вĕсен ачисем кунта пурăнаççĕ. Тăван ялта аслă пичче тĕпленчĕ. Тăван кил пушă ларать пулин те пĕртăвансем ăна юхăнса кайма памаççĕ, пăхса тăраççĕ. Тăван ял масарĕнче аттепе анне, Слава ятлă пичче ĕмĕрлĕхех канлĕх тупрĕç. Чăваш чунĕ Чĕмпĕрте теççĕ те – эпĕ чунпа хам тăван тăрăхран кайман тесех калаятăп. Май килнĕ таран килсе çӳреме тăрăшатăп, кунти пурнăçпа интересленетĕп.

**-Александр Николаевич, ăçта ĕçлеме тӳрĕ килчĕ, халь мĕн ĕçлетĕр? ЧНКпа та тачă çыхăну тытатăр Эсир.**

- «Чебоксарские новости» хаҫатра пĕрремĕш номертен пуҫласа пай редакторĕнче ĕҫлерĕм, темиҫе ҫул яваплă секретарь пултăм. Ҫав вăхăтрах уйăхра пĕрре «Шупашкар» ятпа 8 страницăллă чăвашла хаҫат кăларса тăма вăй ҫитереттĕм. Ун хыҫҫăн мана РФ патшалăх пичет комитечĕн Чăваш Республикинчи управленине ертсе пыма шанчĕҫ. Уйăхра пĕрре «Пресса Чувашии» кăларăма хатĕрлесе тăрассине те хам ҫине илнĕччĕ. Власть тытăмĕнче пилĕк ҫул пулнă хыҫҫăн уйрăм издательство йĕркелесе ярас шухăш ҫуралчĕ. «СВ (Свежий Ветер)-Пресс» ят патăмăр ăна. Вунă ҫул ытла иртрĕ унтанпа. Ҫĕр-ҫĕр кĕнеке, альбом, буклет кăлартăмăр ку хушăра. Пĕр тапхăр «ОРТ (отдых, развлечения, туризм) в Чувашии» хаҫат кăларса тăтăмăр. «Чебоксары в памятных датах», «Здравницы Чувашии», «Знакомьтесь: Чебоксары» проектсем уйрăмах ăнăҫлă пулса тухрĕҫ. Кăҫал Раҫҫей историйĕн ҫулĕ тесе палăртнă. Унпа килĕшӳллĕн «Чувашский край в памятных датах и фотографиях» ятпа стена ҫумне ҫакмалли пысăк календарь хатĕрлесе ҫитертĕмĕр. Чĕмпĕр тăрăхне те манса каймарăмăр. Мĕнле манăн! Яковлев шкулĕ хăй вăхăтĕнче ялкăшса тăнă та. Унтан вĕренсе тухнă нумай ҫын халăх мухтавĕ пулса тăчĕ. Вĕсем ҫинчен халь Д.В.Кузьмин кăларнă энциклопедире те вуласа пĕлме пулать.

Обществăлла ĕҫсенчен те пăрăнса ҫӳремен эпĕ. Нумай ҫул хушши Раҫҫейри тавар кăларакансен союзĕн ЧР представительствине ертсе пыратăп. Республикăри музейсемпе лицейсен попечитель канашĕн ĕҫне те хастар хутшăнатăп. Ҫав вăхăтрах ЧР Патшалăх Канашĕн председателĕн ҫумĕн А.П.Князевăн пулăшаканĕ эпĕ. Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн членĕнче тăрататăп. Унта яланах кĕрсе ҫӳретĕп. ЧНК пухăвĕсене чĕмпĕрсем нумайăн килни тата хастар хутшăнни мана савăнтарать. Чĕмпĕрсене Шупашкарта хисеплеҫҫĕ, вĕсен ырă ĕҫĕсене пĕлеҫҫĕ: И.Я.Яковлева палăк лартнине те, Раҫҫей Акатуйне ирттернине те... Кунта УОЧНКА пуҫлăхĕн В.И.Сваевăн тӳпи пысăк. Ăна ахальтен кĕпĕрнаттăр советникĕ пулма суйламан ĕнтĕ.

**-Шупашкарти «Чĕмпĕр Ен» ентешлĕх мĕнле ĕҫлет?**

-Эпир, Чĕмпĕр хутлăхĕнче ҫуралса ӳснĕ ҫынсем, Шупашкарта ентешлĕх туса хутăмăр, пĕр ушкăна чăмăртантăмăр. Ентешлĕхĕн чи хастар ҫыннисем: Владимир Нагорнов скульптор, Пётр Маркин ҫыравҫă, Николай Мулянов радиожурналист, Пётр Сымкин журналист, «Бичурин тата паянхи самана» музей директорĕ Ирина Удалова (Эльмукова), «Куҫ микрохирургийĕнче» тăрăшакан Эмиль Ургалкин, наука ҫынни Алевтина Долгова, Шупашкар аэропортĕнче нумай ҫул аэронавигаци службине ертсе пынă Николай Тимошкин. Час-часах тĕлпулусем ирттеретпĕр, чун килеиччен калаҫатпăр,

канашлатпăр. Каша ялĕнче çуралса ӳснĕ Владимир Сатай çыравçă пирки час-час аса илетпĕр. Пысăк мероприятисенче сцена çине тухса чĕмпĕрсен ятĕнчен саламлатпăр. Нумаях пулмасть акă Литература музейĕнче Чĕмпĕр Ен çыравçисен – Анатолий Юманăн тата Валентина Тараватăн — пултарулăх каçĕсене ирттернĕ çĕре хутшăнтăмăр.

**-Сирĕн шутăрпа, чăваш тĕнчине аталантарма мĕн тумалла, Александр Николаевич?**

-Тĕнчене чăваш пулса килтĕмĕр пулсан чăваш пулсах пурăнасчĕ. Эпир ытти халăхсем умĕнче чăваш пулнипе, хамăр йăла-йĕркене пĕлнипе интереслĕ. Тăван культурăна аталантарнă çĕре кашни чăваш хутшăнмалла. Ытти халăхсемпе тан пымалла пирĕн, вĕсенчен нимĕнпе те кая мар эпир. Пирĕн халăхăн ырă енĕсем нумай, çавсене çухатас марччĕ. Усалли ан çыпçăнтăр тесе тăрăшасчĕ. Çакна пурнăçа кĕртесси хамăртан килет.

**-Тавах, Александр Николаевич. Сире юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр, чăваш тĕнчишĕн малашне те усăллă ĕçсем тума сунатпăр. Сывлăхлă та телейлĕ пулăр! Сире чăваш туррисем упраса пурăнччăр!**

Шупашкар хули.

**«Канаш», 2012 ç., 46 №.**

# Америкăран та çĕнтерӳпе таврăн, Сергей!



Журналистăн пĕр-пĕр материал çырас тесен хăш чухне темиçе хут шăнкăравласа калаçса татăлма е темиçе хут усăсăр кайса килме килет. Хальхинче вара мана ăнчĕ: эпĕ шыракан çын куç тĕлне хăех пулчĕ.

Чăваш ачи С. Казаков боксла выляссипе Европа чемпионĕ пулсан ун çинчен вулакансене тĕплĕнрех каласа парас шухăш çуралчĕ. Çавăнпа та чемпионăн адресне е телефонне пĕлме (вăл Димитровградра пурăнать) унăн ашшĕ-амăшĕ патне çул тытрăм. Манăн телее, Сергей пĕр каçлăха тăван килне килнĕччĕ.

Кĕске справка. Сергей Казаков, тĕнче класлă спорт маçтăрĕ. Ульяновск хулинче 1976 çулхи утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче çуралнă. Европа чемпионĕ (1998), икĕ хут Раççей чемпионĕ (1996, 1998), икĕ хут Раççей Хĕçпăшаллă Вăйăсен чемпионĕ (1996, 1998). Боксла 11 çул вылять. Хальхи тренерĕ - Альфред Гришин.

- Чупма, выляма мĕн ачаранах юрататтăмччĕ, - тесе пуçларĕ калаçăва Сергей. - Тăваттăмĕш класра пирĕн пата бокс тренерĕ пычĕ, хăйсем патне тренировкăсене çӳреме йыхăрчĕ. Пĕтĕм класĕпех кайрăмăр, анчах пĕр-икĕ заняти хыççăн çурри ытла пăрахрĕ. Эпĕ класра имшерккисенчен пĕриччĕ, çавăнпа та хăш чухне вăйлăраххисем кӳрентерме пăхатчĕç Ман вара вĕсене парăнас килместчĕ. Тен, çавăнпа та тренировкăсене пăрахмарăм. Çапла «Автомобилист» спорткомплексра юлтăм. Пĕрремĕш тренер Олег Александрович Атапин мана питĕ нумай пулăшрĕ,уншăн ăна пысăк тав сăмахĕ калас килет.

Вĕренекенĕ те пултаруллă та çирĕп характерлă пулни палăрать. Кунсерен тренировкăсене çӳресе шăм-шакне хытарать, тĕллевĕ патне сывхарать. Пĕрремĕш çитĕнĕвĕ кĕттермест: бокса çӳрекен ача çине класĕнче никам та алă çĕклеме алă хăймасть. Çак вăхăтра вăл шкултан

вĕренсе тухать, хулари 7-мĕш техника училищине пĕтерет, слесарь-сантехник профессине алла илет. Боксла выляса вара кашни ăмăртурах призлă вырăнсем илет.

Салтака каяс умĕн Казаковсен килне облаç спорткомитетĕнче ĕçлекенсем пыма пуçлаççĕ. Вĕсем Сергей çитĕнĕвĕсене сăнаса тăнă иккен, çавăнпа талантлă çамрăка аякка ярасси килмен, облаçрах хăварасшăн пулнă. Альфред Владимирович Грищин ӳкĕтленĕ хыççăн Сергей Димитровградра çар службине юлма килĕшет. Кунти «Ринг» спортклуб нумай боксера пысăк спорта тухма пулăшнă.

- Тӳрех ăнлантăм: эпĕ лайăх çынсен аллине лекрĕм, ӳкĕнĕçлĕ пулмарĕ. Пĕр виçеллĕрех Гайфуллин нумай пулăшрĕ. Малтан, паллах, вăл манпа кушак шăшипе вылянă пек, çăмăллăн вылятчĕ, мана чăн-чăн бокс мĕнле иккенне ăнлантарчĕ. Каярах вăй пухрăм, унпа танлашрăм. Тĕрлĕрен ăмăртусене илсе çӳреме пуçларĕç. Малтан Тамбова Раççей Хĕç-Пăшаллă Вăйĕсен ăмăртăвне кайса куртăм, пĕрремĕш вăйăрах выляса ятăм. Ку 1995 çулта пулчĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ — çитĕнӳ те килчĕ: Саранскра иртнĕ Атăлçи чемпионатĕнче çĕнтертĕм. 1996 çулта Раççей чемпионĕ пулса тăтăм, кăçал Белгород хулинче — тепĕр хут. Пĕлтĕрхи чемпионатра иккĕмĕш вырăн йышăннăччĕ, - каласа парать С. Казаков.

Хальлĕхе çамрăк спортсмен 8 çĕршыва çитсе курнă: Америка (икĕ хут), Германи, Иран, Дани, Польша, Финлянди тата ытти те.

Калаçăва чемпионăн амăшĕ — Раиса Ивановна хутшăнать. Сăмах май, вăл Чăнлă районĕнчи Анат Тимĕрçенте çуралса ӳснĕ, чемпионăн ашшĕ — Николай Иванович — Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче.

- Сергей пĕчĕккĕллех йăрăччĕ, хăюллăччĕ. «Коммуналкăра» пурăннă чухне Ирина коридортан йĕрсе кĕрсен вăл айăплине шырама тухатчĕ, хăйĕнчен чылай пысăкраххисене «вĕрентетчĕ». «Ку манăн йăмăк, ăна ан тивĕр», - тетчĕ. Музыкăна юратать, балалайка калать, ташлать. УАЗ Культура кĕрменне пилĕк çул бал ташшин секцине çӳрерĕ. Боксра çитĕнӳсем тума пуçласан тин ăна пăрахма тӳрĕ килчĕ.

Шкулта яланах мухтатчĕç, тăрăшса вĕренетчĕ. Мухтанма юратмасть, эпĕ боксер тесе каланине нихçан та илтмен. Çынна пулăшма яланах хатĕр. Пĕррехинче вăрах вăхăт чирлĕ выртрăм. Сергей вырăн патĕнчен каймастчĕ, мĕн кирлине тăватчĕ. Ăшĕнче çунсан та çынна пĕлтермест. Оптимист, малашне аван пуласса шанать, - тет Раиса Ивановна.

Юлашки ăмăрту çинчен вара чемпион çапла каласа пачĕ:

- Минск хули кăмăла кайрĕ: илемлĕ, таса. Çыннисем те килĕшрĕç, уçă кăмăллă, калаçма юратаççĕ. Ринга пурĕ тăватă хутчен тухма

тиврĕ. Раççей спортсменĕсенчен чи малтан çапăçмалла пулчĕ, çавăнпа та яваплăх пысăкчĕ. Çитменнине, мана хирĕç белорус тухрĕ. Паллах, нумайăшĕ ун майлăччĕ. Çапах та ăна парăнтартăм. Иккĕмĕш вăйăра мана В. Марьян румын кĕтсе тăчĕ. Вăл пĕрремĕш турта Кипритан килнĕ боксерăн янахне çапса амантнă, çăмăллăнах парăнтарнă. Çавна пула тренерсем мана асăрханулла пулма сĕнчĕç, ăна çывăха яма хушмарĕç. Чăнах та, икĕ раунд унтан шикленсе вылярăм. Каярах вăл ытла хăрушă маррине туйса илтĕм, атакăна куçрăм, вирлĕрех çапма тытăнтăм.

Виççĕмĕш вăйă чи йывăрри пулчĕ. О. Кирюхин (Украина), Атлантăри Олимп вăййисен призерĕ, тӳрех мала тухрĕ — 2:0. Кайран унпа танлашрăм, иртсе кайрăм. Виççĕмĕш раундра вăл йăнăша пуçларĕ, ывăнчĕ. Гонг хыççăн табло çинче 7:5 шут çунатчĕ.

Финалта С. Казаков Литваран килнĕ 17 çулхи И. Стаповичпа тĕл пулнă. 4:0 шут кам вăйлăраххине лайăх кăтартса парать. Чăваш ачи - чемпион!

Раççей боксерĕсем 4 ылтăн медаль çĕнсе илеççĕ, 38 çĕршывран килнĕ командăсенчен мала тухаççĕ.

— Финал хыççăнах ман çине Раççей ялавне çакса ячĕç, ыталама, алла чăмăртама пуçларĕç. Çак саманта нихăçан та манмастăп. Питĕ савăнăçлă пулчĕ!

Пьедестал çинче тăнă вăхăтра Раççей гимнĕ янăраса кайрĕ, ялав çĕклерĕç. Çав вăхăтра тăван çĕршывшăн мĕнле савăннине, мăнаçланнине сăмахпа каласа пама та çук! — тет Европа чемпионĕ.

Халĕ вăл Америкăна кайма хатĕрленет. Утă уйăхĕн 20-мĕшĕнче унта Ырă кăмăл вăййисем пуçланаççĕ. Сергей каллех 48 килограмм таякан боксерсем хушшинче Раççей чысне хӳтĕлĕ.

Çĕнтерӳпе таврăнмалла пултăр, ентешĕмĕр.

**«Канаш», 26 №, 1998 ç.**

# БАМ – аслӑ чукун ҫул



Кӑҫал БАМ тума тытӑнни 30 ҫул ҫитрӗ. Хӑй вӑхӑтӗнче мӗнле чаплӑ стройкӑччӗ вӑл! Ун ҫинчен юрлатчӗҫ, унта кайма ӗмӗтленетчӗҫ.

Николай Розова та шӑпа ҫак аслӑ чукун ҫула хунӑ вырӑнсене илсе ҫитернӗ.

– Хусанти медицина институтне пӗтернӗ хыҫҫӑн Саранскра ҫулталӑк хушши интернатура иртрӗм те Теччӗ район пульницине ӗҫе вырнаҫрӑм. 1972 ҫулхи кӗркунне мана военкоматран повестка килчӗ. Эпӗ запасри офицерҫке – лейтенант. Ҫапла вара, мӑшӑрӑма тата ҫулталӑк та икӗ уйӑхри ачана пӑрахса хӑварса «ссылкӑна» тухса кайрӑм. Тында ҫывӑхӗнчи Свободный хулине вырнаҫтарчӗҫ, - аса илет Николай Дмитриевич.

Унта вӑл хӑйӗн профессийӗпе вӑй хурать – шӑл тухтӑрӗ. Зея юхан шывӗ урлӑ кӗпер хывакан виҫӗ чукун ҫул чаҫӗн салтакӗсемпе офицерӗсене сыватать.

Тепӗр тӑватӑ уйӑхран ҫамрӑк офицер отпуска килет, инҫе ҫула ҫемйине те илсе каять. Хальхинче Розовсем Маревый поселока лекеҫҫӗ. Йӗри-тавра вӑрман та шурлӑх, тӗтре евӗр карса тӑрать. Поселок ятне ҫапла ахаль паман иккен. Н. Розова Шаталов подполковник кӗтсе илет. «Маттур, лейтенант! Эсӗ пӗрремӗш ҫитрӗн. Часах кунта салтаксен чаҫӗ килсе ҫитмелле. Хальлӗхе вара часть командирӗ эсӗ пулатӑн», – тет вӑл. «Эпӗ лейтенант ҫеҫ вӗт, подполковник юлташ. Ҫынсем ҫине кӑшкӑрма та пултараймастӑп, сасӑ та вӑйлӑ мар», – хирӗҫлеме пӑхать Н. Розов. «Темех мар. Кӑшкӑрма прапорщик паратпӑр, эсӗ – йӗркелекенни пулатӑн»,– хуравлать лешӗ.

– Малтан шӳт ҫеҫ пуль терӗм те ку япалана – ӗҫне тумах тиврӗ ҫав. Часах 120 ҫамрӑк салтак килсе ҫитрӗ. Нумайӑшӗнне ҫӳҫне

хамах касрӑм, пурне те мунча кӗртрӗмӗр, форма тӑхӑнтартӑмӑр прапорщикпа пӗрле. Пӗр эрнере 700 салтака вырнаҫтартӑмӑр. Часть командирӗ килнӗ хыҫҫӑн мана ун ҫумӗ турӗҫ, ҫумӗ килсен вара снабжени (япаласемпе тивӗҫтерес енӗпе) пайӗн пуҫлӑхӗ пултӑм. Ҫапла вара, чаҫри чи пысӑк должноҫсенче «ларса» куртӑм,– кулать Н. Розов.

Пӗр вӑхӑт Амур-ҫи-Комсомольск ҫывӑхӗнчи Марьинский разъездра та пурӑнма тивет. Харпичан – нанаецсен поселокӗ. Ҫаплах кунта Бендер, Краснов бандисенчи ҫынсем те (20 ҫурт) пулнӑ: вӗсене ссылкӑна янӑ.

– Эпӗ Теччӗре лайӑх ӗҫе вырнаҫнӑччӗ, 200 тенкӗ шалу илеттӗмччӗ (ун чухне заводра ӗҫлекенсем те 100-120 тенкӗ ҫеҫ илнӗ, ялта вара – 60-70 тенкӗ – Н.Л.). Ҫапах та мӑшӑр хыҫҫӑн Инҫет Хӗвелтухӑҫне кайрӑм, – калаҫӑва хутшӑнать Николай Дмитриевичӑн пурнӑҫри юлташӗ Наталья Павловна. – Сехет тӑрӑхӗ пирӗннипе танлаштарсан – 7 сехет малта. Ҫут ҫанталӑк пуян. Вӑрманта тӗпрен илсен лиственница ӳсет, хыр та нумай. Эпир баракра пурӑнаттӑмӑр. Ман валли ӗҫ ҫукчӗ. Вӑхӑта ҫыхса, варени вӗретсе, кукӑль пӗҫерсе ирттереттӗмччӗ. Ҫакӑ та асра юлнӑ: вӑл вӑхӑтрах кунта ҫамрӑксем кӗсйине пистолет чиксе ҫӳретчӗҫ. Ку енчен хӑрушӑрахчӗ. Мӗнле кӑна чӗр чун ҫукчӗ – пӑрӑнтӑк, изюбр, упа, пакша... Ӳпре-шӑна – пӗлӗт пек. Ӑҫта та пулсан вӑрман ҫунсан вара плац урлӑ ҫӗленсем – 40-50-шарӑн шуса каҫатчӗҫ, ҫӗнӗ вырӑна куҫатчӗҫ.

Калаҫӑва кил хуҫи тӑсать:

- Пӗлетӗн-и Тында мӗне пӗлтернине? Эвенкла вӑл «шӑтӑк» тенине пӗлтерет. Чӑнах та, тарӑн айлӑмра ларать вӑл. Питӗ сивӗ пулать, эпӗ 52 градус пулнине куртӑм, утмӑла та ҫиткелет тетчӗҫ. Сӑмсана тӑм илет те – икӗ эрне хуралса-хӑмӑрланса тӑрать. Ҫулла вара 30 градус шӑрӑх. Пӗр сехет вӑйлӑ ҫумӑр ҫусан юхан шывсем, ҫырмасем ҫырантан тухса каяҫҫӗ. Пулӑ нумайччӗ – ун пеккине ниҫта та курман: таймень, чебак, ҫӑрттан, ӑркай (форель), кета... Анчах шыв сивӗччӗ. Кӑмпа – пуҫтар кӑна. Эпир курман ҫырла нумайччӗ: кӑвак ҫырла (голубика), кашкӑр ҫырли (жимолость) тата ытти те.

Эпӗ тухтӑр пулнӑ-ха. Ҫапах та чукун ҫул ҫинче ӗҫлекенсем костыль (рельса шпал ҫумне хӗстерсе хуракан пысӑк пӑтана ҫапла калаҫҫӗ) ҫапса кӗртме чӗнсен султан (кувалда) илтӗм те – пиллӗкӗшне тӳнккесе хутӑм. Чуна мӑнаҫлӑх туйӑмӗ кӗчӗ: эпӗ те ҫак аслӑ чукун ҫул тунӑ ҫӗре хутшӑнтӑм.

**«Канаш», 37 №, 2004 ҫ.**

# Валентин Иванов: *«Ытлашши калаçса ĕçне хупласа хурар мар»*

**Хисеплĕ вулакансем, сире Раççей Патшалăх Думин депутатĕнчен В.Б. Ивановран илнĕ интервью вулама сĕнетпĕр.**

**- Владимир Борисович, эсир Ульяновскра И.Я. Яковлев палăкне лартма 60 пин тенкĕ куçартăр. Эпир уншăн пĕтĕм облаçри чăвашсен ятĕнчен тав тăватпăр. И.Я. Яковлев ĕç-хĕлне мĕнле хаклатăр?**

- И.Я. Яковлев çинчен питĕ нумай пĕлетĕп тесе мухтанаймастăп. Çапах та хăйĕн пурнăçне тăван халăхне панă çын пысăк хисепе тивĕç. Ун пек паттăр çынсен ĕçĕ-хĕлне тăхăмĕсем хаклаççĕ — эпир паян çавна куратпăр та. Çын ячĕ-сумне ытти ăрусем валли сыхласа хăварма мĕнле-тĕр паллă япаласем кирлĕ. Ман шутпа, палăкĕ хăй те, ăна лартас тесе илсе пыракан çăмăл мар ĕç те питĕ кирлĕ паллăсем.

**- Çĕршыври пурнăçа çӳлерех шая хăпартас тесе тăватă наци проекчĕ шутласа кăларчĕç: сывлăха сыхласси, вĕрентӳ, строительство, ял хуçалăхне аталантарасси. Çакна пурнăçа еплерех кĕртĕç-ши? «Единая Россия» партин тӳпи унта мĕнлерех пулĕ?**

- Раççей Президенчĕ В.В. Путин наци проекчĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре «Единая Россия» партие пулăшса пыма ыйтнине пĕлетĕр ĕнтĕ. Чи кирли, ытлашши калаçса ĕçне хупласа, аяккине пăрса хăвармалла мар е пĕчĕк çеç ĕçе мухта-мухта пĕлĕте çити хăпартмалла мар. Эпĕ область тăрăх çӳренĕ вăхăтра çакна пысăк тимлĕх уйăратăп. Чăн кăтартăвне тупма тăрăшатăп, вĕсене отчет туса пыратăп, Патшалăх Думин ертӳçисене паратăп. Çулталăк вĕçĕнче хамăн отчетсене премьер-министрăн пĕрремĕш çумĕ Д.А. Медведев патне çитеретĕп.

**- Сирĕн пуçарăвăра — спутник телевиденине хута ярас проекта — пурнăçа кĕртме мĕн тумалла? Эпир мĕнле пулăшма пултаратпăр? Облаçри наци телекăларăмĕсене те хупрĕç вĕт...**

- Ун пирки эпĕ В.В. Путин патне икĕ çыру ятăм. Президент аппаратĕнчен çакăн пек хурав килчĕ: «Культура» канал пур — çитет». Эпĕ çакна тĕрĕс мар тесе шутлатăп. Мĕнле пулăшмалла? Çакăн çинчен Раççейри наци автономисен пухăвĕсенче, конференцийĕсенче калаçмалла. Малтанласа ку ыйтăва облаçра сӳтсе явмалла. Телевидени енĕпе эпĕ сĕнӳсем хатĕрлетĕп. Мĕн те пулин йĕркелеме май пулсан сире пĕлтеретĕп.

**- Халĕ Раççей гражданĕн паспорчĕ çине ун нацилĕхне çырмаççĕ.**

**Эп, сăмахран, паспорта улăштарнă чухне чăваш тесе çыртарасшăн заявлени патăм. Эп ыйтнине пурнăçламарĕç. Тĕрĕс-и ку?**

- Тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и – калама пултараймастăп. Эпĕ ăс-хакăла, культурăна (эпир кунта политика пирки мар, культура пирки калаçатпăр) ăнланни çакăн пек: кашни çыннăн чунĕнче малти тĕнче пур. Официаллă çырса хуни вара çын икĕ питлĕ пулсан ниме те пĕлтермест. Еврей халăхĕн историне аса илер-ха, вĕсем хăш-пĕр документра хăйсене «суйласа илнĕ халăх» пек кăтартма пикеннĕ. Ку япалана çынсем йышăнсах каймаççĕ. Еврей халăх культурине вара тĕнчере пурте пĕлеççĕ, йышăнаççĕ. Эп çапла шутлатăп: Эсир хăвăра чăваш халăхĕн пĕр пайĕ тесе шутлани, ун культурине йышăнни – чи пахи.

**- Паллах, Раççейре патшалăх чĕлхи - вырăс чĕлхи. Çапах та «Единая Россия» партин документчĕсене халăх валли ытти чĕлхесемпе те çырма юрать пек. Çавăнпа пĕрлĕхлĕ Раççей ĕнтĕ вăл. Ку парти ячĕ-сумне те ÿстерме пултарĕ. Эсир мĕнле шутлатăр?**

- Ку вара политика пайĕ, кунта чĕлхесем çине пайланса кайнипе килĕшме пултараймастăп. Тĕрĕс мар куçарни, юри урăхларах куçарни (кун пеккипе политиксем аппаланма юратаççĕ) пĕрлĕхлĕ патшалăха тустарма пултарать. Тĕрлĕ калаçакан политиксем пулни хăрушă.

**- Суйлав бюллетенĕсенче «пурне те хирĕç» текен йĕркене илсе пăрахрĕç. Çак сăлтавпа çынсем суйлава каяс хастарлăхĕ чакмĕ-ши?**

- Ку ыйтупа нумай тавлашнă ĕнтĕ. Çынсен хастарлăхĕ чакма пултарĕ. Ун чухне вара партисен тата вĕсен ĕмĕт-шухăшĕсен хакĕ те чакать. «Пурне те хирĕç» йĕркешĕн сасăлани – е пĕтĕмĕшле шăв-шав, е партисем çинчен сахал пĕлни. Çакă ĕненÿсĕрлĕх патне илсе пырать, суйлава кайма чарать. Çапах та, ман шутпа, çакă çитес суйлавсен чи пĕрремĕш ыйтăвĕ мар.

**-Валентин Борисович, тавах калаçушăн.**

**«Канаш», 32 №, 2006 ç., çурла,10.**

# Диаметр Земли вычислил чуваш!



Умы человечества с древнейших времён стремились познать мир, Вселенную. Земля вращалась, менялись эпохи, шли годы: тысячелетия — от Икара, столетия – от Коперника, Бруно и Галилея, десятилетия – от Циолковского. Но наука не позволяла измерить длину пояса Земли. И вот в середине 20 века явился человек и совершил великое открытие: впервые в мировой истории вычислил диаметр планеты, на которой жил. Им был Александр Александрович Изотов, чуваш по национальности

Об А.А.Изотове страна узнала в1952 году, когда ему — доктору технических наук, профессору Московского института геодезии, аэрофотосъёмки и картографии – была присуждена Государственная премия за книгу «Формы и размеры Земли по современным данным». В этом труде учёный заново определил величину и объём нашей планеты и уточнил форму её эллипсоида. По его вычислениям, произведённым с большой точностью, формы и размеры Земли оказались совершенно иными, чем было принято считать до этого. Выяснилось, что наша планета имеет три неодинаковых диаметра или радиуса.

В этой области долгие годы работал член-корреспондент Академии наук СССР профессор Ф.Н.Красовский. Изотов вначале был его студентом, позже под руководством Красовского окончил аспирантуру. В 1936 году чувашский парень защитил кандидатскую диссертацию на тему «Оценка точности триангуляции». Это работа была опубликована и получила вторую премию ЦК ВЛКСМ на конкурсе молодых учёных. В немецком переводе она была представлена вниманию Геодезической комиссии Прибалтийских стран в Хельсинки.

А.А.Изотов родился 26 августа 1907 года в д. Абляскино (Ёнекасси) Чистопольского уезда Казанской губернии (ныне деревня входит в

Октябрьский район Татарстана) в чувашской крестьянской семье. Он окончил Московский геодезический институт в 1932 году. Здесь остался работать и занялся научной работой. Под руководством профессора Красовского он работал более 17 лет. В 1948 году Красовский умер.

В конце 1949 года А.А.Изотов защитил диссертацию на учёную степень доктора технических наук. В 1951 году ему было присвоено звание профессора.

А.А.Изотов был награждён орденами Трудового Красного Знамени, «Знак Почёта», медалями «За оборону Москвы», «За доблестный труд», «В память 800-летия Москвы», а также знаком «Отличник геодезии и картографии».

Он умер в 1988 году в Москве, там и похоронен.

**(По материалам книги «Чуваши Татарстана»**
**(Чебоксары, 2006)**

**«Канаш», 2011 ç., 7 №.**

# «Согласие» çынсене пулăшу парать



«Ульяновскмебель» производство пĕрлешĕвĕн директорсен канашĕн председателĕ, Саккунсем кăларакан Пуху депутачĕ, «Единая Россия» регионти партин Чукун çул районĕнчи уйрăмĕн ертӳçи А.Г.Еленкин пуçарăвĕпе 2005 çулта Ульяновскри Хрустальная урамра халăха пулăшу паракан «Согласие» центр уçăлнă. Ăна В.Е.Панова ертсе пырать. Эпир унпа тĕл пулса калаçрăмăр.

– Анатолий Георгиевич Еленкин ку юхăннă предприятие 2002 çулта килчĕ. Чи малтан производствăна ура çине тăратрĕ, хута ячĕ. Унтан çынсен пурнăçне çăмăллатас, вĕсене пулăшу парас пирки шутлама тытăнчĕ. Центрăн тĕп тĕллевĕ – халăхăн социаллă ыйтăвĕсене татса парасси, – тет Валентина Евгеньевна. – Эпир тĕрлĕ сулăмпа ĕçлетпĕр. Анатолий Георгиевич тӳрех предприяти ветеранĕсене тимлĕх уйăрма пуçларĕ, вĕсене пĕр чăмăра пĕрлештерчĕ. Ун пеккисем 300 ытла тупăнчĕç. Предприятире 18 çултан кая мар вăй хунисене тата çакăнтанах тивĕçлĕ канăва кайнисене виçĕ уйăхра пĕрре 750 тенкĕ укçан преми паратпăр. Халĕ ку списока Тăван çĕршывăн Аслă вăрçă ветеранĕсене те кĕртнĕ. Ку мероприяти уявах çаврăнать. Ачасем концерт кăтартаççĕ, ватăсене Тав хучĕсем паратпăр. Апатлантаратпăр. Кайран вара вĕсем баян кĕввипе юрлаççĕ. Эпир ăна кашни хутĕнче тĕрлĕ çĕрте ирттеретпĕр. Хăйсем тĕллĕн çӳрейменнисене килĕсене çитсе паратпăр. Тĕлпулусем те ирттеретпĕр ветерансем валли. Унта Чукун çул районĕн пуçлăхĕ В.И. Трофимов, облаçри ветерансен канашĕн пуçлăхĕ С.Н.Ермаков пулкалаççĕ. Ульяновск хулин пуçлăхĕ М.Беспалова та килнĕ кунта. Пенси фончĕн çыннисем, районти ветерансен канашĕн пуçлăхĕ – пирĕн яланхи хăнасем. Çаплах юбилейсем ирттерессси те йăлана кĕнĕ.

Вёсем те анлăн иртеççĕ. Ветерансем хушшинче шашка-шахмат турнирĕсем йĕркелетпĕр. Эх, савăнаççĕ вĕсем пĕрле пуçтарăнсан, каçса кайса калаçаççĕ, пĕрле ĕçленине аса илеççĕ! «Дети войны» кăкăр паллине пама та ятарласа пухрăмăр вĕсене. Кĕçнерникун вара центрта – ветерансен кунĕ.

«Согласие» центрта эрнере пĕр кун – эрнекун – халăха тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ параççĕ, юрист çынсен ыйтăвĕсене хуравлать. «Знай свои права» проект тăрăх вăхăтран вăхăта Чукун çул районне кĕрекен ялсене – Анникав, Белый Ключ, Луговой тата ыттисене – тухса çӳреççĕ. Унта тĕрлĕ енĕпе ĕçлекен специалистсем каяççĕ, халăхпа тĕл пулса пулăшу параççĕ. Компьютер илсе каяççĕ, унпа усă курса çынсене Ульяновскри тĕрлĕ министерствăсене, поликлиникăсене кайма малтанах черете çырса хураççĕ. Çаплах ялсенче тĕрлĕ темăпа çавра сĕтелсем ирттереççĕ. Сăмахран, Пенси фончĕн специалисчĕ çак тытăмри çĕнĕлĕхсем çинчен каласа парать, кирлĕ пулсан облаçри Пенси фончĕн пуçлăхĕ патне каймашкăн çырăнтарма пулăшать. А.Г.Еленкин Саккунсем кăларакан Пуху депутачĕ пулнă май график тăрăх хăй те суйлавçăсемпе çакăнтах тĕл пулать. Центрта Патшалăх Думин депутачĕсем те çынсене тĕрлĕ ыйтупа йышăнаççĕ. Юлашкинчен кунта Патшалăх Думинчи «Единая Россия» фракци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Н.И.Булаев пулнă, шкул директорĕсене вĕрентӳ ĕçĕнчи улшăнусем çинчен каласа панă. Ульяновск хули Думин депутачĕ Г.В.Павленков та çынсене çакăнтах йышăнать.

«Живи, родник» проект тăрăх центр специалисчĕсем шкул ачисемпе пĕрле ялсене тухса çӳресе çăлсене тасатас, вĕсен йĕри-тавра тирпейлĕх кĕртес, çырмасенче çуран çӳремелли каçăсем тăвас ĕçсене йĕркелеççĕ, çак ĕçе вырăнти халăха явăçтараççĕ. Кунта уйрăмах 31,46, 48-мĕш шкулсенчи экологи отрячĕсем хастарлăх кăтартаççĕ. Хулари Винновка ращинче ĕçлеме вара 30, 47, 58-мĕш шкулсене çирĕплетнĕ. Пĕлтĕр «Живи, родник» проектпа центр область грандне – 30 пин тенкĕ – тивĕçнĕ. Ку укçапа принтер, фотоаппарат, кĕреçе-кĕрепле туяннă. Чи хастар ачасене вара «За заботу о красоте г. Ульяновска» паллă панă.

«Милосердие» проект та вырăн тупнă кунта. Салтаксем, Раççейри тĕрлĕ инкек тӳсекен çынсем (сăмахран, шыв илсен, пушар пулсан) валли кирлĕ япаласем пуçтарса посылкăсем, бандерольсем ярса параççĕ.

Майăн 9-мĕшне вара кунта ятарласа хатĕрленеççĕ. Волонтĕрсем утса çӳреймен ветерансем патне килĕсене кайса саламлаççĕ: открыткăсем, çырусем, апат-çимĕç параççĕ. Чĕннĕ çĕре пынисем

валли тӗлпулусем йӗркелеҫҫӗ, концерт лартаҫҫӗ. «Ульяновскмебель» кашни ветерана 1000 тенкӗ парса чыслать.

Ҫамрӑксем ҫинчен те манса кайман кунта. Ҫамрӑксене пухса савӑнӑҫлӑ лару-тӑрура паспорт параҫҫӗ, ҫак кун вӗсен асӗнче ӗмӗрлӗхех асра юлтӑр тесе тӑрӑшаҫҫӗ. Регионти «Единая Россия» парти ертсе пынипе «Выбери дело по душе» проект ӗҫлет. Ӑна Л.Д.Гордейко илсе пырать. Районти 13 шкулта та «Производство кунӗ» пур. Специалистсем халӑха ӗҫпе тивӗҫтерекен центр ӗҫченӗсемпе пӗрле шкулсене тухса ҫӳреҫҫӗ, ачасемпе тӗл пулаҫҫӗ. 8-9-мӗш классенче вӗренекенсене предприяти историйӗ, сӗтел-пукан тӑвас ӗҫ ҫинчен каласа параҫҫӗ. 10-11-мӗш классене вара предприятие илсе килеҫҫӗ, экскурси ирттереҫҫӗ, производствӑпа тата ӗҫ условийӗсемпе паллаштараҫҫӗ.

Сусӑрсене пулӑшас шутпа «Клуб молодых инвалидов» та йӗркеленӗ кунта, ӑна А.Шипунов ертсе пырать. Унӑн ӗҫ вырӑнӗ урӑх ҫӗрте, ҫапах та вӑл «Согласие» центрпах ҫыхӑннӑ.

Калаҫӑва пӗтӗмлетсе В.Е. Панова ҫапла каларӗ: «Анатолий Георгиевич Еленкин «Согласие» вырнаҫнӑ пӳлӗмсене тара илнӗ. Вӑл вӗсемпе хӑй пӗлнӗ пек усӑ курма, ҫав шутра укҫа-тенкӗ ӗҫлесе илме те пултарать. Анчах вӑл ку ҫулпа кайман. А.Г.Еленкин ҫынсене социаллӑ пулӑшу парассине чи мала хурать, урӑхла каласан укҫи-тенкине халӑхшӑн тӑкаклать. Вӑл паянхи пурнӑҫра ҫакӑ тӗрӗс тесе шутлать».

Халӗ вара кунта Ульяновск облаҫӗнчи чӑвашсен наципе культура автономийӗн Чукун ҫул районӗнчи уйрӑмӗ ӗҫлеме пуҫларӗ, ӑна та А.Г.Еленкин йӗркелерӗ. Малашне ку центр чӑваш культурине аталантаракан тепӗр вырӑн пулӗ.

**«Канаш», 2013 ҫ., 10 №.**

# И. Дмитриев ӳкерӳҫӗ ҫинчен

Шупашкарта пулнӑ май манӑн Ӳнер музейӗ ҫумӗнчен иртсе кайма тӳрӗ килчӗ. Унта И.В. Дмитриев ӳкерӳҫӗн куравӗ пыратчӗ. Пӗлес килчӗ: кам вӑл Дмитриев? Пӗлсессӗн вара тӗлӗнтӗм те, савӑнтӑм та: Ҫӗнӗ Улхаш ҫынни пулса кайрӗ. Хамӑр ентешех иккен.

Иван Васильевич Дмитриев 1902 ҫулхи ака уйӑхӗн пӗрремӗшӗнче Чӗмпӗр кӗпернинчи Ҫӗнӗ Улхаш ялӗнче (халӗ вӑл пирӗн облаҫӑн Чӑнлӑ районне кӗрет) ҫуралнӑ. Питӗ пултаруллӑ та нумай пӗлӳ илнӗ ҫын пулнӑ вӑл. 1920-22 ҫулсенче Чӗмпӗр пединститутӗнче, 1921-22 ҫулсенче Чӗмпӗр «Изомузотео» ӳнер техникумӗнче вӗреннӗ. Унтан ҫӗршывӑн тӗп хулине куҫса кайнӑ. Мускаври иккӗмӗш университета (пединститут) пӗтерет. 1930 ҫулта Мускаври ӳнер училищинчен вӗренсе тухать.

И.В. Дмитриевӑн тӗп ӗҫӗ – живопись, ҫав вӑхӑтрах вӑл график та, скульптор та, прикладник та... Унӑн чи лайӑх картинисем чӑваш хресченӗн пурнӑҫӗпе ҫыхӑннӑ. Ӗмӗр тӑршшӗпех ун куҫӗ умӗнчен чӑваш ялӗн, хӗрарӑмӗн сӑнарӗ кайман. Ҫакӑ унӑн тӗп произведенийӗсен ячӗсене пӑхса тухсанах паллӑ: «Чувашский двор», «Купальщица», «Девушка в тухье», «Чувашская свадьба», «Портрет И.Я. Яковлева», «Чувашки у околицы», «Чувашки».

Ахальтен мар ӗнтӗ В. Немцев ӳкерӳҫӗ И. Дмитриев пирки: «Вӑл чӑваш ӳкерӳ шкулӗн чи ҫутӑ ҫӑлтӑрӗсенчен пӗри», - тенӗ.

Иван Васильевич вара хӑй пултарулӑхӗ ҫинчен ҫапла каланӑ: «Манӑн ӗҫӗм Чӑваш ҫӗршывӗшӗн пултӑр. Эп ҫапла ӗҫлеме пултарнишӗн хамӑн халӑха тав тума тивӗҫ».

Ӗмӗрӗпе чӑваш темипе ӗҫленӗ вӑл, анчах чӑваш ҫыннин ун картинисемпе паллашма май пулман тесен те юрать. 1972 ҫулта ҫеҫ, хӑй ҫитмӗле ҫитсен, Шупашкарта унӑн пӗрремӗш куравӗ иртет. Кӑҫал вара ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнине халалласа - тепре.

СССР Художниксен союзӗн членӗн И. Дмитриевӑн картинисем тӗлӗнмелле илемлӗ. Бетховен евӗр, шултра аккордсемпе янӑраттарнӑ автор вӗсене. Ҫапла, вӑл тӗссене янӑраттарма, калаҫтарма ӑсталӑх ҫитернӗ. Тӗс культурине лайӑх ӑнланнӑ. Ун картинисенче ҫил вӑркӑшӗ палӑрать, шыв шӑнкӑртатса юхни илтӗнет. Вӑйӑ картинче хӗрсем, уйӑх ҫути ҫинчи хӗрарӑмсем... Темле асамлӑх, вӑрттӑнлӑх, аваллӑх, ҫав вӑхӑтрах анлӑх пур вӗсенче. Ӳкерӳҫӗн картинисем куракан

чĕри патне тӳрех ҫул тупаҫҫĕ, чи тарăн туйăмсене вăратаҫҫĕ. Иван Васильевич иртнĕ ĕмĕрĕн 20-40-мĕш ҫулĕсенче чăваш идиллинче чăннипех чи паллă вырăн йышăннă.

Пĕлĕшсем каласа панă тăрăх, И. Дмитриев сайра тĕл пулакан ҫын пулнă. Чунĕпе питĕ ырă (ун пек пулмасан куҫа илĕртекен, ытарайми картинăсем мĕнле ӳкернĕ пулĕччĕ-ши?), чăвашпа вырăс чĕлхисемсĕр пуҫне тата тăватă чĕлхе пĕлнĕ: француз, латин, итали, нимĕҫ. Музыкăна юратнă, фортепьяно каланă. Тĕрлеме пĕлнĕ. Вăл икĕ кĕнеке авторĕ, пĕри шăпах тĕрĕпе ҫыхăннă – «Художественная вышивка». Тепĕр кĕнеки – «Воспоминания».

Акă мĕнле паллă ҫын тата чаплă ӳкерӳҫĕ пулнă пирĕн ентеш. Ун картинисен уйрăм альбомĕ кăна ҫук-ха хальлĕхе, ахаль ҫынсем ун пултарулăхĕпе анлăн паллашма пултараймаҫҫĕ. Ҫавăн пек альбом хатĕрлесе кăларсан ун илемлĕ ĕҫĕсем чăваш ҫыннине мĕн тери савăнтарнă пулĕччĕҫ!

**«Канаш», 41 №, 2002 ҫ.**

# Игнатий игумен: *«Çын чунĕнчен хакли нимĕн те çук»*



**Православи тĕнне ĕненекенсемшĕн халĕ Раштав тапхи пырать. Мĕн вăл типĕ тытни? Мĕне пĕлтерет вăл? Çак тата чиркÿ ĕçĕпе çыхăннă ытти ыйтусемпе эпир Ульяновскри Чăваш чиркĕвĕн настоятелĕпе Игнатий игуменпа калаçрăмăр.**

**— Игнатий атте, кăштах чăваш чиркĕвĕ никĕсленнĕ тапхăра аса илер-ха.**

— Чăваш чиркĕвĕ 1992 çулхи чÿк (ноябрĕн) уйăхĕн 1-мĕшĕнче уçăлчĕ. Кăçал 18 çул пулчĕ. Эпĕ çакăнта пĕрремĕш кунтанпах ĕçлетĕп. Пуçласа яма питĕ йывăр пулчĕ. Улталакансем те тупăнчĕç. Анчах Турă тата ырă çынсем пулăшнипе сăваплă ĕçе пуçарса ятăмăрах. Паллах, хăй вахăтĕнче хуçалăха хута яма — ăшă кĕртме, газ пăрăхĕсене туянма, çыхăнтарма — питĕ нумай укçа-тенкĕ кирлĕ пулчĕ. Вăл вăхăтра пире Чăнлă район пуçлăхĕ Х.В.Рамазанов питĕ пысăк пулăшу пачĕ, 300 пин тенкĕ укçа куçарчĕ. Тавах ăна! Сăваплă ĕçшĕн Ханяфи Валиевича Турă сывлăх патăр.

Пирĕн пата çын нумай çÿрет — чăвашсем те, ытти наци çыннисем те. Аякран килекенсем те пур: Сызрань, Самар, Шупашкар, Мускав, Улатăр, Новосибирск тата ытти хуласенчен. Хăш-пĕр чиркĕвĕн куполĕсем те çутă, хай те илемлĕ курăнать, анчах халăх сахал çÿрет. Телее, пирĕн ун пек мар. Хăш чухне кĕме вырăн пулмасть. Халăх пирĕн пата кăмăлпа çÿренишĕн эпĕ савăнатап. Кунта çакна асăнни те вырăнлă: чиновниксем чунсăр пулни çынсене нумай нуша кÿрет, вĕсем вара пирĕн пата хÿтлĕх шырама, чунĕсене лăплантарма килеççĕ.

**— Кĕлĕсем хăçан иртеççĕ?**

— Шăматкун 16 сехетре пуçланать, вырсарникун ирхине — 8 сехетре. Тата уяв кунĕсенче те кĕлĕ ирттеретпĕр. Аслă (Мункун) типĕре виçĕ кун кĕлĕ тăватпăр: эрнекун, шăматкун, вырсарникун. Çынсем ыйтнипе çур çĕрте — 12 сехетре — ятарлă кĕлĕсем ирттеретпĕр. Ăна ылтăн кĕлĕ теççĕ. Унта инçе çула каякансем, операци тутарас умĕн, суд умĕн тата ытти йывăрлăхсем умĕн килеççĕ. Эрне

варринче çынсене Турă юнне сыптарса, хваттерсене усал сывлăшран тасатса çӳретĕп, вилнĕ çынсем патĕнче кĕлĕ вулатăп.

**— Çын чунĕ çинчен калаçар-ха. Христос пире ӳкĕнме хушать.**

— Çапла, эпир сăмахпа, ĕçпе, ӳт-пӳпе, шухăшпа нумай çылăх тăватпăр. Хăшне — пĕлмесĕр, теприсене — пĕлсе тăрсах. Çаксене ӳкĕнсе кăна каçарттарма пулать. Ӳкĕнсен çын чунĕ тасалать. Тĕнчере çын чунĕнчен хакли нимĕн те çук. Пĕр-пĕр çыннăн пуянлахĕ, мулĕ — ниçта хурса пĕтерме çук. Чунĕ вара суккăр, нишлĕ. Ку çынна ниепле те телейлĕ теме çук. Пуянлăхĕ ăна пĕр тапхăр кăна савăнтарать, кайран ун чунне шуйттансем кăшлама тытăнаççĕ. Кун пек çынна чиркӳ пулăшăвĕ кирлĕ, ун чунне юсамалла. Унăн чиркĕве çӳремелле, ӳкĕнмелле, ырă ĕçсем тума тăрăшмалла. Унсăрăн пысăк инкек пулма пултарать. Ахальтен мар çветтуй Матрона ултавлă вăхăт çитĕ, лавккара шыв сутма пуçлĕç тенĕ. Ун сăмахĕсем тӳрре тухса пыраççĕ. Ултава хирĕç тӳрĕ кăмăллă, таса чунлă çынсем çеç тăма пултараççĕ. Çут çанталăкра пулса иртекен инкек-синкек те çынсен чунĕсем пушаннипе, суккăрланнипе çыхăннă.

**— Игнатий атте, чăваш чиркĕвне Пантелеймон турăшĕпе сиплеме килекенсем те нумай вĕт.**

— Тĕрĕс, Афонти çветтуй Пантелеймон турăшĕпе сиплетпĕр эпир. Анчах чиркӳ — пульница мар. Унта пульницана пынă пек пымалла мар. Чи малтан Турра ăша илмелле, чĕрĕлессине чун-чĕререн шанмалла. Ун чухне çеç усси пулать. Чиркĕве тăванĕсем йăтса кĕнĕ çынсем Пантелеймон турăшĕ айне выртнă хыççăн хăйсем тĕллĕн утса, патакпа аран-аран уксахласа кĕнисем патаккисене пăрахса тухса кайнисем чылай пулнă. Тĕлĕнмелле, анчах ку тĕрĕс япала.

**— Типĕ тытни мĕн вăл?**

— Типĕ тытса çын шăпах хăйĕн кăмăлне çирĕплетет, чунне тасатать. Усалсене хирĕç тăма вăй-хăват пухать. Ачаранах типĕ тытни, кĕлĕ туни, ӳкĕнни вара çын организмĕшĕн усалсенчен сыхлакан иммунитет пулса тăрать. Типĕ тытсан çынна ăс кĕрет. Кăмăл çемçелет. Çын Турăсăр никам та мар. Турăпа пĕрле пулсан кăна çын ырă ĕçсем тума пултарать. Типĕ тытни вăл хăш-пĕр япала çименни кăна мар, çак вахăтра ырă ĕçсем нумайрах тума тăрăшмалла. Сăмахран, пĕр-пĕр чирлĕ е ватă çын валли лавккаран çăкăр туянса килсе пани — сăваплă ĕç. Типĕ тытнă вăхăтра перекетленĕ укçапа çынсене усă тумалла. Раштав типпи — çулталăка вĕçлекен тапхăр. Апла пулсан çак çулта тунă сылăхсене типĕ тытса каçарттарар, çитес çула таса чунпа кĕтсе илер. Çĕнĕ çулта Турă пире ырлăх кăна патăр. Пирĕн те Турă саккунĕсемпе пурăнмалла пултăр!

**— Игнатий атте, ырă калаçушăн тавах!**

**«Канаш», 2010 ç., 50 №.**

# Йёрке пулсан — ĕç пырать



«Цильнинский» ял хуçалăх производство кооператив правленийĕнче çак кунсенче икĕ Хисеп грамоти хушăннă. Пĕрремĕшне районти «2003 çулхи чи лайăх хуçалăх» ăмăртура 1-мĕш вырăн йышăннăшăн панă. Тепри вара Мускавранах, вăл хуçалăх пуçлăхĕн Н. Афанасьевăн ячĕпе килнĕ. Раççей Федерацин ял хуçалăх министерстви Николай Васильевича нумай çул хушши хăйĕн тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пынăшăн наградăланă.

Тăватă çул каялла çак хуçалăх районта 17-мĕш вырăнта пынă. 2000 çулхи çуркунне ун ĕçченĕсем ĕç-пуçа лайăхлатас шутпа Н.В. Афанасьева председателе суйлаççĕ. Вĕсем ăна лайăх пĕлнĕ, шаннă, мĕншĕн тесен Николай Васильевич çакăнтах ӳссе пынă. Шкул пĕтернĕ хыççăн тĕрлĕ ĕçсенче вăй хунă. Унтан Ульяновскри ял хуçалăх институтне вĕренме кĕнĕ. Иккĕмĕш курс студентне салтака илсе кайнă. Виçĕ çул тинĕссемпе океансем тăрăх ишме тӳр килнĕ, моряк службин илĕртӳлĕхне курнă, йывăрлăхне тӳснĕ. Киле таврăнсан аслă шкула пырса кĕнĕ, 1991 çулта агроном специальноçне алла илсе тăван хуçалăха таврăннă. 1992 çулта ăна председатель çумĕ пулма шанаççĕ. Тепĕр тăватă çултан вăл — тĕп агроном. Тата тăватă çултан — пуçлăх.

Хуçалăх членĕсем Николай Васильевича хуçа пулма суйласан вăл хăйĕн тивĕçĕсене йĕрке тăвассинчен пуçлать.

- Чи малтан специалистсене пуха-пуха калаçрăм, вĕсенчен тытăнтăм. Кашни ĕç умĕн калаçуирттеретĕп. Ĕçшĕн тӳлемелли норматива икĕ хут ӳстертĕм. Тариф çумне пысăк преми хушрăм. Манăн принцип çапла: ĕçлекене тивĕçлĕ тӳлемелле. Кахалсенчен, эрех-сăра юратакансенчен хăтăлмалла, мĕншĕн тесен вĕсенчен пĕрех усси çук. Хăшĕсем, хăйсене шанманнисем, çакна ăнланчĕç те тухса кайрĕç. Эпĕ председателе ларнă чух 211 çынччĕ хуçалăхра, паян — 128 çеç. Ĕç кăтартăвĕсем вара, хăвăрах куратăр, лайăхрах. Эпĕ

çынсене мĕн те пулин шантартăм пулсан нихçан та улталамастăп. Унсăрăн халăх ĕненми, ĕç малалла кайми пулать, - каласа парать Н. Афанасьев.

Пуçлăх лавне туртма çăмăл мар, пĕлӳ нумай кирлĕ, Николай Васильевич çакна лайăх ăнланать. Кăçал вăл иккĕмĕш аслă пĕлӳ илнĕ, Санкт-Петербургри техника университечĕн Ульяновскри филиалĕнчен вĕренсе тухнă.

Çынсем кунта çакна ăнланнă: тăрăшса ĕçлени сая каймасть. Сăмахран, «Нива» комбайнпа Р. Рахматуллин 5300 центнер тырă çапса илнĕ. Уншăн ăна 11600 тенкĕ укçа, 95 центнер тырă панă. Çапла вара, вăл 28 кун хушшинче 30600 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. В.Левитаевăн ĕç укçи – 27800 тенкĕ. Чи сахал çапса илнĕ комабйнерăн та – 15700 тенкĕ. Н. Исхаков водитель комбайн айĕнчен 9700 центнер тырă турттарнă (ĕç укçи – 14500 тенкĕ). Тырă лайăх çитĕннĕ – пĕр гектартан вăтамран 34,1 центнер. Ульяновскри пиво тăвакан «Витязь» завода 700 тонна пысăк пахалăхлă урпа сутса кăна 2 миллион тенкелĕх тупăш курнă. Пĕр килограмм тыррăн хăйхаклăхĕ – 95 пус. Кашни ĕçлекене 3-5 тоннăран кая мар тырă панă, пурĕ 49 тонна сахăр валеçнĕ.

Сахăр чĕкĕнтĕрĕ кăларассипе те кăтартусем лайăх. Пĕр гектартан вăтамран 250 центнера яхăн тухнă. Николай Васильевич пуçарăвĕпе кунта Курск технологийĕпе ĕçлеççĕ. Унти Агибалов профессорпа «Цильнинский» хуçалăх пуçлăхĕ пĕрре мар курса калаçнă, усăллă канашсем илнĕ. Халĕ кунта акнă чухне çеç 40 процент тăкак перекетленет. Алăпа çумламаççĕ, гербицидпа усă кураççĕ. Ĕçлеме пултаракансене кунта та кӳренмелли çук. С. Албутов тракторист виçĕ эрне чĕкĕнтĕр кăларса 2400 тенкĕ укçа, 42 центнер тырă, 508 килограмм сахăр песукĕ илнĕ – пурĕ 17400 тенкелĕх. Чĕкĕнтĕре районта чи малтан кăларса пĕтерсе завода ăсатнă.

11 уйăх хушшинче кашни ĕнерен вăтамран 3000 килограмм сĕт суса илнĕ. Шултра мăйракаллă выльăхсен виçи талăкра 492 грамм ӳссе пыртъ. Сăвакан ĕнесен кĕтĕвне лайăхлатма ăратлă пилĕк пушмак пăру, икĕ вăкăр туяннă. Çаплах ăратлă 25 сысна çури те хушăннă. Куратпăр ĕнтĕ: выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине те пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Апла пулсан çывăх вăхăтра кăтартусем лайăхланас шанчăк пысăк.

- Ман шухăша ăнланса, тĕллевсене курса, малашлăха ăнтăлса ĕçлекенсене тав сăмахĕ калас килет. Ун пеккисем сахал мар пирĕн: Р. Алеев тĕп инженер, Р. Сафин управляющи, М. Антонова бригадир, Е. Алексеев, Н. Исхаков водительсем, В. Авакумов, А. Мулендеев, В. Шегердюков механизаторсем, Г. Хуснутдинова доярка,

Т.Федорова сысна пăхакан тата ыттисем – пурне те асăнса пĕтереймĕн. Кăçал кĕрхи ĕçсем вĕçленсен чи тăрăшуллă 49 çынна парне парса чысларăмăр: кĕпе, утюг тата ытти те. Каларăм ĕнтĕ, халĕ çынсене ĕçлеме хавхалантаракан сăлтав пур – шалу. Пултарайсан хăть те мĕн чухлĕ ĕçлесе илччĕр – манран чару çук. Тырă – чи лайăх сортсене çеç акатпăр, хире удобрени сапатпăр. Кăçал техника та туянтăмăр-ха: Т-70 трактор, УАЗ-санитарка, УАЗ-469, КАВЗ автобус, сеялка...

Йывăрлăхсем те сахал мар. Электроэнерги питĕ хаклă, тĕрлĕрен налуксем хĕссе тăраççĕ, кирлĕ пек сарăлса ĕçлеме чăрмантараççĕ. Çапах та çынсем мана ăнланма тытăнни кăмăла çĕклет, шанчăк парать, - терĕ юлашкинчен Николай Васильевич.

Выльăх-чĕрлĕх ферми Телешовкăра вырнаçнă. Унта 50 пуç сăвакан ĕне, 80 – çамрăк выльăх, 100 ытла сысна. Маргарита Мидюкова кунта 1978 çултанпа ĕçлет. Малтан ветеринар пулнă, 10 çул ĕнтĕ – ферма заведующийĕ. Пилĕк доярка: Т. Сафина, Н.Танкова, Г. Хуснутдинова, Н. Пиколова, Е. Кузнецова. Вĕсене кирлĕ чухне Т. Григорьева улăштарса тăрать. Пăру пăхнă çĕрте нумай çул хушши Н. Яковлева тăрăшать, сыснасем патĕнче – Т.Федорова. Кунта Лысенковсене асăнса хăвармалла. Евгений тата унăн ывăлĕ Денис хĕллехи тапхăрта выльăхсене апатпа тивĕçтерсе тăраççĕ, çулла – кĕтӳре. А. Казаков ветврач тата зоотехник тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçласа пырать. Хĕлле валли апат çителĕклĕ, пĕр ĕнене 3 тонна тухать.

В. Мидюков, И. Ежов, Н. Яковлев трактористсем паян фермăра тĕрлĕ ĕçсене пурнăçлаççĕ. Çулла вара вĕсем утă çулаççĕ, ăна пресслаççĕ, чĕкĕнтĕр кăлараççĕ. Вĕсен техники яланах хутра.

Чăнлă районĕ.
Чăнлă рабочи поселокĕ.

**«Канаш», 52 №, 2003 ç., раштав, 25.**

# Кăмăлĕ ырă, ĕçĕсем сăваплă

## Малалла талпăнмалла, ырă ĕç тумалла, çынсене пулăшмалла



Чăнлă районĕнчи Аслă Нагаткинра ĕçлесе пурăнакан Владимир Петрович Остроумов районти чи хисеплĕ çынсен шутĕнче. Ахальтен мар ăна 2005 çулта «Чăнлă районĕн Хисеплĕ гражданĕ» ята парса чысланă. Шанса панă тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа, лайăх пахалăхпа туса пынăшăн Раççей сывлăх сыхлавĕн министерстви ăна Хисеп хучĕпе наградăланă. «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ.

Владимир Петрович – аслă категориллĕ тухтăр. Вăл район пульницинче лаборатори пуçлăхĕн ĕçне 1987 çултанпах илсе пырать. Унччен Çĕпрел район пульницинче тĕп тухтăр çумĕн тивĕçне пурнăçласа пынă. Район çыннисем ăна икĕ хут райсовет депутатне суйланă.

Унăн çуралнă çĕршывĕ – Тутар Республикине кĕрекен Пӳркел ялĕ. 1950 çулта çуралнăскер ачаранах тухтăр пулма ĕмĕтленнĕ. Ашшĕ ветеринар пулнă. Володя унран хăпман, ял выльăхĕсене сипleме çӳренĕ. Вăтам шкул пĕтерсен документсене Хусанти медицина институтне кайса парать. Ăнăçлă кĕрсе 1973 çулта вĕренсе тухать. Пӳркелĕнче унччен дипломлă тухтăр пулман.

Вăл ĕçлеме килнĕренпе лаборатори самаях çĕнелсе улшăнать: çĕнĕ оборудованипе пуянланать, халăх сывлăхне тĕрĕслеме тĕрлĕ мелсем хутшăнаççĕ. Чăнлă район пуçлăхĕ Х.В. Рамазанов та район çыннисемшĕн сахал мар тăрăшать. Нумаях пулмасть вăл лаборатори валли биохими анализне ирттерекен статфакс текен оборудовани туянса парать. Вăл пĕр харăс 12 анализ илет. Кунта пурĕ 60 тĕрлĕ анализ тума пулать. Кăçал 700 çын (вăрçă ветеранĕсем, пĕччен юлнă мăшăрĕсем) диспансеризаци мелĕпе сывлăхне тĕрĕсленĕ.

Хăй юратнă ĕçне парăннă пулин те унăн кăмăлĕ ытти ырă ĕçсем валли те çителĕклех. Пĕр-икĕ çул каялла тăван ялĕнче часавай лартаççĕ тенине илтсен вăл 15 пине яхăн укçа парса пулăшать. Кăçал Аслă Нагаткинра часавай тума укçа уйăрать. «Сăваплă ĕç тăвакансене эпĕ яланах пулăшма хатĕр, - тет ырă кăмăллă тухтăр. Сăмахĕ ĕçпе çирĕпленнине эпир хамăр та курнă. «Канаш» хаçат ĕçченĕсем лаборатори ĕçĕ çинчен çырма пырсан икĕ корреспондентăн пĕр фотоаппарат çеç пулнине пĕлсен вăл ăна туянма укçа пачĕ. Тĕлĕннĕччĕ эпир ун чух! Çакăн пек уçă кăмăллă ентешсем пит сайра тĕл пулаççĕ-çке... Уншăн «çук» сăмах çук. Малалла талпăнмалла, ырă ĕç тумалла, çынсене пулăшмалла.

Çурла уйăхĕн 13-мĕшĕнче Владимир Петрович 60 çул тултарать. Хисеплĕ ентешĕмĕре эпир юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Ĕçĕнче çĕнĕрен те çĕнĕ ÿсĕмсем сунатпăр. Ырă кăмăл, чун ăшши çăлкуç шывĕ пек нихăçан та ан иксĕлтĕр. Сывлăхăр хурçă пек çирĕп, ĕмĕрĕр вăрăм пултăр. Ырă ĕçсемшĕн вăхăтăра та, мулăра та шеллеменшĕн халăхăмăртан пархатар курăр.

**Нина РАЗУМОВА,**
**Николай ЛАРИОНОВ.**

**«Канаш», 2010 ç., 32 №.**

# «Канаш» тухма пуçласан эпĕ тепĕр хут çуралтăм



- Чĕмпĕр тăрăхĕнче чăвашла хаçат тухма тытăнни калама çук лайăх. Эпĕ ăна пĕрремĕш номерĕнченех вуласа пыратăп. Хама та тепре çуралнă пекех туйрăм, пуçра çĕнĕ сăвăсем çуралчĕç (унччен 25 çул çырманччĕ). Вĕсене «Канаш» редакцине ярса пама шутларăм. Чи малтан 1992 çулта «Сукмак» ятлă сăвă пичетленчĕ. Ку мана татах та хавхалантарчĕ, - тет хаçата тăтăшах çырса тăракан автор А.А. Ашкеров.

Сăвăсем çырма Алексей Антипович темиçе çул каярах кăна тытăнман. Элшелĕнчи 5-мĕш класра вĕреннĕ чухнех пĕрремĕш сăввине калăпланă. Халĕ автор унăн малтанхи куплетне çеç астăвать:

*Автан тусăм, сар автан,*
*Мĕншĕн хытă авăтан?*
*Мĕншĕн хытă сассупа*
*Аннене ир вăратан?*

Çак вăхăтра хаçатсемпе çыхăну тытма пуçлать, редакцисене сăвăсем, заметкăсем ярса парать

- Малтан сăвăсем, заметкăсем çырма манран икĕ çул аслă тете Валерьян пуçларĕ. Пĕррехинче вĕсене шкулта ирĕклĕ темăпа сочинени çырма хушнă. Тете чăваш хĕрарăмĕн йывăр пурнăçне сăвăласа çырса кăтартнă. Çак вăхăтра чăваш хĕрарăмĕн паспорчĕ те пулман, вăл ниçта та тухса çӳреймен. Хĕвел тухнă чухнех пилĕк авма тытăннă та тĕттĕм пуличчен, лаша пек, ĕçленĕ, чура вырăнĕнчех пулнă. Çавсене Валерьян йăлтах çырса кăтартнă. Уншăн ăна учитель «2» паллă лартса панă, мĕншĕн тесен, паллă ĕнтĕ, иртнĕ саманара тĕрĕссине калама юраман. Анчах тете хăраса ӳкмерĕ, малалла çырчĕ. Ăна курса эпĕ те çыру ĕçĕпе аппаланма пуçларăм, - каласа парать Алексей Антипович.

1952 çулта саккăрмĕш класра вĕреннĕ чухне Хусанти «Хĕрлĕ ялав» хаçатра çамрăк çыравçăн материалĕсем тухаççĕ. Ăна уншăн 100 тенкĕ укçа ярса параççĕ.

- Хам вăйпа укçа ĕçлесе илнишĕн питĕ хĕпĕртенĕччĕ ун чух. Тӳрех лавккана чупрăм, ходик сехет илтĕм, пĕрремĕш хут тăраниччен пĕремĕк çирĕм. Унччен ăна çисе те курманччĕ. Юлашки 25 тенкине аннене заем тӳлеме патăм, - аса илет çак вăхăта А.А. Ашкеров.

Шкулта тухса тăракан «Шурăмпуç» журналăн редакторĕ те пулнă вăл. Унта чăвашсен хальхи паллă хĕрарăм çыравçи Нелля Петровская та пулнă (хĕр чухнехи хушамачĕ Кузьмина).

10 класс пĕтерсе тухнă хыççăн кĕркунне Алексей Мускав облаçĕнчи Загорск хулине (халĕ Сергиев Посад) стройкăна ĕçлеме каять, çавăнтанах çара лекет.

Çĕнĕ салтаксен Севастополь хулинче хăйне евĕр экзамен тытма тивет. Хут ĕçне лайăх пĕлекенсене шырас тĕллевпе вĕсене диктант çыртараççĕ, математикăпа задачăсем шутлатараççĕ. «Экзаменсем» кăтартăвĕ тăрăх А. Ашкерова чаçри штабра аслă писарь пулма çирĕплетеççĕ. Унăн службиОдессăпа Николаев хулисенче иртет. Çав вăхăтра вăл çар округĕн «Защитник Родины» хаçатне нумай материал çырать.

Çартан таврăннă хыççăн ĕнерхи салтак Пăвари техника училищине вĕренме кĕрет, икĕ çултан 4-мĕш разрядлă слесарь пулса тухать. Сăмах май каласа хăварас пулсан — унăн аттестатне «5» паллăсем çеç илемлетеççĕ. Слесарь ĕçне алла илнĕ вăхăтра та хаçата çырма пăрахман, Кивĕ Çĕпреленчи «Коммунар», Пăвари «Ялав» хаçатсемпе çыхăну тытнă. Пăвари хаçат ĕçченĕсен совещанине те хутшăнма тивĕçлĕ пулнă.

Училище хыççăн — Казахстан. 1960 çулта вĕренсе тухакансене нумайăшне Кокчетав облаçне направленипе яраççĕ. А.А. Ашкеров Летовочное ятлă ялта тракторсем юсакан завода лекет. Çамрăк специалист кунта слесарьте виçĕ çул ĕçлет.

Ульяновска килсен йывăр станоксем тăвакан завода (УЗТС) ĕçе кĕрет. Унтанпа 33 çул иртнĕ. Алексей Антипович паян кунччен те çакăнта ĕçлет, станоксем юсать. Унăн кăкăрне «Ĕç ветеранĕ» тата «Мухтавлă ĕçшĕн» медальсем илемлетеççĕ. Сăн ӳкерчĕкĕ яланах заводри Хисеп хăми çинче, дипломсемпе грамотăсем те темĕн чухлех. Заводри парторганизацие те 6 çул ертсе пыма тивĕçлĕ пулнă.

Заочно майпа автомеханика техникумне те пĕтерме ĕлкĕрнĕ.

Алексей Антипович мăшăрĕпе – Валентина Лазаревнапа – пĕр ача пăхса ӳстернĕ. Валерий халĕ хăйĕн çемйипе уйрăм пурăнать. Вĕсен 5 çулхи Алеша ӳсет.

- Атте – Антип Владимирович – хресчен пулнă, лашасем пăхнă. Вăл çӳллĕ те вăйлă çын пулнă. Путнă лашине пĕччен йăтса кăларнине ял-йыш халь те астăвать. Анне Укуш ятлăччĕ, хут çинче – Агафья Владимировна. Эпир пилĕк пĕртăван пулнă, халĕ сыввисем – виççĕн, эпĕ çемьере тăваттăмĕш. Валерьян тете халь те нумай çырать. Унăн кĕнеке те тухнă. Лена ятлă йăмăкăм Теччĕ районĕнче пурăнать. Пирĕн йăхра çыракансем татах та пур. Сăмахран, иккĕмĕш сыпăкри тăван Николай Юнгеров, унăн хĕрĕ Елена (хальхи хушамачĕ Кузьмина), - каласа парать хăйĕн йăхĕ çинчен Алексей Антипович.

«Канаш» хаçатра иртекен сăвăçсен конкурсне А.А. Ашкеров тăватă хутчен хутшăннă, икĕ хутчен пĕрремĕш вырăн йышăннă, икĕ хутчен иккĕмĕш вырăна тухнă. Халĕ вăл Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чи паллă юптаруçă, çак сайра тĕл пулакан жанрпа тухăçлă ĕçлет.

- Сăвăсем пуçа тĕрлĕ вăхăтра пырса кĕреççĕ: çĕрле вăранса кайсан та, трамвай çинче те, ĕçленĕ вăхăтра та. Кайран вĕсене хут çине çырмалли çеç юлать. Кăçал чӳк уйăхĕнче 60 çул тултаратăп, çырас, ĕçлес шухăш-ĕмĕт пысăк. Пуçра тĕрлĕ произведенисем пур, вĕсене пурнăçа кĕртес пулать. Хама çамрăк туятăп-ха. Çитменнине, мана Ульяновск облаçĕнчи çамрăк çыравçăсен шутне кĕртеççĕ. Куншăн мĕнле савăнмăн-ха? - кулать Алексей Антипович.

**«Канаш», 30 №, 1996 ç.**

# Кирилловсем музыкăна юратаççĕ

— Купăс калама шкула кайичченех вĕреннĕ эпĕ. Аслисем мана урамра тытса ĕçкĕ-çикĕ çине çавăтса кĕретчĕç. Тенкел çине лартатчĕç те купăс тыттаратчĕç. Урасем çĕре çитместчĕç, вăтаннипе пуçа купăс хыçне пĕшкĕртсе тăсаттăм вара кĕвве. Ташласа савăннă хыççăн кĕсьене вак укçа яратчĕç. Тухса чупаттăм вара урама сиккипе, - аса илет ачалăхне Р.П. Кириллов.

Çапла, кĕвĕ-çемĕ туртăмĕ Турă паниех унăн, юратнă ĕçне пĕтĕм кăмăлтан тăвать. Ăна ял-йыш çийĕнчех асăрханă. Чăвашкассинчи культура вучахне ертсе пыма çын кирлĕ пулсан Родион Петровичран лайăхраххине тупайман. Çапла вăл 1981 çулта клуб заведующийĕ пулса тăрать.

- Тĕрĕссипе, ун чух клуб валли ятарлă çурт та çукчĕ. Ял халăхĕ валли спектакльсем лартас кăмăл пурпĕрех пысăкчĕ. Çавăнпа репетицисем ирттерме выльăх пăхакансен çуртĕнче, медпунктра пуçтарăнаттăмăр. Çапла спектакльсем кăтартма пуçларăмăр. Унта, паллах, юрламалли номерсем те пурччĕ. Куракансем пире: «Мĕнле лайăх юрлатăр, сирĕн хор йĕркелемелле», - теме пуçларĕç. Питĕ лайăх сĕнӳ пулчĕ ку. Ăна çийĕнчех пурнăçа кĕртме шутларăмăр. Николай Петрович Узалуковпа Константин Иванович Симулин килĕрен çӳресе çынсем пуçтарма тытăнчĕç. Пурĕ çирĕм саккăрăн килчĕç, - калаçăва тăсать Родион Петрович.

Ку 1988 çулта пулса иртет. Çак вăхăтрах артистсемпе ял çыннисемшĕн пысăк савăнăç пулать. Чăвашкассинче кирпĕчрен купаланă хăтлă Культура çурчĕ уçăлать. Ĕçлес кăмăл тата ӳсет. Хор ертӳçи Р.П. Кириллов сцена çине тухмалли тумтир илме Шупашкара çитет, 16 хĕрарăм кĕпи, 14 арçын кĕпи илсе килет. Масмак (çамка урлă çыхмалли тĕрленĕ хăю) тата мăй çыххи çине çĕлесе хума шăрçасем туянать. Артистсем вара вĕсене хăйсене килĕшекен тĕрĕсем туса илемлетеççĕ.

Халĕ Чăвашкассинчи хора пирĕн облаçра пĕлмен чăваш та çук пулĕ. Кунта кăна мар, вăл ытти регионсене те тухса çӳренĕ. Шупашкарта, Мари Республикинчи Звенигово хулинче, Тутарстанри Çĕпрел районĕнче, Çĕнĕ Малăкла районĕнчи Курак Хăви ялĕнче, Чăваш Енри Йĕпреç районĕнче те пултарулăхне кăтартнă. Ульяновскра иртнĕ пĕрремĕш чăваш Акатуйне хутшăннă, телевидение те тухнă. Чăвашкассинчи И.Я. Яковлева халалланă Чăваш чĕлхи уявĕ пĕрре те çак хор хутшăнмасăр иртмен. Пĕлтĕр

Ульяновскри Çамрăксен кĕрменĕнче хорсем хушшинчи конкурсра чăвашкассисене телевизор парса чысланă.

Паян ушкăнра 22 çын, вĕсенчен саккăрăшĕ – арçын.

- Пĕрремĕш кунтанах çӳрекенсенчен хăшĕсем ялта пурăнмаççĕ ĕнтĕ. Анчах яла килсен тӳрех хора пыраççĕ. Пĕрле концертсене, репетицисене хутшăнаççĕ, - тет ушкăн ертӳçи.

Родион Петрович музыкăна юрататакан çемьере ӳснĕ. Ашшĕ Петр Семенович, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕ, ялта чаплă вăйçă-купăсçăсенчен пĕри пулнă. Амăшĕ те купăс калама пĕлнĕ, лайăх юрланă. Шăллĕ, Николай Петрович, Шупашкарта музыка училищинчен вĕренсе тухнă. Хусанти консерваторирен икĕ çул çурăра вĕренсе тухнă. Тата икĕ çул çурăра журналистика факультетне пĕтернĕ. Хусанти «Формация» джаз-ансамбльте выляна. Халĕ Турцире пурăнать, контрактпа музыкантра ĕçлет. Родион Петровичăн иккĕмĕш ывăлĕ, 11 çулхи Женя, музыкант пулма ĕмĕтленет. Кăçал вăл Шупашкарти пултаруллă ачасем валли уçнă Г.Лебедев ячĕллĕ лицей-интерната вĕренме кĕнĕ. Ун пирки аслашшĕ çапла калать: «Музыка енĕпе Родион хамран иртсе кайрĕ, мăнукăм ашшĕнчен те иртсе кайтăр».

Пĕлтĕр Австрирен икĕ журналист килнĕччĕ. Вĕсем пирĕн облаçри чăвашсем çинчен материал пухса çӳрерĕç. Чăвашкассинчи Кирилловсен кил-çуртĕнче вĕсем самаях тĕлĕнчĕç: килĕнче мĕнле кăна музыка инструменчĕ çук! Женя чикĕ леш енчен килнĕ хăнасене чăваш кĕвви-юррине ионика çинче каласа савăнтарчĕ.

Кирилловсем Аслă Нагаткинта тата Ульяновскра иртекен çемье ансамблĕсен конкурсĕсене те кайса çӳренĕ. Унта кил хуçи Женьăсăр пуçне мăшăрне, Надежда Петровнăна та явăçтарать. Çак конкурссенчен илсе килнĕ парне – савăт-сапа – халĕ кил-çурта илемлетет.

Чăнлă районĕ.

**«Канаш», 14 №, 1997 ç., ака, 5.**

# Данилову покой только снится



Лаврентий Данилов прослужил в ОВО при Засвияжском РУВД с 1980 по 2004 годы в должности милиционера, старшего смены, командира группы захвата, вышел на пенсию в звании прапорщика милиции.

За добросовестную службу имеет немало поощрений от командования ОВО, УВО. Службу охраны изучил в совершенстве, был опытным наставником молодёжи. Награждён нагрудным знаком «Отличник милиции», медалями «За безупречную службу 2-ой и 3-ей степеней», «За отличие в службе». Является Почётным сотрудником ОВО УВО Ульяновской области. Ему вручены часы из Москвы с символикой «Охрана».

Но сегодня о нём будем говорить как о творческом человеке. Л.Данилов – уроженец деревни Нижарово Янтиковского района Чувашской Республики, вырос в многодетной семье крестьян, из десятерых детей он – шестой. Рано познал нелёгкий крестьянский труд. Вместе с тем в нём с детства живёт творческое начало.

Ещё в школьные годы начал писать стихи и рассказы. Они печатались в республиканской газете «Пионер сасси» (Голос пионера) Вспоминая детство, Л.И.Данилов пишет: «Любовь к литературе привила нам мать. Она наизусть читала стихи А.Пушкина, М.Лермонтова, И.Крылова, К.Иванова, Якова Ухсая. Вечерами при свете керосинной лампы она знакомила нас с чувашской классической литературой».

А в средних классах Лаврентий уже сам запоем читал русскую и чувашскую классику.

Тяготеющего к литературе парня заметили и в армии. Служил он в лётных войсках Прикарпатского военного округа, был заместителем командира взвода. А увидев журналистские задатки,

командиры нашли ему общественную работу, назначили ответственным за выпуск листовки «На боевом посту». Такие же обязанности он выполнял позднее и в милицейской службе, редактировал ротные стенные газеты «На посту», «Колючка», также вёл фотогазету.

В 1989 году в Ульяновске открылась газета на чувашском языке «Канаш», что послужило толчком для совершенствования писательского мастерства. В первые недели издания газеты Лаврентий Иванович приносит в редакцию свои произведения пачками. Печатается почти в каждом номере. Мне тогда в память врезалась его документальная повесть о службе в армии. Там расписаны реальные события, без украшений. Очень интересно и правдиво получилось, автор там смотрит на солдатскую службу через призму юмора. Читатели долго обсуждали эту повесть. Также в газете «Канаш» печатаются стихи и рассказы. Их автор вроде бы пишет просто и доступно, но в них спрятан глубокий смысл. Это сразу же заметили опытные поэты и писатели, как Анатолий Юман и Валентина Тарават и другие. Также Лаврентий Иванович свои произведения переводит на русский язык.

В стихах Данилова много природной, любовной лирики. Они звучат по-разному: слышен плач одинокого мальчишки в поле, звон колоколов церкви соседней деревни, шелест листьев на деревьях... Что-то некрасовское пробуждается в душе. А большая баллада «Бездонный Яр» близка по содержанию и стилю к балладе одного из зачинателей новой чувашской литературы М.Фёдорова – «Леший». В альманахе ульяновских чувашских писателей «Шевле сути» (Свет зарницы), изданного в 2000 году, «Бездонный Яр» занимает достойное место.

Л.Данилов остроумный писатель с нестандартным мышлением. Он нашёл свой путь и стиль в литературе, обрёл своё самобытное лицо. Главное его достоинство — это умение заставить ДУМАТЬ читателя. Произведения таких писателей всегда востребованы читателями. Стихи и рассказы Данилова ,кроме «Канаша», печатаются в журналах и газетах, выходящих в Чебоксарах, Казани, Самаре, Белебее (Башкортостан), а также в журнале «Охота и охотничье хозяйство» (Москва).

В 1997 году автор издал книгу «Чтобы помнили», в которой показаны история вневедомственной охраны, этапы её развития и

становления. Также в ней можно познакомиться с ветеранами и действующими сотрудниками этой службы. Также он соавтор книги «Профессия – быть на страже» (2002).

Наш герой разносторонний человек. Он член Союза писателей Чувашской Республики, Почётный краевед, действительный член Народной академии Чувашской Республики, также ответственный секретарь литературного объединения «Шевле» (Зарница) при областной чувашской газете «Канаш». Имя его занесёно в книгу «Знатные люди Янтиковского района ЧР». О его творчестве открыт специальный уголок в Янтиковском краеведческом музее. Имя Л.Данилова также фигурирует в книге «Краткая чувашская региональная энциклопедия: Пензенская, Саратовская, Ульяновская области».

Лаврентий Иванович собрал огромные тома, фотоальбомы, рассказывающие о разных династиях. Шкафы его квартиры набиты ими и книгами до краёв. Пишет историю своего села и отдельно нескольких семей. Беспокойный он человек, всегда готовый протянуть нуждающемуся руку помощи. Не может сидеть, сложа руки. Это о таких людях говорят, что покой им только снится...

**Журнал «Ветеран» (г. Ульяновск), 2012, № 4.**

# Лянкин яланах малта пулма хăнăхнă



Апрель уйăхĕнче Ульяновскра кĕпĕрнаттăр – правительство пуçлăхĕ С.И.Морозов ертсе пынипе урамри йĕркене сыхлас ыйтусемпе лару иртнĕ. Унта пĕлтĕрхи ĕçсене пĕтĕмлетсе чи лайăххисене палăртнă. «Муниципаллă пĕрлешӳсенчи чи лайăх ирĕклĕ халăх дружини» номинацире Чăнлă посёлокĕнчи «Защита» виççĕмĕш вырăн йышăннă, ăна çак çитĕнӳшĕн кубок, диплом тата компьютер парса чысланă. Наградăсене С.И.Морозов дружина командирне В.Н.Лянкина тыттарнă.

Кунта кăштах ăнлантарни кирлĕ. Дружинăна йĕркелесе ярсанах чăнлăсем облаçри районсем хушшинче пĕрремĕш вырăн тытса тăнă. Командирĕ «Чи лайăх дружинник» номинацире çĕнтернĕ. 2011 çулта вара конкурса хуласенчи дружинăсем те хутшăннă. Çавна шута илсен виççĕмĕш вырăн – питĕ пысăк çитĕнӳ.

Владимир Николаевич Лянкин Чăнлă посёлокĕнчи «Защита» ятлă ирĕклĕ халăх дружинине 21 çул ертсе пырать ĕнтĕ. Унта халь 49 çын. Ку дружина халь облаçра чи лайăххисенчен пĕри пулса тăнă. Пурĕ вара облаçра кун пек дружинăсен шучĕ — 241, унта 4158 çын. Чăнлă районĕнче тăхăр ушкăн, 214 çын.

Халăх дружинисене пирĕн çĕршывра пĕрре пуçтарнă, тепре салатса янă. Юлашкинчен вĕсем кирлине ăнланса илнĕ. Чăнлă посёлокĕнче уйрăмах кирлĕ вăл, мĕншĕн тесен кунта криминал енчен яланах йывăрлăхсем пулнă. Çакна тĕрлĕ сăлтавпа ăнлантарма пулать: посёлок хула çывăхĕнче вырнаçнă, тĕрлĕ çĕртен килнĕ нумай наци пурăнать, чукун çул станцийĕ пур, «Ульяновск – Хусан» автотрасса иртет...

Çавăнпа та пилĕк çул каялла район пуçлăхĕ Х.В. Рамазанов тата районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ пуçарăвĕсемпе дружинăсен ĕçне

ҫӗнӗрен чӗртсе тӑратаҫҫӗ. Чӑнлӑра ун командирӗ пулма В.Н. Лянкина суйлаҫҫӗ. Ун тӳрӗ кӑмӑлне, пултарулӑхне, хастарлӑхне пурте пӗлеҫҫӗ. Вӑл вырӑнти вӑтам шкулта 1970 ҫултанпа вӑй хурать, халӗ ОБЖ предметне вӗрентет. Унсӑр пуҫне ҫак предметпа вӗрентекенсен районти методика пӗрлешӗвӗн пуҫлӑхӗ, Чӑнлӑ хула тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ, ҫакӑнти депутатсен совечӗн ертӳҫи, районти вӗрентӳ ӗҫченӗсен профсоюзӗн пуҫлӑхӗ. Тата тӗрлӗ комисси, подкомисси...

Ку ӑнсӑртран мар. Владимир Николаевич ачаранпах ӗҫе хӑнӑхса ӳснӗ. 5-мӗш класран пуҫласа спортпа туслашнӑ, тӗрлӗ ӑмӑртусене хутшӑннӑ. Тӑван ялӗнче – Тутарстанри Ҫӗпрел районӗнчи Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнче — 13 ҫултах кӗтӳ кӗтме пуҫланӑ. 7-мӗш класс хыҫҫӑн каникулта плугарьте ӗҫленӗ. Каярах каникулсенче вырӑнти хуҫалӑхра грузчикра вӑй хунӑ. Ҫав вӑхӑтрах ГАЗ-51 автомашинӑпа ҫӳреме вӗреннӗ. Тракторист е шофӗр пулма ӗмӗтленнӗ... Анчах шӑпа урӑхла килсе тухнӑ. Вӑтам шкул пӗтерсен ӑна Чӑваш Паснапуҫ шкулне пӗрремӗш класс ачисене вӗрентме яраҫҫӗ. Ачасем вӗренӳ ҫулӗ вӗҫне пурте лайӑх вулама, ҫырма, шутлама хӑнӑхнине шута илсе районти вӗрентӳ пайӗ ӑна Грамота парса хавхалантарать.

1966 ҫулта ҫар служби пуҫланать: Польша чикки, пограничник. Службӑра, вӗренӳре хастарлӑх кӑтартнӑшӑн, спортра пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑшӑн командовани В.Лянкина Мускаври пограничниксен училищине вӗренме ярать. Унта вӑл кӗҫӗн лейтенант пулса тӑрать, чаҫне таврӑнать. Виҫӗ ҫултан службӑна йӗркеллӗ пӗтерсен тӑван яла килет.

Унччен салтакран офицер пулса яла таврӑнакан никам та пулман. Ҫакна районта тӳрех асӑрхаҫҫӗ. Владимир Николаевича Ҫӗпрел райкомне ӗҫлеме чӗнеҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтрах вӑл райпотребсоюзра инструктор пулать. Ку ҫулсенче вӑл спортӑн нумай енӗпе ӑмӑртусенче ҫӗнтерет, районти чи вӑйлӑ спортсменсенчен пӗри пулса тӑрать. Пӗр вӑхӑт ялти ферма заведующийӗ те пулать. Анчах ачасене юратни хӑйӗн ӗҫне тӑватех. Ӑна Чӑнлӑ районӗнчи Пухтел ялне чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентме чӗнсе илеҫҫӗ. Унтан Чӑнлӑ посёлокне куҫать.

-Эпӗ аттесӗр ӳснӗ, ҫемьере кӗҫӗнни пулнӑ. Анне, Мария Ивановна, мана питӗ тӗрӗс те ҫирӗп воспитани панӑ: ӗҫе тӑрӑшса тумалла, ҫынсене хисеплемелле, пулӑшмалла, ыттисемшӗн яланах тӗслӗх пулмалла... Эпӗ аннене мана ҫын тума тӑрӑшнӑшӑн халӗ хӑй ҫут тӗнчере ҫук пулин те паян кунччен тав тӑватӑп,- тет Владимир Николаевич.

Ачаранах ҫынсемшӗн тӗслӗх, малтисен ретӗнче пулма хӑнӑхнӑ В.Н.Лянкина Чӑнлӑ посёлокӗнче те харӑс темиҫе ӗҫ илсе пыма шанаҫҫӗ. Унсӑр пуҫне спорта та пӑрахман вӑл. 65 ҫула ҫитнӗ пулсан

та ветерансем хушшинче чупассипе, йӗлтӗрпе чупассипе, кире пукан йӑтассипе, тӗл перессипе районти тата облаҫри ӑмӑртусене хутшӑнать, яланах ҫӗнтерӳҫӗсен е призёрсен шутӗнче. Ҫакна килти архиврa папки-папкипе упранакан Грамотӑсем, Дипломсем ҫирӗплетеҫҫӗ.

-Халӑх дружинин пӗлтерӗшӗ пысӑк. Эпир районти шалти ӗҫсен пайӗпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлетпӗр. Мӗн пулассине хамӑр ҫынсем урлӑ маларах пӗлме тӑрӑшатпӑр. Акӑ пӗр тӗслӗх илсе кӑтартатӑп. Икӗ ҫул каялла посёлокра ҫапӑҫу пуласси пирки пӗлтӗмӗр. Тӳрех милицие систертӗмӗр. Хамӑр ушкӑнсем тӗл пулмалли вырӑна кайрӑмӑр. Икӗ ушкӑнра ҫирӗмшер ҫамрӑк. Аллисенче арматура татӑкӗсем, пистолетсем, обрезсем... Пӗр-пӗрне амантма та, вӗлерме те хатӗр. Телее, ҫапӑҫу тытӑнас умӗн милици ҫыннисем пырса ҫитрӗҫ. Ҫапла вара пысӑк инкеке сирсе яма пулӑшрӑмӑр. Мӗн пулса тухма пултаратчӗ кунта — калама та хӗн...

Пирӗн посёлокра канмалли кунсенче ҫамрӑксем нумай. Ҫавӑн чухне дежурствӑна тухатпӑр. Ҫулла 20 сехет 30 минутра тытӑнатпӑр та 00 сехет те 30 минутчен ҫӳретпӗр. Хӗлле 20.00 — 23.30 сехетсенче. Ҫаплах Марьевка, Телешовка, Кашинке, Арбузовка ялӗсенче те пулатпӑр. Уйрӑмах Чӑнлӑри Культура ҫуртне тимлӗх уйӑратпӑр. Халӗ ташӑ каҫӗсем шӑв-шавсӑр иртеҫҫӗ. Залра пирус туртмаҫҫӗ, ӳсӗрсем ҫук. Ҫурт умӗнче эрех-сӑра ӗҫсе ларакансем те курӑнмаҫҫӗ. Посёлокра пурӑнакансем пире урамра ӳсӗр ҫынсем сахалланӑшӑн, ачисене тӗрӗслесе тӑнӑшӑн тав тӑваҫҫӗ,- тет «Защита» дружинӑн командирӗ.

Вӗсен ӗҫне ҫакӑ лайӑх кӑтартса парать: юлашки тӑватӑ ҫул хушшинче посёлокри преступность 20 процент чакнӑ.

Паллах, пур ҫӗре те ӗлкӗрме ҫӑмӑл мар. Мана йӗркепе пурӑнма хӑнӑхни, ӗҫпе пиҫӗхни тата ҫемье пысӑк пулӑшу параҫҫӗ. Манӑн мӑшӑрӑм лайӑх: веҫех ӑнланать, пур ҫӗрте те пулӑшу пама тӑрӑшать, килти ӗҫсене ытларах хӑй ҫине илет. Уншӑн тавах ӑна. Лидия Петровнӑпа эпир 1969 ҫулта пӗрлешрӗмӗр, икӗ хӗр те икӗ ывӑл ҫуратса ӳстертӗмӗр. Халӗ пирӗн тӑватӑ мӑнук ӗнтӗ. Манӑн ҫемье — манӑн пуянлӑх! Хамӑн ҫемьепе мӑнаҫланатӑп эпӗ, - туйӑмӗсене пытармасть ҫемье пуҫлӑхӗ.

Кӗркунне В.Н.Лянкина тепӗр тӗрӗслев кӗтет. Сентябрьте Мускавра «Раҫҫейри чи лайӑх дружинник» конкурс иртмелле. Унта «Защита» дружинӑн командирӗ те хутшӑнӗ. Ку питӗ пысӑк яваплӑх, пысӑк чыс. Апла пулсан пур ҫӗрте те малта пулма хӑнӑхнӑ Владимир Николаевич Лянкина унта ӑнӑҫу та ҫитӗнӳ сунар!

**«Канаш», 2012 ҫ., 23 №, ҫӗртме, 7.**

# Г.Майрабеев: *«Ял ачисем валли кĕрешмелли вырăн кирлĕ»*



Кивĕ Улхашра 4-мĕш çул ĕнтĕ Майрабеевсен парнине çĕнсе илессишĕн çамрăксем ирĕклĕ майпа кĕрешсе ăмăртаççĕ. Кунта çулсерен 200 ытла спортсмен килет.

Камсем вĕсем Майрабеевсем, турнир мĕнле пуçланса кайнă?

Кун пирки Георгий Майрабеевпа курса калаçрăмăр.

-Эпĕ вунă çул Тольяттире пурăнтăм. Кĕрешӳ турнирĕсене çӳреттĕм. Ульяновск облаçĕнчен пынă спортсменсене яланах çĕр каçма вырăн тупса параттăм, хам патра сиплев центрĕнче мунча кĕртеттĕм. Çапла пĕррехинче турнир хыççăн калаçса кайрăмăр. Мана юлташсенчен хăшĕ-тĕр эс хăвăн ятупа турнир йĕркелеетĕн-и тесе ыйтрĕ. Йĕркелеетĕп терĕм. Шухăшĕ унчченех пурччĕ те – çак самантра «пиççе» çитрĕ, - тет Георгий Васильевич.

Сăмахĕ хыççăн – ĕçĕ. 2009 çулта Майрабеевсен 1-мĕш ăмăртăвĕ иртет, унта 170 кĕрешӳçĕ килет. Кунта çакна калас пулать. Майрабеевсем – Георгийпа Пётр – пĕртăвансем. Пĕррмĕшĕ 1972 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче çуралнă, иккĕмĕшĕ – 1976 çулхи июнĕн 12-мĕшĕнче. Иккĕшĕ те Кивĕ Улхашри вăтам шкултан вĕренсе тухнă.

Георгий шкул хыççăн салтакра пулнă, Шупашкарти строительство техникумне пĕтернĕ. Ирĕклĕ майпа кĕрешессипе спорт маçтăрĕн кандидачĕ. Ульяновск облаçĕн чемпионĕ. Чăваш Республикин первенствин çĕнтерӳçи. Раççей шайĕнчи ăмăртусен призёрĕ (48 килограмм таякансем хушшинче).

Пётр шкул пĕтерсен Ульяновскри 2-мĕш ПТУна кайса кĕрет, каменщик профессине алла илет. Тăван çĕршыв умĕнче салтак тивĕçне

пурнăçлать. Ирĕклĕ майпа кĕрешессипе спорт маçтăрĕн кандидачĕ. Грекпа рим (классика) кĕрешĕвĕн спорт маçтăрĕ. Раççей чемпионачĕн бронза призёрĕ (1994 çул, 48 килограмм таякансем хушшинче), виçĕ хут Ульяновск облаçĕн чемпионĕ.

Георгийпа Пётр сакăр ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ. Ашшĕпе амăшĕ – Василий Георгиевичпа Клавдия Петровна – пурне те ачаранах ĕçпе пиçĕхтерсе воспитани панă, анлă пурнăç çулĕ çине тăратнă.

-Эпир пĕвĕпе çӳллĕ пулмасан та ачаранах йăрă пулнă. 5-мĕш класра вĕреннĕ чухне мартăн 8-мĕшне уявланă чухне ял клубĕнче аслисем пире, ача-пăчана, пĕр-пĕринпе кĕрештерчĕç. Мана ку кăмала кайрĕ. Эпĕ шкулти физкультура учителĕ Н.А.Узеринов ертсе пыракан кĕрешӳ секцине çӳреме тытăнтăм, вăл ман пĕрремĕш тренер. Ăна пире спорт çулĕ çине тăратнăшăн шăллăмпа иксĕмĕр те тав сăмахĕ калатпăр. Каçсерен тренировкăсене колхозăн кивĕ правлени çуртне сиктермесĕр çӳреттĕм. Пĕрремĕш хут ăмăртăва Аслă Нагаткина кайнăччĕ – Совет Союзĕн Геройĕн Е.Т.Воробьёвăн призĕшĕн кĕрешсе 29 килограмм таякансем хушшинче виççĕмĕш вырăн йышăнтăм. Каярах Пётр та секцие çӳреме тытăнчĕ. 10-мĕш класра мана область тăрăх ăмăртусене илсе çӳреме пуçларĕç, облаçăн сборнăй командине илчĕç, - каласа парать Георгий Васильевич.

Халĕ вăл Ульяновскри «Авто-Форум» тулли мар яваплă обществăна ертсе пырать. Кунта стрительство техникине, материалĕсене туянма пулать. Ун Тольяттире те фирма пур, вăл коттеджсем хăпартать. Çаплах хăйĕн сиплев комплексĕ те йĕркеллех ĕçлет. Урăхла каласан Майрабеев-асли строительство усламĕпе аппаланать. Кĕçĕнни вара ун патĕнче маçтăрта вăй хурать.

Майрабеевсем ятлă турнир ирттернисĕр пуçне ытти ырă ĕçсенчен те пăрăнмаççĕ. Сăмахран, кăçал Кивĕ Улхаш ялĕ 465 çул тултарнине палăртнă уява вĕсем Шупашкартан ял халăхне савăнтарма чăваш эстрада юрăçисене илсе килнĕ, вĕсене концертшăн тӳлесе янă.

-Мăшăрăмпа Раиса Семёновнапа (вăл Патăрьел районĕнчен) икĕ ача ӳстеретпĕр — Алёна 14 çулта, Артём 3 çулта. Мана вĕсем хавхалантарса пыраççĕ. Ачасен пуласлăхĕ пирки пăшăрханнипех хамăр ялта турнир ирттерме шутларăмăр. Çамрăксем валли усăллă ĕç пултăр, вĕсем урамра çапкаланса ан çӳреччĕр. Ачасене вăхăтра тĕрĕс çул çине тăратмалла. Вĕсен ырă тĕллев пултăр. Турнирсенче кĕрешекен ачасене пăхатăп та – хама пĕчĕк чухнехине куратăп. Мĕн чухлĕ хĕлхем вĕсен куçĕсенче! Пиртен пулăшу кирлĕ ачасене. Ман чи пысăк ĕмĕт – тăван ялта кĕрешмелли вырăн туса хурасси. Эпĕ хам енчен вăй çитнĕ таран пулăшу пама хатĕр. Ачасем сывă пурнăç йĕркине пăхăнса, ашшĕ-амăшĕшĕн те, çĕршывшăн та усăллă ӳсчĕр тесен – зал кирлех! – тет Г.В.Майрабеев.

**«Канаш», 2012 ç., 35 №.**

# Мана халӑх суйласа лартнӑ



**Пирӗн редакци хӑни – Чӑнлӑ район пуҫлӑхӗ, РФ тава тивӗҫлӗ ял хуҫалӑх ӗҫченӗ, Ульяновск облаҫӗн Хисеплӗ гражданӗ Х.В.Рамазанов.**

**— Ханяфи Валиевич, район пуҫлӑхӗ пулма ҫӑмӑл-и?**

— Тӗплӗн тӑвас тесен хуть те мӗнле ӗҫ те йывӑр. Ертӳҫӗ пулма пушшех те. Анчах ман ку ӗҫре пысӑк опыт пур. Чӑнлӑ районне кӑна 20 ҫул ытла ертсе пыратӑп. Чи кирли пӗр-пӗр ыйтӑвӑн е йывӑрлӑхӑн пуҫне тытса илмелле, ӑна чунпа сисмелле. Ыйтӑва тимлӗх уйӑрмасӑр вӑхӑта тӑсмалла мар. Ун пек пулсан ыйтӑва кирлӗ пек татса пама май пур. Халӗ нацилӗхпе витӗнсе кӑкӑр ҫапакансен вӑхӑчӗ иртсе кайрӗ ӗнтӗ.Ертӳҫӗ хуть те мӗнле наци ҫынни пултӑр — ҫынсем ӑнланмалла ӗҫсем пулмалла, халӑхшӑн тӑрӑшмалла. Ӗҫ халӑхӗпе ҫыхӑну татмалла мар, ялсене тухса ҫӳресе вӗсен нушисене курмалла, пулӑшма васкамалла.

Район ҫинчен калас пулсан кунта чӑвашсем 70 процента яхӑн пурӑнаҫҫӗ, ҫавӑнпа мана ертсе пыма ҫӑмӑлрах, мӗншӗн тесен вӗсем ырӑ кӑмӑллӑ, ӗҫчен те шанчӑклӑ ҫынсем. Мана хӑш чухне тутар ҫынни чӑвашсем нумай пурӑнакан района ертсе пырать тесе айӑплама пӑхаҫҫӗ. Анчах та мана ҫӳлтен ҫирӗплетсе лартмаҫҫӗ вӗт, халӑх хӑй суйлать, апла пулсан ман тӑрӑшулӑха район ҫыннисем кураҫҫӗ. Эпӗ те вӗсене хисеплетӗп, юрататӑп, ман ҫывӑх юлташсем хушшинче чӑвашсем ытларах.

**— Эсир ку тӑрӑха мӗнле лекнӗ?**

— Эпӗ Инза районӗнчи Дракино ялӗнче ҫуралнӑ. 1970 ҫулта Жадовкӑри совхоз-техникума пӗтерсен направленипе Чӑнлӑ районӗнчи «Анненковский» совхоза агронома ячӗҫ. Унтан управляющий пултӑм, каярах директора лартрӗҫ. Пыра-киле район центрне куҫарчӗҫ, районти ӗҫтӑвком председателӗ туса хучӗҫ. Эп ӑҫта та пӗтӗм вӑя парса ӗҫлеме хӑнӑхнӑ, нимле йывӑрлӑхран та

пăрăнман. Тен, çавăнпа 1990 çулта район пуçлăхне суйларĕç. Ĕçленĕ вăхăтра Ульяновск ял хуçалăх институтне пĕтертĕм, учĕнăй-агроном специальноçне илтĕм.

**— Район халĕ мĕнле ыйтусемпе нумайрах ĕçлет, мĕнле çитĕнӳсем пур?**

— Пĕлтĕрхи шăрăх çанталăк, паллах, хресчене пысăк çитĕнӳсем тума май памарĕ. Çапах та экономика кăтартăвĕсене сыхласа хăварма пултартăмăр, социаллă тивĕçсене пурнăçлайрăмăр. Пирĕн район, экономика министерстви ирттернĕ тĕпчевсем тăрăх, облаçра 4-мĕш вырăн йышăнать. 2010 çулта унчченхи çулпа танлаштарсан çын пуçне тупăш 882 тенкĕ ӳснĕ. Халĕ ку цифра – 14 пин те 700 тенкĕ. Районта 690 çухрăм газ пăрăхĕ хунă, ялсене газ кĕртесси вĕçленсе пырать.Çамрăк специалистсем ялта юлччăр тесе юлашки вăхăтра Аслă Нагаткинта 36 хваттерлĕ çурта хута янă. Çынсем хăйсем вăйĕпе кăçал 66 çурт туса лартнă. Аслă вăрçă ветеранĕсене те хваттерсемпе тивĕçтернĕ. Халăха ĕçмелли шывпа тивĕçтерес тĕллевпе 25 пĕрлехи тата 109 уйрăм хуçалăх пусă чавнă. Бюджетран шыв ыйтăвĕ валли 13 миллион тенкĕ тăкакланă. Ялсенче пĕлтĕр 334 светильник çакнă. Тăвată ял тăрăхĕнче пушара хирĕç кĕрешмелли депо уçнă. Ĕçсĕр тăрса юлнă çынсен шучĕ 2,05 процентран 1,44 процента çити чакнă. Çулталăк пуçламăшĕнчен 588 ĕç вырăнĕ тунă. Районти вăтам шалу – 9 пин те 162 тенкĕ. Анчах ял хуçалăхĕнче ку кăтарту 5 пин те 747 тенкĕ кăна-ха. Кунта пирĕн тăрăшмалăх пур. Халăх ĕçкĕпе иртĕхсе пынине те асăрхамасăр иртме çук. Ку пире питĕ пăшăрхантарать. Çамрăк тухтăрсем валли 5 хваттер туянса патăмăр. Халăх сывлăхĕ – чи хакли.

Районта 25 шкул, 17 садик тата икĕ хушма пĕлӳ паракан учреждени. Раççейре юлашки 15 çулта 16 пин ытла шкул хупнă, вĕсенчен тăвată пинне — юлашки виçĕ çулта. Ку юхăм пире те пырса лекрĕ.

Ача-пăча спорт шкулĕсене 1000 ытла шкул ачи çӳрет. Пирĕн спортсменсем Раççей шайĕнче те хăйсене лайăх енчен кăтартма ĕлкĕрчĕç.

Нумаях пулмасть «Центр развития предпринимательства» организаци уçăлчĕ. Пĕлтĕр ĕçсĕр юлнă 229 çын харпăр услам ĕçне пуçăнчĕ. Конкурс урлă иртнĕ 6 çĕнĕ усламçа кашнине 300 пин тенкĕ парса хавхалантартăмăр. Услам вăйлă аталансан социаллă сектора çăмăлтарах пулать. Пирĕн район фермерĕсем те облаçĕпех паллă, ку юхăм Чăнлă тăрăхĕнче анлă сарăлнă. Вĕсен çитĕнĕвĕсем курăмлă. Кунта, паллах, чăвашсем ытларах палăраççĕ.

**— Эсир мӗнле ҫынсемпе ӗҫлеме килӗштеретӗр, ҫынра мӗнле пахалăха каҫармастăр?**

— Хам пурнăҫра тӗрлӗ ҫынсене тӗл пулма тӳрӗ килчӗ. Ҫапла пӗтӗмлетӳ тума пултаратăп: нумай калаҫакансем, ҫын умӗнче хытă кăшкăракансем, ыттисене хурлама юратакансем, сăмахпа нумай шантараканскем ӗҫ патне ҫитсен пачах урăхланаҫҫӗ, улталаҫҫӗ, вӗсене шанма ҫук. Кашни кун хытă шавламасăр вăй хуракансем — чи шанчăклă ҫынсем. Эп хам йӗри-тавра ҫавăн пеккисене пухма тăрăшатăп. Сутакансене каҫарма пултараймастăп. Кунта калаҫу мана е урăх ҫынна сутни пирки кăна пымасть. Ҫăмăл меслетпе хăйсем валли пысăк укҫа е чап илесшӗн тăрăшса хăшӗсем халăх интересӗсене сутаҫҫӗ. Кусем чăн-чăн сутăнчăксем. Ун пеккисем пысăк влаҫра та пур, пирӗн хушăра та. Вӗсен чунӗнче нимле таса туйăм та ҫук, вӗсем обществăшăн хăрушă ҫынсем.

**— Тимӗрҫен ҫывăхӗнчи тасамарлăх пухмалли полигон ыйтăвӗ хупăннă-и е халӗ те ăна хута ярас хăрушлăх пур-и?**

— Унти 50 гектар ҫинче чавнă пысăк шăтăксем — котловансем — халӗ те пур-ха. Хăй вăхăтӗнче ҫак полигона хута ярtарасшăн мар пулса пӗтӗм Тимӗрҫен халăхӗ ҫул ҫине тухрӗ. Хăшӗсем машина урапи айнех выртрӗҫ. Пурпӗрех парăнмарӗҫ. Тавах вӗсене хăюлăх кăтартнăшăн. Халӗ те ман пата тăрсан-тăрсан сăран куртка тăхăннă, пуҫӗсене ҫап-ҫутă хыртарса янă пуҫтахсем килкелеҫҫӗ. «Атя полигона хута яратпăр, сире те, пире те усă пулать»,- теҫҫӗ. Эп вӗсемпе нихҫан та килӗшместӗп. Мӗнле тата кама усă пулнине эпир аван ăнланатпăр. Кунта таҫтан-таҫтан радиоактивлă япаласем илсе килсе пытарасшăн. Чăнах та, камăн-тăр кӗсйине пысăк укҫа кӗрӗ. Кунта пурăнакан халăх вара малашне вилсе пӗтӗ. Тепре ку ыйтăва пысăк шайра хускатсан машина айне хам тухса выртатăп, пӗтӗм район ҫыннисене ура ҫине тăрататăп. Эпӗ ку районта 41 ҫул пурăнатăп ӗнтӗ, ман ачасем те ҫакăнта ҫуралнă. Ку маншăн тăван вырăн. Хам кунта ӗҫленӗ чухне пирӗн районта нимӗнле полигон та пулмасть, пире пӗтерме радиоактивлă япаласем илсе килеймӗҫ.

**— Авантарах тема ҫине куҫар-ха. Ханяфи Валиевич, Эсир культура ыйтăвӗсене нумай тимлӗх уйăратăр, культура ҫыннисене нумай пулăшатăр. Пирӗн хаҫат редакцине те самай пулăшу панă: оргтехника, сӗтел-пукан туянма, уявсем ирттерме, хаҫата халăх хушшинче сарма...**

— Культурăсăр общество йӗркеллӗ аталанаймасть. Шел, паян Мускавран культура аталанăвӗ ҫине тимлесех пăхмаҫҫӗ. Ҫавăнпа та вырăнтах тӗрлӗ майсем тупса пулăшма лекет. Кашни ҫул ака ӗҫӗсем вӗҫленсен Бега уявне ирттеретпӗр. Ăна Акатуй та, Сабантуй та теме

пулать. Унта мĕнпур халăх çыннисем хутшăнаççĕ. Хăнасем Чăваш, Тутарстан Республикисенчен тата ытти çĕртен килеççĕ.

Часах Ульяновскра иртекен пĕтĕм тĕнчери чăвашсен Акатуйне хутшăнма хатĕрленетпĕр. Унта пирĕн артистсем, спортсменсем, ал ăстисем каяççех. Унччен районта хамăр Акатуя йĕркелĕпĕр. Çак кунсенче Культура ĕçченĕсен кунне ирттертĕмĕр. Унта А.Юман, В.Тарават, А.Чебанов çыравçăсем пулчĕç. Май килнĕ таран вĕсене тата ыттисене яланах пулăшатăп.

«Канаш» хаçата эпĕ хам та çырăнса илетĕп, вулатăп, чăвашла ăнланатăп. Хаçат лайăх, анчах темшĕн ăна чăвашсем сахалтарах çырăнаççĕ? Çакă мана тĕлĕнтерет. Эпĕ чăваш пуçлăхсене яланах мĕншĕн тăван чĕлхепе тухакан хаçатăра çырăнтарма пулăшмастăр тесе намăслантаратăп. Пирĕн районта ун тиражне пин экземпляра та пулин çитересчĕ. Кунта чăвашсем хăйсене хисеплени тата хастарлăхĕ кирлĕ.

Кăçал районта виçĕ клуба юсама план тунă: Карабаевкăра, Пухтелĕнче, Тутар Кашинче. Çаплах Чăвашкассинче И.Я.Яковлев кунне ирттерĕпĕр, çак ялтах «Вучах» ятлă модель кинозалĕ йĕркелесе ярăпăр, Кивĕ Улхашра Чăваш культура центрĕ уçăпăр. Районта пилĕк пултарулăх ушкăнне халăх ятне панă.

Çамрăксене патриотла воспитани панă çĕрте нумай ĕçлеме тивет. Сăмахран, салтака каякансене хам пил сăмахĕсем каласа ăсататăп, район чысне çӳлте тытăр тесе асăрхаттаратăп. Усси пурах: пирĕн районтан кайнă салтаксем çар чаçĕнчен пĕри те тарман! Ун пек район облаçра та пĕрре кăна – эпир!

Юлашкинчен çакна каласа хăварас килет. Малашне те кам-тăр çӳлтен ырлăх пăрахса парасса кĕтмелли çук. Хресчен вăл мĕнле саманара та хăйĕн пилĕкне авнипе çеç хăтăлса юлнă. Паянхи пурнăçа мĕнле пур, çавăн пек йышăнмалла та – хамăр вăя шанса пурăнмалла. Ĕçлемелле те ĕçлемелле! Хамăр района çӳллĕрех шая хăпартма пирĕн майсем те, опыт та пур. Пурин те пĕр тĕллевлĕ пулмалла. Ун чухне пысăк çитĕнӳсем килĕç.

**— Тавтапуç, Ханяфи Валиевич. Сире те пысăк çитĕнӳсем, ăнăçусем сунатпăр!**

**«Канаш», 2011 ç., 15 №**

# Марье вунтăватă çултах колхоз ĕçне пуçăннă



М.Н.Амосова колхоз фермине ĕçлеме 14 çултах кайнă, Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи ял хуçалăхĕнче 41 çула яхăн сысна çăвăрлаттарнă çĕрте вăй хунă. Ку вăхăтра хуçалăх ячĕ виçĕ хут улшăннă, сакăр председатель ылмашăннă. Чыслă ĕçшĕн Мария Николаевнана ВДНХ икĕ бронза медалĕпе наградăланă.

Вăрçă хыççăнхи йывăр çулсем, юхăннă ялсем, хуçалăхсем. 1956 çулта Марье 5-мĕш класа çӳреме тытăнать. Амăшĕ – Хветуç – колхозра конюхра ĕçлет, килте икĕ çулхи ача — Зина пур. Пĕррехинче кĕтмен çĕртен шкула колхозри ферма заведующийĕ Николай Великанов пырать те Марьене сысна витине ĕçлеме чĕнет. Хĕрача колхоза амăшне пулăшма пырсан мĕнлерех тăрăшса ĕçленине пуçлăхсем сăнаса тăнă пулмалла. Çапла вара Марье шкултанах фермăна ĕçе каять.

—Мана ку ĕçре пĕр çул кăна мар вăй хуракан хĕрарăмсем патне ячĕç. Матрёна (Матюç) Капказова, Нина Платоновна Кадирова, Ольга Хаврукова лайăх йышăнчĕç, киле хăвса ямарĕç,- аса илет Мария Николаевна. —Веçех алăпа тумаллаччĕ ун чух. Тарасаллă сарлака пусăран шыв ăсса йăтаттăмăр, ăшăтаттăмăр. Улăмĕ те çитместчĕ, ĕнесем çинĕ улăм илсе килеттĕмĕр. Хире лашапа улăма кайсан пите тăм илсе яратчĕ. Çĕр хута сыснасем валли апат пĕçереттĕмĕр, малтанхи тапхăрта час-час фермăрах выртаттăмăр, каярах конюхсен çуртĕнче çĕр каçаттăмăр. Пурăна киле мĕнпур витесем валли пĕр запарник турĕç, унтан пăспа пĕçернĕ сысна апатне пичкесене витрепе тултарса лашапа илсе килеттĕмĕр, Вите тăрăх алăпа йăтса апатлантараттăмăр. Сыснасен шучĕ тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ пулнă, Елена Ермолаевапа иксĕмĕр ĕçленĕ чухне амасемпе вĕсен çурисем 800 пуçа çитнĕччĕ. Сыснасен айне те яланах кĕреçепе, маттикпе, шăпăрпа хамăр тасатса тăнă.

М.Н.Амосова ӗҫлекен витере яланах тирпейлӗ пулнине районти пуҫлӑхсем те пӗлнӗ. Пӗррехинче колхоза районти пӗрремӗш секретарь Ахметов килет, витесем тӑрӑх тӗрӗслесе ҫӳрет.

—Пирӗн витене кӗрес умӗн эпӗ вӑл вӑрҫасран хӑраса ӳкрӗм. Ахметов витене кӗрес умӗн: «Амосова витине кӗмесен те пулать, унта хуть хӑҫан та йӑлтӑртатса тӑрать»,— тенине илтсен вара лӑплантӑм,— каласа парать Марье акка.

Сыснасем патӗнче ӗҫлесен выльӑх врачӗн, зоотехникӑн тивӗҫӗсене те самаях пӗлмелле. Выльӑхсене васкавлӑ пулӑшу памалли самантсем те час-час пулнӑ. Нумай ҫул ӗҫлесе ку вӑрттӑнлӑхсене вӑл веҫех вӗренсе ҫитнӗ. Марье аккана ял ҫыннисем те кил хуҫалӑхӗнчи сыснасем чирлесен яланах чӗнетчӗҫ — вӑл никама та хирӗҫлемен. Е хура шӑлне илсе ярать, е укол тӑвать, е мӗнле пӑхмаллине ӑнлантарса хӑварать...

Хӗрӗх ҫул ытла пӗр ҫулпа утнӑ Марье акка: кил — колхоз, колхоз — кил. Икӗ ҫухрӑмра вырнаҫнӑ витене кашни кун виҫӗ хут кайса килнӗ. Хуть те мӗнле ҫанталӑкра та! Ҫакна ял халӑхӗ курать вӗт. Пӗр хӗрарӑм тӗлӗннипе Мария Николаевнаран: «Эсир яланах колхозалла утатӑр, сирӗн килӗрте яшка кам пӗҫерет?»- тесе ыйтать. Вӑл шӳтлесе: «Кӳршӗсем»,- тет. «Ҫӑкӑр кам пӗҫерет, кӗпе-йӗм кам ҫӑвать?»- тӗпчет лешӗ. Хуравӗ каллех: «Кӳршӗсем». Кӑштах вӑхӑт иртнӗ хыҫҫӑн ҫак хӗрарӑм ӑна курсан: «Итле-ха, Марье, эп ҫавӑн чухне сан сӑмахусене ӗнентӗм вӗт. Ҫынна ӗмӗр тӑршшӗпех кам ҫӑкӑр, яшка пӗҫерсе патӑр, кӗпе-йӗм ҫуса тӑтӑр ӗнтӗ? Ну айван та эпӗ!»- тет.

Марье акка чирленипе ӗҫе каяйманни те астумасть. «Чирлеме вӑхӑт пулман пирӗн, сыснасене пӑхмалла пулнӑ. Ҫур кун та ӗҫрен юлман»,- тет.

Вӑл ӗҫлеме тытӑннӑ вӑхӑтра колхоз Ленин ячӗллӗ пулнӑ, 1960 ҫулта Ҫӗнӗ Чукал ялӗпе пӗрлештерсен Бауман ятне параҫҫӗ. 1990-мӗш ҫулсенче унран уйрӑлсан «Ильмово» хуҫалӑх пулса тӑрать. М.Н.Амосова ӗҫленӗ вӑхӑтра хуҫалӑхра ҫак ҫынсем председатель пулнӑ: А.П.Эсливанов, А.А.Мутин, Г.И.Чашкин, З.Халиуллин, Р.Н.Низамутдинов, М.С.Садретдинов, Р.Х.Хисметов, Н.М.Мискин.

1996 ҫулта Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи ял хуҫалӑх витисенчен сыснасене урӑх яла илсе каяҫҫӗ те — Марье акка вара ӗҫлеме пӑрахать, тивӗҫлӗ канӑва тухать.

Ҫӗршыв М.Н.Амосован тӑрӑшуллӑ ӗҫне хакласа 1986 тата 1987 ҫулсенче икӗ хут ВДНХ бронза медалӗпе чысланӑ. Вӑл «Ӗҫ ветеранӗ» ята тивӗҫнӗ. Сумлӑ ятсем те нумай: «9-мӗш пилӗкҫуллӑхӑн ударникӗ», «Тутарстанри 1973-75 ҫулсенчи социализмлӑ ӗҫ ҫӗнтерӳҫи», «Районти

чи лайăх сысна пăхакан», «Тава тивĕçлĕ колхозник», «Ылтăн алăллă ăста» (ăна çултаlăкра пĕр амаран вăтамран 22 çура илнĕшĕн районтан панă). Район тата ял Совечĕсен депутачĕ те темиçе хутчен пулнă.

Çаплах ун КПСС Тĕп Комитечĕ, СССР Министрсен Совечĕ, ВЦСПС, ВЛКСМ Тĕп Комитечĕ панă Хисеп грамоти те пур. Ку наградăпа пĕрле ăна сăмавар тата пысăк тутăр парнеленĕ.

Марье акка ялта хăçан мĕн пулса иртнисене питĕ лайăх астăвать. Хăйĕнчен аслисем те унран: «Марье, эсĕ нумайăшне астăватăн вĕт. Çав япала хăçан пулса иртнĕччĕ-ха?» - тесе час-часах ыйтаççĕ. Чăнах та, Марье акка нумай пĕлет, аслисем каласа панисене аса илмелли пур ун.

Ял-йыш Мария Николаевна тата ун йăмăкĕ – Зинаида ырă кăмăллă пулнине те лайăх пĕлет. Вĕсем патне çынсем пулăшу ыйтма пырсан нихçан та хирĕçлемеççĕ, кашнин кăмăлне тупаççĕ, пулăшма тăрăшаççĕ. Колхозра ĕçленĕ чухне çынсене ĕç тума лаша мĕн чухлĕ паман-ши! Вĕсем социаллă ĕçченсем те мар, çапах кӳршĕре пурăнакан ватă çынсене хăйсен ирĕкĕпех пăхаççĕ. Малтан урам урлă пĕччен пурăнакан чирлĕ Туня аккана темиçе çул пăхрĕç, вăл вырăнпа выртнă чухне килĕнчен яшка тата ытти апат-çимĕç илсе пырса çитеретчĕç. Каярах пирĕн атте вилнĕ хыççăн чирлĕ анне пĕччен юлсан ун патне те çак ырă çынсем виçĕ çул куллен çӳрерĕç, ăна мĕн виличченех пулăшрĕç, пăхса тăчĕç. (Эпĕ çемьепе Ульяновскра пурăнатăп.) Уншăн вĕсене çĕре çити пуç тайса тав тăватăп! Ырă ĕçĕрсемшĕн Турăран пархатар курăр!

Халĕ те вĕсем кӳршĕри пенсионерсем патне кашни кун кĕрсе тухаççĕ, кирлĕ чухне пулăшаççĕ.

Мартăн 1-мĕшĕнче Мария Николаевна Амосова 70 çул тултарать. Менелник ячĕпе саламланă май ăна çирĕп сывлăх, канлĕ пурнăç, вăрăм ĕмĕр сунас килет. Çакăн пек тăрăшуллă, ĕçчен, ырă кăмăллă, кирек хăш вăхăтра та çынна пулăшма хатĕр çынсем нумайрах пулсан Çĕр çинчи пурнăç епле илемлĕнĕ!

Çĕпрел районĕ,
Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ.

**«Сувар», 10 №, 2012 ç., пуш, 9.**

# Мехел ҫитсен ҫыравҫӑ пулса тӑнӑ Ырьят



— Мӗншӗн сирӗн повеҫӗрсем хурлӑхлӑ вӗҫленеҫҫӗ? — пӗлме тӑрӑшрӗҫ пухӑннисем Анатоли Ырьятран.

— Мӗн тӑвӑн-ха ӗнтӗ? Пурнӑҫӗ ҫавӑн евӗрлӗрех вӗт. Повеҫсенчи сюжетсене эпӗ пурнӑҫран илнӗ: хам курнине-илтнине, аслӑ ӑрури ҫынсем тахҫан пулнӑ ӗҫсем ҫинчен каласа панине ҫырса кӑтартнӑ. Паллах, илемлетнӗ сӑнарсем тунӑ, унсӑрӑн вӑл илемлӗ литература шутне кӗреймӗ. Чӑнлӑх вара йӳҫӗ, эпир юмахра пурӑнмастпӑр. Тепӗр енчен илсен акӑ мӗн. Повеҫри геройсен пурнӑҫне пылпа ҫу ӑшӗнче ҫырса кӑтартни тыткӑнлайӗ-ши вулакана? Вӑл хайлавсене кӑсӑкланса, кулянса вулӗ-ши? Вулаканӑн чунне хускатасси, ҫынна пурнӑҫ ҫинчен тӗплӗн шухӑшлаттараси — ҫыравҫӑн тӗп тӗллевӗ, - терӗ автор.

Ку калаҫу юпа уйӑхӗн 18-мӗшӗнче Ульяновскри Наци культурисене ҫӗнетсе аталантаракан центрта пулса иртрӗ. Кунта А.Ырьятӑн «Хӑмӑшлӑха путнӑ кӗмӗл уйӑх» кӗнекине ҫынсем умне кӑларнӑ кас йӗркеленнӗччӗ (халӗ ӑна презентаци теҫҫӗ ӗнтӗ). Тӗлпулӑва педуниверситетри чӑваш наци ушкӑнӗн студенчӗсем, 1-мӗш педучилище хӗрӗсем килни те савӑнтаракан пулӑм. 55-мӗш шкулӑн директор ҫумӗ С. Марышева тата Чӑнлӑри ӳнер шкулӗн директорӗ И. Щеголькова вара чечек ҫыххисемпех килнӗ. Апла пулсан А. Ырьят пултарулӑхне юратаҫҫӗ.

Анатолий Григорьевич ача чухне виҫӗ профессие кӑмӑлланӑ — учитель, врач, артист. Чӑнах та, пӗрремӗшӗ пурнӑҫа кӗнӗ. Вӑл 15 ҫул шкулта ӗҫленӗ. Шӑпа пӳрнипе Ульяновска куҫса килсен вара тӗрлӗ ҫӗрте вӑй хума тивнӗ. Юлашкинчен, «Канаш» хаҫат тухма пуҫласан, редакцие чӗнсе илеҫҫӗ ӑна. 11 ҫул ытла ҫакӑнта ӗнтӗ вӑл

Çакăнтах литература çулĕ çине тăнă. Маларах ăна поэзи илĕртнĕ. Çапла вара «ăнсăртран» мехел çитсен (хăй каларăшле) çыравçă пулса тăнă. Тепĕр вăрттăнлăхне те пытармарĕ автор. Паян вăл пысăк калăпăшлă прозăллă хайлавпа ĕçлет (тен, роман та пулса кайĕ вăл). «Ырьят» псевдоним суйласа илме автора Шупашкарта пурăнакан Анатолий Смолин поэт сĕнӳ панă иккен. Хăйне те килĕшнĕ ку ят. Çапла вара вăл литературăра Дмитриевран Ырьят пулса тăрать.

А. Ырьят поэзире те вăй хурать терĕмĕр. Ун сăввисемпе Станислав Толстов композитор 14 юрă хывнă ĕнтĕ. Хăш-пĕри Шупашкарта тухнă аудиокассетăсене те кĕнĕ. Çак тĕлпулăва С. Толстов хăйĕн мăшăрĕпе – Веронийăпа килнĕччĕ. Вĕсем куракансене çак юрăсемпе савăнтарчĕç, лешсем алă тупанĕсене шеллемесĕр алă çупрĕç. Çаплах А. Ырьят хăйĕн сăввисене вуларĕ, çав шутра çĕннисене те. Тĕлпулу вĕçĕнче вăл çапла каларĕ: «Вулакансене манăн хайлавсемпе сăвăсем килĕшни чуна хавхалантарать, çĕнĕ вăйпа ĕçлеме хистет».

Хĕрсем автора нумай ыйту пачĕç, уйрăмах хайлавсенчи пурнăçĕ тăрăх. Студентсем А. Ырьята та, Толстовсене те чечек пуххисем пачĕç, тав турĕç, ăнăçусем сунчĕç.

Юлашкинчен çакна каламалла. Çак каçа йĕркелесе, ертсе пыраканĕ «Канаш» хаçат журналисчĕ А. Степанова пулчĕ. Пĕр вăхăтрах педуниверситетри чăваш ушкăнĕнчи студентсене тăван литература вĕрентнĕ май вăл çамрăксемпе вырăнти çыравçăсен хушшинче кĕпер хыврĕ.

Çак пуçарулăхшăн вăл пуринчен те тав сăмахĕ тивĕç.

**«Канаш», 44 №, 2001 ç., чӳк, 2.**

# Министр учился в Ульяновске



Пётр Васильевич Дементьев – генерал-полковник-инженер, дважды Герой Социалистического Труда, лауреат Государственной премии СССР родился 11 (24 по новому стилю) января 1907 года в деревне Убеи Буинского уезда Симбирской губернии (ныне входит в Дрожжановский район Республики Татарстан) в чувашской семье. Отец — Василий Степанович – рядовой учитель, мать — Елена Герасимовна — домохозяйка.

После окончания сельской школы учился в Ульяновском профессионально-техническом училище. В 1927 году поступил в Московский механический институт имени Ломоносова, через два года добился перевода в Военно-воздушную академию имени профессора Н.Е.Жуковского.

После успешного завершения учёбы в числе 24 самых талантливых выпускников Петра Дементьева направили в Научно-исследовательский институт гражданского воздушного флота. Там проработал три года и попросился на конкретный производственный участок. С тех пор трудился на авиационных предприятиях и прошёл путь от начальника цеха до директора Московского самолётостроительного завода. Он немало сил и энергии вложил в дело создания новой отечественной авиационной техники.

В начале 1941 года был образован Наркомат авиационной промышленности СССР. Руководителя крупного самолётостроительного завода П.В.Дементьева назначили первым заместителем народного комиссара. В том же году, в возрасте 34 лет, он стал Героем Социалистического Труда. Второй золотой медалью «Серп и Молот» его наградили в 1977 году.

Велика заслуга нашего земляка в развитии советской авиации в годы Великой Отечественной войны. Только за три последних года

войны предприятия страны увеличили выпуск самолётов до 40 тысяч в год. Уже в первые месяцы сражений советская военная авиация дала должный отпор вражеским самолётам, показав качественное превосходство. Из 80 тысяч самолетов, которые немцы построили за последние три года войны, 75 тысяч было уничтожено на советско-германском фронте.

Война способствовала техническому прогрессу. Внедрение реактивных двигателей, широкое применение радиолокации, автоматики и телемеханики означали вступление авиации в новый, высший этап развития, создали возможность для полётов со скоростью звука, в любое время суток и года, в плохих погодных условиях и на значительные расстояния.

Пётр Васильевич радовался каждому достижению советских авиаконструкторов, бдительно и ревностно следил за испытаниями новейшей техники, знал не понаслышке многих отважных лётчиков. И когда в конце 1950-х годов в стране встал вопрос о формировании первого отряда космонавтов из числа физически здоровых, грамотных и храбрых пилотов разных национальностей, совсем не случайно был отобран наш земляк, чуваш, лётчик-истребитель Московского округа ПВО А.Г.Николаев, впоследствии ставшим третьим космонавтом СССР.

В марте 1953 года, когда министерство авиационной промышленности СССР вошло в министерство оборонной промышленности СССР, курировавшееся Л.П. Берией, П.В. Дементьев потерял свой пост. После смещения и ареста Л.П. Берии, в августе 1953 года, он был назначен министром авиационной промышленности СССР, встав во главе советского авиапрома почти на четверть века – до самой своей смерти в 1977 году (с 1957 года – в качестве председателя Государственного комитета Совета министров СССР по авиационной технике – министра СССР, с 1963 года – председателя Государственного комитета по авиационной технике СССР, а с 1965 года – вновь министра авиационной промышленности СССР).

«На его долю, – отмечается в одной из статей, посвящённых юбилею П.В. Дементьева, – выпали невероятно тяжёлые предвоенные годы, страшное лихолетье войны с эвакуацией 118 авиационных заводов из районов, оказавшихся в тылу либо вблизи фронта, в Сибирь, Поволжье и Среднюю Азию. При его непосредственном участии шло перевооружение авиации реактивными машинами, создание новой подотрасли – вертолётостроения, выход на трассы

реактивных пассажирских лайнеров, наращивание научного потенциала авиационной отрасли, которая в 70-е годы стояла вровень с лидерами мирового авиастроения. Дементьева в шутку называли «Петром Великим», и, как во всякой шутке, здесь большая доля истины — он был выдающимся организатором, инженером с даром научного предвидения, человеком государственного ума, железной воли и непреклонного характера. Именно во многом благодаря Дементьеву авиастроительная промышленность в 60 — 70-е годы стала становым хребтом отечественного машиностроения».

Мало кто знает, что в 1975 году на основании Распоряжения Совета Министров СССР П.В. Дементьев подписал приказ "О строительстве в г. Ульяновске авиационного промышленного комплекса". Комплекс состоял из трех заводов: самолетостроительного, агрегатного и приборостроительного. В планах было также строительство станкостроительного завода, заводов по производству авиационных двигателей и товаров народного потребления.

С 1954 года и до конца своих дней П.В.Дементьев был депутатом Верховного Совета СССР. На 19 съезде КПСС его избрали кандидатом, а на пяти следующих съездах — членом ЦК КПСС.

Родина высоко оценила заслуги Петра Васильевича Дементьева, дважды присвоив ему звание Героя Социалистического Труда и наградив девятью орденами Ленина, орденом Красного Знамени, двумя орденами Трудового Красного Знамени, орденами Суворова 2-ой степени, Кутузова 1-ой степени, орденом Красной Звезды, многими медалями.

Умер наш знаменитый земляк 17 мая 1977 года в Москве, похоронен на Новодевичьем кладбище.

В Казани в честь П. В. Дементьева установлен бронзовый бюст

В 2007 году на средства уроженца села Городище Дрожжановского района, генерального директора строительной компании «Тус» Н.Ф.Угаслова (г. Чебоксары) бюст Дементьеву был установлен в селе Старое Дрожжаное Республики Татарстан.

В 1977 году его имя было присвоено Московскому авиационному производственному объединению (бывший завод «Знамя труда»). В честь его имени назван Казанский авиационно-технический колледж.

Именем П.В.Дементьева названы улицы в Казани и Чебоксарах.

**По разным источникам подготовил Н.Ларионов.**

**«Канаш», 2011 ç., 13 №**

# Мулянов — 50 çулта



Геннадий Мулянов ачаранах выльăхсене юратнă. Çавăнпа Ульяновскри ял хуçалăх институтĕнче пĕлӳ илме шутланă.Çакăнта вăл тăватă хутчен экзамен парса кĕнĕ . Ăна вăл пурпĕрех пĕтернĕ — лайăх паллăсемпе.

Чăнлă районĕнчи Кивĕ Улхашри вăтам шкултан вĕренсе тухсан каччă пĕрремĕш хутранах асăннă института зоотехника факультетне кĕрет. Анчах Астрахане çĕрулми сутма каять те уйăх çурăран çеç таврăнать. Килнĕ çĕре ăна вĕренӳ заведенийĕнчен кăларса яма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ...

Тата икĕ çул экзаменсем хыççăн конкурспа иртеймест. 1980 çулта тин ăнăçу пулать. Аслă пурнăç çулĕ çине тухнă чухне çакăн пек çирĕп характер кăтартни, шутласа хунине пурнăçлама пултарни унăн чун саккунĕ пулса тăрать.

Геннадий 9 ачаллă çемьерен, вăл чи кĕçĕнни. Ашшĕ — Макар Николаевич — 1914 çулхи — колхозра звеньевой, бригадир ĕçĕсене илсе пынă. Амăшĕ 1917 çулта çуралнă, тĕрлĕ ĕçсенче вăй хунă.

Вăтам шкул хыççăн Геннадий та вырăнти колхозра çулталăк хушши трактор бригадине ертсе пырать. Пуçлăхсем унăн пултарулăхне çав вăхăтрах асăрхама ĕлкĕрнĕ пулмалла...

Кивĕ Улхаш каччи хăйсен ялĕ хĕрĕпе Галина Левендеевапа шкултах туслă пулнă. Галина пединститута физикăпа матаматика факультетне кайса кĕрет. Капла хĕрпе качча тăтăшах тĕл пулма меллех мар пулса тухать. Геннадий — Учхозра, Галина — Ульяновскра.

—Генăна мĕншĕн савнине халь каласа та параймастăп, анчах чун ун патне питĕ вăйла туртатчĕ. Вăл яштакаччĕ, илемлĕччĕ... Çавăнпа та çичĕ уйăх вĕреннĕ хыççăн пединститута пăрахрăм. Тепĕр çул ял хуçалăх институтне зоотехника факультетне кайса кĕтĕм. 1981 çулхи январьте эпир Геннадийпа пĕрлешрĕмĕр, - каласа парать çамрăклăхне аса илсе Галина Николаевна.

Геннадий Макарович зоотехник профессине алла илнĕ вăхăтра каçсерен вĕренсе марксизм-ленинизм университетне пĕтерет. Вăл вăхăтра унта кашнинех вĕренме илмен...

Малалла ĕç биографийĕ пуçланать. Муляновсене Майна районĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен Опытлă станцие яраççĕ. Кунта вĕсем 10 çул пурăнаççĕ. Çемье пуçлăхĕ тĕп зоотехникра, директор çумĕнче ĕçлесе чылай опыт пухать.Туртакан лаша çине тиеççĕ тенĕ евĕр, ăна парторг, юлташла суд председателĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пыма ыйтаççĕ. Галина Николаевна вара селекционерта вăй хурать.

1994 çулхи июньте Муляновсем Чăнлă районĕнчи Покровски ялне куçса килеççĕ. Геннадий Макаровича «Россия» хуçалăха ертсе пыма шанаççĕ. 2001 çултанпа вăл «Новая жизнь» ятлă.

— Килсенех ĕçлекенсем валли 27 хваттер турăмăр. Виçĕ яла — Типĕ Пăкăрла, Покровские тата Репьёвкăна — газ кĕртрĕмĕр. Чиркӳ тума нумай пулăшрăмăр. Пĕр вăхăт мăйракаллă шултра выльăхсен шутне 1500-е çитерпĕччĕ. Самана пăсăлсан виçĕ хут чакарма тӳрĕ килчĕ.

2000 çулта Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне Покровскинче парк уçрăмăр. Унта 650 тĕм лартрăмăр, кунта 20 тĕрлĕ йывăç илсе килтĕмĕр: туя, каштан, кăвак чăрăш, çĕпĕр хырĕ, пирамида евĕр тирек (тополь) тата ытти те. Пилĕк çул ачана пăхнă пек пăхрăмăр паркри çамрăк хунавсене. Тăрăшни сая каймарĕ, халĕ парк çынсене илемлĕхĕпе савăнтарать,- тет Геннадий Макарович.

Халĕ Г.М.Мулянован виçĕ пин гектар çĕр, хуçалăх районта ура çинче çирĕп тăраканнисем хушшинче. Ĕçне кура — хисепĕ. Геннадий Макаровича иккĕмĕш хут район депутатне суйлаççĕ. Пилĕк çул каялла ăна «Чăнлă районĕн Хисеплĕ гражданĕ» сумлă ят панă.

Тунă çитĕнӳсемпе çырлахса ларакан çын мар Г.М.Мулянов. Темиçе çул каялла вăл Санкт-Петербургри политехника университетĕнче финансист специальноçне алла илет.

Мăшăрĕ, Галина Николаевна, бухгалтерта тăрăшать, çемьере — килĕшӳ.

Ачисем те — ашшĕ-амăшĕн савнăçĕ. Асли ,Наташа, çемьеллĕ пулса мăнук парнеленĕ ĕнтĕ, халĕ Даша пилĕк çулта. Ывăлĕ,Саша, вара аслă пĕлӳ илсе ашшĕ патне ĕçлеме таврăннă, паян вăл кунта тĕп агроном.

Геннадий Макарович — ку тăрăха пĕрремĕш хут Инди буйволĕсене илсе килекенĕ. Вĕсене курма çынсем таçтан та килеççĕ. Хăй те вĕсене кашни кунах пăхса киленет.

Пысăк плансемпе пурăнать пуçлăх:малашне хуçалăхра ăратлă

лашасем ёрчетесшӗн. Халӗ ҫак енӗпе документсем хатӗрлес ӗҫ пырать. Лаша – Геннадий Макаровичӑн чи юратнӑ выльӑхӗ. Пӗр-пӗр лаша чирлесен пуҫлӑх ун патӗнче ҫӗрӗпе тӑма та пултарать...

Хамӑр енчен ҫакна та палӑртма кӑмӑллӑ: Г.М.Мулянов кашни ҫулах хӑйӗн ӗҫченӗсем валли 10-15 экземпляр «Канаш» ҫырӑнса парать. Пире те пулӑшать, чӑваш культурине те ентешсем хушшинче сарать.

Январӗн 13-мӗшӗнче Геннадий Макарович Мулянов 50 ҫул тултарать.

Сире юбилей ячӗпе чунтан саламлатпӑр, ырӑ кӑмӑлӑршӑн тав тӑватпӑр. Умри тӗллевӗрсене пурнӑҫлама Турӑ вӑй-хӑват патӑр,шанчӑклӑ юлташсем пулӑшса пыччӑр, сывлӑхӑр чӑваш юманӗ пек ҫирӗп пултӑр!

Чӑнлӑ районӗ,
Покровски ялӗ.

**«Канаш», 2010 ҫ., 1 №**

# Нарспи Ульяновскра пуранать

Кам пĕлмест пуль чăваш пикине - Нарспие. Ун çинчен мĕн чухлĕ вуланă, калаçнă, илтнĕ. Анчах та паян Нарспи ятлă çынпа тĕл пулнисем нумаях мар пулĕ тетĕп. Вăл вара Ульяновск хулинчех пурăнать. Паллах, К. Иванов поэминчи герой мар – паянхи пурнăç çынни.

- Самар Енрен эпĕ, - каласа парать Нарспи Дмитриевна Мулендеева, - Шунтал районĕнчи Ухинкел ялĕнче çуралса ÿснĕ. Ята атте хунă. Вăл ача чухне ăна йăмăкне хурасшăн пулнă, анчах асатте ирĕк паман. Мана вара, хăйĕн хĕрне, çуралсан тÿрех Нарспи тесе çыртарнă. Анне Юля тесе чĕнесшĕн пулнă.

Мостовая поселокĕнче пурăнакан Мулендеевсен килĕнче тип-тирпейлĕ, кашни япала хăй вырăнĕнче. Кил хуçисем – Виталий Степановичпа Нарспи Дмитриевна – питĕ ырă, тарават çынсем пулчĕç.

- Çын килсен питĕ савăнатпăр эпир, уяв пекех туйăнать. Пирĕн пата тус-юлташсем, тăван-пĕлĕшсем кĕркелесех тăраççĕ, - теççĕ вĕсем.

Кунта Мулендеевсен çемйи 1979 çулта килнĕ. Унччен вара Казахстанра пурăннă.

Тĕпленрех кил хуçи хĕрарăмĕ каласа парать:

- Шкул пĕтерсен Ульяновскри автозавода ĕçлеме килтĕм. Ĕçре Çĕпрел районĕнчи Турхан Упирен пĕр хĕр пурччĕ. Унпа туслашрăмăр. Каярах вăл мана тăван ялне хăнана илсе кайрĕ. Клубра ман паталла пĕр йĕкĕт çывхарчĕ. Эпĕ урăх вырăна куçса тăтăм. Пăхатăп та – вăл каллех ман çумра. Çапла Витьăпа паллашса кайрăмăр. Вăл ун чухне ялта пурăнатчĕ. Ун хыççăн вăл та автозавода ĕçлеме килчĕ. 1971 çулхине туй турăмăр. Ниçта та пурăнма çуккипе хваттере кĕтĕмĕр.

Анчах çамрăк мăшăра уйрăм хваттерте пурăнас шухăш канăç памасть. Çак тĕллевпе Кокчетав облаçне куçса каяççĕ. Ленинград районĕнчи «Казанский» совхозра Мулендеевсене хваттерпе тивĕçтереççĕ. Нарспи Дмитриевна стройкăна вырнаçать. Виталий Степанович механизатор пулса тăрать. Хĕлле фермăра тракторпа ĕçлет, çулла комбайнпа тырă пуçтарать. Пĕрремĕш çулхинех çамрăк комбайнерсем хушшинче çĕнтерÿçĕ ятне илет. Çапла сакăр çул иртсе каять. Çак вăхăтра çемьере икĕ ывăл çуралать. Вĕсене шкула ярас умĕн çемье Ульяновск хулине таврăнать.

Виталий Степанович 17 çул ĕнтĕ автозаводри чукун шăратакан цехра автомат линийĕнче слесарьте ĕçлет. Çакăнтах унăн шăллĕ

Николай та вăй хурать. Вĕсем кунта станоксене юсакан тĕп специалистсем. Ĕçре йывăр лару-тăру сиксе тухсан пуçлăхсем пĕлеççĕ: Мулендеевсемсĕр ку чăрмавран хăтăлма çук, куна ылтăн аллăсем çеç тума пултараççĕ.

Нарспи Дмитриевна та малтан автозаводах ĕçе кĕрет. Каярах «Автозапчасть» завода куçать, сывлăхшăн сиенлĕ цехра ОТК контролерĕсен бригадирĕнче ĕçлет. Халĕ тивĕçлĕ канура. Пахчара аппаланма юрататъ, илемлĕ чечексем ӳстерет. Юрлама та ăста. Мулендеевсем чăваш артисчĕсен пĕр концерт-спектаклĕнчен те юлмаççĕ. Хамăр халăхăн этеплĕхĕпе кăсăкланаççĕ. Пирĕн хаçата пĕрремĕш çултанах çырăнса илеççĕ. Пĕлтĕр унти лотерея вăййине хутшăнса тепĕр çул валли тӳлевсĕр çырăнтару выляса илчĕç.

- Кашни чăвашах «Канаша» çырăнса илме ӳкĕтлетпĕр. Анчах пурте ăнлансах каймаççĕ-ха хальлĕхе. «Чăваш чĕлхи, хаçачĕ кама кирлĕ вăл», - текенсем те пур. Çакă кăмăла хуçать, - теççĕ Мулендеевсем.

Мулендеевсем хăйсен аллипех икĕ хутлă çурт çĕклесе лартнă.

Вĕсен ачисем те хăйсем пекех пултаруллă. Асли, Сергей, Мурманскри тинĕс колледжне пĕтерсе тухнă. Халĕ «Капитан Чурилов» карап çинче капитанăн виççĕмĕш пулăшаканĕ, тĕнчери океансем тăрăх шыв касса çӳрет. Олег спортпа интересленет. Пĕр вăхăт «Волга» командăра хаккейла выляна. Халĕ хулара пĕр фирмăра менеджер ĕçĕсене туса пырать.

- Эпир нихăçан та айккинчен пулăшу кĕтсе ларман, çак пурнăçа хамăр аллăсемпе, хамăр тăрăшулăхпа тунă. Ача чухнех кукаçей (вăл Еширек ятлăччĕ): «Колхоза ан çырăнăр, унта наянсем кăна кĕреççĕ», - тенине астăватăп. Ĕçлемесĕр нимĕн те алă çине килсе ӳкменнине эпир çамрăклах ăнланнă. Çавăнпа телее ĕçре шыранă, - тет Нарспи Дмитриевна.

Ку килтен эпĕ тулли кăмăлпа тухса кайрăм: мĕнле пултаруллă, ĕçчен, ырă кăмăллă чăвашсем пур иккен. Çакăн пек çынсемпе калаçнă хыççăн тĕнче те илемлĕрех курăнать, пурăнас та килет. Çакна ăнлантăм: ырă ĕмĕтли ырă тăвать, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать.

**«Канаш», 32 №, 1997 ç.**

# Пётр Головин – тăван шкулĕнче

ССCР халăх учителĕ, Ишевкери вăтам шкулта физика предметне вĕрентекен П.П.Головин ячĕ пĕтĕм çĕршывĕпех паллă. Вăл унта «Импульс» фирма уçнă, ăна 20 çул ертсе пырать. Çак тапхăрта хăйĕн опычĕпе паллаштарма вăл Раççейри 300 ытла хулана ( Мускав, Санкт-Петербург, Хусан, Челябинск, Шупашкар, Магадан тата ыттисем) çитнĕ, физика вĕрентекенĕсемпе уçă занятисем, практика семинарĕсем, маçтăр-классем нумай ирттернĕ.



Пётр Петрович Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел (Тутарстан) ялĕнчи çичĕ çуллă шкултан вĕренсе тухсан Чăнлă районĕнчи Кивĕ Улхашра вăтам пĕлӳ илнĕ, кайран Ульяновск пединститутне пĕтерсе тухнă. Педагогика наукисен кандидачĕ, естествознани академийĕн профессорĕ, Пĕтĕм Раççейри учительсен пĕлĕвне ӳстерекен автор шкулĕн ертӳçи. Унăн наукăпа методика енĕпе çырнă 110 ытла ĕç, 10 ытла кĕнеке. Вĕрентӳ енĕпе йĕркеленĕ нумай конкурс лауреачĕ. ВДНХ медалĕсене, дипломĕсене сахал мар тивĕçнĕ. 41 çулта ССCР халăх учителĕ пулса тăнă ( çак сумлă ята çакăн пек çамрăкла çĕршывра никам та илеймен). «Знак Почёта» орден кавалерĕ.

Чукоткăна çитсе семинарсем ирттернĕ пулсан та П.П.Головин тăван ялĕнче ун пек мероприяти йĕркелеменччĕ-ха. Çак çитменлĕхе вăл нумаях пулмасть пĕтернĕ. Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи вăтам шкулта районти пĕтĕм физика учителĕсене пуçтарса тӳлевсĕр семинар-канашлу

ирттернĕ. Ун хыççăн опытлă вĕрентӳçĕ вырăнти шкулти 9-11-мĕш классемпе уçă заняти йеркеленĕ. Семинара районти вĕрентӳ пайĕн специалисчĕ И.Яфизов хутшăннă.

Мероприятисем вĕçленсен Пĕтр Петрович Головин шкулти таврапĕлӳ музейне кĕрсе курнă, унти экспонатсемпе паллашнă. Хисеплĕ хăнасен кĕнекинче çак тĕлпулăва йĕркелеме пулăшнăшăн, музейра ял историне çутатса паракан пуян материалсем пуçтарнăшăн тав туса асăнмалăх çырса хăварнă.

Юлашкинчен вăл шкул валли хайĕн кун-çулне сăнарласа паракан фотоальбом, Чĕмпĕр тăрăхĕнчи паллă чăвашсем çинчен çырнă кĕнеке, хăй çырнă вĕрентӳпе методика кĕнекисене, физика урокĕсенче лабораторри ĕçĕсем ирттермелли приборсен тата электроматериалсен пуххисене парнелесе хăварнă.

**«Канаш», 2010 ç., 16 №**

# Поэзи ҫинчен — пӗр сӑмах та...



Анатолий Юман поэт ҫак кунсенче 79 ҫул тултарать. Ун пирки пирӗн хаҫат сахал мар ҫырнӑ, вӑл хӑй те «Канаш» хаҫатӑн чи хастар авторӗсенчен пӗри. Унӑн пултарулӑхӗ ҫинчен эпир чылай пӗлетпӗр.

Паянхи интервьюра калаҫу А.Юманӑн пултарулӑхӗ пирки мар, унӑн кулленхи пурнӑҫӗ ҫинчен пырать.

**—Анатолий Фёдорович, Сирӗн ача чухне мӗнле ӗмӗт пулнӑ?**

—Ача чухне ман художник пулас ӗмӗт пурччӗ. Пирӗн урамра Владимир Узалуков (ӑна ялта Пашалу Вӑлатимӗрӗ тетчӗҫ) пурӑнатчӗ. Вӑл колхоза кӗменччӗ, вӗсен кил-йышӗ хӗсӗк ҫуртра пурӑнатчӗ. Унта хӑй ӳкернӗ картина нумайччӗ. Эпӗ ун патне куллен тенӗ пекех пырса ҫӳреттӗмччӗ. Ҫапла хавхаланса акварельпе картинӑсем ӳкерме пуҫларӑм. «Пионерская правда» хаҫата та ярса панӑччӗ хӑш-пӗрне. Пичетлемерӗҫ. Эпӗ шкулта плакатсем ҫырнӑ, стена хаҫатне илемлетнӗ.

5-мӗш класра пире чӑваш чӗлхипе Пелагея Петровна Иванова вӗрентетчӗ. Вӑл шкулта литература кружокӗ йӗркелерӗ, малтанхи занятире А.С.Пушкинӑн «Руслан и Людмила» поэмине вуласа пачӗ. Ӑна вырӑсларан чӑвашла экспромтла куҫарса пычӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн эпӗ сӑвӑ ҫырас ӗҫпе аппаланма тытӑнтӑм. Малтанхи сӑвӑ ҫураки ҫинчен пулса тухрӗ.

**—Ачасем тӗрлӗрен коллекци пухма юратаҫҫӗ. Эсир пӗчӗк чух мӗн пухнӑ?**

—Япаласем пухнине астумастӑп. Писательсем ҫырнӑ калавсене, сӑвӑсене журналсенчен алӑпа ҫырса илеттӗмччӗ. Ҫавсене пухаттӑмччӗ.

**—Шкулта мӗнле предметсене юратнӑ?**

—Чӑваш чӗлхине юрататтӑмччӗ, вӑл предметпа «5» паллӑсем ҫеҫ илеттӗм. Ҫаплах ӳкерӳ, юрӑ урокӗсем кӑмӑла каятчӗҫ.

**—Кире пуканё йатма хăçан пуçланă?**

—1948 çулта почтальонра ĕçлерĕм. Çавăн чухне ман алла «Спутник деревенского физкультурника» кĕнеке лекрĕ. Унта Иван Поддубный çинчен тата мĕнле майпа вăйлă çын пулмаллине çырса кăтартнăччĕ. Юлташăн кире пуканĕ пурччĕ, унпа аппаланма тытăнтăмăр. Кăштах вăхăт иртсен çакă паллă пулчĕ: эпир лутра пулсан та икĕ пăтлă кире пуканĕсемпе вылятпăр, пиртен пысăкраххисем йăтаймаççĕ. Пиртен тĕлĕнеççĕ. Пĕррехинче Кивĕ Çĕпрелне Сабантуя кайрăм, ăмăртăва хутшăнтăм. Иккĕмĕш вырăна тухрăм, уншăн мана шурă перчетке парнелерĕç. Кайран Тимĕрçенти шкулта хамăр тунă штангăпа айкашаттăмăр. Пĕррехинче концерт умĕн икĕ пăтлă кире пуканне 25 хут йăтнăччĕ.

**—Мĕнле музыка кăмăла каять?**

—И.Дунаевский, Шуберт кĕввисем кăмăла каяççĕ. Çамрăк чухне Л.Утёсов юррисен пластинки пурччĕ, ăна юратса итлеттĕмччĕ. «Кармен» оперăри арисене, «Сентиментальный вальс» итлеме кăмăллатăп. Чăвашсенчен Г.Лебедевăн «Савниçĕм», «Тăван çĕршыв» юррисем чуна çывăх. Çаплах Лукин, Хирбю, Кудаков кĕввисене юрататăп.

**—Апат-çимĕçрен мĕн кăмăллатăр?**

—Юрма янă салма яшкине, çĕр улми пăттине, нимĕре кăмăллатăп.

**—Мĕнлерех кино курма юрататăр?**

—Совет фильмĕсем чуна çывăх: «Волга-Волга», «Трактористка». «Красные дьяволята» тата сасăсăр «Намус» фильмсем те асра юлнă.

**—Сирĕн юратнă писательсем камсем?**

—Вырăссенчен А.Пушкинпа С.Есенин, чăвашсенчен — К.Иванов, Ухсай Яккăвĕ, П.Хусанкай, С.Шавлы, Митта Ваçлейĕ, А.Воробьёв, В.Урташ, А.Артемьев, В.Садай, Л.Агаков, А.Талвир, К.Чулкаç...

В. Маяковскийĕн «Как делать стихи», М. Исаковскийĕн «О поэтическом мастерстве», Г.Шенгелин «Техника стиха» кĕнекисем мана нумай усă панă.

**—Юратнă юрăçсем, композиторсем.**

—Юрă ăстисенчен А.Герман, Л.Утёсов кăмăла каяççĕ, чăвашсенчен — М.Денисов, Т.Гурьева, З.Лисицына, И.Христофоров, В.Петров, Л.Семёнова, А.Орлов, И.Ильичёв.

Композиторсем: П.Чайковский («Сентиментальный вальс», «Танец белых лебедей», «Времена года»), Даргомышский («Русалка» опера), Шуберт («Серенада»). И.Дунаевский, Бизе («Кармен»), Г.Лебедев («Савниçĕм», «Тăван çĕршыв»), Ф.Васильев («Шывармань», «Хĕрсен юрри»), Ю.Кудаков, Хирбю, Лукин.

**—Мода тата çын хыççăн каятăр-и?**

—Эпĕ киввине юрататăп. Шухăшламасăр çын хыççăн каймастăп. Тумтире те кивеличченех тăхăнатăп. Çыннăн сăпайлă пулмалла.

**—Пирус туртнă-и?**

—Çамрăк чухне туртса курнă. Ман Пушкин сăн ÿкерчĕкĕллĕ портсигар та пурччĕ. Пĕр-икĕ çул туртнă хыççăн ÿсĕрме пуçларăм. Вара туртма пăрахрăм. Ман ачасем те тĕтĕмпе аппаланмаççĕ. Пирус – сиенлĕ япала, уйрăмах çамрăксемшĕн.

Сывлăха упрас пирки халь те шухăшлатăп. Ирсерен тĕрлĕ хусканусем тăватăп, ÿт тăрăх шыв яркалатăп. Хăнăхнă йăлапа кире пуканĕ йăткалатăп.

**—Тĕн çине мĕнле пăхатăр?**

—Мана çуралсанах шыва кĕртмен, мĕншĕн тесен анне парти организацийĕн секретарĕ пулнă. 7-8 çула çитсен анне ялне – Ялавăра – илсе кайса вăрттăн шыва кĕртнĕ. Хама атеист тесе шутлатăп. Çут çанталăк сакунне ăнланни те тĕне ĕненнĕ пекех.

**—Пушă вăхăтра мĕнпе аппаланма юрататăр?**

—Эп Аслă Нагаткинта хам çуртпа пурăнатăп. Халь пĕччен юлтăм. Пахчара чакаланатăп. Хам валли кăштах çĕр улми лартатăп. Улмуççисем, чие йывăçĕсем пур.

**—Çынсенче мĕн юрататăр?**

—Тÿрĕ кăмăллă çынсене хисеплетĕп. Суякансене, шухăшне час-час улăштаракансене, икĕ питлĕ çынсене кăмăлламастăп. Ун пек çынсем ыттисене шар кăтартаççĕ.

Ман пурнăçра та ун пекки пулнă.1977 çулта Шупашкарти Г.Орлов çыравçă-осведомитель ман çинчен кирлĕ çĕре Совет влаçне хирĕç пырать тесе элекленĕ. Ун хыççăн ман пичетленсе тухнă кĕнекене касрĕç, Айхи тусĕ тесе айăпларĕç, пысăк пичетре пичетлеме пăрахрĕç. Çакăн хыççăн эрне хушшинче çÿç кăвакарчĕ.

**—Хăвăра ура хуракансене мĕн тăватăр, кÿренĕве мĕнле чăтса ирттеретĕр?**

—Эпĕ никама та усал туман, тавăрман. Чунра усал япала тытса пурăнмастăп. Пурнăç хăех пурне те вырăнне лартать.

**—Çынсен ăнăçăвĕ çине мĕнле пăхатăр?**

—Савăнатăп! Уйрăмах ĕçтешсем çĕнĕ кĕнеке кăларсан. Çынна мĕн ăмсанмалли, кĕвĕçмелли пур? Хĕвел ăшши кашнин валли çитет. Ĕç те нумай. Кашни хăй пурнăçне пурăнать. Çут тĕнчере пĕрре кăна пурăнатпăр. Тĕнче илемлĕ! Ăна хаклама пĕлмелле. Пурнăçа усăллă, тивĕçлĕ пурăнмалла. Çынсене усал тумалла мар, усал ĕçе усалпа

тавармалла мар. Пĕр-пĕрне кĕвĕçни, чăрмантарни хамăр ĕмĕре кĕскетни кăна.

**—Чăваш çыннин чи лайăх енĕ мĕн тесе шутлатăр?**

—Чăваш ĕлĕк-авалтанах ĕçчен, сăпайлă пулнă. Халĕ те çавах. Анчах, шел, юлашки вăхăтра çĕнĕ ăрура çак пахалăхсем çухалса пыраççĕ. Малашне ун пек ан пултăр тесен обществăн çамрăксене воспитани панă çĕрте чылай вăй хумалла.

**—Сирĕн пурнăçарти чи телейлĕ кун...**

—Асра юлнă кунсем темиçе. 1947 çулта район хаçатĕнче ман пĕрремĕш сăвă тухнăччĕ – «Колхоз такмакĕсем». 1958 çулта «Телей сăпки» поэма «Ялав» журналта тухсан питĕ хĕпĕртенĕччĕ. 1971 çулта вăл уйрăм кĕнекен те тухрĕ.1961 çулхи майăн 28-мĕшĕнче пĕрремĕш ача – Сергей – çуралнине чĕрене кĕрсе юлнă. Ытти виçĕ ачан çуралнă кунĕсем те çавах.

**—Пурнăçа тавăрма май пулсан мĕнле пурăннă пулăттăр?**

—Шел, пурнăçа тавăрма çук... Çын çамрăк чух ăсĕ çитменнипе нумай йăнăш тăвать. Пире мĕншĕн-тĕр çын йăнăшĕ ним чухлĕ те вĕрентмест. Ху йăнăш тусан çеç чĕрене кĕрсе вырнаçать. Вăл ĕмĕрĕпех упранать.

Тепре пурăнас пулсан йăнăшсенчен асăрханнă пулăттăм...

**—Тавах ырă калаçушăн, Анатолий Фĕдорович.**

**«Канаш», 2011 ç., 43 №, юпа, 27.**

# Пурнăçа юратни вăй парать



- Пилĕк ача çуратса ÿстертĕм, халĕ пĕччен пурăнатăп, - тет В.В. Деменкова мана пăлтăрта кĕтсе илнĕ май. Пирĕн калаçăва картишĕнче кăкарса хунă пысăк мар йытă – Шарик «аккомпанемент» тăвать, хуçи лăплантарнă хыççăн çеç вĕрме пăрахать, ырăнне кĕрсе выртать.

Аслă Ключищине Валентина Васильевна 1979 çулта Комсомольски районĕнчи Нĕркеç ялĕнчен килнĕ. Чăваш Енре 35 çула яхăн шкултa ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн шăпа çĕнĕ вырăна илсе çитернĕ ăна.

- 1974 çулта мăшăрăм вăхăтсăр çĕре кĕчĕ, ачасем (вĕсем хушшинче йĕкĕрешсем те пур – Н.Л.) çĕршыв тăрăх аякка сапаланчĕç. Игорь ятли Ульяновскра строительство техникумĕнче вĕренетчĕ. Ун çывăхĕнчерех пулас ĕмĕтпе Аслă Ключищинче çурт туянтăм, - ăнлантарать кил хуçи хĕрарăмĕ.

Ют тăрăх, çĕнĕ ял, палламан çынсем. Малтанлăха час-час тăван ял, çамрăклăх, шкултa иртнĕ çулсем аса килеççĕ. Çураласса вăл Каçал хутлăхĕнчи Хирти Сĕнтĕр ялĕнче çуралнă. Колхозсем йĕркеленĕ вăхăтра Зайковсен (хĕр хушамачĕ) çемйине «кулак» тесе хĕн кăтартаççĕ: ĕнине, тыррине тата ытти туприне илсе каяççĕ. Аслашшĕне колхоза çиййĕнчех кĕнĕ пулин те курайман çын çăхав çырса панă хыççăн 1937 çулта «троцкист» тесе Петрозаводск хулине ăсатаççĕ.

- Пÿрте темиçен кĕрсе тăчĕç, асаттене тумланма çеç вăхăт пачĕç. Веçех ухтарчĕç, 5550 тенкĕ укçине илсе кайрĕç. Асанне кăшкăрса йĕрсе алăк патĕнче йăванса юлнине нихçан та манас çук, - аса илет синкерлĕ çулсене Валентина Васильевна.

Аслашшĕ лере çитсен пĕр çыру çеç çырма ĕлкĕрет, чире кайса вилет. Ун пирки кайран пĕрле пулнисем каласа параççĕ.

Хĕрача ялти çичĕ çуллă шкултa «5» паллăсемпе çеç вĕренет. Унсăр пуçне вăл обществăлла пурнăçра чи хастаррисенчен пĕри: сăвă çырать, стена хаçачĕ кăларма хутшăнать, литература кружокне

çӳрет. 1939 çулта Патăрьелĕнчи педтехникума вĕренме кĕрет. Вĕреннĕ вăхăтра хĕрсене Улатăр тăрăхне, Сăр хĕррине, окоп чавма илсе каяççĕ. Унта Валентина алли çине харăс темиçе теçетке çăпан тухать.

- Алă тукмак пекех пулса кайрĕ, ĕçе тухаймастăп. Анчах асли мана киле ярасшăн мар. Пĕр ырă кăмăллă преподаватель вара явапллăхне хăй çине илсе киле кайма ирĕк пачĕ. Анчах ларса каймалли нимĕн те çук. Çутăличчен тухса вăрман тăрăх утрăм. Сивĕ. Пырсан-пырсан чупса илетĕп. Енне-енне пăхкалатăп – кашкăрсем тухмаççĕ-и? Каçа Эйпеçе çитрĕм, хваттере кĕрсе выртрăм. Тепĕр каçа Патăрьелне çитрĕм. Унта çитме хыçран хăвса çитнĕ лаша пулăшрĕ. Чаппан тăхăннă арçынпа ылмашăнса тилхепе тытса пыратпăр. Çав вăхăтра тепри ăшăнас тесе утса пырать. Виçĕ кунтан тин çитрĕм киле. Асанне ман çăпансене курсан тӳрех çапла турĕ: темиçе шăши тытса тирĕсене сӳрĕ, вĕсемпе алла çыхса ячĕ. Чăнах та, пулăшрĕ ку меслет, шыçă чакрĕ, çăпансем шăтрĕç, - аса илет çак çулсене манпа калаçса ларакан хĕрарăм.

Техникум хыççăн В. Зайкова Виçпӳрт ятлă яла пуçламăш шкула ĕçлеме каять. Çĕрĕпе çывăрмасăр ыранхи уроксене хатĕрленнисем асра-ха унăн. Çакăнтан хĕре Çĕрпĕве физруксен семинарне вĕренме яраççĕ. Ун хыççăн вăл Нĕркеçе ĕçлеме килет. Ялан хастаррисем шутĕнче пулма хăнăхнă хĕр вырăнти драмкружока çӳрет. Ăна Лаврентий Таллеров ертсе пырать (каярах вăл паллă чăваш çыраçи пулса тăрать). Унсăр пуçне хорта юрлать Валентина Васильевна, агитаци ĕçĕ илсе пырать çынсем хушшинче. Çак ялтах качча каять. Каярах института кĕретсĕр (заочно) вĕренме кĕрет. Çемьери сăлтавсене пула вĕренĕве пăрахма тивет.

Хастар та тăрăшуллă хĕрарăмăн шăпи урăх çулпа та кайма пултарнă иккен. Ултав-суяна, сӳрĕклĕхе юратман хĕрарăм колхоз пухăвĕсенче халăхшăн тăрăшман пуçлăхсен пичĕсене пĕрре мар тĕрĕс те вирлĕ сăмахсем каласа хĕретнĕ. Пĕррехинче эрех сыпма юратакан пуçлăха ĕçрен кăларнă хыççăн Валентина Васильевнăна колхоз председательне суйлама тытăнаççĕ. Анчах хĕрарăм килĕшмест, учитель ĕçне пăрахмасть. Вĕрентӳ ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн ăна каярах «Халăх çутĕç отличникĕ» хисеплĕ ят параççĕ.

Творчество ĕçĕпе пурăнма хăнăхнă хĕрарăм Чĕмпĕр тăрăхĕнче та ахаль лармасть. Сăвăсем, статьясем çырать, вĕсене «Ялав» журнала, «Пионер сасси», «Родина Ильича» хаçатсене ярса парать, пичет органĕсемпе çыхăну тытать.

10 çул каялла «Канаш» хаçат тухма тытăнни вара Валентина

Васильевнăшăн творчествăри тепĕр тапхăра пĕлтерет. Çакăнта çырусем çырнă хыççăн вăл хаçатра ĕçлекен А. Юманран хурав илет. Анатолий Федорович хĕрарăма вырăс ялĕнче чăваш чĕлхине упранăшăн тав тăвать. Çакăн хыççăн Валентина Васильевнăпа «Канаш» хушшинче тачă çыхăну пуçланать. Паян вăл пирĕн чи çывăх туссенчен пĕри. Хаçата сăвăсем, статьясем çырса тăнипе пĕрлех редакцие час-часах килсе çӳрет, «Шевле» литпĕрлешĕвĕн ларăвĕсене сиктермест, хăйсен ялĕнче чăваш хаçатне халăх хушшинче сарса пысăк ĕç тăвать, çĕнĕрен те çĕнĕрен чăвашсене пирĕн енне туртăнма пулăшать.

«Канашсăр» пурăнаймастăп», - тет вăл.

Раштав уйăхĕн 8-мĕшĕнче В.В. Деменкова 75 çул тултарать. Юбилее хастар хĕрарăм пушă алăпа кĕтсе илмест. Унăн çак кунсенче пирĕн редакци пулăшнипе пĕрремĕш кĕнеки — «Кĕтнĕ шуçăм» - тухать. Тепĕр вăрттăнлăхне уçса панăшăн та вăл пире çилленмĕ тетпĕр. Валентина Васильевна роман çырать, 300 страницăран та иртсе кайнă ĕнтĕ хайлавĕ.

Юбилей ячĕпе хамăр туса чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх та творчествăра çитĕнӳсем сунатпăр. Хастарлăхĕ, ăнтăлăвĕ, пурнăçа, çынсене юратни унăн çителĕклех. Çаксем ăна пурăнма вăй-хал, шанчăк параççĕ, ватăлтармаççĕ.

**«Канаш», 49 №, 1999 ç.**

# Çăлтăр çынни



1962 çулхи çурла уйăхĕн 11-мĕшĕ чăваш халăхĕшĕн ĕмĕрлĕхе асра юлмалли кун пулчĕ. Çак кун мухтавлă ентешĕмĕр Андриян Николаев «Восток-3» космос карапĕпе тĕнче уçлăхне вĕçсе хăпарса пултарулла та ĕçчен чăваш халăхĕн ятне тĕнче умне кăларчĕ, халăхăмăрăн ят-сумне çĕклерĕ. Тĕнче Чăваш çĕршывĕ, халăхĕ пурине пĕлчĕ!

Мĕнле кăна эпитет шыраса тупман-ши çав вăхăтра чăваш космонавчĕ валли: пирĕн улăп, çăлтăр çынни, хăюллă кăйкăр, мухтавлă паттăр, кăйкăр çунатлă чăваш, паттăр чăваш!... Ун паттăрлă ĕçĕ миçе поэта сăвă çырма хавхалантарман-ши?

Çав кунсене пĕтĕм чăваш халăхĕ савăнăçлă туйăмсемпе пурăннă.

Акă мĕн каласа парать Шупашкарта пурăнакан Г. Ефимов поэт:

- Эпĕ ун чухне «Ялав» журнал редакторĕнче ĕçлеттĕмччĕ. Тĕрĕссипе, чăваш ачи тĕнче уçлăхне вĕçсе каяссине пĕлнĕ эпĕ, вăрттăн каласа хунăччĕ. Анчах ку хыпара никама та калама юраман – хăлхана касса илме пултарнă уншăн. А. Николаев вĕçсе кайсанах ман пата Мускавран шăнкăравларĕç, сăвă çырса пама ыйтрĕç. Тепĕр куннех вăл «Литературная газетăра» пичетленсе тухрĕ. Чунра пысăк туйăмччĕ ун чух, çĕкленӳллĕ кăмăлпа, çунат хушнă евĕр çӳреттĕмĕрччĕ. Çавна аса илсен халĕ те чун хăпартланать.

Çапла 33 çулхи чăваш халăхăмăра чапа кăларчĕ, пире савăнăçлăх та мăнаçлăх кӳчĕ. Хăй вара наци геройĕ пулса тăчĕ. Çапла тума унăн Çĕр чăмăрĕ тавра 64 хут çаврăнма тӳрĕ килчĕ. Тренировкăсенче мĕн чул тар тăкнине, ытлашши йывăрпа ăнсăр пулса кайнисене никам та курман. Ахаль çынна вăл кирлех те мар.

Тěнче уçлăхне Андриян аслă лейтенант пакунěсемпе вěçсе хăпарнă, килсенех вара ăна майор звани панă.

1970 çулхи çěртме уйăхěнче хăюллă ентешěмěр тěнче уçлăхне тепěр хут çěкленет – хальхинче «Союз-9» караппа В. Севастьяновпа пěрле.

1974-92 çулсенче А.Г. Николаев Ю.А. Гагарин ячěллě космонавтсем хатěрлекен Центр пуçлăхěн пěрремěш çумěнче вăй хурать.

Халě икě хутчен Совет Союзěн Геройě, техника наукисен кандидачě А.Г. Николаев генерал-майор Звезднăй хулинче пурăнать. Ун мěнле кăна хисеплě ят çук: тěрлě çěршыв Геройě, тěрлě хула хисеплě гражданě, СССР патшалăх премин лауреачě, тава тивěçлě спорт маçтăрě... Астронавтикăн тěнче академин чи хаклă наградине – Даниэльпе Флоренс Гуггенхеймсен премине, СССР наука академин К.Э. Циолковский ячěллě ылтăн медальне, Ю.А.Гагарин ячěллě ылтăн медале тата ытти нумай наградăна тивěçнě. Ун ятне Уйăх çинчи кратера, урамсене, карапа, Шупашкарти ача-пăча паркне, шкула, хуçалăха тата ыттисене панă. Шупашкарта унăн бронза бюсчě те пур. 1972 çулта космонавт-летчикăн тăван çěршывěнче – Сěнтěрвăрри районěнчи Шуршăл ялěнче Космонавтика музейě уçăлнă. Халě унта çěнě здани туса хунă. Музее пурě çирěме яхăн космонавт, хаклă хăна килсе курнă пулě ěнтě. Кăçал унта мана та пулма тӳрě килчě. Питě капмар та мăнаçлă çурт. Шалта А.Г. Николаев ларнă парта та пур. Вěçев аппарачě, космонавтăн харпăр япалисем, тěнче уçлăхěнчи çимелли апат-çимěç, паттăрла ěç хыççăн Шупашкарта ентешěмěре илсе çӳренě ЗИЛ автомашина – темěн те пур унта. Музейрен мăнаçлăх туйăмěпе тухатăн. Инçех те мар космонавт çуралса ӳснě çурт ларать. Ман шутпа, çакăнта кайса курни никама та пăсмасть.

А.Г. Николаев тěнчери тăваттăмěш космонавт, чăвашсен – пěрремěш. Тен, чăваш халăхěнчен ун пек паттăр кăйкăрсем тата тухěç. Анчах вăл 40 çул каялла тунă паттăрлăх, ун пěлтерěшě нихçан та тěксěмленмě, çěнě космонавтсемшěн тěслěх пулě.

*Материала хатěрлеме пулăшнăшăн Чăвашрадио ěçченне П.К. Андреева тав тăватăп.*

**«Канаш», 32 №, 2002 ç.**

# Сĕтел-пукан тĕнчипе паллаштаракан музей

«Ульяновскмебель» производство пĕрлешĕвĕнчи сĕтел-пукан музейĕ – облаçра чи пысăкки. Ăна йĕркелеме шутлаканĕ, пуçараканĕ, укçа-тенкĕ тăкаклаканĕ – директорсен канашĕн председателĕ, Саккунсем кăларакан Пуху депутачĕ А.Г.Еленкин.



Паллах, пĕр кун хушшинче пулса тăман ку музей. Япаласене хуллен-хуллен икĕ çула яхăн пуçтарнă. Кун пек пысăк та тĕлĕнмелле сĕтел-пукан музейĕ эсир урăх ниçта та кураймастăр. Экспонатсене 500 тăваткал метр лаптăкĕнче вырнаçтарнă. Уйрăм-уйрăм кăна çакса-лартса тухман вĕсене. Пирĕн çĕршыв çыннисен пурнăçĕн тĕрлĕ тапхăрĕсем çине пайланă. Музей ĕçченĕ Анна Дороднова кунта миçе экспонатне те тĕрĕс калама çук тет – питĕ нумай! Пысăккисем кăна 70 ытла.

Чи малтан 19-мĕш ĕмĕрти хресчен пÿрчĕн ăш-чиккипе паллашататăн. Кунта пир тĕртмелли станок, арча, кăкшăм-чÿлмек, арламалли урапа, хултăрчă, кĕнчеле, сăпка тата ыттине курма май пур. Малалла 1940-50 çулсенчи хулари коммуналлă хваттер, 50-60 çулсенчи хваттер. 1970-мĕш çулсенчи кухньăн, 1980-мĕш çулсенчи ача-пăча пÿлĕмĕпе тата хваттер ăш-чиккипе паллашма май пур.

1980-мĕш çулсенчи «дефицитсем» те – кунтах: «Свияга» гарнитур, «Волга» тата «Симбирск» стенкăсем. Хăй вăхăтĕнче çынсем вĕсене туянас тесе малтанах çырăнса хунă, лавкка алăкĕ умĕнче черет тăрса çĕр каçнă. Куна аслăраххисем астăваççĕ-ха. Сăмах май, кунти «Симбирск» тĕрлĕ тĕслĕ пайсенчен тăрать, çавăнпа та пĕр тĕслине шыраççĕ. Камăн пур – шăнкăравласа пĕлтерме, унта кайса пама пултарать.

Экскурси вĕçĕнче сире 19-мĕш ĕмĕрти питĕ сайра тĕл пулакан сĕтел-пукан кĕтсе тăрать: урайне лартмалли çÿллĕ тĕкĕр, кĕнеке

шкапӗсем, буфет, диван. Вӗсене В.Н.Баранов ӑстан ылтӑн алли перӗннӗ хыççӑн — пӑхса ытарма çук.

Чӗмпӗрти И.Я.Яковлев музей-хваттерӗнче ларакан «Тет-а-тет» пукан пекки те пур кунта. Ӑна А.Г.Еленкин шӑпах унтан курса килнӗ. Ку пукана конвейер çинче тума çук, ӑна алӑпа ӑсталанӑ. Çакӑн пеккине тепӗрне Анатолий Георгиевич Чӑваш Республикин Пуçлӑхне М.В.Игнатьева парнеленӗ.

Экспонатсене тӗрлӗ майпа пуçтарнӑ: пӗрисене ырӑ çынсем панӑ, теприсене укçалла туяннӑ, виççӗмӗшсене вара хуçисем вӑхӑтлӑха усӑ курма панӑ. Çӗлекен «Зингер» машина вара çырмара йӑваланса выртнӑ. Илсе килсе юсанӑ та — халь унпа çӗлеме те пулать.

-Пирӗн музее йӗркелени — хамӑр предприяти историйӗ çине тата сӗтел-пукан тӑвас ӗç çине çӗнӗлле пӑхни, - тет Анатолий Георгиевич. – Эпир кунта хамӑр предприятире тӗрлӗ вӑхӑтра кӑларнӑ сӗтел-пукана çеç мар, килте куллен кирлӗ пулакан хатӗр-хӗтӗре те пуçтарма тӑрӑшрӑмӑр. Вӗсем пӗрлешсе пӗтӗмӗшле курӑну тӑваççӗ, обществӑн тӗрлӗ тапхӑрӗсене сӑнласа параççӗ, куракансене иртнӗ саманана таварӑççӗ, хваттер ӑш-чикки çулсем иртнӗçемӗн мӗнлерех улшӑнса пынине уçӑмлӑн кӑтартаççӗ. Ку музей сӗтел-пукан тӑвас йӑла-йӗркене, кивӗ традицисене малалла аталантарӗ, çамрӑксем ку ӗçпе кӑсӑкланӗç тесе шутлатпӑр.

Музей предприятин культура центрӗ пулса тӑнӑ. Кунта ӗçе вырнаçакансем тӳрех çакӑнта килеççӗ, историпе паллашаççӗ. Çакӑнтах ветерансем тӗлпулусем ирттереççӗ, хӑйсен ыйтӑвӗсене сӳтсе яваççӗ, шкул ачисем вара экскурсие çӳреççӗ. Мӑшӑрланакансенчен ЗАГС хыççӑн кунта килекенсем те чылай, вӗсем сайра тӗл пулакан сӗтел-пукан çине ларса сӑн ӳкерӗнеççӗ. Кунта патшалӑх музейӗсенчи пек çирӗп йӗрке çук, кашни экспоната тытса пӑхма пулать, ун çине ларма та чармаççӗ. Музей ӗçченӗ кашни япалапа тӗплӗн паллашӑр, алӑпа тытса пӑхӑр тет. Ятарласа вырӑс халӑх тумне тупса хунӑ, ӑна тӑхӑнса кашни çын сакӑнта сӑн ӳкерӗнме пултарать. Малашне , тен, чӑваш халӑх тумӗ те пулӗ...

-Пирӗн музее йӗркелесе пӗтернӗ теме çук-ха. Ӗçсем малалла пыраççӗ. Камӑн килӗнче кивӗ сӗтел-пукан пур – пирӗн пата шӑнкӑравлама пултараççӗ. Эпир пырса куратпӑр, илсе килетпӗр. Питӗ сайра тӗл пулакан тата хаклӑ япаласемшӗн укçа тӳлеме те пултаратпӑр. Музей Нефтяниксен тӑкӑрлӑкӗнче 12-мӗш çуртра (проезд Нефтяников, 12) вырнаçнӑ,- тет А.Г.Еленкин.

**«Канаш», 2013 ç., 12 №.**

# Владимир Сваев:
## *"Эпĕ çĕннине шыракан çын"*



**Çак кунсенче Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен наци культура автономийĕн (УОЧНКА) председателĕ Владимир Ильич Сваев 70 çул тултарнине паллă турĕ.**

Вăл область кĕпĕрнаттăрĕн наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен советникĕ, Ульяновск облаçĕн Хисеплĕ çынни, облаçри Национальноçсен Канашĕн членĕ, Чăваш Республикин Министрсен кабинечĕн Ульяновск облаçĕнчи сут-илӳ тата экономика представителĕ, Чăваш наци конгресĕн (ЧНК) Ульяновск облаçĕнчи полномочиллĕ представителĕ, УОЧНКА çумĕнчи чăваш усламçисен «Эртел» ушкăн ертӳçи.

В.И.Сваев ĕçне Ульяновск облаçĕн «За веру и добродетель» Хисеп паллине, Чăваш Республикин Президенчĕн Тав çырăвне, «За заслуги перед Чувашской Республикой» орден медальне парса хакланă.

Юбилей хыççăн эпир унпа курса калаçрăмăр.

**-Владимир Ильич, эсир УОЧНКАна 2003 çултанпах ертсе пыратăр ĕнтĕ. Обществăлла ĕç сирĕн пурнăçăрта мĕнле вырăн йышăнать?**

- Эпĕ ачаллах çынсемпе хутшăнса, килĕштерсе ĕçлеме хăнăхнă. Кивĕ Улхаш шкулĕнче вĕреннĕ вăхăтрах эпир концертсем лартаттăмăр, стена хаçачĕсем кăлараттăмăр. Пионер организаци дружинин командирĕ те пулнă эпĕ. Хулана килсен комсомол ĕçне хутшăннă. Заводра профсоюза кĕнĕ, цех комитечĕн председателĕн çумĕ пулнă. Яла килсен бригадăри парти организацин секретарĕн тивĕçĕсене туса пынă. Кайран Аслă Нагаткина куççан мана посёлок тата район совечĕсен депутачĕ пулма суйланă. Халăх депутачĕсен облаçри Канашĕн депутачĕ те, облаçри Обществăлла палата членĕ те пулнă эпĕ.1983 çулта Чăвашкассинче пĕрремĕш хут И.Я.Яковлев кунне ирттернĕ çĕре те хастар хутшăннă. 1992 çулта Кивĕ Улхашра

облаçри чăвашсен пĕрремĕш конференцийĕ иртрĕ. Унта область администраци пуçлăхĕ Ю.Ф.Горячев хутшăннăччĕ. Мана конференцин тĕп докладне çырма шанчĕç, кайран ăна трибуна çинчен вуласа патăм. Çапла вара эпĕ обществăлла ĕçсене пурнăç тăршшĕпех илсе пыратăп. Облаçри миграци службин пуçлăхĕн вырăнĕнчен тивĕçлĕ канăва кайнă хыççăн автономие ертсе пыма пуçласан вара пĕтĕмпех обществăлла ĕçсем çине куçрăм.

**- Эсир Чăваш Республикин Министрсен кабинечĕн Ульяновск облаçĕнчи суту-илӳ тата экономика представителĕн ĕçĕсене те туса пыратăр вĕт-ха.**

-Çапла, анчах унăн ĕçĕсене эпĕ маларах та официаллă майпа çирĕплетиччененех туса пынă. Манăн кунти тивĕç – Чăваш Республикипе Ульяновск облаçĕ туслă пурăнччăр тата экономикăпа культурăра пĕр-пĕринпе тачă ĕçлеччĕр тесе çыхăнма пулăшасси. Кунта ĕçсем сахал мар турăмăр. Чи малтан 2006 çулта Шупашкарта эпир хастар хутшăннипе регион пуçлăхĕсем – С.И.Морозов тата Н.В.Фёдоров — икĕ регион хушшинче ĕçлеме Килĕшӳ çырчĕç. 2009 çулта икĕ регионăн культура министрĕсем Килĕшӳ çине алă пусрĕç. Эпĕ ку шухăшсене малтан Национальноçсен Канашĕн ларăвĕнче каланăччĕ. Ун хыççăн Ульяновск Хула Думин тата Шупашкар хулин депутачĕсем çыхăнса ĕçлеме, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашма тытăнчĕç. Пирĕн енчен ку ĕçе Хула Думин председателĕн пĕрремĕш çумĕ тата УОЧНКА председателĕн пĕрремĕш çумĕ П.К.Столяров илсе пырать. Халĕ вĕренӳ министерствисем те килĕшӳ турĕç ĕнтĕ, туслă ĕçлеççĕ. 2011 çулта Ульяновскра Раççей чăвашĕсен пĕрремĕш Акатуйĕ те пирĕн пуçарупа иртрĕ. Кунта Чăваш Республикин Президенчĕ М.В.Игнатьев килчĕ. Юлашки вăхăтра «Эртел» ушкăн усламçисем Чăваш Республикин районĕсенче сĕт-çу завочĕ, стоматологи поликлиники уçма пултарчĕç.

**-Хавхалану, вăй-хал ăçтан илетĕр эсир?**

- Эпĕ çĕннине çуратакан, шухăшласа кăларакан çын. Мĕнле ĕçе те тĕплĕн, пултарса тума тăрăшатăп. Яланах ыранхи пурнăç çинчен шутлатăп, малалла пăхатăп. Начар туйăмсене, хама начар калакансене айккине хăварса аваннине шыратăп. Çынсене пулăшма, чыслама тăрăшатăп. Ырă ĕçсем туни кăмăла çĕклет, хавхалану кӳрет, савăнтарать. Пурнăçăмра И.Я.Яковлев Халалне тытса пыма тăрăшатăп, ăна пурнăç планĕ вырăнне хуратăп.

**-Сирĕн юбилей каçне Ульяновск мэрĕ М.П.Беспалова, Саккунсем кăларакан Пуху председателĕн пĕрремĕш çумĕ Т.А.Дмитриева, облаçри малти политика министрĕ М.А.Сычёв, ЧНК президенчĕн пĕрремĕш**

**çумĕ К.К.Портнов, ЧР культура министерствинчи этноконфесси хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ М.Н.Краснов саламлама пынăччĕ. Чăваш усламçисем вара сире чаплă автомашина парнелерĕç. Çакна мĕнле хаклатăр?**

-Çакăн пек пысăк çынсем саламлама пыни, чаплă парне пани мана мар, чăваш халăхне чыс туни, автономи ĕçне вырăна хуни тесе шутлатăп. Апла пулсан пысăк пуçлăхсем пирĕн ĕçе пĕлтерĕшлĕ тесе шутлаççĕ. Эпĕ обществăлла майпа тăван халăхшăн, область аталанăвĕшĕн тăрăшатăп, хамăн ĕçе çапла хакланишĕн, паллах, савăнатăп. Кун хыççăн ыррине тăвас кăмăл татах та ӳсет.

**-Чăваш чĕлхине шкулта вĕрентессине мĕнле тимлĕх уйăратăр?**

- Пирĕн пĕтĕм ĕçсем ачасене чăвашла вĕрентессипе, вĕсене чăвашлăха явăçтарассипе çыхăннă. Облаçри вĕренӳ министерствипе, учительсен пĕлĕвне ӳстерекен институтпа пĕр çыхăнура эпир. Ачасене пĕчĕк чухнех чăвашлăхпа витермелле, тăван чĕлхепе калаçмаçырма, ăна хисеплеме вĕрентмелле. Пирĕн тивĕç – чăваш чĕлхи вĕрентӳçисемпе тачă ĕçлесси. Эпир яланах вĕсен августри канашлăвĕсене, тĕрлĕ семинарсене, конференцисене хутшăнатпăр, тăван чĕлхене мĕнлерех шайра вĕрентнине тĕрĕслесе тăратпăр, канашсем паратпăр. Автономи тăрăшнипе, ертсе пынипе облаçра çулсерен «Путене», «Чăваш ачи, сассуна пар!», «Чăваш шăпчăкĕ», «Сарпике» конкурссем, тĕрлĕ олимпиадăсем иртеççĕ. Чăваш чĕлхи учителĕсен конкурсне теирттертĕмĕр. 2008 çулта Ульяновскри 64-мĕш шкулта Чăваш культура центрĕ уçрăмăр. Районсенче Чăваш чĕлхи кунĕсене ирттересси йăлана кĕчĕ. Районсенчи Акатуйсем те çамрăк ăру тăван халăха хисеплеме вĕрентĕр, чăваш юрри-ташшине пĕлтĕр тесе ирттеççĕ. И.Я.Яковлев палăкне те çитес ăрусемшĕн лартрăмăр, вĕсемшĕн тĕслĕх, тăван халăхпа мăнаçланмалли вырăн пултăр терĕмĕр. Пирĕн хамăр ачасене, мăнуксене тăван чĕлхепе калаçма вĕрентмелле. Çак ĕçе куллен кашни чăваш туса пымалла, чи малтан вара çемьере тытăнмалла.

**- Владимир Ильич, калаçушăн тавтапуç, сире сывлăх, чăваш халăхĕшĕн ĕçлеме вăй-хал сунатпăр.**

**«Канаш», 2013 ç., 30 №, çурла, 1.**

# Чăвашсем пĕрле пуçтаранăшăн савăнатăп



**Январь уйăхĕнче УОЧНКА çĕнĕ вырăна куçрĕ. Ун халĕ яланхи вырăнĕ пур: Ульяновск хулиичи Лев Толстой урамĕнчи 12-мĕш çурт. Кирпĕчрен тунă пĕр хутлă кивĕ çурта юсас ĕçсене Ульяновск хули пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, Хула Думин депутачĕ, Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен наципе культура автономи председателĕн пĕрремĕш çумĕ П.К. Столяров ертсе пынă. Эпир унпа курса калаçрăмăр.**

**-Пĕтр Капитонович, автономи çуртне юсас ĕçе эсир ертсе пынă. Мĕнрен пуçланчĕ ку?**

-Кун пек йышăну икĕ çул каялла УОЧНКА ларăвĕнче турăмăр. Кайран ун пуçлăхĕпе В.И.Сваевпа пĕрле С.И.Морозов кĕпĕрнаттăр патне çыру çыртăмăр, чăваш автономийĕ валли çурт уйăрса пама ыйтрăмăр. Вăл шырăр, тупăр терĕ, кайран хутсене йĕркелемешкĕн пулăшма шантарчĕ. Нумай çĕре çитсе куртăмăр, хулана пăхса çаврăнтăмăр. Пире пур енĕпе те тивĕçтерекен çурт тупрăмăр, анчах уншăн 48 миллион тӳлемелле пулать терĕç. Паллах, ун пек укçа çук пирĕн. Вара Лев Толстой урамĕнчи 12-мĕш çурт çинче чарăнтăмăр. Хула пуçлăхĕ Марина Беспалова патне çырупа тухрăмăр, вăл пире ку çурта тӳлевсĕр пама йышăну кăларчĕ. Ултă сотăй çĕре хутсем йĕркелесе УОЧНКА çине куçартăмăр. Унтан çĕр лаптăкне 12 сотăя çитертĕмĕр, хутсене тепре турăмăр.

Ун хыççăн çурт патĕнчи ĕçсене пуçларăмăр. Чи малтан çӳп-çапран, йăваланса выртакан кирпĕч татăкĕсенчен тасатма тӳрĕ килчĕ – 15 КамАЗ илсе тухрăмăр. Йĕркесĕр ӳсекен йывăç тĕмĕсене касрăмăр, йĕри -тавра тимĕр карта пӳлтĕмĕр, шала асфальт сартăмăр. Карта ăшне айккипе чăрăш, туя лартса тухрăмăр. Юсав ĕçĕсем валли 1 миллион та 500 пин тенкĕ кайрĕ.

**-Камсем пулăшу пачĕç ку пархатарлă ĕçре?**

-Çурта юсас ĕçе тĕрлĕ наци çыннисем хутшăнчĕç: вырăссем,

тутарсем, дагестанецсем, эрменсем тата чăвашсем. «Эртел» ушкăн арĕсем те айккинче юлмарĕç. «Ульяновскмебель» производство пĕрлешĕвĕн директорсен канашĕн председателĕ А.Г.Еленкин, "Медицинский центр" Академия" обществăн президенчĕ А.Е.Елюкин, «Инвестстрой М» фирма пуçлăхĕ В.А.Фёдоров, «Мишар» фирма пуçлăхĕ М.В.Селивестров. Кашни 50 пин тенкĕ укçа пачĕ. Организацисене те асăнса хăварар. «Армдорспецстрой» асфальт сарчĕ, «Симбирскавто М» карта тытрĕ, хулана тирпей-илем кĕртекен центр йывăççем лартрĕ. Çурт ăшне юсас ĕçре малтан «Веста-Петроль» (А.Н.Юманов), кайран «Авто-Форум» (Г.В.Майрабеев) тăрăшрĕç. Ăшă паракан пăрăхсене Р.Ж. Сеюков ертсе пыракан строительство компанийĕ хучĕ, электричество кĕртессине МСУ-30 (Г.Н.Клементьев) хăй çине илчĕ, электричество вăйĕпе хăй тĕллĕн ĕçлекен котёлсене МСУ-14 (А.М.Лазарев) лартса пачĕ. Мана хула пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ пулнă май вĕсемпе калаçса татăлма йывăрах килмерĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне чыслăн тума тăрăшрĕç.

**-Мĕнле тĕллевпе тытăнтăр çак пысăк ĕçе?**

-Тĕллевĕ пĕрре — чăваш культурине аталантаракан организацисене пĕрле пуçтарасси, вĕсене алла-аллăн тытăнса ĕçлеттересси. Халĕ пирĕн хамăрăн çурт пур, ăна чăваш çурчĕ теме пултаратпăр. Кунта автономи председателĕ, ун бухгалтерĕ, И.Я.Яковлев ячĕллĕ общество пуçлăхĕ лараççĕ. «Канаш» хаçат редакцине те икĕ пӳлĕм уйăрса панă. «Еткер» телекăларăм тата Кĕрешӳ федерацийĕ валли те пӳлĕмсем пур, вĕсем те кунта куçма пултараççĕ.

**-Тавтапуç сире, Пĕтр Капитонович. Халĕ «Канаш» хаçатăн журналисчĕсен те ĕç условийĕсем чылай лайăхланчĕç: çутă та ирĕк пӳлĕмсем, сивĕ тата вĕри шыв пур, кухня. Тата мĕн тума шутлатăр кунта?**

-Чăнах та, ку çурт малтан мĕнле шайра пулнине аса илетĕп те: хальхипе танлаштарсан — çĕрпе пĕлĕт. Анчах кунпа çеç çырлахас килмест-ха. Чи малтан кунта газ кĕртмелле, котёлсене ун çине куçармалла, мĕншĕн тесен вăл йӳнерех. Хутсемпе аппаланма тытăннă ĕнтĕ. Малашне вара ку çурт çумне тепре — 2-3 хутлине — лартса хума май пур, унта культура центрĕ, конференц-зал, музей тата ыттине вырнаçтарма пулать. Кун валли инвесторсем шыратпăр. Хальлĕхе вара пысăк мероприятисем, конференцисем ирттерме 6-мĕш шкул пур — вăл автономи çурчĕ çумĕнчех вырнаçнă. Эпĕ чăвашсем пĕр çурта пуçтарăннăшăн питĕ савăнатăп. Пирĕн ĕç сая ан кайтăр. Кунти организацисем, пĕрлешӳсем чăваш культурине, йăли-йĕркине халăхра сарассишĕн çине тăрса ĕçлессе, тăван халăхăн чи лайăх традицийĕсене малалла тăсасса, ку ĕçе çамрăксене явăçтарасса шанатăп.

**-Тавах, Пĕтр Капитонович, сире ырлах-сывлăх сунатпăр!**

**«Канаш», 2013 ç., 15-16 №№.**

# Фермера колхоз председателĕпе танлаштарма пулать-и?



Николай Ивандеевăн фермер хуçалăхĕн базине пырса кĕрсен куçа тӳрех тирпейлĕх курăнать. Техника ретĕн-ретĕн ларать, механизмсем, агрегатсем пĕр вырăнта, вĕсем тап-таса. Çӳпĕ-çапă йăваланса выртнине кураймастăн. Нумаях пулмасть 3000 тонна вырнаçакан пахча çимĕç усрамалли путвал, тырă хумалли çĕнĕ ангар хăпартса лартнă кунта.

- Кашни çĕрте йĕрке пултăр, эпир килте япаласене тĕллĕн-паллăн пăрахмастпăр вĕт. Кунта та тирпей тума тăрăшăтпăр. Культура пур çĕрте кирлĕ. Ĕçри йĕрке — пуçран, шухăшсенчен пуçланать. База хĕррине улмуççи сачĕ лартрăмăр. Çывăх вăхăтра пура турттарса килсе Механизаторсен çурчĕ туса лартасшăн. Малашне хырсем тата кăвак чăрăшсем лартса парк тăвас шухăш пур -, тет фермер хуçалăхĕн пуçлăхĕ.

Николай Ивандеев – облаçри паллă фермер. Область делегацийĕпе пĕрле вăл яланах ют çĕршывсене семинарсене, куравсене, тĕрлĕ тĕлпулусене тухса çӳрет. Америкăра, Германире, Финляндире тата ытти çĕрте пĕрре мар пулнă. Уйăх каялла çеç Питĕртен ял хуçалăх техникин куравĕнчен килнĕ-ха, унта Финлянди фермерĕсем те хутшăннă. Унта вĕсемпе элита вăрлăх туянма тата ял хуçалăх продукцисене сутас ыйтупа пĕрле ĕçлесси пирки калаçнă.

РФ ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Н.Г.Ивандеев хăй ĕçне пуçарса яни 20 çул ытла ĕнтĕ. Çак вăхăтра ун çумĕнче ывăлĕ — Герман ĕçлесе нумай вĕреннĕ, халь вăл хăй ЧП «Ивандеев» предприяти йĕркеленĕ. Сăмах май, çак кунсенче С.И.Морозов кĕпĕрнаттăр Чăнлă посёлокне çитсе облаçри лайăх аталанса пыракан, ятарлă конкурсра çĕнтернĕ 40 çамрăк фермера кашнине 1 миллион та 200 пин тенкĕлĕх сертификат панă.

Вĕсем хушшинче Герман Николаевич та пур. Кĕрхи ĕçсем

вĕçленсен облаçри пуçласа ĕçлекен çичĕ фермера Мускава вĕренме яраççĕ, ку списока Герман Ивандеева та кĕртнĕ.

Ку кĕркунне тăтăшах çумăрсем пулчĕç. Çак кун çанталăк хĕвеллĕ тăнипе усă курса хуçалăхра çĕрулми кăларатчĕç. Паян КамАЗ автомобильпе Николай Григорьевич хăй çӳрет, Герман Николаевич вара — ЗИЛ-130 автомобиль рулĕ умĕнче. Сăлтавĕ — пĕр водитель çак кун пĕртăванне пытарма ялне кайнă, тепри лайăх çанталăк тăнă чух килти пахчинчи çимĕçсене нӳхрепе кĕртесшĕн.

Хирелле çул тытатпăр.

-Типĕ çанталăк тăрать паян, икĕ смена ĕçлемелле, пĕр 22 сехетчен тăрмăшмалла пулать. Çынсене пĕлтермелле каçпа хире килме,- тет Герман Николаевич ашшĕне.

Хăй вара комбайн çинчи çĕрулмие машина çине тиесе базăналла вĕçтерет. Эпир Николай Григорьевичпа Устеренка ялне каç валли çынсем пуçтарма кайрăмăр. Çула май хире сухалакан трактористсем валли лавккаран минераллă шыв туянтăмăр.

Çĕрулмие «Беларусь» тракторпа Сергей Лянкин кăларать. Вăл сĕтĕрсе пыракан Германи комбайнĕ çинче икĕ хĕрарăм тымар çимĕçе тăпра муклашкисенчен тасатса пыраççĕ. КамАЗ çинчи пысăк бензобакран насуспа уçласа трактор çине солярка ярса хăваратпăр. Çаплах Виталий Алексеевăн К-701 тата Марат Абиновăн Т-150 суха тăвакан тракторĕсене заправка турăмăр. Çумри хирте кĕрхи тулă акаççĕ — ак агрегат патне ГАЗ-53 машина килчĕ, сеялка çине вăрлăх ячĕç. Каç енне сулăна пуçларĕ. Часах хире каçхи апат илсе килмелле. Пăхатпăр та — çĕрулми аврине çулакан трактор чарăнса ларнă. Пысăк хăвăртлăхпа çаврăнакан диск çинчен çĕрулми аврине касса пыракан сăнчăрĕ тухса кайнă. Хута яма базăна çитсе дискне сверло станокĕпе çĕнĕрен виçĕ шăтăк шăтармалла. Эпир базăна васкатпăр. Николай Григорьевич юсав мастерскойне кĕрсе темиçе минут хушшинче диск çине çĕнĕ шăтăксем туса тухрĕ. Халь ăна хире трактор патне çитермелле. Фермер хуçалăхĕн пуçлăхĕн кĕсье телефонĕ пĕрре те шăнкăртатма пăрахмасть. Унран вĕçĕмсĕр мĕн те пулин ыйтаççĕ, канашлаççĕ — хушса, вĕрентсе тăмалла.

-Ĕлĕкхи колхоз председателĕ пекех эсĕ, Николай Григорьевич. Веçех ху пуçу çинче, веçех хăвăн пĕлсе ертсе пымалла. Çĕр лаптăкĕ те пĕчĕк мар — 1000 гектара яхăн,- тетĕп эпĕ.

-Мĕн председательне танлаштармалли пур пире! Председатель груз турттаракан машина е трактор рулĕ умне ларать-и? Сверло станокĕпе ĕçлет-и? Сварщик ĕçĕсене тăвать-и? Машина çине тырă тиет-и? Вăл хăйне турттарма панă çăмăл машина рулĕ умне те лармасть —

ăна ятарлă водитель илсе çӳрет. Председательсем мĕнле ĕçлесен те пĕчĕк мар шалу илнĕ. Манăн веçех урăхла, никам та ĕç укçи памасть. Тухăç илейсен, ăна йĕркеллĕ вырнаçтарайсан, уншăн банка укçа килсен тин усси пулать пирĕн. Кăçал ак çанталăк типĕ тăнипе тухăç чаплă мар. Пĕрчĕллĕ культурăсене гектартан 28 центнер кăна илтĕмĕр, çĕрулми тухăçĕ те 200 центнертан иртмест, - тет вăл.

Председатель çинчен каланă сăмахсем тĕрĕссине темиçе минутранах курса ĕнентĕмĕр. Хирĕç килекен пысăк трактор чарăнчĕ. Ку паллакан çын пулса кайрĕ: фермер хуçалăхĕн пуçлăхĕ Пётр Краснов. Ун тракторисчĕ чирлесе ӳкнĕ — çавăнпа вăл та паян тракторпа хăех çӳрет. Çапларах вăл фермер пурнăçĕ. Çĕр кĕтсе тăмасть, пурне те вăхăтра ĕлкĕрмелле.

-Халь хĕрӳ вăхăт. Типĕ çанталăкăн кашни сехетне шута илес пулать, унпа усă курмалла. Хамăн çынсене тăрăшуллă ĕçшĕн тав сăмахĕ каласшăн. Иван Григорьев (ăна база начальникĕ тесен те юрать) базăра йĕрке туса тăрать, Мария Милова повар тата бригадир тивĕçĕсене пурнăçлать, Николай Караполов, пĕртăван Абиновсем , Виталий Алексеев, Сергей Лянкин кирлĕ чух тракторпа, кирлĕ чух комбайнпа ĕçлеççĕ. Сезон вăхăтĕнче юлташсене, тăвансене пулăшма чĕнетĕп. Иван Ивандеев, Юрий Вражкин, Анатолий Уткин çулсерен пысăк пулăшу параççĕ. Паллах, çумри мăшăрăм Галина Владимировна — манăн çирĕп тĕрек,- каласа парать Николай Григорьевич.

-Сирĕн ĕçĕрте чи йывăрри мĕн?- тĕпчетĕп фермертан.

-Пуçтарнă тухăçа ăнăçлă вырнаçтарасси!- тӳрех хурав парать вăл. - Питĕ нумай тырă е тымар çимĕç туса илме пулать — усăллă сутаймасан пурпĕр «çунса каятăн». Хакĕсем капла та пĕчĕк те — хăш чух унпа та вырнаçтараймастăн. Патшалăх тытăмĕнчи учреждениесене çулталăкĕпех çĕр улми е пахча çимĕç сутса тăма тендер урлă тухмалла. Вăл мĕн япалине тĕппипе ăнлансах пĕтерме те çук. Сăмахран, эпир çĕрулмие килограмне 6-7 тенкĕпе сутма хатĕр, шкулсемпе садиксене вара урăх çĕртен килсе 15 тенкĕпе сутаççĕ. Мĕншĕн йӳннине илмеççĕ, мĕне пĕлтерет ку? Продукцие вырнаçтарас тесе тĕрлĕ меслетсем, çулсем шыратпăр, туянакансене облаçра та шыраса тупатпăр, ытти хуласене кайса та сутатпăр. Укçа кашни кун кирлĕ. Техника туянма илнĕ кредита та тавăрмалла, ĕçлекенсене те тӳлемелле, тепĕр çулхи ака валли те хатĕрленмелле. Çĕр ĕçченĕн пурнăçĕ пĕр чарăнмасăр кусакан кустăрма евĕрех вăл. Акара тырçи çинчен шутлатăн, тырçинче ака пирки шутлатăн...

Чăнлă районĕ,
Хирти Репьёвка ялĕ.

**«Канаш», 2012 ç., 39 №.**

# Хамăра шанатпăр, анчах çумăрĕ те кирлĕ




Павел Узиков çăкăр ÿстерекенсен йăхĕнчен. Ун аслашшĕ – Александр Павлович – 21 çул Чăнлă районĕнчи ял хуçалăхĕсене ертсе пынă. Ашшĕ те – Анатолий Александрович – нумай çул ял хуçалăх ертÿçи, районти тĕп агроном пулнă, халĕ район администрацинчи социаллă пай пуçлăхĕ.

Павел Анатольевич фермер хуçалăхне 2001 çулта 25 гектар çĕр çинче йĕркелесе янă. Ун чухне пĕр Т-4 трактор кăна пулнă ун. Тухăçа пуçтарса илме техника тара тытнă. Паян хуçалăхра 1000 ытла гектар, 600 гектарне чĕкĕнтĕр йышăнать, 300-ĕшне – пĕрчĕллĕ культурăсем.

– Эпир чĕкĕнтĕр туса илес енĕпе ĕçлетпĕр, мĕншĕн тесен уссине куратпăр. Малашне ун лаптăкне 1000 гектара çитересшĕн. Практикăна наукăпа çыхăнтарса технологие çирĕп тытса пыратпăр. Пирĕн пата эрнере пĕрре Ульяновск ял хуçалăх академийĕнчен ÿсен-тăран физиологийĕн кафедрин пуçлăхĕ В.И.Костин килсе çÿрет, чĕкĕнтĕр мĕнле ÿснине сăнаса тăрать. Владимир Ильич мана тахçанах пĕлет, вăл ман преподаватель пулнă. Туслă çыхăну лайăх тухăç илме пулăшать: пĕлтĕр гектартан вăтамран 350 центнер тымар çимĕç тухрĕ, - каласа парать П.А.Узиков.

Кĕркунне Германире туса кăларнă «Франц Кляйн» комбайн туянни питĕ паха тесе шутлать Павел Анатольевич. Ку техника сезонра 600-700 гектар çинчен чĕкĕнтĕр кăларма пултарать. Кăçал вара техника паркĕ çĕнĕ Т-150 тракторпа пуянланнă – унпа пĕтĕм йывăр ĕçсене тума май пур. Вĕсене туянма «Россельхозбанк» кредит парса пулăшнă – хуçалăх унпа тачă çыхăнса ĕçлет.

Хуçалăхра паян тăхăр çын тăрăшать: Владимир Александрович Узиков, Николай Михайлович Узиков, Андрей Васильевич Талягин, Пётр Николаевич Аюгин, Владимир Михайлович Фабрикантов тата

ун ывӑлӗ Евгений, Владимир Сергеевич Улендеев, Олег Михайлович Нюкин, Валерий Михайлович Узиков. Пуҫлӑх каланӑ тӑрӑх, вӗсем пурте «универсалсем», хуть те мӗнле техникӑпа та ӗҫлеме пултараҫҫӗ: паян — тракторпа, ыран — машинӑпа. Тутлӑ апат пӗҫерекенсем — Галина Ванюшкина, Елена Амонова.

Халӗ уй-хирте им-ҫам сапас ӗҫ хӗрсе пырать, каҫхи смена та пур, мӗншӗн тесен вӑхӑтра ӗлкӗрмелле. Эпир пынӑ чух агрегата им-ҫам яратчӗҫ. Вӑл ҫум курӑка та пӗтерет, чирсенчен те сыхлать, чӗкӗнтӗре кирлӗ апатпа та тивӗҫтерет.

Павел Анатольевич, 1996 ҫулта агронома вӗренсе тухнӑскер, 2006 ҫулта Санкт-Петербург политехника университетне пӗтерсе экономист дипломне илнӗ. Районти чи ҫамрӑк фермерсенчен пӗри пулсан та ун ячӗ-сумӗ пур. 2009 ҫулта ӑна район депутачӗсен советне суйланӑ. Ҫаплах ыркӑмӑллӑх ӗҫӗсенчен те юлмасть, кирлӗ ҫӗре укҫа-тенкӗ уйӑрать. Пирӗн хаҫат тиражне ӳстерме те пулӑшрӗ Павел Анатольевич, ӑна хӑйӗн кашни ӗҫченне ҫырӑнса пачӗ. Редакци ятӗнчен уншӑн ӑна тав тӑватпӑр!

- Ҫак кунсенче ҫумӑр кирлӗ, унсӑрӑн ӳсен-тӑран япӑхма пултарать. Ҫӗр ӗҫӗ ҫут ҫанталӑкран нумай килет. Ыттишӗн кулянмастпӑр, веҫех хамӑр алӑпа тӑватпӑр, хамӑра шанатпӑр,- тет фермер хуҫалӑхӗн пуҫлӑхӗ таса тӳпенелле пӑхса.

Чӑнлӑ районӗ,
Ҫӗнӗ Воля ялӗ.

**«Канаш», 2012 ҫ., 24 №.**

# Отец космонавта Бударина — чуваш



Н.М.Бударин.

Чувашская Республика вырастила трёх космонавтов: А.Г.Николаев, М.Х. Манаров, Н.М.Бударин. Об Андрияне Григорьевиче Николаеве мы знаем много, он из чувашской деревни Шоршелы Марпосадского района. Мы им гордимся.

Муса Хираманович Манаров родился в Азербайджане, по национальности он лакец. С 4 лет он жил в Алатыре, здесь и вырос.

Николай Михайлович Бударин родился 29 апреля 1953 года в посёлке Киря Алатырьского района. О нём поговорим подробнее.

После окончания средней шклоы он в 1970-1971 годах работал лаборантом в средней школе №7 города Щёлково Московской области. Работал он наладчиком на заводе, электромонтёром, мастером по электрооборудованию, инженером-испытателем, начальником группы, ведущим специалистом, руководителем группы на Контрольно-испытательной станции. В 1979 году окончил вечернее отделение Московского авиационного института, стал инженером-механиком.

В 1971-1973 годах служил в Чехословакии.

Николай Бударин первый полёт в космос совершил 27 июня 1995 года в качестве бортинженера ОК «Мир» вместе с А.Соловьёвым. Во время полёта совершил три выхода в открытый космос с общей продолжительностью 14 часов 32 минуты. Приземлился в том же году 11 сентября. В полёте был 75 суток 11 часов 20 минут 21 секунда.

Второй полёт он совершил в качестве бортинженера «Союз ТМ-27» и ОК «Мир» с 29 января по 25 августа 1998 года вместе с Т. Мусабаевым и Ю.Батуриным. Во время полёта совершил пять

выходов в открытый космос с общей продолжительностью 30 часов 14 минут. Продолжительность полёта составила 207 суток 12 часов 51 минута 02 секунды.

Третий полёт Николай Михайлович совершил с 24 ноября 2002 года по 4 мая 2003 года в качестве бортинженера 6-ой основной экспедиции МКС. Старт – на шаттле «Endyavour STS-113» в качестве специалиста полёта, посадка – на транспортном корабле «Союз ТМА-1 в качестве командира корабля (баллистический спуск).

Продолжительность полёта составила161 сутки 1 час 14 минут 38 секунд. А за три полёта Н.Бударин в космосе был более 444 суток.

Космонавт первого класса Николай Бударин награждён медалью «Золотая Звезда» Героя Российской Федерации (7 октября 1995 года), орденами «За заслуги перед Отечеством 3-ей степени», «За заслуги перед Отечеством 2-ой степени».

Также награждён тремя медалями НАСА «За космический полёт» (США) , орденом «Отан» (Казахстан).

Теперь о семье Героя. Его отец – Михаил Романович Бударин (1920-1984) работал мастером леспромхоза, потом – в министерстве лесного хозяйства России. Мать —Александра Михайловна Бударина (Кокина) (1921-1986) работала врачом-стоматологом. У Николая Михайловича было два брата – Юрий (1949-2000) и Сергей (1959-1999). Женат Николай Михайлович на Марине Львовне Сидориной (1956) , она трудится ведущим инженером РКК «Энергия». У них двое сыновей – Дмитрий (1977) и Владислав (1983).

Увлекается космонавт-испытатель туризмом и велоспортом.

...Вместе с ульяновской делегацией в июне 2003 года я побывал на республиканском чувашском празднике Акатуй в Шемурше. Туда на вертолёте прилетели Президент Чувашской Республики Н.В.Фёдоров и космонавт Н.М.Бударин. Оба выщли на сцену, поздравили гостей праздника. Когда Н.Бударин сошёл со сцены, я попросил его сфотографироваться для ульяновской чувашской газеты «Канаш». Его лицо посветлело. Он сказал: «О, Ульяновск! Мой отец из Ульяновска». Я его сфотографировал, и он зашагал к Президенту Чувашии.

Меня этот факт заинтересовал.

В этом году я побывал на чувашском национальном празднике Акатуй в Москве. Там в мои руки попала книга Геннадия Викторова «Сыны Отечества: воспоминания и размышления» (Чебоксары, 2006). Автор здесь рассказывает об офицерах , выходцах из Чувашии, проживающих ныне в Москве и Московской области, которые

объединились в товарищество «Сыны Отечества».

Вот что пишет автор книги на 31 странице, где описывает службу Н.Бударина: «Для меня и сегодня большая загадка – почему мы, чуваши, до сих пор не можем выпустить о своём национальном герое (Н.Бударин по отцу – чуваш, и это он не отрицает), трижды побывавшем в космосе, хотя бы одну книгу? Я уже не говорю об открытии музея его имени в Чувашии (хотя бы в посёлке Киря). Или у нас так много героев такого масштаба, как Н.М.Бударин? На примере кого же мы собираемся воспитывать настоящих патриотов Родины, горячо любящих свой народ, готовых идти на подвиг ради великого дела и выполнения долга?».

Оказывается, космонавта Николая Бударина судьба связывает и с чувашской нацией, и с Ульяновском.

А это ещё интереснее. Есть поле для исследований, есть работа для историков и краеведов.

**«Канаш», 2011 ç., 4 №.**

# Чувашский язык не должен уйти в небытие



Поговорив с Дмитрием Кузьминым некоторое время, сразу чувствуешь, что человек он неординарный. Начитан, эрудирован, мыслит нестандартно. Всегда ищет позитивные ходы. Говорит, что под лежачий камень вода не течет. Поэтому всегда в движении: и телом, и мыслями.

**О себе и родителях**

Корни Дмитрия Васильевича Кузьмина со стороны отца – в селе Верхние Тимерсяны Цильнинского района нашей области. Дед, Алексей Степанович, в 1930-е годы со своей семьей переселился в Самарскую область. В середине 50-х годов родители Дмитрия Васильевича обосновались в поселке Романовка, центральной усадьбе госплемзавода «Канаш».

– Это хозяйство в свое время гремело на весь Советский Союз. Таким достижением нельзя не гордиться – восемь Героев Социалистического труда! И все они – работники племенного завода «Канаш». Здесь разводили коров бестужевской породы, сюда ездили за опытом животноводы из многих регионов страны, – с гордостью говорит о малой родине Дмитрий Васильевич.

Окончив среднюю школу, Дмитрий уезжает в Казань поступать в авиационный институт. С первого раза не поступил. Но он не из тех, кто отступает. Год проработал на заводе токарем и сделал новую попытку, на этот раз удачную. Теперь он – студент факультета «Двигатели летательных аппаратов». В 1981 году - в руках диплом.

После окончания института 3 года, как и положено тогдашнему молодому специалисту, отработал в механосборочном производстве УАПК инженером по подготовке производства. Затем 5 лет работал

в НИИАТ. Одним из первых в Заволжье организовал производственный кооператив по изготовлению корпусной мебели. Было это в 1889 году. В этом основную роль сыграли такие его качества, как тяга к новому, нежелание мириться с рутиной, ну и, конечно, не последнюю роль сыграло и то, что он вырос в зажиточной семье. Стремился заработать, глядя на своих родителей, которые имели большое подсобное хозяйство: пчел, парники, теплицы.

Кстати, его родители оба живы и здоровы и до сих пор держат более 40 пчелосемей и выращивают несколько тысяч корней рассады помидор, перца, капусты на продажу.

– А родителям моим за 80 лет. Живут до сих пор в том же селе Романовка, где я и родился. Село интернациональное, здесь проживают представители более 10 национальностей. Преобладают чуваши, мордва, татары и русские. Преподавали в местной школе только на русском. Дети в основном общаются на русском, практически не зная родного языка. Я, к сожалению, не исключение, чувашским языком владею слабо, на уровне понимания бытовой речи, – говорит он.

## О чувашском народе

– Мы третья по численности нация среди коренных народов России. Нашему чувашскому языку, как утверждают ученые, несколько тысяч лет и он является одним из самых не только древних, но и наиболее развитых и богатых языков. Об этом писали академики Н.Я. Марр, Б. Серебренников и другие, в том числе и зарубежные. С помощью чувашского языка читаются надписи на древних эпитафиях.

К сожалению, тенденция на вытеснение чувашского языка из различных сфер сохраняется, даже в сфере быта. Особенно это заметно в чувашских селах за пределами Чувашии. Прогноз мой по части сохранения языка за пределами Чувашии скорее пессимистический. Пройдет буквально несколько десятилетий, и в большинстве сел Самарской, Саратовской, Оренбургской, Пензенской и других областей чувашский язык исчезнет. Останутся лишь островки чувашских языческих сел на территории Татарстана, Башкортостана и Ульяновской области. Это, конечно, в том случае, если кардинально не поменяется позиция руководства Чувашской Республики по отношению к чувашской диаспоре. Я это говорю не голословно, недавно в течение 14 дней мы проехали по многим селам

вышеуказанных регионов, где и столкнулись с данной проблемой воочию, — рассуждает Дмитрий Васильевич.

Он сам очень старается помочь чувашскому движению. Состоит в клубе чувашских предпринимателей «Эртел», один из активных его членов. Кроме того, помогает оборудовать мебелью школьные кабинеты г. Ульяновска, где преподают чувашский язык и культуру. Выделял денежные средства на поездку в Москву чувашской красавице на конкурс «Сарпике», проведение соревнований по чувашской борьбе Кĕрешӳ, организацию новогодней елки для чувашской детворы...

## О спорте, здоровом образе жизни

Одно из хобби Д. Кузьмина — путешествия. Он старается побывать на всех чувашских праздниках, фестивалях, часто выезжает на эти мероприятия за пределы области. Например, в прошлом году он на своем автомобиле повез на Акатуй в Самарской области в Шенталу трех борцов. Двое из них вышли в финал, один — А.Михайлов из Учхоза — привез на этом же автомобиле главный приз, живого барана. В этом году Дмитрий Васильевич выступил инициатором, одним из организаторов, спонсором туристическо-этнографического путешествия по местам проживания чуваш Среднего Поволжья и Урала. Туристы за две недели посетили семь регионов России, собрали богатый письменный, фото- и видеоматериалы.

В 2001—2002 годах Д. Кузьмин на свои средства издавал газету «Спортивная Чувашия». Конечно, понес немалые убытки. Дмитрия Васильевича очень беспокоит, что в Чувашии нет команд мастеров по игровым видам спорта. Правда, есть хоккейный «Сокол». Но из-за отсутствия финансирования команды из бюджетных средств результаты команды скромные, несмотря на то, что хоккей в Новочебоксарске любят и понимают. В городе хорошо развит детский хоккей, в прошлом году детская хоккейная команда из Новочебоксарска ездила даже на международный турнир в США, правда, спонсором поездки своих детей выступили в основном родители.

— Смотрите, как развивают национальную идею, поддерживая спорт, в Татарстане! Хоккей с шайбой, хоккей с мячом, футбол, баскетбол, волейбол, ватерпол... Сколько классных команд! Все они работают на престиж татарского народа. Россия и мир больше

узнают о татарском народе, благодаря развитию в республике спорта. Нам бы тоже не помешало использовать этот мощный рычаг. Для начала надо создать хорошую футбольную команду в Чувашии, чтобы о нас слышали по всей России и за ее пределами, – мечтает он.

## О культурном центре

У этого вдохновленного человека несколько лет назад появилось новое увлечение: он собирает книги по истории и культуре чувашского народа, краеведению, о видных чувашах, словари и справочники чувашского языка. В личной библиотеке уже около тысячи книг, причем есть и редкие, не очень известные. Некоторым уже за сто лет. Также здесь есть книги по истории древней Руси, татарские энциклопедии.

И вот директор мебельного ателье загорелся новой идеей. Он оборудовал одну большую комнату ателье под культурный миницентр. В красивых шкафах – библиотека. Все расположено по темам. Девушка быстро поможет разыскать интересную книгу. Для своих работников здесь выписываются все национальные газеты области – «Канаш», «Эмет», «Ялгат», а также «Народная газета», «Чемпион», «Спортивный вестник» (Чебоксары), «Тантӑш» (Чебоксары), «Ентешсем» (Москва). Скоро начнут поступать газеты «Сувар» (Казань), «Урал сасси» (Белебей, Башкортостан).

Рядом - музыкальный центр. Можно поставит любую чувашскую кассету или диск. Также желающие могут их купить или заказать у Д. Кузьмина. Здесь же Дмитрий Васильевич желает открыть корпункт газеты «Канаш», где будет дежурить один день в неделю (четверг) наш корреспондент. В корпункте можно будет подписаться на нашу газету с любого месяца, купить свежие номера газет, поговорить, поделиться мнениями. Читатели нашей газеты могут пользоваться личной библиотекой Д. Кузьмина, даже на продолжительное время забирать книги домой. В этом центре можно будет подавать заявки на экскурсионные поездки по знаменитым для чувашского народа местам – в Болгар (Татарстан), Слакбаш (Башкортостан, родина поэта К. Иванова), Хузангаево (Алькеевский район Татарстана, родина поэта П. Хузангая), Кошки-Новотимбаево (Тетюшский район Татарстана, родина И.Я. Яковлева)... По мере набора групп из 13 человек будут осуществляться поездки. Цена минимальная, символическая.

**«Канаш», 2005 ç., 40 №.**

# Хисеп мулран паха



Мĕн чухлĕ ырă сăмах, ăшă салам, хаклă парнесем пулчĕç çак каç! Йăлтах пĕр çын валли. Вăл Аслă Нагаткинта пурăнакан хастар чăваш хĕрарăмĕ – В.Н. Игнатьева-Тараватъ.

Валентина Николаевна творчество ĕçне пуçăннăранпа чĕрĕк ĕмĕр çитрĕ. Çавна халалласа Чăнлă район пуçлăхĕсем пулăшнипе район Культура çуртĕнче В. Тараватăн творчество каçĕ иртрĕ.

Унăн творчестви нумай енлĕ: вăл – поэт, прозаик, тăлмачă, композитор. Пĕр харăсах виçĕ пултарулăх ушкăнне ертсе пырать. В. Тарават – Раççей Писательсен пĕрлешĕвĕн членĕ, Чăваш композиторĕсен ассоциацийĕн членĕ. Кăçал вара ăна «Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ» текен хисеплĕ ят пачĕç.

Уява тĕрлĕ çĕртен нумай хăна пуçтарăнчĕ. Шупашкартан С.Асамат, А.Сарри, Т. Гурьева, З.Лисицына паллă юрăçăсем, пĕтĕм тĕнче пĕлекен Р. Сарпи сăвăç, Чăваш писателĕсен пĕрлешĕвĕн пуçлăхĕ Х. Агивер тата ыттисем килсе çитрĕç. Чăваш Республикин тĕп хулинчен аппăшне саламлама А. Музыкантов килчĕ. Пĕччен мар, хăй ертсе пыракан «Сувар» ташă ушкăнĕпе. Çапла чыс турĕç юбиляра Чăваш Енре пурăнакан ентешсем. Юрă-ташă нумайччен янрарĕ. Тата парнесем, парнесем.

Пĕр ялта çуралса ӳснĕ ентешне саламлама Çĕпрел районĕнчи Турхан Упи ялĕнчен те килнĕччĕ. Паллах, пушă алăпа мар. Ун валли вĕсем сцена çине пысăк кавир йăтса хăпарчĕç. Çакăнтах юбилярăн тетĕшĕ Николай çапла каларĕ:

- Пирĕн килте сакăр ачаччĕ, пурте пĕчĕкренех ташлама-юрлама килĕштереттĕмĕр. Атте-анне ертсе, вĕрентсе пынипе килте час-часах

концертсем кăтартаттăмăр. Çавăнпа пирĕн киле «консерватори» тетчĕç. Эпир пурте çак «консерваторие» пĕтернĕ.

Валентина Николаевнана сцена çинчен «Канаш» хаçат редакторĕ В.Ф. Ромашкин, Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен обществăлла Канашĕн ертӳçи В.В. Афанасьев, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче преподаватель пулса ĕçленĕ Г.Н. Афанасьева, И.Я. Яковлев ячĕллĕ обществăн ертӳçи В.Г. Егоров, халăха вĕрентес ĕç управленийĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторĕ Ф.Т.Улендеева, «Еткер» телекăларăм редакторĕ О.Н. Мустаев, учительсен квалификацине ӳстерекен институтри специалист В.А. Архипова, А.Ф. Юман сăвăç, Ульяновск облаçĕнчи писательсен пĕрлешĕвĕн секретарĕ Е. Мельников, вырăс сăвăçĕ Л.Никитина, «Чăнлă хыпарĕсем» хаçатра ĕçлекен Е.Н.Кузьмина, 27-мĕш СПТУ директорĕ А.Ф.Саланов, Чăнлă районĕн администраци пуçлăхĕн çумĕ П.Я. Уфимкин тата ыттисем саламларĕç.

Чăнлă районĕн администраци пуçлăхĕ Х.В. Рамазанов вара çапла каларĕ:

- Эпĕ 30 çул ĕнтĕ чăвашсем хушшинче ĕçлетĕп, вĕсене вĕренсе çитрĕм: тăрăшуллă, ĕçчен халăх. Çавăнпа та чăваш культурине аталантарма укçа-тенкĕ шеллеместĕп. Манпа ку ĕçре пĕр-пĕр чăваш пуçлăх танлашса пăхтăр.

Чăнах та, Ханяфи Валиевич пирĕн культурăна аталантарнă çĕре питĕ нумай вăй хурать, укçа-тенкĕ уйăрать. Ку сăмахсем вара пире малалла ĕçлеме хавхалантарĕç.

Юлашкинчен хăйне чыслама пухăннисене В.Н. Игнатьева-Тарават чĕререн тав турĕ, малашне тата тăрăшарах ĕçлеме кăмăлĕ пурри çинчен пĕлтерчĕ.

Тата пĕр факт. Унсăр уяв çинчен çырни туллин пулмасть. Ульяновск хулинчен Аслă Нагаткина кайса килме «Гидродормост» начальникĕ А.А. Федотов пулăшрĕ. Вăл нимле йывăрлăхсене пăхмасăр çак мероприяти валли автобус уйăрчĕ, уява каякансен çул çинчи йывăрлăхĕсене хăй çине илчĕ. Аверий Александровича уншăн чунтан тав тăватпăр. Вăл чăн-чăн чăваш, мĕншĕн тесен чăвашсене хăçан та пулăшма хатĕр.

Аслă Нагаткин ялĕ.

**Канаш, 20 №, 1997 ç.**

# ТУПМАЛЛИ


1. Ăста тĕрĕçĕ ....................................3
2. Атте-анне чĕлхине вĕренме тĕллев лартрăм ....................................4
3. Ашмарин — чăваш чĕлхи пĕлĕвне хываканни ....................................6
4. Роль СМИ в пропаганде идеи единства российского народа ....................................8
5. Вăйлă халăхсем - хăватлă Раççей ....................................10
6. “Вирялсем” такмака мĕнле выляççĕ-ши?” ....................................12
7. Вышкăра — чăваш чĕлхи уявĕ ....................................14
8. Ёмĕт пулсан шанăç пур ....................................16
9. Ёçпе сăмах çыхăнса тăччăр ....................................18
10. «Канаш» редакциййĕ — Чĕмпĕр Ен чăвашĕсен культура вучахĕ ....................................20
11. «Канаш» - тăван чĕлхе управçи ....................................23
12."КАНАШ" хаçат — аталану çулĕ çинче ....................................25
13. Мăнтарăн чăваш чĕлхи ....................................29
14. Наци пуласлăхĕ — вĕренӳре ....................................34
15. Ваципе культура автономисене пĕтме памалла мар! ....................................38
16. Байдюшев — халăх патриочĕ....................................39
17. Редакци валли кĕтес кирлĕ ....................................42
18. Сергей Игнашевич — чăваш йăхĕнчен! ....................................45
19. Редакцие словарь парнелерĕç ....................................45
20. Сухапуç — акатуй илемĕ ....................................46
21. Тăван сăмах — пуянлăх ....................................47
22. Тăван чĕлхене вĕрентесси мĕнле шайра? ....................................49
23. Хăмла вăрри йĕпе çĕрте шăтать ....................................50
24. Хăй чĕлхине тиркекен нацийĕн — пуласлăхĕ çук ....................................52
25. Цель чувашской газеты — сохранение родного языка! ....................................54
26. Чăваш чĕлхи амаçури ачи ан пултăр ....................................58
27. Чăваш ятне çӳлелле çĕклер ....................................67
28. Чĕмпĕр чăвашĕсене савăнтарнă вунă кун ....................................69
29. Чĕререн тухма пĕлмен çулсем ....................................71
30. Чĕрĕ пуплевсĕр чĕлхе пĕтет ....................................73
31. Чи пысăк ĕмĕт — чăваш шкулне уçасси ....................................75
32. Шăнкăрти чĕлхене упрар ....................................78
33. «Шевлере» Улăпа чысларĕç ....................................80
34. Ыранхи ĕçе ĕнер тытăнмалла! ....................................81
35. Эпир пурте пĕр тĕмрен — чăваш çеçкинчен ....................................85
36. «Эревет» — 10 çулта ....................................88
37. Юрă — чун уççи ....................................90
38. Ют чĕлхене вĕренес тесен тăван чĕлхене манмалла-и? ....................................92

39. Яковлев ячĕллĕ урам пулĕ-и? ....................93
40. Янра, хуткупăс! ....................94
41. 60 çул – иккĕмĕш сывлăш уçăлни ....................96
42. Александр Вражкин: *«Эпĕ чунпа тăван тăрăхран ниçта та кайман»* ....................99
43. Америкăран та çĕнтерӳпе таврăн, Сергей! ....................103
44. БАМ – аслă чукун çул ....................106
45. Валентин Иванов: *«Ытлашши калаçса ĕçне хупласа хурар мар»* ....................108
46. Диаметр Земли вычислил чуваш! ....................110
47. «Согласие» çынсене пулăшу парать ....................112
48. И. Дмитриев ӳкерӳçĕ çинчен ....................115
49. Игнатий игумен: «Çын чунĕнчен хакли нимĕн те çук» ....................117
50. Йĕрке пулсан – ĕç пырать ....................119
51. Кăмăлĕ ырă, ĕçĕсем сăваплă ....................122
52. «Канаш» тухма пуçласан эпĕ тепĕр хут çуралтăм ....................124
53. Кирилловсем музыкăна юратаççĕ ....................127
54. Данилову покой только снится ....................129
55. Лянкин яланах малта пулма хăнăхнă ....................132
56. Г.Майрабеев: *«Ял ачисем валли кĕрешмелли вырăн кирлĕ»* ....................135
57. Мана халăх суйласа лартнă ....................137
58. Марье вунтăватă çултах колхоз ĕçне пуçăннă ....................141
59. Мехел çитсен çыравçă пулса тăнă Ырьят ....................144
60. Министр учился в Ульяновске ....................146
61. Мулянов – 50 çулта ....................149
62. Нарспи Ульяновскра пурăнать ....................152
63. Пĕтр Головин – тăван шкулĕнче ....................154
64. Поэзи çинчен – пĕр сăмах та... ....................156
65. Пурнăçа юратни вăй парать ....................160
66. Çăлтăр çынни ....................163
67. Сĕтел-пукан тĕнчипе паллаштаракан музей ....................165
68. Владимир Сваев: *"Эпĕ çĕннине шыракан çын"* ....................167
69. Чăвашсем пĕрле пуçтарăннăшăн савăнатăп ....................170
70. Фермера колхоз председателĕпе танлаштарма пулать-и? ....................172
71. Хамăра шанатпăр, анчах çумăрĕ те кирлĕ ....................175
72. Отец космонавта Бударина – чуваш ....................177
73. Чувашский язык не должен уйти в небытие ....................180
74. Хисеп мулран паха ....................184

**Ку кӗнекене кӑларма укҫа-тенкӗпе пулӑшакансем:**

Чӑнлӑ районӗн пуҫлӑхӗ – **Ханяфи Валиевич Рамазанов**;

Чӑнлӑ районӗнчи фермер хуҫалӑхӗн пуҫлӑхӗ – **Николай Григорьевич Ивандеев**;

Чӑнлӑ районӗнчи фермер хуҫалӑхӗн пуҫлӑхӗ – **Николай Васильевич Афанасьев**;

Чӑнлӑ районӗнчи фермер хуҫалӑхӗн пуҫлӑхӗ – **Павел Анатольевич Узиков**;

Ульяновскри «Астра-Дент» клиника пуҫлӑхӗ – **Николай Дмитриевич Розов**;

Ульяновскри «Авто-Форум» общество пуҫлӑхӗ – **Георгий Васильевич Майрабеев**.

Ҫак ырӑ кӑмӑллӑ ҫынсене чун-чӗререн тав тӑватӑп, ҫирӗп сывлӑх та иксӗлми телей сунатӑп! Ӗҫӗрсем ӑнса пыччӑр!

**Автор.**


Николай Ларионов

**Чӑваш тӗнчи аслӑ**

(Бескрайний чувашский мир)

На чувашском и русском языках

Под редакцией автора

Компьютерная верстка — В. А. Ефимова.

Подписано в печать. Формат 60х84 1/16. Бумага офсетная.

Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 10,93

Тираж 180 экз. Заказ № 13/066. Цена договорная.

Отпечатано с макета заказчика.

Отпечатано в типографии ООО «Вектор-С»,

432013, г. Ульяновск ул. Промышленная, 53 Б. Телефон: 8 (8422) 65-84-05

ص . خه

## ЛАРИОНОВ НИКОЛАЙ НИКОЛАЕВИЧ



1961 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче Тутарстан Республикинчи Çĕпрел районне кĕрекен Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралнă.

2003 çулта Чăваш патшалăх университетĕнчен (чăваш филологийĕпе культура тата журналистика факультечĕсем) хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухнă. Чĕмпĕрте чăвашла тухса тăракан «Канаш» хаçатра 1996 çултанпа ĕçлет. 2002 çултанпа – тĕп редактор.

Виçĕ кĕнеке авторĕ: «Чĕре тапнă чух» (1998 çул), «Чĕмпĕр тăрăхĕнчи «Канаш» хаçатăн малтанхи тата хальхи утăмĕсем» (2003 çул), «Чун хушнипе пурăнсан» (2009 çул).

1995 çултанпа Раççей Писательсен союзĕн членĕ.

1997 çултанпа Раççей Журналистсен союзĕн членĕ.

Алексей Талвир ячĕллĕ преми лауреачĕ (1994).

Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (2011).

* * *

Родился в селе Новое Ильмово Дрожжановского района Республики Татарстан 25 апреля 1961 года.

В 2003 году с красным дипломом окончил Чувашский государственный университет (факультеты чувашской филологии и культуры, журналистики).

В редакции ульяновской областной чувашской газеты «Канаш» работает с 1996 года, с 2002 года – главный редактор.

Автор трёх книг: «Пока бьётся сердце» (1998 год), «Первые шаги и нынешняя деятельность ульяновской чувашской газеты «Канаш» (2003), «Жить по совести» (2009).

Член Союза писателей Чувашской Республики (1995).

Член Союза журналистов России (1997).

Лауреат премии имени Алексея Талвира (1994).

Заслуженный работник культуры Чувашской Республики (2011).